К76.12
Л25
4-45872

Н.Н.ЛАРИОНОВ

# ЧĔМПĔР ТĂРĂХĔНЧИ “КАНАШ” ХАÇАТĂН МАЛТАНХИ ТАТА ХАЛЬХИ УТĂМĔСЕМ

Национальная библиотека ЧР
4-045872

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

К76.12 _
125

Ларионов Николай Николаевич

# ЧӖМПӖР ТӐРӐХӖНЧИ "КАНАШ" ХАҪАТӐН МАЛТАНХИ ТАТА ХАЛЬХИ УТӐМӖСЕМ

Шупашкар
2003

76.024.711.1(2Рос-4Уль-2Ульяновск)«Канаш»
К76.125.1(2Рос-4Уль-2Ульяновск)Канаш.г

Ӑслӑлӑх редакторӗ:
А.П.ДАНИЛОВ доцент

Рецензи ҫыраканӗ:
педагогика наукисен докторӗ
Н.КРАСНОВ профессор

Н.Н. ЛАРИОНОВ
ЧӖМПӖР ТӐРӐХӖНЧИ "КАНАШ" ХАҪАТӐН МАЛТАНХИ ТАТА ХАЛЬХИ УТӐМӖСЕМ: Шупашкар, 2003. 156 с.

Кӗнекере Ульяновск облаҫӗнче тухса тӑракан "Канаш" хаҫатӑн истрийӗпе паянхи ӗҫне-хӗлне тишкернӗ. Хаҫатӑн тематикипе жанрсен типологине хак пана, журналистсен ӑсталӑхӗн уйрӑмлӑхӗсене палӑртнӑ.

Вулакансен анлӑ ушкӑнӗсем валли.

Проверено 15 ИЮН 2017

4-45872

© Ларионов Н.Н., 2003

Национальная библиотека
Чувашской Республики

# КӐРТӖМ

Чӗмпӗр хули — чӑвашсен сӑваплӑ вырӑнӗ. Кунта 1868 ҫулта Кӑнна Кушки каччи, тӑван халӑхӑмӑрӑн хастар ывӑлӗ И. Яковлев тӗнчипе чапа тухнӑ чӑваш шкулне уҫнӑ, чӑвашсен ҫӗнӗ ҫырулӑхне хатӗрленӗ, пӗрремӗш букварь кӑларнӑ. Ун ӗҫе — хальхи культурамӑрӑн никӗсӗ.

И. Я. Яковлев ҫак шкулта 50 ҫул ытла халӑхӑмӑра ҫутта кӑларассишӗн ырми-канми вӑй хунӑ. Чӗмпӗр чӑваш шкулне "пирвайхи чӑваш университечӗ" теме те пулать. Ҫак "университетра" чӑвашсен профессиллӗ музыкипе сӑнарлӑ ӳнер пуҫланнӑ, чӑваш гуманитари пӗлӗвӗсен никӗсӗ хывӑннӑ, тӑван литературӑмӑр амаланна, куҫару ӑсталӑхӗ аталаннӑ. Чӑваш театрӗ те, опери те ҫакӑнтах тӗвӗленнӗ.

Мӗн чухлӗ паллӑ ҫын тухман-ши кунтан!

Литературӑна илес пулсан саксене асӑнмалла: К. Иванов (вилӗмсӗр "Нарспие" вӑл шӑпах Чӗмпӗрте вӗреннӗ чух ҫырнӑ), И. Иванов, Тайӑр Тимкки, М. Акимов, Г. Кореньков, Н. Кириллов-Патман, Д. Элмен, Г. Тал-Мӑрса, Ф. Павлов, Н. Шелепи, И. Максимов-Кошкинский, М. Трубина, Васса Аниҫҫи, Н. Шупуҫынни, Г. Комиссаров-Вантер, Г. Тимофеев, Мӗтри Юман, Тихӑн Петӗркки, Ехрем Иванӗ Митта Ваҫлейӗ, М. Ухсай, С. Сорокин...

В. Г. Егоров, С. П. Горский профессорсем те ҫакӑнтах пӗлӳ илнӗ. Пӗрремӗш чӑваш журналисчӗсем те ҫак йышран тухнӑ. Вӗсем Н. Никольский Хусанта 1906 ҫулта уҫнӑ "Хыпар" хаҫатра ӗҫлеме пуҫланӑ.

Чӗмпӗр тӑрӑхӗнче чӑвашла хаҫат кӑларас шухӑш вунтӑххӑрмӗш ӗмӗр вӗҫӗнчех пулнӑ-ха. Паллӑ чӑваш этнографӗ, ҫыравҫи И. Юркин 1899 ҫулта "Пулхар" ятлӑ хаҫат кӑларма ирӗк ыйтнӑ. Анчах ӑна пичет енӗпе ӗҫлекен тӗп управленире хирӗҫленӗ. "Ходатайство о разрешении издавать газету на чувашском языке под названием "Пулхар" признано господином управляющим Министерства внутренних дел не подлежащим удовлетворению", — тесе хурав панӑ. /1/

И. Юркин чӑваш усламҫисенчен те пулӑшу ыйтса пӑхнӑ — усси пулман. Ехрем хуҫа ман мул халь пӗтӗмпех вӑрман кастарнӑ ӗҫре, ытлашши — ҫук, ҫавӑнпа та пулӑшма пултараймастӑп тесе хуравланӑ. Хӑш енчен те пулин пулӑшу

пулнӑ пулсан пӗрремӗш чӑваш хаҫачӗ Чӗмпӗрте тухмаллаччӗ...

Патша йӗри-тавраш ӗ ун чухне вырӑс мар халӑхсем ҫутлӑх енне туртӑннинчен хӑранӑ ҫав.

Ун пирки Н. В. Никольский ҫапла ҫырать: " В ы р ӑ с халӑхӗ валли хаҫат кӑларас шухӑша никам та хирӗҫ пулман. Вырӑс мар халӑхсем валли хаҫат кӑларасси пирки каласна чухне вара хирӗҫлеме тапратнӑ: вырӑс мар халӑхсене хаҫат мӗн тума кирлӗ; вӗсен вырӑссемпе пӗрлешсе каймалла; хаҫат вырӑсланас юхӑма вӑрӑмлатни кӑна: хаҫат кӑларни вара — пуҫланнӑ пулӑмӑн чаракӗ ҫеҫ тата, унсӑр пуҫне, вӑл Раҫҫейри пӗчӗк тата аслӑ халӑхсем хушшинчи пачах кирлӗ мар сепаратизм туртӑмне ҫуратать. 1905 султа сӑмахпа пичет ирӗклӗхӗ ҫинчен паллӑ манифеста кӑларнӑ хыссӑн та "инородецсем" тесе чӗнекен халӑхсем валли хаҫат-журнал ӗҫне йӗркелессине кӑмӑллакансем пулман". /2/

1928 ҫулта Ульяновскра Н. Н. Столовӑн "Периодическая печать Ульяновской губернии 1837-1927 г.г." ятлӑ библиографи справочникӗ тухнӑ. Унта чӑвашсен "Ҫӗнӗ пурнӑҫ" хасачӗн пӗрремӗш номерӗ 1918 ҫулхи ака уйӑхӗн 13-мӗшӗнче тухнӑ тенӗ. Кӑларакан ӗ — Чӗмпӗр кӗпӗрнин халӑха вӗрентес тӗлӗшпе ӗҫлекен комиссариачӗ. Пӗрремӗш редакторӗ — кӗпӗрнери ҫутӗҫ пайӗнчи чӑваш уйрӑмӗн инструкторӗ С. Авксентьев-Лашман. Вӑл Шӑмӑршӑ районӗнчи Патирек ялӗнче ҫуралнӑ, Чӗмпӗр чӑваш шкулӗнче вӗреннӗ.

"Ҫӗнӗ пурнӑҫ" 1918 ҫулхи утӑ уйӑхӗн 19-мӗшӗнчен пуҫласа юпа уйӑхӗн 31-мӗшчен тухайман. Шуррисене Чӗмпӗртен хӑваласа ярсан ҫӗнӗрен чӗрӗлнӗ. Пурӗ 137 номер пичетленнӗ. 1920 ҫулхи пуш уйӑхӗн 21-мӗшӗнче ун юлашки номерӗ тухнӑ. Ку хаҫат ӗҫне
И. Юркин хастар хутшӑннӑ. Ҫаплах Ҫеҫпӗл Мишши те хӑйӗн "Иртнӗ самана" сӑввине пичетленӗ. Юлашки вӑхӑтра "Ҫӗнӗ пурнӑҫа" губсовет кӑларнӑ (редакторӗ Г. Савандеев пулнӑ).

Ҫаплах Чӗмпӗрте пӗр хушӑ "Ҫутталла" (1920), "Хӗрлӗ салтак" (1919) хаҫатсем чӑвашла тухса тӑнӑ. "Чухӑнсен сасси" ятлӑ ҫар хаҫачӗ те пӗр вӑхӑт Чӗмпӗрте пичетленнӗ. Вӑл тӗрлӗ хулара тухкаланӑ, шуррисене хӑваласа кайнӑ май кунта те ҫитнӗ. Ҫак хаҫатсем хупӑннӑ хыҫҫӑн Чӗмпӗр ҫӗрӗ ҫинче чӑваш пичечӗ сӳнет (1920-1921 ҫулсенче "Атӑл юрри" журналӑн икӗ номерне шута илмесен).

1956 çулта чапа тухнă И. Я. Яковлев шкулне облĕçтăвком йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн хупса лартаççĕ. Пирĕн тăрăхра чăваш чĕлхи вăйсăрланса пырать. Чăвашсене ирĕксĕрех вырăслатаççĕ. Нумай шкулта вырăсла çеç вĕрентме тытăнаççĕ. Чăвашла калаçнине илтсен (класра та, коридорта та) ачасене канцелярие илсе кĕрсе "тăн кĕртеççĕ", наказани параççĕ. Çав вăхăтрах чăвашла калаçма, вĕрентме пăрахтаракан шкул директорĕсене, вĕрентӳçĕсене мухтаççĕ, вĕсен кăкăрĕ çине орден-медаль çакаççĕ. "Тăрăшуллă" ĕç харама кайман. Халĕ пирĕн облаçри мĕн чухлĕ чăваш яленчи чăвашсем хăйсен тăван чĕлхине пĕлмеççĕ! Уйрăмах Мелекесс, Сенĕ Малăкла, Барăш, Николаевка, Çинкĕл, Тереньга, Чердакла районĕсенче пурăнакан ентешсене пырса тивет ку. Сакăн тĕп сăлтавĕ — шкулта тăван чĕлхене вĕрентменни тата чăвашла хаçат тухса тăманни. Çынсем хăйсен хуйхине уйрăм чăтса ирттернĕ, вĕсем хăйсене пăшăрхантаракан ыйтусене пĕрле сӳтсе явма, пĕр-пĕрне пулăшма пултарайман.

1980-мĕш çулсен варринче пирĕн сĕршывра Уссанлăх, Ирĕклĕх. Демократи самани çитсен наци ыйтăвĕсене тинех тимлĕх уйăрма пуçларĕç. Çĕнĕ тапхăр варкăшĕ Чĕмпĕр чăвашĕсемшĕн те ăшă хыпар, савăнăç илсе çитерчĕ.

1989 çулхи раштавăн 30-мĕшĕнче Чĕмпĕр Енре "Канаш" ятлă чăвашла хаçатăн 1-мĕш номерĕ çапăнса тухрĕ. Унăн учредителĕсем — КПСС Ульяновск обкомĕ, халăх депутачĕсен область совечĕ тата облаçри чăвашсен И. Я. Яковлев ячĕпе хисепленекен сутĕс обществи. Тиражĕ — 2000 экземпляр.

Манăн диплом ĕçĕн теми — "Канаш" хаçатăн (Ульяновск хули) малтанхи тата хальхи утăмĕсем". Ку хаçат 14 çула яхăн тухса тăрать. Анчах ун çинчен ятарласа никам та çырман, тĕпчемен. Паллах, ку пысăк çитменлĕх. Сакна пĕтерес тесе ку ĕçе хам çине илме шутларăм, пĕрремĕш суха касси тăвас терĕм. Хальлĕхе вăл таранах та пулмасса пултарать, çапах та çереме хăçан та пулин усмалла. Манăн ĕç пысăк пĕлтерĕшлĕ те мар пуль, çапах та ун хăш-пĕр вырăнĕсемпе кам та пулин малашне усă курĕ. Тен, хам та çак темăна малалла аталантарăп.

"Канаш" хаçат — Чĕмпĕр чăвашĕсен çĕнĕ саманари пурнăç летопиçĕн тĕкĕрĕ. Чăваш наци юхăмĕнче пулса иртнĕ событисем унта пĕтĕмпех кĕнĕ. Чĕмпĕр Енре чăвашсем

сахал мар. Кивӗ ҫырав тӑрӑх (1989 ҫулхи), облаҫра 116,5 пин чӑваш пурӑнать. Уйрӑмах ҫак районсенче йышлӑ вӗсем: Чӑнлӑ — 19,9 пин, Мелекосс — 7,7, Ульяновск — 8,1, Барӑш — 4,2, Ҫӗнӗ Малӑкла — 4,2, Ҫинкӗл — 4,7, Чердаклӑ — 3,1. Область центрӗнче — 41 пин чӑваш. Облаҫри халӑхсен 8,3 проценчӗ — чӑвашсем.

Халӑх пур пулсан ун культури те, аталанӑвӗ те пур. Апла ҫырмалли темасем ҫуралсах тараҫҫӗ. Информаци хатӗрӗсен тӗллевӗ — хыпара халӑха ҫитересси, ҫынсенчи ӑнлавсене йӗркелесси, пӗр-пӗринпе хутшӑнма пулӑшасси, пурнӑҫа пуянлатасси, халӑх ӑнланулӑхне ӳстересси.

"Канаш" хаҫатӑн ӗҫӗ тата анлӑрах: сапаланма пуҫланӑ ентешӗмӗрсене пӗр чӑмӑра пуҫтарасси. Хӑйӗн малтанхи ӗҫне вӑл пурнӑҫларӗ: ҫӗр пин сӑмахлӑ, ҫӗр пин юрӑллӑ, ҫӗр пин тӗрӗллӗ чӑваш халӑхӗн пӗтмелле мар, авалхи ҫепӗҫ чӗлхемӗре, культурӑмӑра аталантармалла тесе пире сӑмахпа ӗнентерчӗ. "Канаш" пичет уйӗнче хӑй вырӑнне тупса ҫирӗпленчӗ.

Ҫак темӑпа ҫырма мана "Канаш" хаҫата 1-мӗш номертен пуҫласа пӗр сиктермесӗр вуласа пыни, ҫичӗ ҫул ытла ҫак редакцире вӑй хуни пулӑшрӗ. Мӗнпур событисем куҫ умӗнче пулса пычӗҫ. Чӑваш юхӑмӗнчи кашни хастара тенӗ пекех паллатӑп: хуларисене те, тӗрлӗ ялтисене те. Вӗсемпе халахӑмӑрӑн пуласлӑхӗ, культури пирки чылай каласнӑ. Информаци сителӗклӗ, вӗсене йӗркелесе пырса вырнаҫтарасси ҫеҫ юлчӗ.

Диплом ӗҫӗ куртӗмрен, виҫӗ сыпӑкран, пӗтӗмлетусенчен тата хушма пайран тӑрать.

Кӳртӗм сӑмахӗнче эпӗ И. Я. Яковлев шкулӗн пӗлтерӗшӗ чӑваш ҫырулӑхӗшӗн, культуришӗн пысӑк пулнине кӑтартма тӑрӑшрам. Сирӗммӗш ӗмӗр пуҫламӑшӗнче Чӗмпӗрте чӑвашла хаҫатсем те тухса тӑнӑ. Вӗсен сасси сӳнсен чӑваш пичечӗ кунта ҫӗнӗрен 1989 ҫулта ҫеҫ чӗрӗлнӗ.

Пӗрремӗш пайӗ хаҫат пуҫланса кайнӑ тапхӑра сӑнлать. Пысӑк влаҫрисем темиҫе теҫетке ҫул татса паман наци ыйтӑвӗсем обществӑра ҫиеле тухаҫҫӗ. Вӗсене татса памасӑр ирӗклӗ патшалӑх туса хума ҫук. Ирӗклӗхӗн пӗр енӗ — пичет ирӗкӗ. Ҫавӑнпа та Ульяновск облаҫӗнче наци хаҫачӗсене уҫма ирӗк паракан йышӑну тухать. Тутарсем "Ӗмӗт", чӑвашсем "Канаш" ятпа хаҫат пичетлеме пӗр кунтах пуҫлаҫҫӗ.

"Канаш" хаҫатăн чи ҫивĕч теми турех палăрать: нумай мăшкăл тӳснĕ чăваш чĕлхине шкулта вĕрентмелле, халăхра мăнаҫлăх ҫуратмалла, хамăрăн культурăна йăла-йĕркене тавăрмалла.

Ҫаплах ку сыпăкра малтанхи редакцин штат расписанийĕ йĕркеленсе пынине кăтартнă, приказ кĕнекинчен илнĕ йĕркесемпе усă курнă.

Хаҫатăн паянхи сан-сапатне кăтартнă чух терле цифрăсемпе усă курнă, коллективра ĕҫлекенсемпе, рубрикăсемпе паллаштарнă. Хаҫат производстви пирки те сăмах хускатнă.

Иккĕмĕш сыпăк Чĕмпĕр Ен чăвашĕсен паянхи пурнăҫне ҫутатса парать, экономикăпа производство кăтартăвĕсемпе те паллашма пулать.

Наци ăнланăвне аталантарас ĕҫре хаҫат тупи пысăк. Ун йĕри-тавра интеллигенци пуҫтарăнать. Пĕлу илнĕ ҫынсем тĕрлĕ ҫĕрте вăй хурса халăхăмăрăн ăс-тан шайне кунсерен ӳстереҫҫĕ. Ҫулсерен чăваш чĕлхине вĕрентекен шкулсем йышланса пыраҫҫĕ, ачасем тăван чĕлхене вĕренме май пур. Ульяновск педуниверситетĕнчи филологи факультетĕнче чăваш уйрăмĕ уҫăлнă. Ҫаплах ҫакăн пек уйрăмсем 1-мĕш тата Ҫинкĕл педучилищисенче те пур. Пилĕк ҫул каялла Чĕмпĕр чăваш шкул комплексĕнче Чăваш патшалăх университечĕн представительстви уҫăлни те пирĕн тăрăхри самрăксемшĕн питĕ паха. Кунта кусăмсăр вĕренме пулать Шупашкара каймасăрах. Культура вучахĕ те амаланнăсемĕн амаланса пырать. Халĕ Ульяновскра чăваш юрăпа ташă ушканĕсем пур. Ялсенче те хастартарах, малалла пăхса ĕҫлеҫҫĕ ку енĕпе.

Вĕрентӳ, культура ĕҫĕсене йĕркелесе пыма халĕ Чĕмпĕр облаҫĕнчи чăвашсен наципе культура автономийĕ, И. Я. Яковлев ячĕллĕ общество пур. Вĕсем йĕркелемесĕр, хутшăнмасăр облаҫра пĕр культура мероприятийĕ те иртмест.

1997 ҫулта хаҫатҫумĕнче "Шевле" литпĕрлешу ĕҫлеме пуҫларĕ. Вăл илемлĕ сăмаха юратакансене пĕрлештерет. Кĕске вăхăтрах вĕсем "Шевле ҫути" альманах кăларма пултарчĕҫ. Ҫаплах 1920-21 ҫулсенче Чĕмпĕрте тухса тăнă "Атăл юрри" журнала 80 ҫул иртсен ҫĕнĕрен чĕртрĕҫ. Паян пирĕн облаҫри ҫыравҫăсенчен саккăрăшĕ Писательсен союзĕнче тăраҫҫĕ: А. Юман, А. Чебанов, В. Тарават, В.

Чекушкин, Серте Мишши, Н. Ларионов, А. Ырьят, В. Деменкова.

Выранти телевиденире 14 çула яхăн ĕнтĕ "Еткер" телекăларăм тухать. Ăна Çамрăксен Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ премийĕн лауреачĕ О. Мустаев ертсе пырать. "Еткер" пĕлтерĕшĕ пысăк, халăх хăйĕн шухăш-кăмăлне ун витĕмĕпе те йĕркелет.

Хаçат урла пултарулла чаваш укеруçисем пирки те пĕлме пултартăмăр. Кашнин çинчен тĕплĕн çырса кăтартнă. Вĕсем пысăк уявсене хăйсен картинисемпе илемлетеççĕ. Халăх вĕсене курса савăнать.

Вунпĕр çул каялла И. Я. Яковлев шкулĕнче Турă саккунĕсене вĕренмелли чиркÿ тепĕр хут уçăлчĕ, тĕне ĕненекенсене чан сассипе пуçтарчĕ. Чăвашла кĕлĕсем иртеççĕ кунта. Библие куçарнă чухне Патриархăмăр çакăн синчен ĕмĕтленнĕ ĕнтĕ.

Спортра, медицинăра палăрнă ентешсене асăннă ку сыпăкра.

Виççĕмĕш сыпăкра журналистика жанрĕсем пирки сăмах пырать. Кунта "Канаш" хаçатри материалсен чĕлхипе стильне тишкернĕ, анатри чăвашсен диалект уйрăмлăхĕсене палăртнă. Çаплах редакцире ĕçлекен журналистсен çырас ăсталăхĕ пирки вулама пулать.

Хушма пая авторăн "Канаш" хаçатра тĕрлĕ çулсенче пичетленнĕ материалĕсем кĕнĕ. Вĕсем Чĕмпĕр хутлăхĕнчи чăвашсен пурнăçне, шухăш-кăмăлне, ĕмĕт-шанăçне, ĕçĕ-хĕлне кăтартаççĕ, уçса параççĕ.

# I СЫПĂК. “КАНАШ” ХАÇАТĂН МАЛТАНХИ УТĂМĔСЕМ

**Хаçат пуçланса кайни**

Мĕнпе танлаштарма пулать-ха Чĕмпĕрте тăван чĕлхепе хаçат тухма пуçланине? Вăрманта аташса кайнă çынсем пĕр-пĕрне тупасшăн “ау” кăшкăрнипе те, пĕр ĕç тума чĕнсе чан çапнипе те, шыв тулнине чăтаймасăр пĕве татăлса кайнипе те...

Акă мĕн аса илет Чĕмпĕр тăрăхĕнчи паллă журналист, Ульяновск КПСС обкомĕнчи пичет секторĕн пуçлăхĕ А. Богатов: “1989 çулхи çулла КПСС обкомĕн пленумĕ иртрĕ. Унта тĕрлĕ наци представителĕсем пурччĕ. Вĕсем наци культурине, чĕлхине, йăли-йĕркине чĕртсе тăратас, наци хаçачĕсене тата телекăларăмĕсене уçас ыйтусене пăхса тухрĕç. Телекăларăма йĕркелесе яма йывăрах пулмарĕ, вăл, “Еткер” ятлăскер, авăн уйăхĕн 17-мĕшĕнче пĕрремĕш хут эфира тухрĕ.

Хаçат кăларасси вара чылай тертлĕрех пулчĕ. Йышăнусем нумайланса пычĕç, анчах калаçу шайĕнчен çӳлерех хăпараймарăмăр. Тĕп чăрмав — укçа-тенкĕ çуккинче. Пурте çĕнĕ 1990 çула кĕтрĕç. Çак лару-тăрура пичет секторĕпе И. Я. Яковлев ячĕллĕ çутĕç обществин (пуçлăхĕ И. С. Кирюшкин) ыттисем хывман çулпа кайма шутларĕç: обществăлла пуçарупа темисе номер кăлармалла та власа факт умне тăратмалла. Тивĕççене пайласа патăмăр. Пĕр ушкăн номер валли материалсем хатĕрлерĕ, тепри йĕркелӳ ыйтăвĕсемпе аппаланчĕ. Чăнлă район типографийĕ (директорĕ В. Салюкин) çителĕклĕ хут уйăрса пачĕ. “Коммунизм çути” хаçат (редакторĕ В. Ромашкин) ĕçченĕсем наборларĕç, верстка турĕç. Хамăр ума тĕллев лартрăмăр: СССР пулса кайнă кун тĕлне хасатăн 1-мĕш номерне кăлармалла. Çапла пулса тухрĕ те: 1989 çулхи раштавăн 30-мĕшĕнче “Канаш” кун çути курчĕ.

Парти бюровĕн пĕр членĕ те хаçат кăларма хатĕрленнине пĕлмен, пуçару ушкăнĕ вăрттăн ĕçлемен пулсан та. Никам пуçне те çакăн пек хăюллă утăм тума пултарас шухăш килсе çапман пулĕ. Пуçаруçăсем шутлани тĕрĕсех пулчĕ.

Пĕрремĕш номер тухнă хыççăн çак ыйтупа ĕçлекенсене облĕçтăвкомĕн пуçлăхĕ Ю. Ф. Горячев хăй патне чĕнтерчĕ Тĕлпулăва обкомăн пропагандăпа агитаци пайĕн пуслăхĕ

Е. Чарный. наци ыйтăвĕсемпе ĕçлекен сектор пуçлăхĕ В. Обушинский, пичет секторĕн пуçлăхĕ А. Богатов, И. Я. Яковлев ячĕллĕ общество председателĕ И. Кирюшкин пынăччĕ. Калаçу вунă минута пычĕ. Çак вăхăтра пĕтĕм кирлĕ ыйтăва татса пачĕç. Йĕркелӳ тата калăпсем суйлас ыйтусене пуçару ушкăнĕ хăй çине илчĕ.


А.Богатов

1990 çулхи кăрлач уйăхĕнче облĕçтăвком хаçат пичетлес енĕпе йышăну кăларчĕ. Унта укçа-тенкĕпе, материалпа тивĕçтерес тата редакцие пӳлĕм, журналистсене хваттер уйăрса парас ыйтусем пур. Хаçат редакторĕ В. Ромашкин пулса тăчĕ.

"Канаш" — диаспорăсен хушшинче чăваш чĕлхипе тухса тăракан пĕрремĕш хаçат. Пуçару илĕртӳллĕ пулчĕ. Пирĕн пата Куйбышев (халĕ Самар — Н. Л.), Оренбург, Пенза, Хусан. çаплах Чăваш Сĕршывĕн делегацийĕсем опытпа паллашма килме тытăнчĕç".


А.Юман

Хаçат кăларма тытăннин тĕллевĕ — тăван чĕлхене манма, пăрçа пек сапаланма пуçланă халăхăмăра пĕр чăмăра пуçтарасси, чăваш сăмахне уççăн янратса хамăрта мăнаслăх туйăмĕ çуратасси. Кун пирки малалла тĕплĕн калаçăпăр-ха. Халĕ вара хаçатăн пĕрремĕш номерне пăхса тухар. Мĕн пирки сăмах пырать унта? Хаçат девизĕ — "Чăваш чĕлхи ячĕпе пурте пĕр пулар".

Пĕрремĕш полоса тăрринче "Çĕнĕ çул ячĕпе сире, юлташсем" тесе пысăк саспаллисемпе çырса хунă. Кунта вăрттăн шухăш та пытаннă. Ытарлăх мелĕпе усă курнă хаçата никĕслекенсем. Чăнах та, тата тепĕр кунран Çĕнĕ çул — 1990 çул — çитет. Анчах ку япалана, хасат тухма пуçланине, урăхла ăнланмалла. Чĕмпĕр чăвашĕсен çĕнĕ çулĕ, тапхăрĕ, самани çитнине пĕлтерет ку. Хаçат "Аван-и, вулакан" статьяпа уçăлать. Кунта авторне кăтартман, анчах вăл паллă — "Коммунизм çути" хаçат редакторĕн сумĕ А. Юман поэт. Унта вăл вулакансене

Чĕмпĕр ҫĕрĕ ҫинчи чӑваш пичечĕн историйĕпе кӑштах пал-лаштарать, чӑваш сӑмахĕ хисепрен тухнӑ вӑхӑта аса илет, малашнехи плансене, ĕмĕт-тĕллеве палӑртать. Ҫаплах ку страницӑра "Ĕмĕт" (Чĕмпĕр Енри тутарсем валли тухакан хаҫат) тата "Канаш" хаҫатсене вулакансем патне КПСС Ульяновск обкомĕ тата халӑх депутачĕсен Ульяновск область Совечĕ сӑмахпа тухать. Унта ҫапла сырни пур: "Эпир журналистсемпе вулакансен активĕ хӑйсен тӑван чĕлхипе ĕҫ ҫыннисен интересĕсен пĕрлĕхне тата пирĕн облаҫри мĕнпур халӑхсен социаллӑ шӑпине яр уҫҫӑн тата ĕненмелле кӑтартса парасса, халӑхсен интернационаллӑ пĕрлĕхне ҫирĕплетме пулӑшасса шанатпӑр". /3/



В.Ромашкин

Ҫаплах кунта Д. Белоусов ӳкерчĕкĕ пур: Хĕл мучи почтальон "Канаш" хаҫат валеҫсе ҫӳрет. Аялта вара А. Юманӑн "Ҫулталӑк кĕнеки", П. Ялкирӗн "Ҫĕн ҫулпа" сӑввисене пичетленĕ. Иккĕмĕш полосара — саламсем. "Канаш" хаҫата Писательсен союзĕн членĕ, Чӑваш писательсен союзĕн республика тулашĕнчи чӑвашсемпе ĕҫлекен комиссийĕн яваплӑ ҫыннисенчен пĕри Виталий Енĕш (Шупашкар), Ульяновск облаҫĕнчи тутарсен "Туган тел" ҫутĕҫ обществин правленийĕ, Ульяновск облаҫĕнчи нимĕҫсен "Возрождение" обществин председателĕ Евгений Миллер саламлаҫҫĕ. И. Я. Яковлев ячĕпе хисепленекен общество правленийĕн членĕ А. Алексеев (Шупашкар) "Наци культурине аталантарма" статьяра Ульяновскра чӑваш обществине туса хунӑ пирки каласа парать. "Мальсенсем малалла пӑхаҫҫĕ" статьяна Я. Капитонов (чӑн ячĕ — Яков Рогачев) ҫырнӑ. Унта Ҫĕнĕ Малӑкла районĕнчи ял пирки сӑмах пырать "Восток" ял хуҫалӑх пуҫлӑхĕнчен — Ф. А. Иванушкинран интервью илнĕ. Ҫаплах кунта Я. Рогачевӑн "Елка умĕнче" сӑвви пичетленнĕ (аяла Р. Яшин тесе алӑ пуснӑ). Виҫҫĕмĕш полосара А. Вражкин Мускаврa пурӑнакан чӑваш скульпторĕ А. Майраслов ҫинчен каласа парать. Вӑл К. В. Иванов скульптурисене хатĕрлет иккен (проектсенчен пĕрин фотоӳкерчĕкĕ те пур). Яков Рогачев кунтах И. Я. Яковлев ячĕпе хисепленекен обществӑна йĕркеленĕ куна халалласа "Чӑваш ятне варламӑпӑр нихӑҫан!" сӑвӑ сырнӑ. Сак авто-

рах К. Яковлев ятпа Мелекесс районĕнчен промышленноçпа тата ял хуçалăхĕпе çыхăннă виçĕ информаци пичетленĕ.

Н. Васильев "Боровский" совхозăн 2-мĕш уйрăмĕнчи парторганизаци секретарĕ, Мелекесс районĕнчи Аппак ялĕнчи ĕçченсем пирки сăмах хускатать. 4-мĕш полосара кулăш страници — "Шăпăр". Кунта В. Енĕшĕн "Качкачакин кулать" тата А. Чебановăн "Шуйттан çăпати" шӳтлĕ калавĕсем пичетленнĕ. Çаплах В. Дедушкинăн фотоэтючĕ тата А. Орлов-Шуçăмпа И. Тукташ çырнă "Хĕл илемĕ" юрă илемлетессĕ юлашки страницăна. Çапла пулса тухнă "Канашăн" 1-мĕш номерĕ.

"Канаш" хаçатăн 1990 çулхи подшивкине тишкернĕ май çакна сăнатăн. Чăваш сăмахĕшĕн тунсăхласа çитнĕ, халăх шăпишĕн пăшăрханакан çынсем номертен номере çивĕч ыйтуллă статьясем çыраççĕ: канашлаççĕ, сĕнеççĕ, ыйтаççĕ, хистеççĕ... Сак темăпа çырнă статьясене пăхса тухар-ха. Кунта тӳрех хаçатăн сулăмĕ палăрать: чĕлхе, культура, йăла-йĕрке, чăваш халăхĕн кун-çулĕ.

1-мĕш номерте А. Алексеев "Наци культурине аталантармалла" статьяра çапла çырать: "Политика, экономикăпа культура аталанăвĕ тĕлĕшĕнчен вырăс халăхĕ чăваш тата вырăс мар ытти халăхсенчен çулерех тăнине хăйĕн вăрăм ĕмĕрĕнче И. Я. Яковлев лайăх курса тăнă. Унăн ĕçĕ-хĕлĕн тĕллевĕ хăйĕн халăхне вырăс халăхăн шайне çити çĕклесси, ентешĕсене вырăс культурипе, христиан тĕнĕпе паллаштарасси пулнă. Ку енĕпе просветитель çапла калана: "Инородецсем (Российăра вырăс мар халăхсене çапла каланă — А. А.) вырăс халăхĕн аслă çемйине сирĕппĕн кĕрсе вырнаçмалла, анчах та унта усрав ывăл пулса мар, пĕр тан правалла ачасем пулма кĕмелле... Чи малтан вăйпах витĕм кӳресси синчен (уйăрни пирĕн — А. А.) кирек мĕнле шухăша та, темиçе хутчен те чи хурлăхлă результатсем патне илсе çитернĕ шухăша сирсе ямалла". /4/

1990 çулхи 3-мĕш номерте педагогика наукисен докторĕ, Ульяновск облаçĕнчи И. Я. Яковлев ячĕпе хисепленекен çутĕç обществин Хисеплĕ членĕ Г. Волков (Мускав) çапла çырать: "Çак виçĕ япаларан пуçланса каять те ĕнтĕ чăваш халăхне вĕрентсе çутта кăларас ĕç: учительсем хатĕрлесси, чăваш кĕнеки, ял шкулĕ [...] Анчах тем тесен те Иван Яковлевичăн чи чаплă ĕçĕ — чăваша чăваш пулма

пулăшни, ун наци кăмăлне хăпартса, ҫĕклесе пыни". /5/ Чăваша чăваш пулма пулăшни — ҫакă "Канаш" хасатăн пĕрремĕш тĕллевĕ. Вăл чи пирвайхи номерсенченех палăрать. Тепĕр тесен, тĕллевĕ урăхла пулнă пулсан кама кирлĕччĕ ку издани? Пурне те пулăшма тăрăшнипе сес вăл хăйĕн тавра хастар чăвашсене пуҫтарма пултарчĕ. Тăван чĕлхене, атте-аннене епле манма пултарĕ-ха сын? Ахальтен мар авар поэчĕ Р. Гамзатов: "Тăван чĕлхе ыран пĕтес пулсассăн эп хатĕр паянах ҫĕре кĕме", — тенĕ. Тăван чĕлхене, чĕлхе урлă тăван халăха сыхласа хăварассишĕн ĕҫ пуҫларĕ те ĕнтĕ "Канаш".

Вăрҫăпа ĕҫ ветеранĕ А. Калистратов (Пăва районĕ, Элшел ялĕ) 1991 сулхи 17-18-мĕш номерсенче сак каласăва "Чун хурланать, чун савăнать" статьяра малалла тăсать: "Чăваш чĕлхи шăпчăк саслăн янăрать. Тепĕр енчен чăваш чĕлхине, чăвашах хакламан элекҫĕ ҫын тĕл пулкалать. Унашкал ҫын пуласлăха ĕненмест. Чăваш чĕлхи пĕтет имĕш. Мĕне пĕлтерет-ха ку? Ку вăл чăваш халăхне вилĕм сĕнни пулать. Ара, чăн та, чĕлхе вăл пĕр-пĕринпе хутшăнмалли хатĕр, халăхпа пĕрле ҫуралнă. Апла пулсан чĕлхе халăхпа пĕрле ҫеҫ тĕпленет. Чăваш чĕлхине пĕлнĕ сĕртех ăна мананси пулнисем те тĕл пулаҫҫĕ вĕт. Ку йышшисем хăйсене пысăка хуни пулать-ши е ашшĕ-амăшне хисеплеменни-и? Вăл та, ку та. [...] Вăрҫă ҫулĕ витĕр тухрăм [...] К. В. Иванован, М. Сеспĕлĕн тата ытти чăваш сыравҫисен нумай-нумай саввисене пахмасăр пелеттĕм. Вĕсене эпе татăш тенĕ пекех е сасăпа, е асра калаттăм. Вăл вахатра вет йĕри-тавра вут, бомба. Тăван чĕлхемĕр мана тăшмана хирĕҫ ҫапăҫса ăна йăвинченех тĕп тума пулăшрĕ", — тет вăл. /6/ Ҫак номертех И. Саландаев (Шăмăршă) хаҫатăн малтанхи утăмĕсене хаклама пăхать. "Чăвашсем, чăмăртанăр" (ячĕ мĕне тăрать! Чан ҫапнă евĕр илтĕнет) заметкăра ҫапла йĕркесем пур: "Эпĕ "Канаш" хаҫата малтанхи номертен пуҫласах юратса вулатăп. Хăюллă, илемлĕ, мал ĕмĕтлĕ хасат вăл. Тăван чĕлхе управҫи, чăваш чунĕн палăрăмĕ, туслăх элчи тейĕттĕм". /7/ Тĕрĕс хак панă автор, хасат рольне лайăх ăнлантарнă. Асăрхарăр-и, автор Ульяновск облаҫĕнче пурăнмасть, ҫапах та Чĕмпĕр Ен хаҫачĕшĕн хыпса ҫунать. Нацин чикки ҫук. Ăҫта пурăнсан та эпир — чăвашсем. Пирĕн савнăҫ та, хуйхă та пĕр. Ҫавăнпа та пирĕн хаҫата ытти регионсенче ҫырăнса илнинчен ним тĕлĕнмелли те сук. Пире

администраци территорисем ҫине пайлани тӳре-шара валли ҫес. Пурпӗрех эпир пӗр халӑх — чӑвашсем. “Канаш” хасат тухма тытӑнни вара — пурин савнӑҫӗ те.

Хасатӑн тӗллевӗ пирки — каларӑмӑр ӗнтӗ. Шӑпах ҫакӑнтан чи ҫивӗч тема тухать те ӗнтӗ: чӗлхене, культурӑна чӗртсе тӑратса, аталантарса, историпе паллаштарса Раҫҫейри ытти халӑхсемпе пӗр тан пуласси, ҫӳллӗ шая ҫӗкленесси. Редакцие 1990 ҫулта килнӗ ҫырусенчен нумайӑшӗ ҫак темӑна хускатаҫҫӗ.

Акӑ Ульяновск облаҫӗнчи чӑвашсен И. Я. Яковлев ячӗллӗ ҫутӗҫ тата культура обществин правленийӗн председателӗ И. Кирюшкин мӗн ҫырать: “Нацисене аталантарас ӗҫе малалла та ҫак сулӑмпа тӑсас пулсан тӑван чӗлхе те, тӑван культура та йалтах пӗтсе ларма пултараҫҫӗ. Хальхи вӑхӑтра тӑван чӗлхене ҫухатас хӑрушлӑх тухса тӑнӑ, мӗн тумалла-ха пирӗн? [...] И. Яковлев шкулӗ, чӑвашсен Ульяновскри педучилищи хӑйӗн сумлӑ вырӑнне йышӑнма тивӗҫлӗ. Чӑваш шкулӗсемшӗн учительсем хатӗрлекен чӑн-чӑн вучаха сӗнӗ вӑйпа, ҫӗнӗ сулӑмпа ялкӑштарса ярасси — пирӗн пысӑк парам”. /8/ Ҫак темӑна Чӑвашсен обществӑлла культура центрӗн правленийӗн председателӗ Юхма Мишши малалла тӑсать: “Канаш” — пӗтӗм чӑваш халӑхӗшӗн чӑн-чӑн канаш пултӑрччӗ, тӑван культурӑна, ытарайми чӑваш чӗлхине ҫӗкленсе кайма пулаштарччӗ. Чӗмпӗр чӑвашӗсен тумалли ӗҫӗ питӗ те нумай. Чӗмпӗрти чӑваш шкулне В. И. Ленинпа И. Я. Яковлев ӗмӗтленнӗ пек ҫӗнӗрен чӗртсе тӑратмалла, чӑваш музейне, картина галерейине ҫӗнӗрен усмалла, чӑн-чӑн чӑваш халӑх хорӗ йӗркелемелле. Кунтах пирӗн чи малтанхи театр ӗҫлеме тытӑннӑ, ҫав чӑваш театрне те ҫӗнӗрен халӑх патне ҫитермелле. Мелекесс, Ҫӗн Малӑкла, Ҫинкӗл, Барӑш, Павловка, Кулатка тата ытти районсенчи чӑвашсем тӑван чӗлхепе вӗренме пӑрахнӑ, унти чӑваш ялӗсенче чӑваш шкулӗсем уҫмалла. Эпир вилме выртнӑ халӑх мар, эпир ҫӗнӗ пуласлӑха курса ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем патне улӑпла утӑмсемпе утма тытӑннӑ аслӑ халӑх”. /9/

Малалла каятпӑр. Кашни ҫырура чӗре ыратӑвӗ, чун кӑшкӑрӑвӗ. “Ҫавӑнпа чӑваш ҫамрӑкӗсем хӑйсем чӑваш пулнӑран вӑтанса пурӑнни те — пирӗн пурнӑҫ чӑнлӑхӗ. Ман шутпа, халӑх хӑйӗн тӑван чӗлхинчен вӑтанма пуҫласан ку вӑл чӗлхе пӗтме пуҫланине пӗлтерет. Ҫакна тума парас

марччĕ", — ҫапла пăшăрханса ҫырать техника наукисен кандидачĕ, Мускаври Чăваш культура обществи правлени председателĕн ҫумĕ В. Пряников доцент. /10/ Мĕн каласан та чăваш ачисене тăван чĕлхене вĕрентмелле — ҫак шухăш ун статйи витĕр мĕн вĕҫне ҫитиччен пырать. Ҫавна пулах ĕнтĕ ҫамрăксем тăван чĕлхерен, культурăран писсе пыраҫҫĕ. Вĕрентӳҫĕ — пенсионер, ĕс ветеранĕ Н. Юнгеров (Пăва районĕ, Элшел ялĕ) ҫырăвне те кулянмасăр вулама май ҫук. "Каҫхи шăплăха сирсе ҫĕрĕпех хуткупăс янăратчĕ [...] Кун-ҫул тилхепине тĕрĕсрех тытса пырайманран-ши — йăнăш ҫул ҫине кĕрсе кайрăмăр пулмалла. Тăван сăмах, тăван халăхăмăрăн йăли-йĕрки, культури куҫ умĕнчех манăҫа тухма пуҫларĕҫ. Ял сыннисем янтипе пурăнма хăнăхса самалттайланчĕҫ, вĕсен чун-черери пуянлăхĕпе илемлĕхĕ палăрмаллах чакрĕ. Наци тумне пăрахăҫлани те куҫ умĕнчех. Ҫынсем хушшинче чăвашла тĕрĕс те илемлĕ калаҫасси ҫулленех вăйсăрланса пырать. Тăван чĕлхепе ҫырнă кĕнекесене кăмăлласа вулакансем йышлă марри палăрать. Ялсенче купăс сасси сайра илтĕнет, ун вырăнне ҫамрăксем магнитофонпа хăлхана йăлăхтаракан тĕрлĕ патшалăх кĕввисене ҫавăрттарнине куратпăр. Ĕлĕк хăйă ҫутипе ларса ăсталанă хитре чăваш тĕррисем халĕ амаҫури ача вырăнне юлчĕҫ. Тĕрĕ илемне туйма чăннипех манса кайрĕҫ пирĕн хĕрарăмсем [...] Халĕ [illegible] ватăсене [illegible] вăйлăн [illegible] пуҫларĕ [...] Атте-анне чĕлхине, ырă йăла-йĕркене ăша хывса ватăсемпе ăшă сăмах тупса калаҫасчĕ, вĕсемпе тимлĕ пуласчĕ [...] Ачасене тăван халăхăмăрăн ыра йăли-йĕркисене вĕрентмесĕрех хамăртан ĕмĕрлехех пистеретпĕр [...] Чăваш чĕлхи мĕн тума кирлĕ шухăшпа ҫырлахса пурăннăран чăваш чĕлхипе тухса тăракан хаҫатсенче ĕҫлеме тăван чĕлхене лайăх пĕлекен ҫынна тупма питĕ йывăр [...] Районти чăваш шкулĕсенче тăван чĕлхене япăх вĕрентнĕрен мар-ши ку? [...] Чăваш шкулĕсенче поэзипе туслисем йышлă. Вĕсен тăрăшулăхĕпе шкулти стена хаҫатне те тăван чĕлхепе кăларма май пур [...] Анчах куҫ умĕнчех манăҫа тухаҫҫĕ пирĕн юрăсем. Юрăсене ҫырса илессине ялсенчи шкулсенче те, Культура ҫурчĕсенче йĕркелеме пулать. Чăваш ялĕсенче фольклор ансамблĕ йĕркелени те ҫак ĕҫре пысăк утăм туни пулĕччĕ", — текен йĕркесем пур унта. /11/ Тĕрĕсех

пăшăрханать автор. Чĕлхене, йăла-йĕркене мантăмăр пулсан эпир несĕлĕмĕрсен кун-çулне пĕлмен манкурта тухатпăр.

И. Я. Яковлев сăмахĕсене аса илер-ха: "Халăхăн ăстăнĕпе унăн пĕтĕм тĕнчекурăмне тăван чĕлхе чун парать. Тăван чĕлхесĕр чăн-чăн пĕлӳ çук. Чăвашсен çак тарана упраннă паха мулĕ вăл — чĕлхе, юрă, тĕрĕ. Чăвашсен çĕр пин сăмах, çĕр пин юрă, çĕр пин тĕрĕ". /12/ Н. Юнгеров шăпах çак сăмахсен пĕлтерĕшне ял пурнăçĕн никĕсĕ çинче кăтартса парасшăн тăрăшать. Çапах та питĕ йывăр çак сăмахсене çынсем патне çитерме. Аслă тата вăтам ăрурисемпе калаçма пулать-ха, çамрăксемпе пĕр чĕлхе тупма кансĕр. Ăнланасшăн мар вĕсем сан чун ыратăвне, мĕнле хăрушлăх çывхарса килнине чухласах каймаççĕ. Чăваш халăхĕ çĕр çинчен çухалма пултарасси вĕсемшĕн нимех те мар. "Чăваш сăмахне манни чăваш çăмахне те мантар". Ку ылхана пĕлмен чăваш тĕнчере те нумаях мартăр. Аслашшĕсен чĕлхине пĕлмене чăваш мĕскĕне хунă, маннине — шелленĕ, телейсĕр тесе шутланă, пĕлес темене айван тенĕ. юратманнине ылханса ятланă", — тесе çырать Г. Волков. /13/ Çеçпĕл Мишши те çак самант çитесрен хăранă. "Чăваш халăхĕ таптанса пĕтсе пырать. Чăваш чĕлхи сухалас патне çитнĕ. Хамăр тăван чĕлхене хăтарма ушкăнпа пурте харăс тăмасан пирĕн наци Çĕр пичĕ çинчен çухаласса кĕтсех тăр". — тенĕ вăл малалла пăхса. /14/

Вĕçен кайăксене, ытти тискер чĕрчунсене пĕтесрен сыхлама Хĕрлĕ кĕнекене кĕртеççĕ. Шел пулин те, çынсен ун пек кĕнеке çук, упраса хăвармашкăн хăвна ху çеç пултаратăн.

"Канаш" хаçат тухма пуçланă хыпар çĕршывĕпех сарăлчĕ. Мухтавлă ентешĕмĕр А. Г. Николаев та вулама пултарнă ăна. Вăл тӳрех Чĕмпĕр Ен чăвашĕсем патне çыру çырать. Акă вăл:

"Хаклă юлташсем!

Ульяновск облаçĕнче тăван чăваш чĕлхепе "Канаш" хаçат тухма пуçланă ятпа хĕрӳллĕн саламлатăп.

"Канаш" хаçата вулаканĕсене парти пуçланă çĕнетӳ ĕçне пурнăçлама вăй хума, чăвашсен культурине çĕклес ĕçре çитенусем тума ырлăх-сывлăх, телей сунатăп.

СССР летчик-космонавчĕ А. Николаев". /15/

Паллах, чаплă çыннăмăр çапла сăмахсем çырни хаçат

ĕçченĕсене хавхалантарнă, вăй хăват панă. Сан ĕçу ытти-сене кирлĕ пулни — хавхалантарать. Халăхра вара талантлă çынсем пайтах, вĕсене тĕрĕс çул кăтартсан хамăр чĕлхемĕре, культурăмăра хутĕлеме тата упрама пултараççех.

Ю. Сементер поэтăн гăвата тĕрленчĕкĕ — самрăксене (вĕсене кăна та мар-тăр) тĕрĕс çул кăтартниех. Унта вăл тăван чĕлхепе хирĕç хирĕç тарса калаçать, ăна мухтать, ун умĕнче пуç таять... Çакăн пек йĕркесем çăлкуç шăнкартатнă сасă кăларассĕ, шăпчăк сасси евĕр илтĕнессĕ: "Пурăн шăкăлчи чĕлхемĕр! Пурăн, шăнкăрти чĕлхемĕр! Утакан сын умĕнче утма çулне уçса пыр, ыра çыннăн чунĕнче ыра шухăш хушса пыр, пĕчĕккине пысăк ту, сусăррине сывă ту! Эй, чĕлхемĕр! Ылтăнпа виçейми таса тупра! Çакă çутă тĕнчере хăйне чăваш теекен, пултăранпа ыр пулан, сăрапала сăйланан халăх пĕрлĕхне упра!" /16/

Ун шухăшне Хветĕр Акивер тăсать: "Чăваш пулса çуралтăр пулсан чăваш пулсах пурăнар, чăваш тĕнчи ĕмĕр-ĕмĕр аталантăр тесе тăрăшар". /17/

"Тăван сăмах сиплĕхĕ" статьяра (1990, 17№) СССР Педагогика академийĕн действительнăй членĕ Г. Волков чуна пырса тивекен истори каласа парать. Вăл икĕ çул ытларах ГДРта ĕçлесе пурăннă. Пĕрремĕшне чирлесе укнĕ, пульницана лекнĕ. Чăвашла вулакаласа йăпанкалать, чăваш кĕввисене итлет (магнитофон кассетисене вăл ют çĕршывра хĕрĕхе яхăн илсе кайнă пулнă). Чăвашран посылка килет, унта сап-сара майăр, типĕтнĕ панулми, тăварланă хăяр, чечек пылĕ, çăка пылĕ. Пылакласа пĕçернĕ çĕр çырли те пур. Çавсене тутаннă май Г. Волков хăйĕн юлташĕпе — нимĕç профессорĕпе Х. Штегманпа чăвашла каласса ларать (ку нимĕç çур çул хушшинчех чăвашла каласма та çырма та вĕреннĕ).

"Харст Штегманн ман пата кашни кунах çӳрекен пулчĕ. Эпĕ ерипен уçăлсах пытăм. Унччен тухтăрсем ним тума аптăранăччĕ", — тет Г. Волков. /18/

Эпĕ ку тĕслĕхе акă мĕншĕн илсе кăтартатăп. Кунта тарăн пĕлтерĕшлĕ икĕ пулăм пытаннă. Г. Волкова, паллах, тăван çĕртен ярса панă çимĕçсем те, чăваш юррисем те, кĕнекисем те сывалма пулăшнă. Çумра ларакан çынпа куса-куçăн пăхса тăван чĕлхепе калаçни вара — чи пахи. Тăван сăмах сипленĕ ăна! Хăй те çапла çирĕплетет. Нумай чухне

И-45872

национальная библиотека

çакна ăнлансах çитерейместпĕр эпир, çамрăксем пушшех те. Асăрхарăр-и, нимĕç çур çул хушшинче чăвашла калаçма та, çырма та вĕреннĕ! Эпир вара тăван чĕлхе çумне çыпçăнасшăн мар пулса мĕнле кăна сăлтав шырамастпăр: “Шкулта чăвашла вĕрентмен пире, литература чĕлхине пĕлместпĕр, чăвашла вĕренме йывăр...” Ĕç тăвас текен меслетсем тупать, ĕçлес теменни сăлтавсем шырать тесе ахальтен каламан ĕнтĕ. Нимĕç çур çул хушшинче вĕренме пултарнă пулсан чăвашсем чăвашла вулама 13 çул хушшинче те (“Канаш” хаçат çакăн чухлĕ тухать) вĕренсе ситеймерĕç-ши элле? “Канаша” çырăнакансем сахал пулнипе — 1500 сын ытла — çыратăп-ха куна. Çырăнманнисен шутĕнче, тĕлĕнмелле пулин те, чăваш чĕлхипе литератури вĕрентусисем пур! Ку ниçта шăнăçайми япала. Акă кун пирки М. Данилов, ĕç ветеранĕ, инвалид, мĕн çырать: “Ялсенче чăваш ачисене ни вырăсла, ни чăвашла аван пĕлмен учительсем вĕрентме тытăнчĕç. Мана пĕр учитель урокĕнче пулма тӳрĕ килчĕ. Чăваш грамматикине ăнлантарнă чухне сăмах хыççăн сăмах çаптарать: “так сказать”, “может быть”, “конечно”, “то есть”, “запомни” тата ытти те.

Урок хыççăн çакскере ыйту патăм:

— Чăваш писателĕсен мĕнле произведенийĕсене вуларăр?

— Чăвашла вулама йывăр. Вырăсла переводсене çеç вуларăм, — хуравларĕ “чăваш чĕлхи ăстаçи”. Çапла вара ыйту сиксе тухать: кун-пек “чĕлхе ăстаçи” мĕн вĕрентĕ ачасене? Хăй вырăнĕнче-и вăл, кирлĕ-и вăл кунта?” /19/

“Канаш” хаçат тухма пуçланă хыççăн нумай çын “çĕнĕрен çуралчĕ”. Тĕрĕссипе, хам та. Чăваш чĕлхи çине, хамăн халăхăн йывăрлăхĕсем çине урăхла пăхма тытăнтăм. Куç усăлчĕ! Çакăн хыççăн чăваш культурипе çыхăннă кашни ыйту чун хĕлĕхне сĕртĕнсе чĕрене хытăрах таптарма пуçларĕ. Чăваш чĕлхин хăватлă вăйне курма майсем тупăнчĕç. О. Вирьялова та çакăн пирки çырать: “Мана çынсем тăван чĕлхепе хăйсен шухăш-кăмăлне епле тарăннăн сырса пĕлтерме пултарни тĕлĕнтерет! Эпĕ çапла çыраяс çук. Акă ăста вăл тăван чĕлхе асамлăхĕ! Унпа этемĕн чи сисĕмлĕ туйăмĕсене те палăртма пулать иккен. Çакна эпĕ ытларах та ытларах ĕненме пуçларăм. Чăннипех те “Канаш” мана тăван чĕлхе вăрттăнлăхне уçса кăтартрĕ. Унччен эпĕ тăван чĕлхепе çырнă япаласене вуламан та темелле.

Хам çуралса ўснĕ Çĕнĕ Малăклара 1-мĕшпе 4-мĕш классенче вĕреннисене манса пĕтнĕ. Ку вăл 50 çул каяллах, инçетри ачалăх çулĕсенче пулнă". /20/ Вăт çапла чунне уçса панă автор. Тăван чĕлхе вăйĕ çынна хăй патне çур ĕмĕр хыççăн та пулин туртса илнĕ.

Хаçатăн 9-мĕш номерĕ 4 пин тиражпа тухнă, малашнехи номерсем те çавăн пекех. 19-мĕш номерне пăхатпăр та — 5 пин экземпляр. Чăнах та, ун чухлĕ çырăнса илекен пулман ĕнтĕ, çапах та хаçатра вăй хуракансем сак тиража халăх хушшинче сарса "Канаш" ятне çĕклес шухăшпа кăларнă ун чухлĕ. Чыс та мухтав вĕсене уншăн!

Ку номере чăваш поэзийĕн классикĕ, вилĕмсĕр "Нарспи" поэма авторĕ К. В. Иванов çуралнăранпа 100 çул çитнĕ май чылайăшпех ăна халалланă. Сăмахран, В. Репин таврапĕлўçĕ ун пирки пĕр полосаллă статья çырнă — "Революци тăвăлĕпе çĕкленсе". Чăваш литератури классикĕн хайлавĕсене, пурнăçĕ çинчен калакан статьясене те вулакан патне çитермесен çамрăк ăрăва чăваш чĕлхи хăвачĕ пирки ăнлантарни çителĕксĕр.

Каларăмăр ĕнтĕ, хаçат тухма пуçласан нумай çул "сунтăх валли" çырнă авторсем, шкул ачисем хавасланса хăйсен хайлавĕсене редакцие килсе е ярса пама тытăнчĕç. Паллах, вĕсемпе пуринпе те тўрех пичетре усă курма çук. Анчах автор кĕтет вĕт ха. Çавăнпа та 20-мĕш номерте А. Юман поэт, редактор сумĕ, пичетре усă курма май çук сăвăсене пĕрремĕш хут тишкерсе пăхать. Вăл вулакансене поэзи вăрттăнлăхĕпе, сăмах вăйĕпе паллаштарать, пăхăсĕнўсем парать. Хăй тишкерĕвне автор çапла вĕçлет: "Юлашкинчен пирĕн сăвă çырма шутланă авторсене тăван чĕлхене çине тăрсах алла илме, ку енĕпе аслă ăрури ăстасенчен вĕренсе пыма ырă сунас килет". /21/

Куратăр-и, сăвă çырасси те тăван чĕлхене тĕплĕн алла илмесĕр пулмасть иккен. Каллех çакăнта килсе тухатпăр!

Акă грамматика пирки М. Р. Федотов профессор мĕн калать: "Чĕлхен тĕп саккунĕ пур, вăл — грамматика, Н. И. Ашмаринран юлнă грамматика. Ăна пăхăнас пулать". /22/

Унсăрăн нимĕнле сăвă та, калав та çырма çук. Медицина пĕлĕвĕ илмен çын скальпель тытса операци тумасть вĕт. Кунта та çаплах. Малалла Н. И. Егоров профессор сăмахĕсене илсе кăтартма пулать: "Чĕлхене пĕлни вăл çăкăр-тăвар ыйтма пĕлни кăна мар. Чĕлхене пĕлни вăл чи

малтан шухăшлама пĕлни. Кашни çын сăмахсемпе шухăшлать. Чĕлхе çук пулсан шухăш та çук, ăс-хакăл та çук. Ахальтен мар авалхи çынсемех: "Чи малтан сăмах пулнă!" — тенĕ. Чун-чĕре тĕнчине тытса тăракан япала вăл сăмах". /23/

Халăха вĕрентес ĕçĕн отличникĕн Н. Паймуратовăн йĕркисене вулатпăр: "Çитĕнсе пыракан ăрăва ăс-тăн кĕртес тата йĕркене вĕрентес ĕçре атте-анне чĕлхи пысăк вырăн йышăннине çынсем мĕн ĕлĕкренех пĕлнĕ. "Ют чĕлхене вĕренме тытăниччен тăван чĕлхене лайăх ăнкармалла", — тенĕ чехсен паллă педагогĕ Ян Амос Коменский. Çак шухăша тутарсен педагог-демокрачĕ Каюм Насыри те ĕлĕкхи саманарах анлăн аталантарма тăрăшнă. Тăван чĕлхене аталантарассишĕн пирĕн вăхăтра Украина педагогĕ В. А. Сухомлинский те нумай вăй хунă. "Тăван чĕлхе кашни ача чунĕнче чечекленмелле", — тенĕ вăл". /24/

Чĕлхене лайăх вĕрентме лайăх учительсем кирлĕ. Чĕмпĕр чăваш шкулне хупни çак ĕçе питĕ чăрмантарнă. Çавăнпа та ăна уçас ыйту хаçат страницисенче тăтăшах пичетленсе пырать. Ун пирки В. Симаков, И. Кирюшкин, Н. Паймуратов, В. Егоров, Юхма Мишши сăмах хускатнă.

"Чăваш педучилищи уçăлайĕ-ши? статьяра вара ку ыйтăва В. Елагин, И. Я. Яковлев ячĕллĕ çутĕç обществин правлени председателĕн çумĕ, малалла тăсать: "Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ чăвашсемшĕн грексен Афини тесе те калаççĕ [...] И. Я. Яковлев ывăлĕ — Алексей Иванович калашле, сав шкула пула "этем аравĕн пĕр сыпăкĕ тапхăрĕнчех чăваш халăхĕн литература чĕлхине туса хунă, ытти халăхсене çакна тума çĕршер çул кирлĕ пулнă" [...] И. Я. Яковлева чăваш шкулне туса хунă чухне патша чиновникĕсемпе кĕрешме çăмăл пулман ĕнтĕ. Анчах халĕ акă, 120 çул иртнĕ хыççăн, ăна тепĕр хут чĕртсе яма чылай йывăртарах иккен. Ку чухнехи бюрократсене ниепле те витерме май çук. Çăнах та, 1989 çулта Ульяновск облĕçтăвкомĕ пысăк решени йышăнчĕ-ха, "Ульяновскри И. Я. Яковлев ячĕпе хисепленнĕ Чăваш наци педучилищине çĕнĕрен уçмалли мерăсем çинчен" ятлă вăл [...] Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче культурăпа çутĕç училищи вырнаçтарнинчен питех те тĕлĕнмелле [...] Училище кунта вăрахлăхах вырнаçать куран, мĕншĕн тесен ун валли çĕнĕ çурт тумаççĕ [...] Унччен шавланипех иртсе кайĕ тесе шутлаççĕ куран облаçри пуçлăхсем [...] Нумаях

пулмасть çакна пĕлтĕмĕр: чăвашсен учителĕсене хатĕрленĕ комплекс çурчĕсене культурăпа çутĕç училищине яланлăхах панă иккен [...] Çапла вара йышăнăвĕ мĕнĕ камит сеç пулса тухнă [...] Акă епле "татса параççĕ" иккен пирĕн облаçра наци ыйтăвĕсене". /25/

"Авалтан пыракан уява сӳнтерес марччĕ" статьяра (1990 ç., 27№) тепĕр енлĕ ыйтăва хускатнă — ĕлĕк-авалтан килекен киремете пуççапас йăлана манас марччĕ. Çакăнтах Чердаклă районĕнчи Калмаюр ялĕнче иртнĕ Ӳчӳк уявне çырса кăтартнă. Халăх каçхи шăплăха шăхлич сассипе çурса, питлĕх танкăртаттарса уява тухать. Çынсем йышланса пыраççĕ, çав шутра ытти районсенчен, ялсенчен килнисем те пур. Автора пĕр япала кулянтарать: Ӳчӳк йĕркисене пĕлекен çынсем ватăлса пыраççĕ, çамрăксем вара ырă йăлана сыхласа хăварас тесе хыпăнсах укмеççĕ. Мĕнех, ку та пирĕн халăх пурнăçĕн пĕр пайĕ. Тен, тĕрĕсех пăшарханать автор. Несĕлĕмĕрсен пурнăçне, йăли-йĕркине çамрăксен пĕлмелле ĕнтĕ.

Юхма Мишши сыравсăн "Эсĕ те чăвашах, аякри тăванăм" статйине 29, 30, 32-35-мĕш (1990 çул) номерсенче пичетленĕ. Унта вăл çĕршыври чăвашсем патĕнче пулса курни çинчен сăмах пырать. Çакáнтан пĕр сыпăкне илсе вулар-ха. Унта чăваша тăван сăмахран пистерни, сав вăхăтрах пĕр-пĕр вăйлă шухăш-туйăмлă çын ыттисен шухăшне уласштарма пултарни çинчен пĕлме пулать. Акă вулатпăр:

"Ку районти (Мелекесс районĕ — Н. Л.) тепĕр пысăк чăваш ялĕ — Тури Мелекесс (Турикасси — Н. Л.). Кунта — совхоз "Победа" тесе ят панă. 201 кил ялта. 551 çын пурăнать [...] Кунтах библиотека. 14 пин кĕнеке. Вĕсенчен вунтăватташĕ çеç чăвашла. Библиотекăран инçе мар пысăк лавкка, унта халăх хĕвĕшет. Эпир çак лаптăка хамăр автобуса лартрăмăр та сĕтелсем кăларса кĕнекесем хутăмăр. Халăх пуçтарăнчĕ. Кашниех кĕнеке тытса пăхать.

— Тăхта-ха, кин, мĕн ку?

— Ара, кĕнекесем ĕнтĕ.

— Мĕн тума илсе килнĕ ку кĕнекесене?

— Ара, сутма ĕнтĕ.

— Кĕнеке вăл çăкăр мар вĕт. Кам илтĕр ăна?

Çак калаçăва итлесе чун-чĕре пăчăртана-пăчăртана ыратать. Чăнах та, ытла пурнăçран юлнă халăх пек-çке-ха

капла! Иртнĕ ĕмĕрте, сайра-сайра кĕнеке кăларнă чухне Чĕмпĕрти чăваш шкулне, И. Я. Яковлев патне темиçе кĕнеке илессишĕн чăвашсем пиншер çухрăмран пынă. Халĕ вара, социализм саманинче, хăйсем патне турттарса пынă кĕнекесене илме пĕлмеççĕ.

Совхоз директорĕ — Б. А. Улендеев, кунта Çĕпрел районĕнчи Хулаçырми ялĕнчен килнĕ. Чăвашла çырма-вулама пĕлекен пĕртен-пĕр çын.

— Тăхтăр-ха, — терĕ çак калаçăва илтсен Борис Александрович, — укçа илсе тухам.

Акă Борис Александрович кĕнеке илет: вуннă, çирĕм, вăтăр тата ытларах. Çынсем ун çине тĕлĕнсе пăхаççĕ. Сасартăк тахăш самантра тем пулчĕ: ялти лавккара калаçни, ай-уй! тени илтĕнчĕ. Кĕнеке сарса хунă сĕтелсене çынсем хупăрласа илчĕç, пĕр-пĕринпе ăмăртсах кĕнеке çĕклеме тытăнчĕç...

— Тĕслĕх кăтартма пĕлнин усси çакă ĕнтĕ вăл, — ăшшăн кулать И. В. Пайметов, совхоз парторгĕ, — илччĕр-ха, кайран тата эпир библиотекăсем валли совхоз шучĕпе илĕпĕр". /26/

Сапла, темисе теçетке çул халăха тăван чĕлхерен пистернĕ хыççăн вĕсен хушшинче чăвашла кĕнеке-журнал сарас ĕç — чĕр тамăк. Çапах та ку ĕçе кам та пулин илсе пымалла. Унсăрăн чăвашсене ялĕ-ялĕпе пуçĕпех çухатăпăр. Ак мĕн çинчен калаçу пырать кунта!

"Сохраним ли себя как нацию" пысăк статьяра та В. Елагин çак ыйтăвах хускатать. Унтан темиçе предложени çеç илсе пăхăпăр: "... народ, не уважающий себя, не может быть уважаем другими. Многие из нас поступают неверно, а может быть, и скверно, когда отказываются от своей нации, от своего материнского древа [...] Чувство национального достоинства не дается от рождения, а вырабатывается с малых лет [...] Многие наши земляки глубоко ошибаются, что с отходом от родной почвы нечто большее приобретают. Усвоение чужого языка без знания родного еще — не признак культурного человека [...] Чтобы себя сохранить как нацию, нам нужно произвести капитальную ревизию в своем мышлении, переоценку ценностей [...] Приходится глубоко сожалеть, что наша интеллигенция в отличие от других так и не сыграла свою изначальную, прогрессивную роль в становлении и раз-

витии национального самосознания, а скорее, наоборот. Исключение составляют, пожалуй, только писатели". /27

Çапла вара, хаçатăн чи çивĕч темине палартрăмăр. Редакци коллективĕ пĕртен-пĕр тĕллевпе ĕслет: темисе теçетке çул каялла пысăк пуçлăхсем "тăрăшнипе" сунме пуçланă тăван чĕлхемĕре Чĕмпĕр хутлăхĕнче çĕнĕрен чĕртсе аталантарасси, халăха хамăрăн культурăпа паллаштарасси, чăваш чĕлхине тата халăхне çĕршыв тата тĕнче шайĕнче çулерех çĕклесси. Ку тата ытти темăсем паян хаçатра чи пысăк вырăн йышăнаççĕ.

Раççейри тĕрлĕ регионта пурăнакан вырăс мар халăхсем нумай çул хушши хăйсен чĕлхипе хаçат-журнал кăларайман. Наци республикисенче пурăнакан тĕп халăхсен хаçачĕ-журналĕ пулнă-ха. Шупашкарта чăвашла кăларнă. Хусанта — тутарла, Ĕпхÿре — пушкăртла... Анчах та Чĕмпĕрте, Хусанта чăвашла, Шупашкарта тутарла хаçатсем кăларасси пирки калаçу та пулман. Çĕнĕ самана вара çак çитменлĕхе пĕтерме пулăшрĕ. Фактсене пăхар-ха. Ульяновск облаçĕнче 160 пин тутар, 116,5 пин чăваш пурăнать. Вĕсен мĕншĕн хăйсен чĕлхипе çырнă пичет органĕ пулма пултараймасть? Самар облаçĕнче, Пушкăрт Республикинче 120-шер пин чăваш пурăнать, Тутар Республикинче — 134 пин ытла. Сак регионсенче мĕншĕн чăваш хасачĕ тухса тăмасть? Самана уçăлса пыни çак ыйтусене хурав тупма пулăшан. Малалах ку ĕçе Мускаври [illegible] çул паман. 1985 çул хыççăн Раççейри вырăс мар нацисем çине урăхларах, ăшăрах куçпа пăхма тытăнчĕç. Часах КПСС Тĕп Комитечĕн Пленумĕнче нацисен культурине аталантарасси пирки йышăну кăларчĕç.

Унăн хумĕ Ульяновск облаçĕнчи чăвашсене те килсе сĕртĕнчĕ. 1988 çулта Ульяновск облаçĕн халăх депутачĕсен Канашĕн ĕçтăвкомĕ çумĕнче нацисен хушшинчи çыхăнусен ыйтăвĕсемпе ĕçлекен комисси (19 çын) туса хунă. Обласри чăвашсенчен унта Чăнлă районĕнче пурăнакан А. Юман поэта кĕртнĕ. Комиссин пĕрремĕш ларăвĕ авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнче иртнĕ.

Ларура комисси председателĕ — Чердаклă райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Д. И. Шарапов çакăн пек ыйту çĕклет: облаçра вăраха ямасăр тутар тата чăваш телекăларăмĕсене сенкер экран çине кăлармалла, çаплах тăван чĕлхепе хасатсем пичетлеме тытăнмалла.

Комиссин кашни ларӑвӗнчех ҫак ыйтусем чи ҫивӗччисем пулса тӑраҫҫӗ. 1989 ҫулхи пуш уйӑхӗн 3-мӗшӗнче Чӑнлӑ районӗнчи "Заря коммунизма" хаҫатӑн редакторӗ В. Ф. Ромашкин тата дубляж енӗпе ӗҫлекен редактор ҫумӗ А. Ф. Ермилов-Юман область парти комитетне ҫыру яраҫҫӗ.

Акӑ вӑл:

"В ОБКОМ КПСС

Почти четверть века назад в школах области под воздействием сверху перешли на обучение детей с первого класса на русском языке. Из расписаний полностью или частично исчезли уроки чувашского (родного) языка и литературы. Не поощрялись и кружки по этим предметам. Массовые мероприятия в школах и других общественных местах в основном проводились на русском языке, даже если там не было ни одного русского. Работники облоно и районо, да и райкома КПСС требовали, чтобы учителя общались между собой только на русском языке.

За четверть века из стен национальных школ вышли почти три поколения людей, которые не изучали или плохо изучали чувашскую письменность, язык, литературу, на которой базируется национальная культура, ее настоящее и будущее. Жизнь показала, к каким пагубным последствиям ведет выживание родного языка.

Чуваши, проживающие в Ульяновской области, одобряют резолюцию XXI Всероссийской партийной конференции "О межнациональных отношениях", в которой, в частности, есть такие слова: "Следует позаботиться, чтобы национальности, проживающие за пределами своих государственно-территориальных образований или не имеющие их, получили большие возможности для реализации национально-культурных запросов, особенно в сфере образования, общения, народного творчества, а также для создания национальной культуры, использования средств массовой информации..."

На наш взгляд, в Ульяновской области, где проживают чувашей более 100 тысяч человек, желательно наладить выпуск областной газеты на чувашском языке размером половины формата газеты "Правда" периодичностью 3 раза в неделю.

По нашему твердому убеждению, она должна быть

газетой обкома КПСС и облисполкома и издаваться не в селе Большое Нагаткино, а в Ульяновске. Почему? По следующим причинам:

1. В Большенагаткинской типографии очень слаба материальная база, где нет современных печатных машин. Имеющиеся валики старые, краска нестандартная. Те марки красок, которые необходимы для печатания на наших старых машинах, сняты с производства.

Отсутствуют квалифицированные кадры. В типографии трудятся лишь самоучки и нет ни одного человека, который бы окончил полиграфическое училище или техникум.

3. Если бы редакция находилась в селе Большое Нагаткино, а газета печаталась в Ульяновске, то она, имея даже собкоров, не могла бы своевременно получать информацию о событиях, происходящих в Ульяновске и других местах, сообщать оперативно и конкурировать с другими областными газетами. Такой пасынок, не имея привлекательного вида и оперативной информации, был бы обречен на жалкое существование.

Пребывание чувашской редакции в Ульяновске, где еще до революции зарождалось книгопечатание на чувашском языке, появились первые произведения литературы, ставшие классическими, зарождались профессиональная музыка и другие виды искусств, а в годы гражданской войны даже выходила газета на чувашском языке под названием "Çĕнĕ пурнаç" ("Новая жизнь"), позволило бы:

1. поддерживать тесную связь с областными организациями и более квалифицированно освещать проблемы, волнующие и интересующие всех чувашей, проживающих в Ульяновске и области;

2. поддерживать связь со всеми общественными корреспондентами , проживающими в центре и разных уголках области, принимать их, приезжающих в Ульяновск по разным вопросам;

3. наладить прием граждан поличным вопросам;

Но желательно, чтобы редакция находилась в одном здании с типографией или недалеко от нее.

Что нужно для печатания газету на чувашском языке в Ульяновске?

База для этого в Ульяновске уже есть. Достаточно

взять чувашские матрицы из Большенагаткинской типографии и, уложив в небольшой портфель (в чувашском алфавите только 4 дополнительные буквы), привезти в Ульяновск. Набирать по-чувашски умеет линотипистка Кузнецова Тамара, работающая в областной типографии.

Теперь о кадрах редакции. Фотографа, машинистку, корректоров, бухгалтера (если он потрубуется) без труда можно найти в Ульяновске. В первое время потребуется шесть творческих работников. Они имеются в Цильнинской районной газете и в районе. В частности, готовы переехать в Ульяновск Ермилов А. Ф. — зам.редактора райгазеты по дубляжу, член Союза писателей и Союза журналистов; Курайкин Н. Н., журналист, окончивший сельхозтехникум, пединститут, вечерний университет марксизма-ленинизма; Медведев И. А., директор Кундюковского Дома культуры, заканчивающий учебу в институте культуры.

В первое время все согласны жить в комнатах общежития.

Штаты будущей редакции желательно определить согласно Приложению 12 к приказу Госкомиздата СССР от 16 июля 1987 г. № 368.

Редактор Цильнинской районной
газеты "Заря коммунизма" В. Ф РОМАНКИН

зам.редактора по дубляжу А. Ф. ЕРМИЛОВ." /28/

1989 çулхи раштавăн 26-мĕшĕнче вара Ульяновск КПСС обкомĕн бюровĕ тата халăх депутачĕсен область Канашĕн ĕçтăвкомĕ 566-мĕш постановлени кăлараççĕ — "Облаçра наци хаçачĕсене кăларасси çинчен".

Ăна шыраса тупас тĕллевпе эпĕ Ульяновск облаçĕнчи çĕнĕ историйĕн документсен центрне кайрăм. Унта çапла справка пачĕç:

"На заседании бюро Ульяновского обкома КПСС № 20 от 26 декабря 1989 г. было принято постановление бюро Ульяновского обкома КПСС и исполкома областного Совета народных депутатов "Об издании областных национальных газет".

Совместным постановлением бюро обкома КПСС и

исполкома областного Совета народных депутатов было принято решение:

1. Принять предложение областного... чувашского просветительского общества им. И. Я. Яковлева об издании с января 1990 года областной газеты на чувашском языке "Канаш" ("Собеседник"), сделав печатными органами обкома КПСС, областного Совета народных депутатов и национального общества им. И. Я. Яковлева.

2. Областную газету выпускать один раз в неделю объемом половинного формата газеты "Правда" на четырех полосах, установить стоимость одного номера национальной газеты 3 копейки, предоставить финансово-хозяйственную самостоятельность и иметь печать и штамп, открыть свой расчетный счет. Для временного размещения редакции определить национальный культурный центр (ул. Ленина, 95)." /29/

"И. Я. Яковлев ячĕллĕ..." кĕнекере А. Юман çапла аса илни пур:

"И. Я. Яковлев обществин правленийĕн черетлĕ ларăвĕсенчен пĕринче унăн (пулас хаçатăн – Н. Л.) редакторĕ пирки сăмах тапранчĕ. Чи малтанах манăн ята асăнчĕç. Эпĕ ку сĕнупе килĕшмерĕм. Хасатне сырса хатĕрлеме пулать-ха ăна. Анчах редактор чи малтан ĕçе йĕркелесе пыма пултармалла: кадрсем пухса вĕсемпе ĕçлесси, хусалăх ĕçĕсене ертсе пырасси, укса-тенкĕпе çыхăнна операцисене пурнăçласа - тĕрĕслесе тăрасси тата ытти те. Çапла вара, чылай чух унăн хасатра турремĕн ĕçлеме вăхăчĕ те юлмасть. Эртеле ертсе пырас ĕçе эпĕ халиччен хăнăхман, чун туртмасть ун патне, маншăн пулсан хаçатри алпа тытса тумалли "хура ĕç" çывăхрах. Савăнпа манăн "самоотвода" шута илчĕç правлени членĕсем. Саплах эпĕ редактор ĕçне Чăнлă районĕнчи вырăс хаçатĕнче вăй хуракан Валериан Федорович Ромашкин çамрăк журналист ăнăçлă пурнăçласа пыма пултарни çинчен пĕлтернине те ырларĕç. Эпĕ унăн çумĕ пулма килĕшрĕм". /30/

Хаçат ячĕ вара ытларах калаçтарнă. Тĕрлине сĕннĕ пухăннисем. Общество правленийĕн пуçлăхĕ И. С. Кирюшкин сĕннĕ "Канаш" çинче чарăннă. Малалла хаçат кăларас ĕç пуçланнă. Штат çук-ха — пĕр бухгалтер сес. Ыттисем Чăнлă район хаçачĕн ĕçченĕсем. Макетне, наборне, верстkине — пурне те Аслă Нагаткин типографийĕнче тунă. Хасат

страницисен оттискĕсене область типографине илсе кайнă, пичетленĕ. Хаçат çапла майпа 1990 çулхи ака уйăхĕччен тухса тăрать.

Акă приказсен кĕнекине уçатпăр. Унта 1-мĕш номерлĕ приказ çакăн пек:

"2.01.90.

г. Ульяновск

О назначении Ромашкина В. Ф. и.о.редактора областной чувашской газеты "Канаш".

1. Назначить Ромашкина Валериана Федоровича исполняющим обязанности редактора областной чувашской газеты "Канаш", освободив его от должности редактора Цильнинской районной газеты "Заря коммунизма" со 2 января 1990 года.

Основание: Приказ №1-к по управлению издательств полиграфии и книжной торговли Ульяновского облисполкома от 2.01.90.

и.о.редактора В. Ф. РОМАШКИН." /31/

Малалла штат йĕркеленет. Çак кунах А. Ф. Ермилова тата Я. К. Рогачева 0,5 ставкăпа корреспондент должноçне илеççĕ. Художник Д. Ш. Белоусов пулса тăрать, корректор — Р. В. Мердеева, Н. Н. Ромашкина — машинистка, В. А. Искендерова — бухгалтер. Пуш уйăхĕн 27-мĕшĕнче А. Г. Дмитриева пай пуçлăхне илеççĕ, çу уйăхĕн 21-мĕшĕнче Н. А. Казакова — фотокорреспондента. Çулла Д. Белоусов, Я. Рогачев, Р. Мердеева ĕçрен тухса каяççĕ. Çурла уйăхĕнчи 13-мĕшĕнче сырнă приказ тăрăх, А. Ермилов редактор заместителĕ пулса тăрать.

Пĕрремĕш кăларăма калăплама пулăшакансене те асăнса хăвармалла. Ун чухне пичетпе информаци управленийĕн пуçлăхĕ Николай Николаевич Липин пулнă (вăл ăна паян та ертсе пырать). Типографи директорĕ Евгения Константиновна Бурдина. Линотипист — Н. Киселев, верстальщица — Н. Трифонова.

Хаçат тухма пуçласанах редакцие тĕрлĕ çĕрте пурăнакан чăвашсенчен çырусем килме пуçлаççĕ.

Çырусене регистрацилесе пынă кĕнекене пăхса тухсан çапла ўкерчĕк курма пулать.

1990 çулта редакцие 1123 материал ярса панă вулакансем.

Акă штатра тăман чи хастар корреспондентсем:

1. Н. Казаков. (Тереньга).
2. Я. Рогачев (Димитровград).
3. А. Казаков (Çĕпрел районĕ, Çĕнĕ Йĕлмел).
4. Н. Семеленов (Ульяновск хули).
5. А. Вражкин (Шупашкар хули).
6. А. Чебанов (Аслă Нагаткин).
7. В. Тарават (Аслă Нагаткин).
8. Д. Шашкин (Раккасси ялĕ).
9. Н. Паймуратов (Çарăмсан районĕ, Çĕнĕ Йĕлмел).
10. А. Афанасьев (Çĕмĕрле районĕ).
11. А. Ермилов (Аслă Нагаткин).
12. В. Кашеев (Ульяновск).
13. Л. Данилов (Ульяновск).
14. А. Степанов (Канаш хули).
15. И. Саландаев (Шăмăршă ялĕ).
16. А. Дмитриев (Ульяновск).
17. А. Головин (Каша ялĕ).

1991 çул
(пурĕ 857 çыру килнĕ).

1. Я. Рогачев (Димитровград).
2. В. Елагин (Ульяновск).
3. А. Чебанов (Аслă Нагаткин).
4. В. Кашеев (Ульяновск).
5. А. Степанов (Канаш).
6. Л. Данилова (Çĕнĕ Вĕрен).
7. Н. Аюгов (Ульяновск).
8. И. Саландаев (Шăмăршă).
9. А. Казаков (Çĕпрел районĕ, Çĕнĕ Йĕлмел).
10. Л. Данилов (Ульяновск хули).
11. В. Михайлов (Шăмăршă).
12. В. Деменкова (Аслă Çăлкуç ялĕ).
13. Ф. Савгачев (Нурлат).
14. А. Афанасьев (Çĕмĕрле).

1992 çул
(пурĕ 806 çыру килнĕ).

1 Я. Рогачев (Димитровград).
2. В. Кашеев (Ульяновск).
3 И. Саландаев (Шăмăршă).

4. В. Елагин (Ульяновск).
5. Л. Данилова (Çĕнĕ Вĕрен)
6. А. Степанов (Канаш хули).
7. В. Владимиров (Патăрьел).
8. А Чебанов (Аслă Нагаткин).
9. Д. Шашкин (Раккасси).
10. Л. Данилов (Ульяновск).
11. А. Казаков (Çĕпрел районĕ, Çĕнĕ Йĕлмел).
12. Н. Дворов (Пăва районĕ, Шемек).

1993 çул
(пурĕ 978 çыру килнĕ).
1. В. Кашеев (Ульяновск).
2. В. Дмитриев (Шупашкар).
3. Н. Дворов (Пăва районĕ).
4. Д. Шашкин (Раккасси).
5. Я. Рогачев (Димитровград).
6. И. Эльмукова (Шупашкар).
7. В. Мусин (Ульяновск).
8. В. Симаков (Сызрань).
9. С. Солодовникова (Тереньга).
10. В. Владимиров (Патăрьел).
11. Н. Ларионов (Ульяновск).
12. Р. Уткин (Тереньга).
13. В. Елагин (Ульяновск).
14. Л. Данилов (Ульяновск).

1994 çул
(пурĕ 1020 çыру килнĕ).
1. В. Владимиров (Патăрьел).
2. Л. Данилов (Ульяновск).
3. Н. Ларионов (Ульяновск).
4. А. Ашкеров (Ульяновск).
5. В. Кашеев (Ульяновск).
6. В. Мусин (Ульяновск).
7. А. Чебанов (Аслă Нагаткин).
8. В. Деменкова (Аслă Çăлкуç ялĕ).
9. А. Богатов (Ульяновск).
10. Н. Паймуратов (Çарăмсан районĕ, Çĕнĕ Йĕлмел).
11. Е. Васильева (Чăваш Кăлаткă).
12. В. Елагин (Ульяновск).

1995 çул
(пурĕ 1116 çыру килнĕ).
1. В. Деменкова (Аслă Çăлкуç).
2. Е. Васильева (Чăваш Кăлаткă).
3. Е. Андреев (Хусан).
4. Н. Ларионов (Ульяновск).
5. Л. Данилов (Ульяновск).
6. Р. Уткин (Тереньга).
7. В. Владимиров (Патăрьел).
8. М. Селендеева (Чăвашкасси).
9. Н. Розов (Ульяновск).
10. Д. Шашкин (Раккасси).
11. А. Богатов (Ульяновск).
12. Л. Данилова (Çĕнĕ Вĕрен)

1996 çул
(пурĕ 794 çыру килнĕ).
1. Н. Ларионов (Ульяновск).
2. Л. Данилов (Ульяновск).
3. Е. Васильева (Чăваш Кăлаткă).
4. А. Чебанов (Аслă Нагаткин)
5. П. Соловьев (Скугареевка).
6. В. Галкин (Ишевке).
7. И. Замалетдинов (Ульяновск).
8. Г. Мулендеев (Чита)
9. В. Деменкова (Аслă Çăлкуç)
10. Н. Розов (Ульяновск).

1997 çул
(пурĕ 1239 çыру килнĕ).
1. П. Сергеев (Ульяновск).
2. Л. Данилов (Ульяновск).
3. А. Юман (Аслă Нагаткин).
4. В. Соловьева (Ульяновск).
5. М. Селендеева (Чăвашкасси)
6. В. Елагин (Ульяновск).
7. В. Галкин (Ишевке).
8. В. Деменкова (Аслă Çăлкуç).
9. Н. Семеленов (Ульяновск).
10. Е. Васильева (Чăваш Кăлаткă).
11. А. Головин (Каша).

12. Д. Шашкин (Раккасси).
13. В. Мердеев (Луговой ялĕ).

1998 çул
(пурĕ 1075 çыру килнĕ).
1. Н. Розов (Ульяновск).
2. В. Соловьева (Ульяновск).
3. П. Соловьев (Скугареевка).
4. П. Сергеев (Ульяновск).
5. Р. Мифтяхутдинов (Чăваш Кăлаткă).
6. А. Никонорова (Вышкă).
7. Н. Васильева (Каша).
8. Л. Данилов (Ульяновск).
9. В. Деменкова (Аслă Çăлкуç).
10. Н. Штурмин (Ульяновск).
11. А. Чебанов (Аслă Нагаткин).
12. Е. Васильева (Чăваш Кăлаткă).
13. Р. Уткин (Тереньга).
14. А. Головин (Каша).

1999 çул
(пурĕ 1234 çыру килнĕ).
1. А. Юман (Аслă Нагаткин).
2. Н. Кадебин (Кивĕ Улхаш).
3. А. Чебанов (Аслă Нагаткин).
4. Н. Розов (Ульяновск).
5. А. Улендеева (Ульяновск).
6. П. Соловьев (Скугареевка).
7. М. Селендеева (Чăвашкасси).
8. Е. Васильева (Чăваш Кăлаткă).
9. Н. Ратаева (Ульяновск).
10. А. Романов (Аслă Нагаткин).
11. В. Елагин (Ульяновск).
12. Н. Штурмин (Ульяновск).
13. А. Богатов (Уляьновск).
14. Л. Данилов (Ульяновск).
15. В. Деменкова (Аслă Çăлкуç).
16. В. Соловьева (Ульяновск).
17. А. Галкин (Ишевке).

2000 çул
(пурĕ 1201 çыру килнĕ).
1. Н. Казаков (Ульяновск).
2. В. Деменкова (Аслă Çăлкуç).
3. П. Серргеев (Ульяновск).
4. А. Галкин (Ишевке)
5. П. Соловьев (Скугареевка).
6. А. Еграшкин (Ульяновск).
7. А. Богатов (Ульяновск).
8. Д. Шашкин (Раккасси).
9. Н. Розов (Ульяновск).
10. А. Романов (Аслă Нагаткин).
11. В. Соловьева (Ульяновск).
12 В. Дедушкин (Аслă Нагаткин).
13. Л. Данилов (Ульяновск).
14. И. Гордеева (Ульяновск).
15. М. Ларкина (Чӳрекел).
16. С. Краснов (Ульяновск).
17. Н. Васильева (Каша).
18. П. Ишутов (Ульяновск).
19. А. Головин (Каша).
20. В. Владимиров (Патăрьел).

2001 çул
(пурĕ 1019 çыру килнĕ).
1. Н. Казаков (Ульяновск).
2. В. Соловьева (Ульяновск).
3. Н. Штурмин (Ульяновск).
4. П. Сергеев (Ульяновск).
5. Н. Васильева (Каша).
6. И. Кирпичников (Анат Тимĕрçен).
7. Н. Юнгерова (Элшел).
8. П. Соловьев (Скугареевка).
9. И. Гордеева (Ульяновск).
10. В. Деменкова (Аслă Çăлкус).
11. Л. Данилов (Ульяновск).
12. А. Богатов (Ульяновск).
13. Н. Ратаева (Ульяновск).
14. А. Никонорова (Вышкă).
15. Д. Шашкин (Раккасси).

2002 çул
(пурĕ 1059 çыру килнĕ).
1. Н. Васильева (Каша)
2. А. Богатов (Ульяновск).
3. П. Сергеев (Ульяновск).
4. Л. Данилов (Ульяновск).
5. Н. Ратаева (Ульяновск).
6. Н. Штурмин (Ульяновск).
7. В. Деменкова (Аслă Çăлкуç).
8. Н. Долгов (Çĕнĕ Улхаш).
9. В. Соловьева (Ульяновск).
10. Н. Семеленов (Ульяновск).
11. П. Соловьев (Скугареевка).
12. П. Ишутов (Ульяновск).
13. Н. Казаков (Ульяновск).
14. И. Кирпичников (Анат Тимĕрçен).

2003 çул
(пушăн 20-мĕшĕ тĕлне 298 çыру килнĕ).
Ытларах çаксем çыраççĕ:
1. Л. Данилов (Ульяновск).
2. Н. Васильева (Каша).
3. В. Андрихова (Анат Тимĕрçен).
4. Н. Штурмин (Ульяновск).
5. Н. Семеленов (Ульяновск).
6. В. Соловьева (Ульяновск).
7. Н. Ратаева (Ульяновск).
8. И. Кирпичников (Анат Тимĕрçен).
9. Н. Долгов (Çĕнĕ Улхаш).

Студентсем: М. Сюмма, А. Улендеева, Е. Илямакова (Ульяновск).

Шкул ачисем: Е. Крыжукова, А. Сидоров (Ирçел шкулĕ), А. Кузьмин (Вăта Тимĕрçен), Кунтикав, Чӳрекел шкул ачисем.

Паян "Канаш" хаçатăн учредителĕ — Ульяновск область администрацийĕ. Самар хулинче вырнаçнă Раççей Федерацийĕн патшалăх массăллă информаци хатĕрĕсене регистраци тăвакан тата йĕркелесе тăракан Атăлçи регионаллă управленире регистрациленĕ (1994 çулхи ака уйăхĕ, свидетельство номерĕ С 0646). /32/

Редакци коллективĕ облаçри пичет, телерадиовеща-

ни тата массăллă коммуникаци хатĕрĕсен управленийĕ ирттерекен конкурссене тăтăшах хутшăнать. 2001 султа раштавра — "Сыввисене ĕç, айваннисене — пулăшу" ятпа иртнĕ конкурсра 3-мĕш вырăн йышăнтăмăр, диплом илтĕмĕр. Çак çулах çурла уйăхĕнче "Культура тата искусство" конкурс иртрĕ, çак ыйтусене хасатра сутатса тăнăшăн "Канаш" хаçата каллех 3-мĕш вырăн пачĕç ("Областьтата хули хаçачĕсемпе журналĕсем" пайра). "Ĕç çынни" конкурсра та çакăн пек çитĕнӳ тума пултартăмăр. 2002 çулхи раштав уйăхĕнче "Манан пĕчĕк тăван çĕршывам" конкурсăн дипломанчĕ пулса тăтăмăр, 3-мĕш степеньлĕ диплом илтĕмĕр.

Облаçри çамрăксемпе ĕçлекен комитет çитĕнекен ăрава наркоманирен сыхлассине тата профилактика ĕçĕсене çутатса парас енĕпе область тата район хаçачĕсен хушшинче 2001 çулхи конкурса пĕтĕмлетнĕ хыççăн сакă паллă пулчĕ: "Канаш" хаçат корреспонденчĕ Е. Мустаева 3-мĕш вырăн йышăннă, диплом илме тивĕçнĕ.

1999 çулта область администрацийĕ тата Саккунсем кăларакан Пуху пирĕн хасата Хисеплĕ грамотăсемпе наградăларĕç.

1995 çулта хаçат икĕ премие тивĕçнĕ. Н. Я. Бичурин ячĕллĕ премие пире таврапĕлӳ ыйтăвĕсене лайăх çутатса тăнăшан Чăваш наци конгресĕ тата Чăваш таврапĕлуçисен пĕрлĕхĕ панă. Чăвашсен обществăлла культура центренчен вара Альпăрт Канаш ячĕллĕ премие чăваш этносне çĕклеме, культура тата çутĕç ыйтăвĕсене татса пама, çамрăк ăрава тăван халăхăн ырă йăлисене вĕрентме нумай тăрăшнăшăн тивĕçнĕ.

**Паянхи сăн-сăпачĕ**

Вулакан хаçата алла тытсанах унта мĕн-мĕн синчен çырнине пĕлесшĕн. Ун туйăмне тивĕçтерсе логотип тăрринче анонс пичетленет: кашни страницăри тĕп материалăн теми. Пĕр-пĕр пысăк фото çине заголовок е подзаголовок вырнаçтарни те хаçата илемлетет. Хура фон çине шур саспаллисемпе (выворотка) çивĕч материалсене лартса яратпăр. Ку тӳрех куçа хăй çине туртать, ун содержанийĕпе паллашма хистет. Растрпа та çак тĕллевпех усă куратпăр.

Хальхи нумай хаҫат-журналта штатра тăман коррес-пондентсене гонорар тӳлемеҫҫĕ. Пирĕн апла мар. Пĕр но-мер гонорарĕ пурĕ 827 тенкĕ тăрать пулсан ун 30 проценчĕ штатра тăманнисем валли каять. Ҫулталăк вĕҫĕнче эпир вĕсене пурне те хасатра (пĕр ҫыру ҫеҫ янă пулин те) ятран асăнса тав тăватпăр. Ҫак япаласем вулакансене пирĕн енне туртăнма хистеҫҫĕ.

2002 ҫул вĕҫĕнче хаҫат страницисенче анкета ирттертĕмĕр. Унта вырăсла страницăсем пирки те ыйту пурччĕ. Чылайăшĕ вĕсене пĕтерме ыйтаҫҫĕ, чăваш хаҫатне чăвашла ҫырмалла теҫҫĕ. Ҫапах та урăхла калакансем те пур. Ҫавăнпа вăхăт-вăхăт вырăсла пичетлекелетпĕр статья-сене. Пирĕн хамăртан никама та пистермелле мар.

Тĕрлĕ конкурссем ирттеретпĕр хаҫат страницисенче: "Чăваш пики", "Тăван тавралăх" (фотоконкурссем), "Чăваш ачи, сассуна пар", ӳкерӳҫĕсен конкурсĕ. Викторинăсене те хаваспах хутшăнаҫҫĕ вулакансем.

Кăҫал вара хаҫат ҫырăнакансем хушшинче лотерея вăййи ирттеретпĕр. Укҫи-тенкине, япалисене усламҫăсем, вулакансем хăйсемех параҫҫĕ. Призсем хушшинче: видео-магнитофон, электрокалькуляторсем, кĕнекесем — пур.

Ялсенче "Канаш" кунĕсене ирттеретпĕр: хĕлле — Куль-тура ҫурчĕсенче, ҫулла — урамрах. Журналистсемпе пĕрле "Палнай" ушкăн артисчĕсем ҫула тухаҫҫĕ. Ял халăхне хаҫатпа, хамăрпа паллаштаратпăр. Кайран пурте пĕрле саккăрран ҫаптарса, такмак каласа ташлаҫҫе. Ҫак тĕлпулусем вулакана хаҫат хушшинчи сукмака такăртлатма пулăшаҫҫĕ. Лаишевкăра, Скугареевкăра, Ирҫелĕнче, Анат Тимĕрҫенте тата ытти ҫĕрте иртнĕ кун пек уявсем.

Н. Еграшкина журналист — ятарлă пĕлӳ илнĕ ӳкерӳҫĕ. Ун иллюстрацийĕсем, шӳтлĕ ӳкерчĕкĕсем хаҫата ҫĕнĕ сĕм кĕртеҫҫĕ.

Вăлах чăваш тĕрри, тумтирĕ ҫинчен ятарлă рубрика илсе пырать, ҫамрăк ăрăва авалхи япаласемпе паллашта-рать.

Ҫырăну тапхăрĕ вăхăтĕнче ĕҫ-пуҫ мĕнлерех пынине пĕлтерме хаҫатра область тата Чăнлă районĕ тăрăх сводкăсем пичетлетпĕр. Ку хăвăн ĕҫне ыттисеннипе тан-лаштарса пăхма меллĕ.

2003 ҫулхи 8-мĕш номерте Г. Тафаев профессорăн "Введение в чувашскую историю" кĕнекине пичетлеме

тытăнтăмăр, номертен номере парса пыратпăр. Халăх ку ыйтупа питĕ кăсăкланать: çыраççĕ, шăнкăравлаççĕ, хамăра курсан та çак темăпа калаçма пуçлаççĕ. Çавăнпа та кун пирки малашне те çырсах тăрăпăр. Иртнĕ кун-çула пĕлмесен малашлăх çук пирĕн.

Паянхи "Канашра" нумай-нумай рубрика хальхи пурнăçа тĕрлĕ енчен çутатса парать.

**"Политика".** Çĕршыври, тĕнчери, чăваш тĕнчинчи, облаçривлаççен, политикăлла партисен, тĕрлĕ юхăмсен хутшăнăвĕсене пĕлтерет.

**"Экономика".** Рубрикăн ячех ăнлантарать мĕн çинчен çырнине. Юлашки улшăнусем, ырана пăхма тăрăшни пур кунта.

**"Халăх сăмахлăхĕ"**. Мăн асаттесенчен юлнă юрă-такмака вулакансем редакцие çырса яраççĕ.

**"Çамрăклăх".** Юлашки вăхăтра ытларах тимлĕх уйăрма тытăнтăмăр ăна. Çамрăксем паянхи ахăрсаманара хăйсем валли тĕрĕс çул тупма пĕлнинче — пирĕн малашлăх

**"Культура".** Чăваш тĕнчинчи, облаçри культура мероприятийĕсене (конкурссем, фестивальсем, тĕлпулусем, акатуйсем, ытти уявсем) анлăн çутатать.

**"Шкул пурнăçĕ".** Кунта уйрăмах тăван чĕлхене, культурăна, йăла-йĕркене вĕрентекен шкулсем пирки нумай çыратпăр.

**"Çемье тытăмĕ".** Вăйлă патшалăх — семье çирĕплĕхĕнче. Çемьере ача пĕрремĕш воспитани илет.

**"Ашшĕ-амăшĕсен шкулĕ".** Семьере йывăрлăхсем сиксе тухаççĕ: ача итлемест, вĕренесшĕн мар, ашшĕ-амăшне улталама пăхать... Çак лару-тăруран ачан тивĕçлĕхне тĕкĕнмесĕр, харкашмасăр мĕнле тухмалла? Психолог, педагог канашĕсем кашнин валлиех усăллă.

**"Тĕн".** Чирку начара вĕрентмест. Темиçе теçетке çул тĕнрен уйăрса пурăнни халăха йăнăш çулпа илсе кайма пултарать. Çакна ăнланса илтĕмĕр. Çынлăх, чунлăх пирки тăтăшах сăмах хускататпăр.

**"Этем тата çутçанталăк".** Çак ыйту кунран-кун çивĕчленсе пырать. Сăлтавĕ паллă: çын хăйне çĕр çинче хуçа пек тытать: çутçанталăк саккунĕсене сĕмсĕррĕн пăсать, ыранхи пирки таран шутламасть.

**"Кану вăхăчĕ".** Çын мĕн чухлĕ лайăх канать, савăн

чухлĕ аван ĕҫлет. Хăш чухне эпир канăва тимлĕх уйăрса каймастпăр. Ҫавна шута илсе вулакансене тĕрлĕ енĕпе интереслентерме тăрăшатпăр.

**“Пахчаҫă кĕтесĕ”.** Ялта — пахча, хулара — дача. Ҫын сĕр ҫине таврăнать. Кунта чи кирлĕ канашсем.

**“Ҫинук аппа тĕпелĕ”.** Кил-ҫуртра, тĕпелте кирлĕ пулакан сĕнӳсем, рецептсем: хуплу мĕнле пĕҫермелле, шăрттан мĕнле тумалла?

**“Шевле” ҫути.** “Шевле” литпĕрлешĕвĕн членĕсен сăввисем, калавĕсем, повеҫĕсем тăтăшах пичетленсе пыраççĕ.

**“Ял пурнăҫĕ”.** Хаҫата вулакансем нумайăшĕ ялта пурăнаççĕ. Ыйтăвĕсем вара нумай. Выльăх-чĕрлĕх ӳстернĕ — кĕркунне аш пур. Анчах ытлашшине ăҫта вырнаҫтармалла? Пуҫтарса ҫӳрекенхарпăр ҫынсем ăна ҫурма хакпа илсе каясшăн. Патшалăх ҫакна мĕншĕн курмасть, аш-какай пуҫтарассине йĕркелемест? Е ял ҫыннин ĕҫĕ никама та кирлĕ мар-и?

**“Спорт”.** Чăваш спортсменĕсем тĕнче шайлă турнирсенче тунă ҫитĕнӳсем тата облаҫри спорт хыпарĕсем.

**“Алĕҫ ăсти”.** Ҫын шухăшĕн тӳпи ҫук. Шухăшласан-шухăшласан темле тĕлĕнмелле япала та тума пулать. Несĕлĕмĕрсен ĕҫĕсене чĕртсе тăратма пулăшать.

**“Ҫын хăйне еплерех тыткаламалла”.** Шкулта ҫырма, шутлама вĕренетпĕр-ха. Хамăра вĕреннĕ, культуралла ҫын тетпĕр. Тĕрессипе, общество этикине пĕлсех каймастпăр. Ҫак ҫитменлĕхе хуть те хăҫан та пĕтерме пулать. Ырă сĕнӳсемпе усă курмалла ҫеҫ.

**“Ыйтăр-хуравлатпăр”.** Пурнăҫра ăнсăртран йывăрлăх сиксе тухнă. Ҫакăн чухне ырă сăмах, усăллă канаш темрен те хаклă. Ҫак рубрикăрах пĕр-пĕр паллă ҫын е пулăм ҫинче ыйтса ҫырнă ыйтусене хуравлатпăр.

Ытти рубрикăсен ячĕсем: **“Тĕнчере — тĕрлĕ-мерлĕ кĕнчеле”, “Обществăлла организацисен пурнăҫĕ”, “Кулăш кушелĕ”, “Ăмсантаракан ҫимĕҫ”, “Сывлăха”, “Таврапĕлӳҫĕ кĕтесĕ”, “Чăваш ҫыравҫисем”, “Паттăрлăх”, “Усăллă канашсем”, “Саламлатпăр”, “Ҫĕнĕ хыпарсем”, “Кун ыйтăвĕ”, “Мораль темипе”, “Ырă ята тивĕҫлисем”, “Шухăшлаттаракан ыйту**” тата ытти те.

Юлашки вăхăтра ятарлă страницăсем кăларма тытăнтăмăр.

**“Ку-ка-ре-ку”.** Ача-пăча валли. Пуçламăш классенче тăван чĕлхе туйăмĕ кĕрсе юлмасан ача унран уйрăлать. Ун пек ан пултăр тесе эпир ку рубрикăра юмахсем, часкалусем, ача-пăча юррисем, ансат пуçватмăшсем, сăмах вăййисем, ребуссем, туптарусем, таврăнккасем тата ыттине пичетлетпĕр.

**“Эх, чух, çамрăк чух...”** Çамрăксен страници. Пĕрремĕш ĕçе тупма пулăшакан сĕнусем, çамрăклăх юррисем, артистсем, çамрăк спортсменсем çинчен çырнă материалсем, психологи урокĕсем. Пултаруллă, малашлăха ăнталакан çамрăксенчен илнĕ интервьюсем.

**“Салтак ячĕ тухрĕ ман”.** Салтака каякансем валли Призыв вăхăтĕнче пичетлетпĕр. Акă пĕр каларăмăн темисем: салтака илмелли çинчен çырнă Раççеи Президенчен Указĕ, çара каякансен сывлăхĕ, салтакран юлас тесе пăлахая перекенсем, çар хĕсметне кайма кăмал тăвакан хĕрсем. салтакран хăтăлма май паракан чир-чĕр, вырăс гвардийĕн кăкăр çине çакмалли паллисем. тӳрĕ йĕрлĕ сăмахкасмăш — “Тăван сĕршывшăн!”.

Редакци Ульяновск хулинче Советская урамĕнчи 8-мĕш çуртра (“Советская” хăна çурчĕ) вырнаçнă. Виçĕ пулĕм йышăнать (67.1 тăваткал метр). Редакцире журналистсем материалĕсене машинкăпа пичетлеççĕ те секретариата параççĕ. Яваплă секратарь вĕсене полосасем çинче макет тăвать, операторсене парать. Операторсем текстсене компьютерпа наборлаççĕ, верстка тăваççĕ. Ун хыççăн пĕтĕм хаçата дискета çине çыраççĕ. Дискетăпа тата фотографисене типографие илсе каятпăр. Унти операторсем фотографисене сканерпа усă курса полосасем çине вырнаçтараççĕ. Полосасене монтаж цехĕнче икшерĕн вырнаçтарса (1-мĕшпе 8-мĕш, 2-мĕшпе 7-мĕш, 3-мĕшпе 6-мĕш, 4-мĕшпе 5-мĕш) пичет цехне паратпăр.

Хаçат сакăр полосапа (икĕ пичет листи) эрнере пĕрре, кĕçнерникун, тухать. Тиражĕ 1550 экземпляр. Область тулашĕнчи вулакансене çыхăну уйрăмĕ урлă конвертпа ярса тăратпăр: Мускава, Читана, Шупашкара, Патăрьелне, Сызране, Нурлата...

“Канаш” хаçатри материалсемпе усă курса Чăвашрадио журналисчĕ П. К. Андреев тахăшах радиокăларăмсем хатĕрлет. Çаплах вăл статьясен чĕлхине тишкерет.

**Редакци коллективĕ**

Паян редакцире сакăр çын ĕçлет... [illegible]



*Ларассĕ (сулахайран сылтăмалла): А.Романов, Н.Ларионов, А.Дмитриев; Тăрассĕ: Н.Егрушкина, Л.Никитина, А.Степанова, Б.Ефимова, Е.Алексеева.*

**Николай Николаевич Ларионов.**

Тутарстанри Сепрел районĕнчи Сĕнĕ Йĕлмел ялĕнче 1961 çулхи ака уйăхĕн 25-мĕшĕнче çуралнă.

1993 çулта Чулхулари автотранспорт техникумĕн куçăн [illegible] пĕтернĕ.

Журналист ĕçне 19[illegible]5 çулта Ульяновск районĕнчи "Родина" [illegible] пуçланă.

1996 çултанпа — "Хыпар" хаçатра (корреспондент, ятарлă корреспондент, пай пуçлăхĕ, яваплă секретарь, 2002 çулхи юпа уйăхĕн 1-мĕшĕнчен вара — тĕп редактор). 1997-2003 çулсенче Чăваш патшалăх университечĕн чăваш филологийĕпе культура факультетĕнче вĕреннĕ.

1995 çултанпа Раççей Писательсен союзĕн членĕ.

1997 çултанпа Раççей Журналистсен союзĕн членĕ.

Алексей Талвир ячĕллĕ преми лауреачĕ (1994).

"Чĕре тапнă чух" кĕнеке авторĕ (1998).

**Анатолий Григорьевич Дмитриев-ЫРЬЯТ.**

1949 çулхи çĕртме уйăхĕн Тутарстан Республикинчи Кĕрекен Пăва районĕнчи Раккасси (Тăхăрьял) ялĕнче çуралнă.

1966 çулта Элшелĕнчи вăтам шкултан вĕренсе тухнă 1968-1970 çулсенче хĕсметре тăнă. 1970-1975 çулсенче Хирти Кушкăри тулли мар вăтам шкулта учитель пулса ĕçленĕ.

1975-1977 çулсенче Шупашкарти партишкулĕнче вĕреннĕ. 1977-1982 çулсенче Раккасинчи шкулта вĕрентнĕ. 1982-1990 çулсенче Ульяновскри тĕрлĕ организацисенче вăй хунă. 1990 çултанпа "Канаш" хаçатра ĕçлет. Тĕп редактор çумĕ.

1996 çулта Шупашкарти И. Н. Ульянов ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх университетĕнчен вĕренсе тухнă. Филолог. Журналист. 1991 çултанпа РФ Журналистсен союзĕн членĕ. 1993 çултанпа РФ тата ЧР Писательсен союзĕн членĕ. "Хăмăшлăха путнă кĕмĕл уйăх" кĕнеке авторĕ. А. Ырьятăн сăввисем тăрăх С. Толстов композитор юрăсем хывнă.

Автор сăввисемпе повеçĕсенче чи малта юрату тытăмĕ тăрать, ял пурнăçĕпе çынсен шăпи, сăваплăхпа туйăмсен шухăшĕ чи çÿллĕ вырăнта.

**Людмила Викторовна Ныйкина (Агайкина).**

1952 çулхи утă уйăхĕн 5-мĕшĕнче Ульяновск облаçĕнчи Чăнлă районĕнчи Анат Тимĕрçен ялĕнче çуралнă.

1969 çулта Вăта Тимĕрçенти вăтам шкултан тухсан Ульяновск педагогика институтне (географипе биологи уйрăмĕ) вĕренме кĕнĕ.

Диплом илсен 8 çул Ирçелĕнчи сакăр çуллă шкулта директор çумĕ пулнă. 11 çул Ульяновскра общежитире воспитательте ĕçленĕ.

"Канаш" хаçатра 1992 çултанпа вăй хурать. Корреспондент, корректор тивĕçĕсене туса пынă.

Халĕ яваплă секретарь.

**Елена Николаевна Мустаева (Федорова).**

1966 çулхи кăрлач уйăхĕн 27-мĕшĕнче Вăрнар районĕнчи Кушлавăш ялĕнче (Чăваш Республики) çуралнă

1989 çулта Чăваш патшалăх университечен историпе филологи факультетне пĕтернĕ (вырăс уйрăмĕ).

Вырăс чĕлхипе литератури вĕрентнĕ.

"Канаш" хаçатра 1991 çултанпа. Корректор, корреспондент, пай пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçланă.

**Елена Геннадьевна Алексеева (Селиванова).**

Тутарстанри Аксу районне кӗрекен Беловка ялӗнче 1973 сулхи кăрлач уйăхӗн 28-мӗшӗнче çуралнă. Çакăнтах пуçламăш пӗлӳ илнӗ. Унтан Кивӗ Тимушкел вăтам шкулӗнче вӗреннӗ. Çак хушăрах Шупашкарта тухса тăракан "Пионер сасси", (халь "Тантăш") хаçатпа тата "Хатӗр пул" ("Çилçунат") журналпа çыхăну тытнă. Вуннăмӗш класра чухне хастар юнкор тесе Шупашкара республика шайӗнче ирттернӗ чăваш чӗлхипе литературин олимпиадине, культура кунне уявлана сӗре чӗнсе илнӗ. 1995 çулта Чăваш патшалăх университетне хӗрлӗ дипломпа пӗтерет. Çав сулах ӗç биографине "Канаш" хаçатра пуçлать. 1997-98, 1998-99 вӗренӳ çулӗсенче Ульяновск педуниверситетӗнче чăваш чӗлхи вӗрентнӗ. 2002 çулхи чук уйăхӗнчен пуçласа – сырусен пайӗн пуçлăхӗ.

**Альбина Александровна Степанова.**

Чăваш Республикинчи Патăрьел районӗнчи Упамсар ялӗнче 1964 сулхи нарăсăн 25-мӗшӗнче çуралнă.

Шкулта вӗреннӗ чухнех "Пионер сасси" хаçатпа, "Хатӗр пул" журналпа çыхăну тытнă, конкурс лауреачӗ пулнă.

Турхан ялӗнче вăтам пӗлӳ илнӗ.

1986 çулта Чăваш патшалăх университечӗн историпе филологи факультетӗнчен вӗренсе тухнă. Çакăнта "Çилçунат" литпёрлешу сçнс хастар хутшăннă.

Диплом илнӗ хыççăн Шăмăршă район хаçатӗнче ӗçленӗ.

1992 çултанпа "Канаш" хаçатра: корреспондент, пай пуслăхӗ, ятарлă корреспондент.

Рассей Журналистсен союзӗн членӗ (1994).

**Нина Никитична Еграшкина (Разумова).**

1956 çулхи пуш уйăхӗн 7-мӗшӗнче Чăваш Республикинчи Етӗрне районӗнчи Анат Ачак ялӗнче çуралнă. 1973 çулта вăтам шкултан вӗренсе тухнă.

1977 çулта И. Я. Яковлев ячӗллӗ Чăваш патшалăх педагогика институчӗн художествăпа графика факультетне вӗренме кӗнӗ. 1982 çулта диплом илнӗ. 1982-1985 çулсенче Тюмень обласӗнче вӗрентӳçӗ, 1985-1995 çулсенче Ульяновск хулинче "Авиастар" заводра ӳкерӳçӗ пулнă.

"Канаш" хаҫатра 1996 ҫултанпа.

Корреспондент. Унпа пĕрлех вырăнти поэтсемпе писательсен кĕнекисене ÿкерчĕксемпе илемлетет.

Ҫуллă сăрăпа пейзаж, портрет, натюрморт жанрĕсемпе ĕҫлет. 2002 ҫулта облаҫри Халăх пултарулăх ҫуртĕнче персоналлă куравĕ иртрĕ.

**Валентина Алексеевна Ефимова (Терентьева).**
Чăваш Республикинчи Куславкка районне кĕрекен Илепер ялĕнче 1960 ҫулхи ака уйăхĕн 17-мĕшĕнче ҫуралнă. Ҫаканта вăтам шкул пĕтернĕ.

Шкул пĕтерсен Ульяновск хулине трамвай водительне вĕренме кĕнĕ. Вĕренсе тухсан нумай ҫул хушши трамвайпа ĕҫленĕ.

1994 ҫулта ĕҫ биографине "Канаш" хаҫатпа ҫыхăнтарнă. 1998 ҫултанпа Чăваш патшалăх университетĕнче чăваш филологийĕпе культура факультетĕнче 5-мĕш курсра куҫăмсăр вĕренет. Оператор.

**Светлана Максимовна Домикова.**

1965 ҫулхи ҫу уйăхĕн 3-мĕшĕнче Карели Республикинче ҫуралнă.

Куйбышев (Самар) хулинче 1982 ҫулта 7-мĕш техника училищинчен вĕренсе тухнă, наборщик специальносне алла илнĕ.

1994 ҫулхи ҫĕртме уйăхĕнчен вара "Канашра" ĕҫлет. Оператор.

**Александр Анатольевич Романов.**

1975 ҫулхи авăн уйăхĕн 18-мĕшĕнче Чăнлă районĕнчи Кунтикав ялĕнче ҫуралнă.

1992 ҫулта вăтам шкул пĕтернĕ.

Персоналлă компьютер, газоэлектросварщик, водитель курсне пĕтернĕ.

"Чăнлă хыпарĕсем" хаҫатра операторта ĕҫленĕ.

2001 ҫулхи кăрлачăн 3-мĕшĕнчен вара "Канашра" — оператор.

Чăваш патшалăх университечĕн чăваш филологийĕпе культура факультечĕн студенчĕ (2-мĕш курс, куҫăмсăр)



*Н. Липин*

Пичет, телерадиовещани тата массăллă коммуникаци хатĕрĕсен управленине 1985 çултанпа Николай Николаевич Липин ертсе пырать.

Обласра паян 122 хаçат, 16 журнал тухать.

Областа хаçачĕсен йышĕ 15 (пĕрлехи тиражĕ – 120 пин). Çав шутра висĕ наци хаçачĕ: "Канаш" (чăвашсен), "Ĕмĕт" (тутарсен, редакторĕ И. Халимов) "Ялав" (мордвасен, редакторĕ Н. Миганова). Вĕсен тиражĕ – 8 пин те 565.

Сакăр хула, 22 район хаçачĕ. 2002 çул вĕçĕнче тепĕр хаçат регистрациленĕ – "Цильнинские новости". Ăна Чăнлă район администрацийĕ кăларать. Ку районта "Цильнинские вести" хаçатăн чăвашла дубляжĕ пур — "Чăнлă хыпарĕсем" (тиражĕ 500 экземпляр пулла).

Саплах тăватă ача-пăча хаçачĕ тухса тăрать, пĕр журнал — "Симбик".

Пурĕ обласра пĕр эрнере тухакан хаçатсен тиражĕ 850 пин те 700 экземпляр, уйăхра — висĕ миллион та 402 пин те 800.

Патшалăх влаçĕн политикине ырлакан хаçатсен тиражĕ [illegible] процент, хирĕçлекенсен — 26,57.

## II СЫПĂК. "КАНАШ" ХАÇАТ — ЧĔМПĔР ЕН ЧĂВАШĔСЕН ПУРНĂÇĔН ТĔКĔРĔ

**Экономикăпа производство**

Ульяновск облаçĕ 1943 çулхи кăрлач уйăхĕн 19 мĕшĕнче йĕркеленнĕ. Мускава çитме 888 çухрăм. Территори лаптăкĕ 37,3 пин тăваткал çухрăм (ку Бельги, Голланди çĕршывĕсенчен те пысăк).

2000 çулта область администраци пуçлăхĕ пулма халăх Раççей Геройне В. А. Шаманов генерал-лейтенанта суйларĕ.

Облаçра 2001 çулхи кăрлач уйăхĕ тĕлне 1 миллион та 458,2 пин çын пурăнать (339,6 пинĕ — ялта). Ульяновскра 700 пине яхăн çын.

Автомобиль çулĕсен тăршшĕ — 8 пин çухрăма яхăн, чукун çул — 729 çухрăм.

Промышленность комплексне 400 ытла пысăк предприяти кĕрет, вĕсенче 160 пин ытла çын вăй хурать. Машинăсем, приборсем, станоксем, автомобильсем, самолетсем тăвасси аталаннă. Димитровград хулинче атомлă реакторсен наукăпа тĕпчев институчĕ вырнаçна.

1985 çултанпа "Авиастарта" сарлака фюзеляжлă тата ытла та йывăр транспорт тата пассажир самолечĕсем тума тытăннă — Ан-124 "Руслан", Ту-204. Ун пеккисем тĕнчере урăх çук.

Облаçра 395 ял хуçалах предприятийĕ.

Суту-илу — 69 çĕршывпа. Чи нумаййи — Египет, Великобритани, Германи.

Юлашки 10 çулта 100 ытла чирку çĕкленнĕ, çаплах — 80 мечĕт, нимĕç кирхи. Ульяновск облаçĕ урлă пысăк пĕлтерĕшлĕ авиаци (икĕ аэропорт), чукун, автомобиль çулĕсем иртеççĕ. Тĕнчере чи пысăк авиакомпанисенчен пĕри — "Волга-Днепр" вырнаçнă. Вăл пысăк калăпăшлă тата йывăр япаласене тĕнчен кирек мĕнле кĕтесне те çитерме пултарать. Çĕр айĕнче те пуянлăх пур. Нефтьпе пуян 45 вырăн тупнă, вĕсенче 35 миллион тонна нефть упранать. Çаплах пирĕн область кварц хăйăрĕпе çĕршыври кĕленче тăвакан заводсене 40 процент тивĕçтерет. Диатомит, керамзит, цемент, сывлăха çирĕплетмелли минераллă шыв — пурте усламçăсене илĕртеççĕ.

Промышленность — тĕп отрасль. 2002 çулта ун про-

изводстви 8,9 процент ӳснӗ. Ку кӑтарту — Атӑлҫи федераллӑ округра чи лайӑххи. Полиграфи производстви 48,6 процент ӳснӗ, топливо — 28,9, стройматериал — 20,6, вӑрман 13,4. Нефть кӑларасси 34 процент ӳснӗ — 523,4 пин тонна кӑларнӑ. Машина туса кӑларасси 9,9 процент ӳснӗ (39 миллиард тенкӗлӗх).

Промышленность ӳсӗмӗ Раҫҫейӗн вӑтам кӑтартӑвӗнчен икӗ хут пысӑкрах. УАЗ 8,6 миллион доллар тупӑш курнӑ (пӗлтӗрхинчен 4,5 хут нумайрах).

Атӑл урлӑ хывакан ҫӗнӗ кӗпер те ӳссе пырать. 2002 ҫулхи авӑн уйӑхӗнче 121-мӗш мостоотряд 220 метрлӑ сыпӑка (4 пин тонна ытла) вырӑнне лартнӑ. Халӗ кӗперӗн 10 сыпӑкне вырнаҫтарнӑ, тата 14 юлнӑ. Пӗр сыпӑкӗ 600 миллион тенкӗ тӑрать.

1994 ҫулта "Канаш" ҫак мостотряд ҫыннисем пирки ҫырнӑччӗ (13-мӗш номер). "Туслӑх бригади" статьяра (Р. Макарова) штукатур-малярсен бригадине кӑтартнӑ. Вӑл ҫурт-йӗр тунӑ ҫӗре хутшӑнать. Паллах, чӑвашсем те пур унта. Рая Новосельцева Архангельск облаҫӗнчен куҫса килнӗ, ашшӗ-амӑшӗ — Тутарстанран. Зина Пондякова Чӑнлӑ районӗнчи Вата Тимерҫентен. Тата ҫакӑн пек национальноҫсем пур бригадӑра: вырӑс, тутар, мордва, молдаванка, украинка. Пилӗк ҫул пӗрле ӗҫлеҫҫӗ вӗсем.

Маларах чӑвашсем ытти халӑхсем хушшинче (вырӑссем хушшинче тесен тӗрӗсрех те пулать) сапаланса пурӑннӑ пулсан "Канаш" хаҫат тухма пуҫлани вессене пӗр чӑмӑра пуҫтарма пулӑшрӗ. Тӗрлӗ ҫӗртен хыпарсем киле пуҫларӗҫ: ку ялти чӑвашсем ҫапла пурӑнаҫҫӗ, тепӗр ялта савӑн пек событи пулса иртнӗ. Пичет сӑмахӗ чӑвашсене курӑнман сиппе пӗр-пӗрин ҫумне турта пуҫларӗ. Пӗрремӗш номерсенченех облаҫри чӑвашсен пурнӑҫӗ тӗкӗр ҫинчи пек ҫиеле тухма тытӑнчӗ. Пирӗн хушӑмӑрта пысӑк пуҫлӑхсем те, пултаруллӑ ҫыравҫӑсем те, ӳкерӳҫӗсем те, вӗрентӳҫӗсем те, тухтӑрсем те пур иккен. Хӑш-пӗришӗн ҫакӑ тӗлӗнмелле те килсе тухрӗ пулӗ. Эпир хамӑра хура ӗҫ кӑна тума пӗлетпӗр текенсем те пулнӑ-ҫке малтан. Сак айван шухӑш "Канаш" хаҫатӑн кашни номерӗ тухмассерен ирхи тӗтре пек сирӗлсе пычӗ. Халӑх хӑй ҫинчен тӗрӗссине пӗлме пултарчӗ.

Акӑ хаҫатӑн 1-мӗш номерӗнчех "Мальелсем малалла пӑхаҫҫӗ" статьяра Сӗнӗ Малӑкла районӗнчи "Восток"

хуҫалăхăн пуҫлăхĕ Ф. А. Иванушкин хăйсен ĕҫĕсем пирки каласа парать:

"Патшалăха тырă сутмалли плана хусалăх 100,3 процент пурнăҫларĕ. Тĕш-тырă культурисене, кукурузăна та хисеплесен, планпа палăртнă 23,8 центнер вырăнне кашни гектартан 28-шар центнер пухса илтĕмĕр [...]

Уйрăмах аренда йĕркипе ĕҫленĕ самрăк механизаторсен звенине палăртас килет. Ăна Рязановари совхоз-техникумран вĕренсе тухнă Александр Борисов ертсе пырать. Чи аякра вырнаҫнă 650 гектарлă хире арендăна илчĕҫ хастар ҫамрăксем. Ял хуҫалăх культурисем туса илмелли технологие тĕплĕн, тимлĕн пурнăҫлани звено членĕсене кашни гектартан 29,3 центнер кĕрхи тулă, 23,3 — урпа, 15,4 — хуратул, 34 - вир пухса илме май пачĕ. Звено членĕсене пурне те асăнас килет, вĕсем — Александр тата Леонид Борисовсем, Петр тата Виктор Елифановсем. Валерий Илюткин, Николай Смирнов [...]

1988 ҫулта ферма ĕҫченĕсем хуҫалахри мĕнпур ĕнене — пилĕкҫĕр хĕрĕх пуҫ — арендăна йышăнса кашнинчен 2945 килограмм сĕт суса илчĕҫ. 1989 ҫулхи кăтарту вара 3100 литр таврашне ҫитрĕ [...] Тăхăр уйăх хушшинче центнер сĕтĕн хăйне ларакан хакĕ (хăйхаклăхĕ — Н. Л.) планпа пăхнă 30 тенкĕ те 34 пус вырăнне 22 тенкĕ те 50 пус кăна пулнăччĕ". /33/

Кунта самана таппи палăрать — 1980-мĕш ҫулсен вĕҫĕнче "аренда" сăмах пирĕн пурнăҫа кĕчĕ. Ҫак статьяра та аренда меслечĕпе тухăҫлăрах ĕҫлеме май пуррине пĕлме пулать. Ҫапла вара, хаҫат вулакансем пăтне чи юлашки хыпарсене, ҫĕнĕлĕхсене ҫитерет.

Ҫак ҫулсенче ял хуҫалăхри лару-тăру, тăрăшуллă хресченсем ҫинчен сахал мар ҫырнă хаҫатра. Акă 1994 ҫулхи 24-мĕш номерте "Ҫĕршыва тăрантаракансенчен пĕри" статьяра (А. Юман) Чăнлă районĕнчи акционерсен "Память Ильича" обществин членĕ, Раҫҫей Федераци ял хуҫалахĕн тава тивĕҫлĕ механизаторĕ Виктор Николаевич Тысячников ҫинчен сăмах пырать. К-700 тракторпа ака-суха тăвать вăл. Сумлă ята Виктор Николаевич 40 ҫул тултаричченех тивĕҫнĕ. "Вăй патăр сана, Раҫҫей ҫĕрĕн чи ырă сăмаха тивĕҫнĕ ĕҫченĕ, ĕҫу малашне те яланах ăнса пытăр. Ун чухне йывăрлăха кĕрсе ўкнĕ ҫĕр-шывăмăр тĕрĕс-тĕкел. халăхăмăр та тутă пулĕҫ", — тесе вĕҫлет автор /34/

1997 çулхи 32-мĕш номере пăхатпăр, “Наталья — область чемпионки” заметкăна сăн ӳкерчĕкпе илемлетнĕ. Унта пьедестал çинче — хаваслă кулăллă висĕ хĕрарăм. Чи çӳлти пусми çинче — Н. Моисеева, Ульяновск районĕнчи “Тетюшское” хуçалăх доярки. Вăл область конкурсĕн çĕнтерӳçи. Виççĕмĕш вырăнта та чăваш хĕрарăмĕ — Людмила Мышова (пĕлтĕрхи область чемпионки), “Красная Звезда” хуçалăхран. Наталья çак çул Киров облаçĕнче иртнĕ Пĕтĕм Раççейри ĕне сăвакансен 18-мĕш конкурсне хутшăннă.

“Çăкăр çитернĕшĕн — ял халăхне тав” (Н. Ларионов) репортажа тишкерер-ха. Чăнлă районĕнчи “Богдашкинский” ял хуçалăх производство кооперативĕ пирки сăмах пырать.

Н. Сербуков пуслăх питĕ çивĕч ыйту хускатать. Илсе пăхар-ха ун калаçăвĕн сыпăкне. “Пуçтарса илнипе кăна та мар вĕт-ха тырра. Сутасси — ак мĕн пăшăрхантарать. Пĕр килограмм ыраша, сăмахран, пиртен 70-80 пуспа илеççĕ, тулла — тенкĕ те 30 пуспа. Хăйхаклăхĕ вара чылай пысăкрах. Тырă мĕн чухлĕ нумайрах сутатăн, çавăн чухлĕ тăкак туратăн. Сакăн пек йывăрлăха кĕртсе ӳкернĕ халь ял çыннине. Çав вăхăтрах “Волжанка” минераллă шывăн литрĕ сакăр тенкĕ [...] Пĕр литр солярка туянма вунă килограмм ыраш сутмалла”, — çакăн пек сăмахсем пур унта. /35/ Çапла, “тискер капитализм” саккунĕсемпе пурăнма тытăнтăмăр. Хамăра çакар çитерекентсен мăшкăллани пулать ку. Асчахсем çĕршыва аталантарма чи малтан мĕн тумаллине тахçанах тĕпчесе пĕлнĕ: ял хусалăхне тата наукăна пулăшмалла. Раççейре вара пуçхĕрлĕ пулса пырать. Сăмахран, сĕте фермăран 3 тенкĕпе илсе каяççĕ (1 килограмне), лавккара вăл 20 тенкĕ тăрать. 17 тенки кам кĕсйине кĕрсе выртатьши?

2002 çулта Ульяновск облаçĕ тĕш-тырă туса илсе 300 миллион тăкак курнă. Ку 1 миллион та 139 пин тонна тырă пуçтарнă хыççăн. Ун пек нумай пуçтарни сайра пулать. Тухăçăн вăтам кăтартăвĕ — гектартан 18,8 центнер.

Статистикăн ытти кăтартăвĕсене йĕрлесе пырар-ха. 2001 сулпа танлаштарсан 2002 çулта аш-какай туса илесси 28,5 процент ӳснĕ, ĕне çăвĕ — 24, сĕт — 26, çăмарта — 29, сахăр песукĕ — 27, çăкăр — 40, кĕрпе-çарма — 55.

Облаçри ялсенче (1030) 350 пин çын пурăнать. Ял

хуçалăхĕ çулталăк хушшинче 11 миллиард тенкĕлĕх продукци туса кăларать. Облаçĕпе пурĕ 156,4 пин тонна сĕт суса илнĕ (унччченхи çулăн 100,7 проценчĕ). Шултра мăйракаллă выльăх шучĕ 6,7 процент чакнă, пĕр ĕнерен суса илекен сĕт виçи 12 процент ӳснĕ — 2409 килограмм. Сурăхсен тата качакасен шучĕ 4,6 процент чакнă, сысна сен шучĕ юлашки çулсенче пĕрремĕш хут ӳснĕ — 4,4 процент. Кайăк-кĕшĕк ĕрчетесси те ăнăçлăн пырать, вĕсен шучĕ 82,9 пин пуç ӳснĕ, çăмарта туса илесси — 40 процент.

Ял хуçалăхĕ — область экономикине аталантаракан отраслĕсенчен пĕри.

## "Канаш" хаçатăн наци ăнланăвне аталантарас ĕçри вырăнĕ

### И. Я. Яковлев ячĕллĕ общество

Ульяновскра 1988 çулхи раштавра Чĕмпĕр чăваш шкулне йĕркелесе яни 120 çул çитнине уявланă кунсенче И. Я. Яковлев ячĕллĕ культурăпа çутĕç обществине туса хурас шухăш суралать. Пуçару ушкăнĕ ĕçе тытăнать.

Унта чăваш чĕлхине, культурине аталантарас тĕлĕшпе чунне ыраттаракансем кĕреççĕ: В. М. Репин, А. М. Цыганов, А. Н. Разубаев, А. М. Каштанова, В. Г. Елагин, А. К. Падиаров, В. В. Афанасьев, А. М. Богатов, А. Г. Пешне, П. П. Ургалкин, А. Ф. Юман...



*Чĕмпĕр Ен делегацийĕ ЧНК съездне пынă*

1989 çулхи сурла уйăхĕн 8-мĕшĕнче Ульяновскри Профсоюзсен керменĕнче çак ыйтупа пуху иртет. Ăна партипе ĕç ветеранĕ, Ульяновскри педагогика училищинчен вĕренсе тухна И. С. Кирюшкин уçать. Вал делегатсене кун йĕркине

паллаштарать. Пăхса тухма висĕ ытту тăратнă. И. Я. Яковлев ячĕллĕ чăваш сутĕç обществине туса хурасси, обществăн Программипе Уставне йышăнасси, ертсе пыракан органсене суйласси.



*Шупашкартан килнĕ делегаци (ертӳçи Юхма Мишши) "Канаш" хаçат редакци умĕнче*

Пĕрремĕш ытупа оргкомитет председателĕ И. С. Кирюшкин тухса каласа. Общество Программин проекчĕпе П. П. Ургалкин паллаштарнă. Ун сăмахĕсенчен çакă паллă: общество чăваш чĕлхине, литературине, искусствине, культурине, наукăна, çутĕсне аталантарма, вĕсен çитĕнĕвĕсене пропагандăлама тата сарма пулăшмалла...

Пуху пĕр сасла пулса Ульяновск хулинчи чăвашсен И. Я. Яковлев ячĕллĕ çутĕç обществине туса хурасси çинчен постановлени йышăннă, обществăн Программипе Уставне ырланă.

Общество правленийĕ вăтăр пилĕк çынран тăрать, саплах председательне тата ревизи комиссине суйланă. И. Я. Яковлев ячĕллĕ общество председателĕ пулма И. С. Кирюшкина шанна. Унан сумĕсем — В. Г. Елагин, А. М. Цыганов, В. Г. Егоров. Яваплă секретарĕ — П. П. Ургалкин.

Обществăн 2-мĕш съездĕ 1991 çулхи çурла уйăхĕн

13-мӗшӗнче Ульяновскри Профсоюзсен керменӗнче иртнӗ.

Отчетлă тапхăрти ӗç-хӗл çинчен И. С. Кирюшкин председатель доклад тунă.

Доклада сӳтсе явнă çӗре çаксем хутшанна: Ульяновск хула ӗçтăвком председателӗн пӗрремӗш çумӗ В. М. Радаев, Самар обласӗнчи чăвашсен "Пехил" обществин правленийӗн председателӗн çумӗ И. В. Воронцов, Чăвашсен обществăлла культура центрӗн председателӗ Юхма Мишши çыравçă, ЧССР Аслă Канашӗн халăх депутачӗ Ф. И. Мадуров скульптор, ЧОКЦăн яваплă секретарӗ А. А. Алексеев, ЧССР Асла Канашӗн халăх депутачӗ А. П. Хусанкай, Чăнлă районӗнчи 27-мӗш СПТУ çумӗнчи И. Я. Яковлев ячӗллӗ обществăн пуçламăш организацин председателе В. Н. Игнатьева, общество правленийӗн яваплă секретаре П. П. Ургалкин тата ыттисем. Делегатсем общество правлени председателӗ пулма тепӗр срока И. С. Кирюшкина суйланă. Унăн çумӗсем — В. Г. Елагин, Н. А. Казаков. Яваплă секретарӗ П. П. Ургалкин.

1996 сулхи кăрлачăн 20-мӗшӗнче И. Я. Яковлев ячӗллӗ обществăн 3-мӗш съезчӗ иртнӗ.

Унта Шупашкар делегацийӗ те пурччӗ. Трибуна çине Чăваш Республикин вӗренту министрӗ Р. Н. Морозов, Чăваш наци конгресӗн президенчӗ А. П. Хусанкай, Чăваш Республикин Патшалăх Канашӗн депутачӗ Г. Н. Архипов тухса каласнă.

Çӗнӗ правление 19 çынна кӗртнӗ. Обществăн çене председателӗ пулма Виктор Глебович Егорова суйланă. Унăн сумӗсем — В. Н. Тарават, Н. Н. Ларионов

Чӗмпӗр чăваш шкулӗн комплексӗнче Ульяновск облаçӗнчи
И. Я. Яковлев ячӗллӗ культурăпа çутӗç обществин черетлӗ 4-мӗш съезчӗ пулса иртнӗ. Чи малтанах сьезд делегачӗсемпе хăнасем умӗнче Раççей тава тивӗçлӗ артисчӗ Геннадий Терентьев Патриархăн Халалне вуласа панă.

Съездра кун йӗркинчи 4 ыйтăва пахса тухна.

Общество правленийӗн отчетне председатель суме Н. Н. Ларионов туса панă. Ревизи комиссийӗн отчетне А. П. Власов тунă.

Съездра Ф. Т. Улендеева, А. Юман, В. Г. Егоров, В. Тарават, В. Бельский, В. Иванов, Н. Казаков, А. Алексеев,

Г. Никитина, Н. Калаков, В. Станьял, Г. Улюкин, О. Мустаев, Н. Савруков, П. Уфимкин, Г. Чулакова тухса калаçнă.

Съезд çĕнĕ правленийĕн составне 17 çынран, ревизи комиссине 3 çынран суйласа хăварнă. И. Я. Яковлев ячĕллĕ культурăпа çутĕç обществин председателĕ пулма Владимир Михайлович Бельские суйланă.

2001 çулхи раштавăн 22-мĕшĕнче Чĕмпĕр чăваш шкул комплексĕнче И. Я. Яковлев ячĕллĕ обществăн 5-мĕш съезчĕ пулнă. Унта 60 делегата яхăн хутшăннă. Отчетлă докладпа трибуна çине общество ертӳçи В. М. Бельский тухнă. Çĕнĕ правление 19 çынна суйланă.

Делегатсем председатель пулма В. М. Бельские шаннă.

### Таврапĕлӳçĕсем

1991 çул вĕçĕнче Шупашкарта Чăваш таврапĕлуçисен союзне йĕркелеççĕ. Ун хыççăн Ульяновска çакăн пек ыйтса çыру килет
(И. С. Кирюшкин ячĕпе): Чĕмпĕр Енре чăваш таврапĕлӳсисен обществине туса хумалла.

1992 çулхи пуш уйăхĕнче таврапĕлӳ юхăмĕн хастарĕ В. Г. Егоров вĕрентӳçĕ пуçарнипе И. Я. Яковлев хваттер-музейĕнче пĕр пек шухăшлă çынсене пуçтарса калаçу ирттернĕ. Унта И. С. Кирюшкин, П. П. Ургалкин, О. Н. Мустаев, В. Г. Верияпов, В. М. Репин, Н. А. Казаков хутшăннă. Пуху тĕллевĕ — "Ульяновская-Симбирская энциклопедия" валли чăвашсем синчен çырнă материалсем пуçтарасси.

Сак сулăн çурла уйăхĕнче Чĕмпĕр Ен таврапĕлӳсисем пуху ирттереççĕ, И. Я. Яковлев ячĕллĕ çутĕç обществинче таврапĕлӳçисен пуçламăш организацине йĕркелеççĕ.

Чăваш таврапĕлӳçисен 2-мĕш съезчĕ çак йышăнăва ырланă, çирĕплетнĕ. Чĕмпĕр Ен таврапĕлӳçисем вĕсен правленине кĕнĕ. Чĕмпĕрсен председателĕ пулма Н. А. Казакова суйланă.

Чĕмпĕр Ен таврапĕлӳçисем çак вăхăтра тĕрлĕ района тухса çӳренĕ, нумай тĕлпулу ирттернĕ.

Тĕлпулусем, семинарсем çаканта иртнĕ: Кивĕ Çĕпрелĕнче, Çĕнĕ Йĕлмелĕнче, Чăваш Çĕпрелĕнче (Тутарстан), Тури Куккара (Тереньга районĕ), Кивĕ Улхашра (Чăнлă районĕ) тата ытти çĕрте.

Таврапĕлӳçĕсенчен çаксене палăртмалла: П. П. Ур-

галкин, (Çĕнĕ Ульяновск) В. В. Афанасьев, И. А. Замалетдинов, П. С. Картюков, П. Ф. Борисов, Н. В. Ратаева, Л. П. Нюркина, В. М. Репин, В. Г. Вериялов, А. А. Егранкин (Ульяновск), Н. Д. Мартынова (Тури Кукка), И. М. Кирпичников, И. В. Дубов (Анат Тимĕрçен), М. М. Бикмендеева (Чăвашкасси), Н. К. Кадебин (Кивĕ Улхаш), А. Г. Головин (Каша), А. Ф. Ермилов-Юман (Аслă Нагаткин), Г. Н. Карсаков (Çĕнĕ Йĕлмел), Н. В. Матросов (Чăваш Çĕнрел)... Вĕсене пурне те "Хисеплĕ таврăпĕлÿçĕ", "Аласти" ятсем пана, Хисеп грамотипе, Тав хучĕпе пĕрре мар наградăлана.

2000 çулта облаçра "Чăваш халăх академийĕ" ятла обществăлла организаци йĕркеленĕ. Ăна В. Ф. Ромашкин ертсе пырать.

"Халăх академикĕ" ята çаксем тивĕçнĕ: В. В. Афанасьев, А. М. Богатов, В. Г. Вериялов, И. А. Замалетдинов, Н. А. Казаков, Н. К. Кадебин, Н. Д. Мартынова, В. М. Репин, В. Ф. Ромашкин,
П. П. Ургалкин.

Чăваш наци юхамĕнче хастарлăх катартнашăн Вениамин Васильевич Афанасьева 2002 çулта облаçăн Ылтăн кĕнекине кĕртнĕ, облаçăн Хисеплĕ гражданинĕ ятне пана (вилнĕ хыççăн).

### И. Я. Яковлев фончĕ

1998 çулхи ака уйăхĕнче Ульяновскра чăваш халăхне çутта кăларакан И. Я. Яковлев çуралнăранпа 150 çул çитнине халалласа Шупашкарти экономикăпа менеджмент институчĕ наука конференцийĕ ирттерчĕ. Унта "И. Я. Яковлев фончĕ" ятлă обществăлла организаци туса хучĕç. Ăна ертсе пыма асăннă институт директорне Н. Саврукова шаннă.

Николай Тарасович Савруков — экономика наукисен докторĕ, профессор, академик, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ наука ĕçченĕ.

Фонд программин тĕллевĕ — И. Я. Яковлев ячĕллĕ чăваш нацин культурăпа çутĕç комплексне тĕреклĕн, килĕшуллĕн аталанса пыма пулăшасси, Раççейри регионсенчи наципе культура автономисен хушшинчи çыхăнусене çирĕплетесси, çакăнта ĕçлеме нумай енлĕ пĕлуллĕ кадрсем хатĕрлесси, И. Я. Яковлев ячĕллĕ комплекса юсасси, урăхлатса çĕнетесси. Çакна палăртмалла: И. Я. Яковлев

фончĕ патриархăмăр суралнăранпа 175 çул çитнĕ тĕле (2023 çулччен) ятарлă программа тунă. Унпа килĕшӳллĕн тĕрлĕ кĕнеке, монографи, проспект, методика пособийĕсем кăлармалла. ЮНЕСКО проекчĕсене пурнăçа кĕртмелле кашни пилĕк çулта наука конференцийĕ ирттермелле.

2003 сулхи ака уйăхĕн 19-мĕшĕнче И. Я. Яковлев фончĕ патриархăмăр çуралнăранпа 155 çул çитнине халалласа Ульяновскра наука конференцийĕ ирттерчĕ. Унта Мускавран килнĕ Г. Волков академик, Г. Аксаков (Раççейри чăвашсен наципе культура автономийĕсен ертӳçи) хутшăнчĕç. Пурĕ 600 çынна яхăн.

Пухăннисем И. Я. Яковлев Фончĕн пуçлăхĕ пулма Н. Саврукова иккĕмĕш хут суйларĕç.

**Чăвашсен обществăлла канашĕ**

1992 çулхи чӳк уйăхĕн 20-мĕшĕнче Чăнлă районĕнчи Кивĕ Улхаш ялĕнче Ульяновск облаçĕнчи пĕтĕм чăвашсен конференцийĕ иртнĕ. Хăнасем хушшинче — область администраци пуслăхĕ Ю. Горячев, Чăваш наци конгресĕн президенчĕ А. Хусанкай, ЧНК вице-президенчĕ В. Станьял тата ыттисем.

Унта область администрацин ĕç управленийĕн пуçлăхĕн сумĕ, халăх депутачĕсен область Совечĕн депутачĕ В. Сваев тĕп доклад туса панă. Саплах Ю. Горячев та сăмах тухса каланă. Ку конференцире йышăннă Резолюцийĕн хăш-пĕр пункчĕсемпе паллашар-ха.

... II. Область администрацийĕнчен çаксене ыйтас:

1. Наци педагогĕсен кадрĕсене тата культура работникĕсене хатĕрлемелли системăна малалла лайăхлатса пыма; [...]

3. Облĕçтăвком 1989 çулхи октябрĕн 10-мĕшĕнче йышăннă 420-мĕш номерлĕ решенипе килĕшӳллĕн, чăваш педучилищине 1993 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса занятисем ирттерме тытăнмалла; [...]

8. Ульяновскри "Чĕмпĕр кĕнеки" пĕчĕк предприятие тăван чĕлхепе чăваш авторĕсен кĕнекисене кăларассине йĕркелесе яма, кăларăмсен ĕç планне çулсерен пĕрер позици те пулин кĕртме.

III. Облаçри чăвашсен обществăлла канашне суйлас.

Обществăлла канаша 15 çынна кĕртнĕ. Председателĕ пулма Ульяновск педагогика институчĕн аслă преподавательне, И. Я. Яковлев ячĕллĕ культурăпа çутĕç обществин яваплă секретарьне Вениамин Васильевич Афанасьева суйланă. Председатель çумĕ — П. Я. Уфимкин. Яваплă секретарĕ — В. А. Архипова.

Халĕ вара Резолюци патне таврăнар-ха. Унăн тĕп пункчĕ (III.2) — чăваш педучилищинчи занятисем ирттерме тытăнасси — паян та пурнăçа кĕмен. Çак ыйтăва хăçан татса парассине никам та çирĕплетсе калаймасть.

## Наципе культура автономийĕ

1997 çулхи авăн уйăхĕн 27-мĕшĕнче Ульяновскра чăвашсен 2-мĕш конференцийĕ иртнĕ.

Конференцие облаçри чăвашсен обществăлла канаш председателĕ В. В. Афанасьев уçнă. Кунта Ульяновскри чăвашсен наципе культура автономине туса хурасси пирки калаçу пулнă.

Ку пĕрлешĕве "Еткер" ыркăмăллăх фончĕпе тата И. Я. Яковлев ячĕллĕ общество никĕсĕ синче Рассей Федерацийĕн "О национально-культурной автономии" саккунĕпе (17.06.1996, 74-ф 3№) килĕшуллĕн йĕркеленĕ. Конференцире автономи пуçлăхĕ пулма П. Я. Уфимкина суйланă. Çумĕсем А. А. Еграшкин, О. Н. Мустаев. 1997 çулхи пуш уйăхĕнчен вара — Ульяновск облаçĕнчи чăвашсен наципе культура автономийĕ (свидетельство номерĕ 2-10 р).

Автономи Уставĕн проектне маларах "Канаш" хаçатра пичетлесе анлăн сутсе явнă.

2.1. Ульяновскри чăвашсен наципе культура автономине çак задачăсене пурнăçлама йĕркеленĕ,

— наци чĕлхине аталантарас ыйтусене татса пама, граждансен тăван чĕлхепе пĕлу илмелли правине пурнăçлама пулăшма;

— культурăна аталантарма, халăх промышленноçĕсемпе ремеслисен хăйнеевĕрлĕхне упраса хаварма, наци культурине, чăваш халăх историне, литературине, халăх традицийĕсемпе йăлисене тĕпчекен кружоксемпе клубсем туса хума, халах уявĕсене, фестивалĕсене, смотрĕсене, конкурсĕсене, выставкисене ирттерме;

— культура палăкĕсене, наци культура фончĕсене тĕрĕс-тĕкел упраса хăварма.

Çакăнтан эпир автономи тĕллевĕсене, задачисене куратпăр.

Çакна та палăртмалла: наципе культура автономийĕ 1992 çулта йĕркеленĕ чăвашсен обществăлла канашĕн ĕçĕсене малалла тăсакан, аталантаракан орган пулса тăчĕ. Канаш хăйĕн тивĕçĕсене автономие пачĕ.

2003 çулхи пуш уйăхĕн 5-мĕшĕнче Ульяновскра чăвашсен наципе культура автономийĕн 2-мĕш отчетпа суйлав конференцийĕ иртнĕ. Унăн ĕçне облаçри районсемпе хуласенчен 66 делегат хутшăнчĕ. Çаплах 80 çынна ятăн хăнана чĕннĕччĕ.

Конференци делегачĕсемпе хăнисене Ульяновск облаçĕн администрацин пуçлăхĕн çумĕ В. В. Марусин кĕпĕрнаттăр саламне вуласа панă. Ульяновск мэрĕн çумĕ В. Н. Карпова хула Думин депутачĕсен ятĕнчен саламларĕ. Çаплах облаçри Саккунсем кăларакан Пухăвăн секретарĕ Т. В. Сергеева сăмах каланă.

Наципе культура автономийĕн ĕçтăвкомне 25 çынна, ревизи комиссине 3 çынна суйланă. Автономи пуçлăхĕ пулма В. И. Сваева шаннă. Вăл облаçри шалти ĕçсен управленийĕнчи миграци службин ертÿçин çумĕнче ĕçлет. Пуçлăх çумĕсем пулма А. А. Еграшкина, Н. Н. Ларионова, Н. А. Власова суйланă.

Владимир Ильич Сваев — Ульяновск облаçĕнчи чăвашсен наципе культура автономийĕн ертÿçи.

Чăнлă районĕнчи Кивĕ Улхашра 1943 çулхи утă уйăхĕн (июлĕн) 25-мĕшĕнче çуралнă. 1960 çулта ялти вăтам шкултан вĕренсе тухнă, Ульяновскри 4-мĕш номерлĕ техника училищине вĕренме кĕнĕ, 2-мĕш разрядлă токарь специальноçне алла илнĕ.

1961-1962 çулсенче Володарский ячĕллĕ заводра токарьте ĕçленĕ.

1962-1965 çулсенче Венгрире çар хĕсметĕнче пулнă.

1965-1969 çулсенче Володарский ячĕллĕ заводра токарьте ĕçленĕ, 1966 çулта Самарти план институчĕн Ульяновскри филиалне каçхи уйрăма вĕренме кĕнĕ.

1969-1970 çулсенче заводра инженер-экономист пулнă.

1970-1974 çулсенче — Чăнлă районĕнчи "Алгаши" колхозăн тĕп экономисчĕ.

1974-1976 çулсенче — Чăнлă районĕнчи парти райкомĕн организаци пайĕн инструкторĕ.

1976-1982 çулсенче — Чăнлă райĕçтăвкомĕн ялхуçалăх управленийĕн начальникĕн заместителĕ.

1982-1989 çулсенче — Чăнлă районĕнчи план комиссийĕн председателĕ, райĕçтăвком председателĕн заместителĕ.

1989-1990 çулсенче — Чăнлă райĕçтăвком председателĕ.

1990-1993 çулсенче — Ульяновск облĕçтавкомĕн ĕç тата социаллă ыйтусен пайĕн заведующийĕн сумĕ.

1993-2000 çулсенче — Ульяновск облаçĕнчи миграци службин ертÿçи.

2000-2002 çулсенче — Раççей Федерацийĕн наципе миграци политикин тата федераци ĕçĕсен министерствин Ульяновск облаçĕнчи территори органĕн ертÿçи. 2002 çулхи утă (июль) уйăхĕнчен пуçласа паянхи кунччен Ульяновск облаçĕнчи шалти ĕçсен управленийĕн миграци ĕçĕсен подразделенийĕн (управленийĕн) начальникĕн заместителĕнче ĕçлет.

**Вĕрентÿ**

Ульяновск облаçĕнче 670 кăнтăрлахи шкул. Вĕсенче 1290 спорт сооруженийĕ, 501 спортзал, 8 бассейн. Пурĕ облаçра 177 пин ге 386 ача шкулта вĕренет.

Пире чăваш ачисене тăван чĕлхе вĕрентни кăсăклантарать. Кунта çакна палăртса хăвармалла. 1989 çулхи даннăйсем тăрăх, Тутарстанри чăвашсен 87,9 процентĕ чăваш чĕлхине тăван чĕлхе тесе йышăнать. Пушкăртра — 82,7, Ульяновск облаçĕнче — 87,2, Самар облаçĕнче — 72,5. Ку регионсенчи шкулсенче тăван чĕлхене вĕрентеççĕ-ха. Шкулта вĕрентмен регионсенче вара ентешсен 40-50 процентĕ чăваш чĕлхине йышăнмасть.

Ку енĕпе ĕç-пуç юлашки çулсенче чылай лайăхланчĕ. Чи малтан çакна каламалла. 1997 çулхи пуш уйăхĕнче тĕп вĕрентÿ управленийĕнче наци шкулĕсемпе ĕçлекен пĕрремĕш тĕп специалист ĕçе пуçăнчĕ.

Федосия Тимофеевна Улендеева 1952 çулхи

çĕртме уйăхĕн 29-мĕшĕнче Майна районĕнчи Чўрекел ялĕнче çуралнă. Ульяновск пединститучĕн математика факультетне пĕтернĕ. 1985-94 çулсенче Мелекесс районĕнчи Турикассинче шкул директорĕн лавне туртнă.

Вăл килсе ĕçе пуçăннă хыççăн чăваш чĕлхи вĕрентесси чылай сарăлчĕ. Халĕ облаçра 10 шкулта (Чăнлă районĕнчи тăхăр шкулта тата Кăлаткăпуç районĕнчи Бахтеевкăра) 1 мĕш класран пуçласа 11-мĕшчен тăван чĕлхене вĕрентеççĕ. Чăнлă районĕнчи чĕлхесĕсем пурте ятарлă пĕлўллĕ. Хулари шкулсенче вара ун пеккипе мухтанаймăн. Кунта математиксем те, историксем те, кĕçĕн класс вĕрентўçисем те пур. Чăваш чĕлхи вĕрентнĕ сĕрте палăрнă учительсене асăнмаллах: В. Кадебина, Р. Микка (Кивĕ Улхаш), Н. Кушты (Пухтел), С. Кудряшова (Сĕнĕ Улхаш), С. Мигукова (Вăта Тимĕрçен), Л. Ярославская (Чўрекел), В. Иванюкова, М. Спиридонова (Упамсар), С. Яковлева (Салмановка), Т. Муллина, Г. Никитина (Симĕс Раща), Е. Васильева (Бахтеевка), С. Телеева (Анат Тимĕрçен) тата ыттисем.

1995 çулхи "Вĕрентўçĕ-95" область конкурсĕн суперфиналĕнче Г. Никитина (Ульяновск районĕ, Симĕс Раща поселокĕ) пĕрремĕш премие тивĕç пулни — пур чăвашсемшĕн те пысăк савнăç. 1990 çулта вăл хăйсен шкулĕнче чăваш ачисене тăван халăх историйĕпе, культурипе, йăли-йĕркипе паллаштарма тăван чĕлхе кружокне йеркелене. Çак конкурса та вăл чăваш чĕлхи кружокĕн ертўçи пулса хутшăнчĕ (хăй вырăс чĕлхипе литературине вĕрентет пулин те). Галина Михайловна маларах темиçе çул завуч пулчĕ, халĕ вара — шкул директорĕ.

Майна районĕнчи Чўрекел ялĕнчи Л. Ярославская шкулта 35 çул ытла ĕçленĕ. "Раççей Федерацийĕн шкулĕн тава тивĕçлĕ учителĕ" хисеплĕ ята ăна ахаль паман. Çак ята Кивĕ Улхашри
Н. Кадебин тата В. Чекушкин, Л. Узикова вĕрентўçĕсем те тивĕçнĕ.

Е. Васильева пирки вара уйрăм сăмах. Вăл Чăваш патшалăх университетĕнчен вĕренсе тухсан (хăй Канаш районĕнчен) Кивĕ Кăлаткă районне чăваш чĕлхине вĕрентме килет. Чăваш Кăлаткă — районти икĕ чăваш ялĕнчен пĕри. (Ку районта пурăнакансенчен 97 процентĕ — тутарсем.) Çакăнта Елена Всеволодовна чăвашла вула-

çыра пĕлмен чăваш ачисене тăван чĕлхене вĕрентме пуçлать. Халĕ кунта 1-11-мĕш классенче вĕренеççĕ ăна. Ачасем пирĕн хаçат ирттерекен конкурссене, викторинăсене хутшăнса призлă вырăнсем çĕнсе илеççĕ, сăвăсем, заметкăсем çырса тăраççĕ. Чи пысăк çитĕнĕвĕ вара — С. Васильева, Е. Васильеван вĕренекенĕ, Ульяновск педуниверситетĕнчи филологи уйрăмĕн чăваш ушкăнĕнче пĕлӳ пухса тăван яла таврăнни, шкулта ĕçлеме пуçлани. Халĕ Васильевасем иккĕн ĕнтĕ Малашлăх пур эппин. Çеремне уçаканĕ вара Елена Всеволодовна пулчĕ. Ӳн пархатарлă ĕçне истори тĕрĕс хак парĕ-ха, мĕншĕн тесен вăл 600 ытла чăваш пурăнакан яла тăван чĕлхерен уйăрăласран хăтарчĕ.

Вăта Тимĕрçенти Семеновсен — Белозеровсен йышĕ пирки те ырăпа асăнмасăр иртме çук. Вĕсем 1993 çулта Мускавра иртнĕ Совет Союзĕнчи учитель династийĕсен тĕлпулăвне хутшăннă.

1996 çулта Кивĕ Улхаш тата Анат Тимĕрçенти вăтам шкулсем 100 çул тултарчĕç. "Канаш" хаçат икĕ шкул çинчен те пĕрер разворот материал хатĕрлерĕ, архиври ӳкерчĕксене халăх умне кăларчĕ.

## Ульяновск облаҫӗнчи вӗрентӳ системи аталанса пыни

| | 2000/01 вӗренӳ ҫулӗ | 2001/02 | 2002/03 |
|---|---|---|---|
| Пӗтӗм шкулсен йышӗ (скобкӑра — ачасен йышӗ) | 688 (198471) | 676 (188905) | 670 (177386) |
| Учительсен йышӗ | | 11000 | 10000 |
| Тӑван чӗлхене предмет вырӑнне хурса вӗренекен шкулсен йышӗ (скобкӑра — ачасен йышӗ) | тутар - 128 (7431)<br>чӑваш - 46 (2276)<br>мордва - 23 (1320)<br>нимӗҫ - 1 (75)<br>пурӗ - 198 (11102) | 126 (6954)<br>44 (2085)<br>22 (1213)<br>1 (76)<br>193 (10328) | 126 (6719)<br>44(1952)<br>22 (1090)<br>1(75)<br>193 (9836) |
| Чӑваш чӗлхине, культурине историне тӗрлӗ майпа вӗрентекен шкулсен йышӗ (скобкӑра — ачасен йышӗ) | 115 (4422) | 117 (4082) | 122 (3971) |
| Чӑваш чӗлхи вӗрентӳсисен йышӗ | | | 97 |

**(Ф. Улендеева хатӗрленӗ.)**

Ульяновск педагогика университечĕ ҫумĕнче вĕрентуҫĕсен пĕлĕвне ӳстерекен институт ĕҫлет.

Унта наци вĕрентĕвĕн ыйтăвĕсен кабинечĕ пур. Вăл наци чĕлхисене, халăхсен историне, культурине вĕрентме педагогсен ăсталăхне ӳстерме пулăшать.

Чăваш чĕлхи методисчĕ — В. А. Архипова кунта 1991 ҫулхи кăрлач уйăхĕнчен пуҫласа вăй хурать. Вăл Чăнлă районĕнчи Пухтел ялĕнче ҫуралнă. Ульяновск педагогика университечĕн вырăс чĕлхипе литератури факультетне пĕтернĕ. Ҫаплах кунта тутар тата мордва чĕлхисен методисчĕсем пур. Методика канашне 16 преподаватель кĕнĕ.

Методистсем шкулсене тухса ҫӳреҫҫĕ, чăваш чĕлхи уявĕсене хутшăнаҫҫĕ, вĕрентӳҫĕсен ĕҫне, ачасен пĕлĕвне хаклаҫҫĕ. Семинари, тематикăлла занятисем, консультацисем ирттереҫҫĕ, ҫĕнĕ методикăна анлă сарма пулăшаҫҫĕ.

Ҫаплах вĕренту ĕҫĕнче пысăк ҫитĕнӳсем тунă чăвашсен ячĕсене асăнса хăварар.

### Николай Ильич Калаков

1947 ҫулта Тутарстанри Ҫĕпрел районĕнчи Ҫĕнĕ Йĕлмел ялĕнче ҫуралнă.

1978 ҫулта В. В. Куйбышев ячĕллĕ ҫарпа инженер академине пĕтернĕ.

Халĕ Ульяновск патшалăх университечĕн психологи кафедри пуҫлăхе. Профессор. педагогика наукисен докторĕ.

### Николай Васильевич Нагорнов

1952 ҫулхи раштавăн 5-мĕшĕнче Мелекесс районĕнчи Слобода-Выходцево ялĕнче ҫуралнă. Мускаври музыка университетĕнче, педуниверситетра вĕреннĕ.

Педагогика наукисен докторĕ. Академик. Профессор.

Ульяновск педагогика университетĕнчи шкул ҫулне ситмен ачасене воспитани паракан факультетăн деканĕ

### Петр Петрович Головин

1947 ҫулхи пуш уйăхĕн 27-мĕшĕнче Иркутск облаҫĕнче ҫуралнă. Алăри ача чухнех ашшĕ-амăшĕпе пĕрле тăван ялне — Ҫĕпрел районĕнчи Ҫĕнĕ Йĕлмелне таврăннă. Ҫакăнта уснĕ, сакăр ҫуллă шкулта вĕреннĕ.

Педагогика наукисен кандидачě. 41 çултах ăна СССР халăх учителě ятне панă. (Çěршывра чи çамрăкки пулнă.)

Ишевкери вăтам шкулта физика вěрентет. ВДНХ çичě ылтăн тата кěмěл медальне илнě. Сорос премийěн лауреачě. "Хисеп палли" орден кавалерě.

## Педуниверситетри чăваш ушкăнě

Ульяновскри педагогика университетěнчи чăваш ушкăнěнче хальхи вăхăтра 61 студент пěлў илет (5-мěш курсра — 14 студент, 4-мěшěнче — 13, 3-мěшěнче — 11, 2-мěшěнче — 11, 1-мěшěнче — 12).

Вунă çул каялла, 1993 çулта, пěрремěш наци ушкăнě (12 чăваш, 13 тутар) уçăлнă. Çак ěçе тапратма çакăнти аслă преподаватель
В. В. Афанасьев нумай вăй хунă. Виçě вěренў çулě хушши студентсене Шупашкартан преподавательсем килсе литературăпа лекцисем вуланă. 1996 çулта чăваш литературине Е. С. Рдюкова вěрентме пуçланă, 1999 çулхи ака уйăхěнчен — А. А. Степанова. Чăваш чěлхине 1997 çулччен Шупашкартан преподавательсем килсе вěрентнě. Икě вěрену сулě Е. Г. Алексеева ěçленě, 2000 çулхи кăрлачран — О. Г. Узикова.

1999 çулхи ака уйăхěнче наци уйрăмě 5 çул тултарнине халалласа уяв иртнě. Унта чăваш хěрěсем пěрремěш хут сцена сине тухнă. Çакăн хыççăн А. Степанова пуçарăвěпе чăваш уйрамěнче "Сарпике" юра ушкане йěркеленě. Çак çул пěрремěш хут акатуя хутшăннă. Унтанпа пур чăваш уявěсене (4 хутчен акатуйра) те хутшăннă. "Чăваш шăпчăкě" (2001 ç.) фестивальте "Сарпике" ташă ушкăнěсем хушшинче 1-мěш вырăн çěнсе илнě. Тěллевě — чăваш студенчěсене чěлхепе литература вěрентнě май культурăна явăçтарасси. Вěсем шкула кайсан ачасене тарăн пěлў пама тăрăшчăр.

Юлашки çулсенче наци уйрăмěнчи ěçсем: Çеçпěл Мишшин 100 çулхи юбилейне уявлани, вырăнти çыравçăсемпе —
В. Деменковапа, В. Тараватпа, А. Чебановпа, А. Юманпа, А. Ырьятпа тěлпулусем иртнерě.

Виçě хутчен Кăнна Кушкине çулçўрев йěркеленě. Çамрăксем патриарх еткерлěхне пěлмеллех. 2002 çулхи авăн уйăхěнче Шупашкарта чăваш студенчěсен I фестивалě иртрě. Унта та хутшăннă чěмпěрсем.

"Чăваш халăхĕн историйĕпе культури", "Юрăпа ташă искусстви" вĕренеççĕ. Кăштах цифрăсене пăхар-ха. 1996 çултанпа тишкерсен çакă курăнать. 1996 çулта чăваш уйрăмĕнчен 32 хĕр вĕренсе тухнă, 1997 — 30, 1998 — 24, 1999 — 13, 2000 — 15, 2001 — 13, 2002 — 11. Пурĕ 138 вĕренекен диплом илнĕ. Вĕренекенсенчен виççĕмĕш пайĕ область тулашĕнчен. Диплом илнисенчен 19 проценчĕ аслă вĕренӳ заведенийĕсене кĕнĕ.

Пĕрремĕш преподаватель А. А. Степанова пулнă, 1993 çултанпа В. А. Керимова (Яковлева) ĕçлет (ЧПУ пĕтернĕ).

Ку вĕренӳ заведенийĕн хальхи ячĕ — социаллă педагогика колледжĕ.

### 17-мĕш библиотека

Пурĕ Ульяновскра 31 библиотека ĕçлет. 17-мĕш библиотекăра 1989 çулта наци уйрăмĕсем уçăлнă, çав шутра — чăвашсен. Атăлçи тăрăхĕнче ун пекки урăх çук. Фондра вырăс, тутар, мордва, еврей чĕлхипе çырнă кĕнекесем упранаççĕ.

Чăваш уйрăмне 1994 çулхи чӳк уйăхĕнчен пуçласа Ю. Н. Мустаева ертсе пырать. Вăл Чăваш патшалăх университетĕнчи чăваш филологийĕпе культура факультетĕнче ятарлă аслă пĕлӳ илнĕ. Библиотекăри чăваш кĕнекисен шучĕ — 760. Чăваш уйрăмне вара 574 çын çырăннă (пурĕ 3000 çын).

Ку библиотекăра "Шевле" литпĕрлешӳ ларăвĕсем, литература касĕсем иртеççĕ.

### И. Я. Яковлев шкулĕн комплексĕ

Чăваш халăх историнче И. Я. Яковлевран паллăрах çын çук. Тĕнчипе паллă Чĕмпĕр чăваш шкулĕ — унăн ачи.

Шкул çурчĕсем паян тĕрĕс-тĕкелех ларaççĕ, вĕсене "Чĕмпĕр чăваш шкулĕ. И. Я. Яковлев хваттерĕ" ятлă музее пĕрлештернĕ (заведующийĕ А. А. Пономарева).

Музей 1991 çулхи кĕркунне уçăлнă. Ку çуртра Яковлевсен çемйи 1885 çултан пуçласа 1922 çулччен пурăннă. Хваттер улттă пӳлĕмрен тăнă. Патриарх пулĕмне хăй пекех лартса йĕрке тунă. Экспозицире XIX ĕмĕрти сĕтел-пукан, савăт-сапа, кĕнекесем, çемьере усă курнă хăш-пĕр япала.

И. Я. Яковлев çуралнăранпа 155 çул çитнине халаллаca музейре этнографи экспозицине уçнă — "Чĕмпĕр

тăрăхĕнчи чăвашсен XIV ĕмĕр вĕçĕнчи — XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи пурнăçĕпе культури". Кунта чăваш халăх кунçулĕ çинчен каласа панă, ĕç хатĕрĕсем, кил хуçалăхри хатĕрсем пур.

Кунта кашни çуркунне, И. Я. Яковлев суралнă вăхăталла, чăваш общественноçĕ уявсем, конференцисем ирттерет, Чĕмпĕр чăваш шкулĕнчен вĕренсе тухнисем тĕл пуласçĕ (ку йăла 1994 султа пусланнă).

Чĕмпĕр чăваш шкулне никĕслени 130 сул ситнине халалласа 1998 çулта Ульяновск облаçĕнчи чăваш чĕлхипе литератури вĕрентӳçисем валли методика семинарĕ ирттернĕ — "Чĕмпĕр чăваш шкулĕн вĕрентӳпе воспитани комплексĕ тата хальхи наци шкулĕн ыйтăвĕсем". Семинар вăхăтĕнче Чăваш патшалăх университечĕн ученăйĕсен канашĕ пулнă. Унта университетăн Ульяновскри вĕрентупе консультаци пунктне уçасси пирки йышăну кăларнă, чăваш филологийĕпе культура факультетне 1-мĕш курса вĕренме 33 студента илнĕ. Пирĕн обласри чăвашсен тахçанхи ĕмĕче пурнăçланчĕ — И. Я. Яковлев шкулĕнче каллех шăнкăрав сасси илтĕнсе кайрĕ. Халĕ ЧПУ представительствинче пилек курсра 138 студент асла пелу илет. 2004 султа пĕрремĕш кăларăм.

### Культура

Чăваш культури И. Я. Яковлев шкулĕнче тĕвĕленнĕ теремер енте. хальхи саманара вал тепер хут чи илсе пырать. Ялсенчи хăш-пĕр пултарулăх ушкăнĕсем çĕнĕ сармана варкăшĕпе пĕрлех ĕçлеме тытăннă. Сăмахран, Чăнлă районĕнчи Чăвашкассинче Р. Кириллов (Культура сурчĕн директорĕ. баянист) ертсе пыракан "Шусăм" ансамбль районти тата облаçри пĕр пысăк уявран та юлман. Саплах "Чăваш шăпчăкĕ" конкурссене те яланах хутшăннă. "Кирилловсем музыкăна юратаççĕ" статьяра Чăвашкассинчи семье пирки асăннă. Р. Кириллов 1988 çулта хор йĕркелет, Шупашкара çитсе 16 хĕрарăм кĕпи, 14 арçын кĕпиилсе килет. Хор тĕрлĕ çĕре çитет: Мари Элти Звенигово хулине, Тутарстанри Çĕпрел районне, Çĕнĕ Малăкла районĕнчи Курак Хăви ялне, Чăваш Енри Йĕпреçе, Ульяновска. Обласри хорсем хушшинче ирттернĕ конкурсра чăвашкассисене телевизор парса чысланă. Ку хор ятне облаçра пурте пĕлеççĕ. Облаçра акатуйсене темиçе хут та хутшăннă.

Кирилловсен çемйи питĕ интереслĕ. Ашшĕ Петр Семенович, вăрçă ветеранĕ, ялти чи чаплă купăссăсенчен пĕри пулнă. Амăшĕ та купăс каланă, лайăх юрланă. Вĕсен Николай ывăлĕ (Родион шăллĕ) Хусан консерваторине пĕтернĕ. Халĕ Турцире пурăнать, контрактпа музыкант пулса вăйă хурать. Родион ывăлĕ, Женя, Шупашкарти Г. Лебедев ячĕллĕ лицей-интернатра вĕреннĕ. Вăл та ашшĕ çулĕпе кайнă — музыкант.

Кивĕ Улхашри хор пирки те çавнах каламалла. Вĕсем çĕнĕ саманари пĕрремĕш чăваш уявĕсене илемлетекенсем пулнă. Облаçри акатуйсене темиçе хут та хутшăннă. Шупашкара тата Мари Республикине çитсе курнă. Мускаври ВДНХра та янăранă вĕсен сасси. 1988 çулта Халăх хорĕ ятне параççĕ кивулхашсене. Кунти артистсем чăваш халăх музыка инструменчĕсемпе анлăн усă кураççĕ: кĕсле, сăрнай, хăнкăраллă уçă параппан (бубен) сассисем кĕвĕсене авалхăх сĕмĕ кĕртеççĕ. Шол пулин те, хальхи ĕç-пуç ун пекех савăнмаллах мар. Тен, кунта баянистсем час-час улшăнса тăни те ĕçе мала кайма чăрмантарнă. Мĕн тесен те облаçри чи пысăк чăваш ялĕнче (700 килĕ) культура вучахĕ çĕнĕрен чĕрĕлсе тарасса шанас килет.

Ульяновск хулинчи пултарулăх ушкăнĕсем çинчен калаçу пуçарас пулсан чи малтан "Эревет" ансамбле аса илмелле. Ăна Вăта Тимĕрçен чăвашĕ Н. Ф. Косырев пĕр сĕре пуçтарнă. Ĕмĕрĕпех культура ĕçĕнче вăй хупăскер 1986 çулта Çĕне хулара чăваш юрăçисен ушкăнне туса хума шутлать. Ун чухне Чĕмпĕр Енре чăваш хаçачĕ те, телекăларăмĕ те çук-ха. Çавăнпа та сынсем патне çак ырă шухăша илсе çитерме хĕнтерех пулнă. Çапах та Николай Федорович чăвашла юрлама пĕлекен çынсене пĕрерĕн-пĕрерĕн шыраса тупать, кашнинпе калаçать, хăйĕн шухăшне пĕлтерет. Сăмахран, Мария Уткина солистĕна ертӳçĕ вырăс хорĕнче тупать, ăна чăваш ушкăнне куçма ӳкĕтлет. Теприсем патне вăра килнех кайма тӳрĕ килет, ăнлантарса, йăлăнса калаçмалла пулать.

Хальхи вăхăтра "Эревете" пĕлмен çын та сук пирĕн тăрăхра. Ăна "Халăх ансамблĕ" хисеплĕ ят панă, ертӳçи вара Раççей Федерацийĕн культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ пулса тăчĕ. Юрăпа ташă ансамблĕ яланах шыравра: ялсене тухса çӳрет (сав шутра область тулашне те), маңăса

тухма пуҫланӑ халӑх юррисене пӗрчӗн-пӗрчӗн пустарса сцена ҫине кӑларать, сӗнӗрсн чӗртет.

Р. Шумилова, М. Уткина, Ф. Самойлова, В. Самойлов, М. Селендюкова, В. Сорокин, Р. Никитина, Г. Тарасова, Г. Толстова, Л. Семенова тата ыттисем мӗн пуҫланнӑранпах тенӗ пек тытӑнса коллектива сӳллӗ шая ҫӗклесшӗн нумай вӑй хунӑ.

"Эревет" ҫинчен "Канаш" нумай ҫырнӑ. Ака 1996 ҫулта (49№) ҫырнине вулатпӑр. "Эревет" — вунӑ ҫулта" ятлӑ заметкӑран (авторӗ Н. Ларионов) илнӗ йӗркесем кусем (Н. Косырев каласа парать):

"1986 ҫулта "Руслан" культура керменӗнче тутар хорӗ пурччӗ. Манӑн та чӑваш пултарулӑх ушкӑнне йӗркелес кӑмӑл ҫуралчӗ. В. А. Коваленко директор патне пырса шухӑша пӗлтертӗм. Виктор Андреевич хаваспах пулӑшма пулчӗ. Ҫӗнӗ хулара, авиазавод проходнойӗнче пӗлтерӳсем сырса ҫапрӑмӑр. Чи малтан Фаина Самойловапа хамӑн мӑшӑр Фрида (вӑл тутар пулин те чӑвашла лайӑх пӗлет) килчӗс [...] Шупашкара костюмсем ҫӗлеттерме каиса килтӗм. Сцена ҫине чӑваш тумӗпе тухрӑмӑр. Ҫак вӑхӑталлах Чӑваш Енрен Сергей Каликов хореограф килчӗ. Вӑл ушкӑн сӑнпитне чылай лайӑхлатрӗ, номерсене илемлетрӗ". /36/

"Эревет" халӑх хисепне сӗнсе илнӗ, вӑл пирӗншӗн халӑх юрри-ташшин ҫунҫи пулса тӑрать.

"Палнай" ушкӑн артисчӗсем пӗрремӗш хут А. Юманан 60 ҫулхи юбилей каҫӗнче "Ҫалкус" ятпа тухнӑ. Висе хӗрарӑм — Нина Еграшкина, Галина Яковлева тата Альбина Степанова халӑх юррисене шӑрантарнӑ. Ҫак юбилей хыҫҫӑн фольклор ушкӑнӗ йӗркелеме шутланӑ. Майӗпен ушкӑна юрлама юратакансем ҫынсем пынӑ. Баянист та тупӑннӑ. Ушкӑна тӑватӑ ҫул Анатолий Ишуков ертсе пынӑ. Ансамбль ятне Олег Мустаев "Палнай" тесе панӑ. Репетицисене Ҫӗнӗ хулари "Чей суртӗнче" ирттернӗ. Ҫӗнӗ репертуар хатӗрленӗ.

Тепӗр тӑватӑ ҫултан ансамбле ҫамрӑк музыкант Станислав Толстов килет. Репертуара ҫӗнетет, хӑй кӗвӗленӗ юрӑсемпе пуянлатать. Ансамблӗн шайӗ палӑрмаллах усет "Палнай" юрӑҫисем районсем тӑрӑх "Канаш" хасат редакцийӗпе пӗрле сахал мар ҫуреҫҫӗ. Облаҫра, хулара иртекен пӗр мероприяти те сак ушкӑнсӑр иртмест. Вӑл халӑх ансамблӗ ятне тивӗсет.

С. Толстов мăшăрĕпе эстрадăна куççан палнайсен ертӳси Валентина Сымова пулать.

Ушкăнра нумай çул ĕнтĕ В. Пименова, Н. Кузюков, Г. Игнатьев, О. Игнатьева, Г. Игнатьева юрлаççĕ.

2002 султа "Палнай" 10 çулхи юбилейне паллă турĕ.

Димитровград хулинчи "Савăнăç" ушкăнăн та хăйĕн сăн-сăпачĕ пур. Унăн ертӳçи И. Н. Иванюкова, Атăл леш енчи чăваш халăх юррисене лайăх пĕлекенскер, вĕсене çĕнĕ сĕм кĕртсе сцена çине кăларать, халăх хушшинче сарма пулăшать.

1998 çулхи 2-мĕш номерте Е. Алексеева ушкăн ертӳçинчен интервью илнĕ. Акă мĕн пĕлме пулать кунтан.

И. Иванюкова Çĕнĕ Малăкла районĕнчи Упамсар ялĕнче çуралса ӳснĕ. Ульяновскра пединститут пĕтернĕ. 1983 çулта Димитровграда куçнă. 1995 çулта вара "Савăнăç" çуралать (унта хĕрарăмсем кăна). "Мелекесс" Культура керменне пĕрремĕш хут Упамсарта çуралса ӳснĕ хĕрсем пустарăннă — В. Буцаева,
Л. Дорофеева, А. Латыпова, Л. Илюнгина. Чăвашсем пĕрле пустарăнни, юрлани — кашниншĕн чăн-чăн савăнăç, çавăнтан тухать те ушкăн ячĕ. Малтан Н. Симцов баянист ĕçлет унта, вырăс сынни. Ушкăн ертӳси, обласри "Чăваш шăпчăкĕ" конкурсĕн çĕнтерӳçи, хăй те юрăсем çырма пуçлать. 1996 çулта ансамбль пĕрремĕш хут сцена çине тухать. 1997 çулта "Савăнăç" та "Халăх ансамблĕ" пулса тăрать.

Мелекесс районĕн пуçлăхĕ В. И. Чигаков ку ансамбле ура çине тăма чылай пулăшнă. Владимир Ильич, район администраци пуслăхĕсенчен пĕртен-пĕр чăваш, Атăл леш енчи чăвашсене аталанма нумай мел туса панă. Паян та вăл наци юхăмĕнчи чи хастарсенчен пĕри, малалла пăхакан çын.

Ульяновск районĕнчи Салмановка ялĕнче те (унта ĕмĕрех вырăссем пурăннă) чăвашсем нумай — çур ял. Шкулти 300 яхăн вĕренекенрен 70 проценчĕ чăваш. Кунта Н. Малышев йĕркелесе янă "Çăлкуç" ансамбль пур. Вăл та облаçри уявсенчен юлмасть,
М. Карсакова солисткăн уçă сассине вара нумайăшĕ илтсе киленме пултарнă.

Чăнлă районĕнчи Кунтикав ялĕнчи пултарулăх ушкăнĕ те тĕрлĕ çĕре хутшăннă. Чи хастар артистсем С. Разлуцкая, Н. Маслова, И. Толстова, В. Маслова, О. Шленкина,

Л. Легкова. Ку ушкӑнра халӑх инструменчӗсен ансамблӗ те пур. Ушкӑн ертӳҫи Иван Александров вара "Кунтикав юррин" сӑмахне те, кӗввине те хӑех ҫырнӑ.

Сакӑн ҫинчен вулакансене 1996 ҫулхи 38-мӗш номерте А. Мишаади (А. Богатов) ҫырса пӗлтерет. Вӑл хӑй те Кунтикавра ҫуралса ӳснӗ.

1996 ҫулхи 24-мӗш номерте Ҫӗнӗ Улхашри драмкружок ҫинчен сӑмах хускатнӑ (Н. Ларионов). Ялти Культура ҫуртӗнче ӗҫлеме ҫуккипе (вӑл юхӑннӑ, хупӑннӑ), ун директорӗ М. Борисова ҫак ӗҫе хӑйсен килӗнче илсе пырать. Вӑл Ҫӗрпӳри культура училищине пӗтернӗ, кусӑмсӑр майпа Хусанти культура институтӗнчен вӗренсе тухнӑ. Драмкружока 10 ытла ача ҫӳрет. Вӗсем М. Борисова хӑй ҫырнӑ "Ҫитмӗл тӗрлӗ мыскара" ятла комедие висӗ хут лартса панӑ. Декорацисем тума драмкружок ертӳсин мӑшӑрӗ, Александр, пулӑшать. Марина Михайловна пурӗ пилӗк пьеса ҫырнӑ.

Ҫакӑн пек энтузиастсем ҫинче тытӑнса тӑрать те ӗнтӗ ялти культура вучахӗ, савсен пеккисем сӳнме памассӗ ӑна. Пулӑшасчӗ вӗсене тӗрлӗ енӗпе. Пулӑшу тӳйманнине пула лайӑх специалистсем хулана тухса каяҫҫӗ. Пурте кайса пӗтсен ялта мӗн тӑвӗҫ вара?

"Чӑваш шӑпчӑкӗ" конкурс талантсене кӑтартмалли вырӑн. Ялсенче мӗн чухлӗ пултаклӑ ҫын пурӑнать!

Пӗрремӗш фестиваль 1993 ҫулта Ульяновскри Ҫамрӑксен керменӗнче иртрӗ. Унта районсенче ирттернӗ конкурссен ҫӗнтерӳҫисем хутшӑнчӗҫ. Ытларах халӑх юррисем янӑрарӗҫ. Жюри (ӑна С. Асамат юрӑҫ ертсе пычӗ) 12 шӑпчӑкран чи лайӑххи тесе Н. Максимована палӑртрӗ. Иккӗмӗшӗ — Е. Угасина (Кивӗ Майна районӗ), виҫҫӗмӗшӗ — В. Сорокин (Ульяновск).

Акӑ тата камсем савӑнтарчӗҫ ҫак кун куракансене: М. Менделеева (Ульяновскра пурӑнать, Нурлат районӗнче ҫуралса ӳснӗ), В. Айкина (Аслӑ Ҫӑлкуҫ ялӗ), Н. Узалуков (Чӑвашкасси), К. Тельцов, Л. Романова (Тереньга районӗ, Красноборски ялӗ), Л. Нюркина (Мелекесс районӗ, Турикасси), Л. Ильмукова (Ҫӗнӗ Малӑкла районӗ, Упамсар ялӗ) М. Уткина (Ульяновск), Г. Палькина (Чанла районӗ, Пухтел ялӗ).

Иккӗмӗш хут Чӗмпӗр тӑрӑхӗнчи шӑпчӑксем 1998 ҫулта пуҫтарӑнчӗҫ. Ку фестивальте Димитровградран килнӗ

И. Иванюкова мала тухрĕ. Иккĕмĕш вырăна икĕ артисткăна пачĕç. В. Странина (Çинкĕл хули) тата З. Терентьева (Чăнлă поселокĕ) тивĕçлĕ пулчĕç ăна. Виççĕмĕш вырăна вара виççĕн тивеçрĕç: А. Рухлина (Ульяновск районĕ, Симĕс Раща поселокĕ), Н. Кушты (Чăнлă районĕ, Пухтел ялĕ), И. Богданова (Кивĕ Майна районĕ, Дмитриево-Помряскино ялĕ).

Конкурс дипломанчĕсем саксем пулса тăчĕç: Н. Маркина (Çĕнĕ Малăкла), Р. Сайдяшева (Çинкĕл районĕ, Ялавăр ялĕ), О. Чебаков (Чăнлă районĕ, Кĕççĕн Нагаткин ялĕ), Р. Шумилова (Ульяновск хули).

Темиçе уйăха пынă уяв Чĕмпĕр тăрăхĕнче талантсем пуррине кăтартса пачĕ. Вĕсене вăхăтра асăрхаса условисем сес туса памалла. Хăш-пĕрне пысăк сцена валли те хатĕрлеме пулать. Çине тăрса ĕçлеме çеç ӳркенмелле мар.

Çакăн пек конкурссем Рассейри пĕтĕм чăвашсем валли те ирттермелле.

"Ах, аннесĕм, анне" юрă чăваш халăх хушшинче анлă сарăлчĕ. С. Кувшинов артист ку юрра таçта та шăрантарать. Хăйĕн аудиокассетине те кĕртнĕ ăна. Авторĕсем пирки çапла çырнă: "Сăвви Г. Коноваловăн, кĕвви халăхăн". Тӳрех каламалла: ку пысăк йăнăш. Ку юррăн авторĕ — Ульяновск районĕнчи Вышкă ялĕнче пурăнакан А. Никонорова, сăмахĕсене те, кĕввине те (халăх юрри майлă) вăлах çырнă. 1994 çулта ку сăвă "Канаш" хаçатра пичетленнĕ. Анна Степановнан килĕнче çак юрра хăй юрланине ӳкерсе илнĕ видеокассета та упранать.

Чăнах та, аудиокассетăри вариантран оригиналĕ виçтăват сăмахне улăштарнипе уйрăлса тăрать. Тĕслĕхрен, "улт ача" вырăнне С. Кувшинов "тăват ача" тесе юрлать.

Ульяновска концертпа килсен С. Кувшинов сцена çинчен ку истори пирки акă мĕн каларĕ: "Ку юрра эпĕ Аслă Нагаткинта аппасем патне хăнана килсен илтнĕччĕ. Аппаран унăн авторĕ кам тесе ыйтрăм. Вăл пĕлмерĕ. Юррине вара Шупашкара илсе кайса студире çыртартăм".

Анна, Полина, Вера Никоноровасене Чĕмпĕр тăрăхĕнче питĕ лайăх пĕлеççĕ. Пĕртăвансем тĕрлĕ концертсенче, уявсенче, "Еткер" телекăларăмра куракансем умĕнче нумай юрланă. Анна пурĕ 40 ытла юрă çырнă: "Кăвайт", "Агте", "Лантăшсем" (ăна Г. Вакку хăйĕн репертуарне кĕртнĕ), "Тăван тавралăхăм"...

Маларах С. Толстов ҫинчен кӗскен асӑннӑччӗ ӗнтӗ. Станислав Петрович ҫинчен каламалли нумай. Музыкант пулса ҫуралнӑ вӑл. Турӑ пани пур. Ун ячӗ 1993 ҫулхи "Чӑваш шӑпчӑкӗ" конкурс хыҫҫӑн анлӑн сарӑлчӗ. Н. Максимова шӑпах С. Толстов кӗвӗленӗ "Кӗлленнӗ чунсем" юрра шӑрантарса мала тухрӗ. Патӑрьел районӗнчи Сӑкӑт ял каччи пӗр вӑхӑт хушши Хусанти культура институтӗнче вӗреннӗ. Файзулла Туишев ячӗллӗ преми лауреачӗ пулса тӑнӑ. 1992 ҫулта Чӗмпӗр тӑрӑхне куҫса килнӗ. Чердаклӑ районӗнчи Колхознӑй поселокӗнче тӗпленнӗ. Малтан Ҫӗнӗ хулари "Эревет" ансамбльте концертмейстер пулнӑ — кайран "Палная" ертсе пынӑ.

Хальхи вӑхӑтра С. Толстов — пӗтӗм чӑваш тӗнчи пӗлекен юрӑҫ тата композитор. Сӗре яхӑн юрӑ ҫырнӑ вӑл. вуншар юрри шлягер пулса тӑнӑ. Кам пӗлмест-ха "Сарӑ гюльпансем", "Шаккарӗҫ кантӑкран", "Хӗрлӗ чечексем" юрӑсене.

Вӗсене композитор Верӑ мӑшӑрӗпе пӗрле сцена ҫинчен юрлать, ытти артистсен репертуарӗнче те чылай вӗсем. Темиҫе аудиокассета кӑларма пултарчӗ ӗнтӗ С. Толстов. Чӑннипех те чунне парса ӗҫлет вал чӑваш юррикӗввине халӑхра сарасшӑн.

Шумовка — Ульяновск районӗнчи вырӑс ялӗ. Анчах 1960-70 ҫулсенче кунта чӑвашсем чылай килсе тӗпленнӗ. Халӗ вӗсем 46 процент (ялта 256 ҫурт). Пултаруллӑ чӑваш пики М. Янтушкина Культура сурчӗн директорне ларсан чаваш юрри-кевви те илтенме тытанна кунта. 1999 ҫулта вӑл ку ялта пӗрремӗш хут чӑваш уявӗ йӗркелерӗ. Икӗ ҫул маларах вара кунта "Шевле" юрӑ ушкӑнӗ хӑйӗн юррисене янраттарма тытӑнать. С. Рахманова, Н. Егорова,
Л. Арефьева, Е. Юнгерова тата ыттисем кунти чӑвашсене хӑйсен илемлӗ юррисемпе савӑнтараҫҫӗ, районти тата облаҫри уявсене хутшӑнаҫҫӗ.

Кашни чӑваш юратакан уяв вара — Акатуй. Ӑна чӗмпӗрсем 1990 ҫулта чӗртсе тӑратрӗҫ. Ульяновскри Ҫӗнтерӳ паркӗнче пӗрремӗш хут ирттерме пултарчӗҫ. Унтан вара кашни ҫул пӗр сиктермесӗр савӑнаҫҫӗ чӑвашсем Акатуйра. Акӑ 1994 ҫулта Винновка ращинче иртнӗ Акатуи ҫинчен ҫырнине вулатпӑр (27№, авторӗсем
А. Степанова, А. Юман). Унта юрӑҫсем, ташӑҫӑсем, купӑсҫӑсем, такмакҫӑсем, ӳкеруҫӗсем, спортсменсем тата ыттисем хӑйсен пултарулӑхне кӑтартнӑ. Сӑмахран, такмак

калакансем хушшинче М. Карсаковапа Л. Чернова ҫитекен пулман. Тӗрлӗ ҫӗртен килсе ҫитнӗ ку уява: Шупашкартан, Салмановкӑран, Вышкӑран, Кивӗ Улхашран, Аслӑ Нагаткинтан...

Кӑҫал Акатуй 14-мӗш хут иртмелле ӗнтӗ.

Акатуйсем пуҫланнӑранпа ҫамрӑк ӑру тӑван халӑх йӑли-йӗркипе, юрри-ташшипе, вӑййисемпе ҫывӑхрах паллашма пултарчӗ.

"Чӑваш ачи, сассуна пар" фестивале те ҫак варкӑш ҫилӗ хускатрӗ. 1996 ҫулхи акан 20-мӗшӗнче Ишевке рабочи поселокӗнче (Ульяновск районӗн центрӗ) пӗрремӗш хут ача-пӑча фестивалӗ пулса иртрӗ.

— Ачасем хамӑр чӗлхене, кун-ҫула пӗлсен — пирӗн малашлӑх пур. Хамӑр умри ырӑ тӗллевсене пурнӑҫлама хӑюллӑрах пулмалла, — тесе пӗтӗмлетрӗ Шупашкартан килнӗ В. Станьял, Чӑваш таврапӗлӳҫисен пӗрлӗхӗн ертӳҫи. Фестивальте пурӗ 15 ушкӑн хӑйӗн пултарулӑхне кӑтартрӗ: Чӑнлӑ районӗнчен — Ҫӗнӗ Улхашри (ертӳҫисем С. Сидулова, М. Борисова), Кивӗ Улхашри (В. Кадебина), Кунтикаври (Ф. Щеголькова, И. Александров), Ирҫелӗнчи (Л. Стаканова), Вӑта Тимӗрҫенти (Г. Горбунова, С. Телеева, С. Мигукова), Пухтелӗнчи (Н. Кушты) шкулсем, Синкӗл районӗнчен — Уличери (Н. Куракова), Ялавӑрти (В. Степанов) шкулсем, Майна районӗнчен — Чӳрекелӗнчи (Л. Ярославская, Т. Ларкина) шкул, Ҫӗнӗ Малӑкла районӗнчен — Курак Хӑви (М. Спиридонова) яленчи шкул, Кивӗ Кӑлаткӑ районӗнчен — Чӑваш Кӑлаткӑри (Е. Васильева, Р. Невматуллина, Р. Бахтияров) шкул, Ульяновск районӗнчен — Елшанкӑри (З. Ярзуткина) шкул.

Обласри вӗрентӳ управленийӗ Чӑваш Кӑлаткӑран, Кунтикавран, Курак Хӑвинчен, Елшанкӑран, Пухтелӗнчен, Ирселӗнчен, Кивӗ Улхашран килнӗ ушкӑнсем лайӑх хатӗрленнине палӑртрӗ.

Апла пултӑклӑ ачасем пур иккен пирӗн, вӗсене тӗрӗс сул кӑтартса вӗренме лайӑх майсем туса памалла. Ку пиртен — аслисенчен — килет. Ун чух чӑваш ачин сасси уҫҫӑн янӑрӗ, инҫете кайӗ.

Тӑваттӑмӗш фестивале ачасем 2002 ҫулхи раштав уйӑхӗн 18-мӗшӗнче Ульяновскри филармоние пухӑнчӗҫ. Унта Чӑнлӑ районӗнчи Ирҫел, Кунтикав, Ҫӗнӗ Улхаш шкулӗсем, Ульяновск районӗнчи Аслӑ Ҫӑлкуҫ, Елшанка,

Симĕс Раща, Унтăр шкулĕсем, Вăрнар районĕнчи Каргин шкулĕ, Майна районĕнчи Чурекел шкулĕ, Карсун районĕнчи Усть-Урень, Белозерье шкулĕсем, Мелекесс районĕнчи Сахча, Турикасси шкулĕсем. Çинкĕл районĕнчи Ялавăр шкулĕ, Барăш районĕнчи Аслă Аял, Эшке шкулĕсем хутшăнчĕç. Унсăр пуçне Ульяновскри 55-мĕш, 73-мĕш, 79-мĕш шкул ачисем те пурччĕ. Димитровградран килнĕ 6 çулхи А. Новичков те тухре сцена çине.

Юлашки вăхăтра Ульяновск хулинче чăвашсен авалхи уявĕсене çĕнетсе тăратрĕç: Çаварни, Кĕрсăри, Улах...

Çăварни уявне Чĕмпĕр чăваш шкулĕн территоринче ирттерессĕ, тĕрлĕ ялсенчен хăнасене чĕнессĕ. Патăрьел тăрăхĕнчен те пулнăччĕ кунта артистсем. Весех йăлапа ирттересçĕ уява: улăмран тунă хĕрарăм кĕлепине çунтарни те, çунашкапа ярăнни те, икерчĕ (хĕвел палли) пĕçерни те, янăравлă шăнкăравсем çакса лашапа ярăнни те, тĕрлĕ вăйăсем те, конкурссем те. Çакăнтах тăм шăхличсем сутаççĕ. Кĕçĕн Çăварнире сынсем пĕр-перинчен каçару ыйтаççĕ. Çавăнпа та кунта: "Каçар мана, Турă каçартăр, эс те мана каçар", — тени илтĕнет тăтăшах.

Çак уяв çинчен "Канаш" хаçатра (2001 çул, 11 №) Н. Еграшкина çырса кăтартнă.

И. Я. Яковлев шкулĕн комплексĕнчех 2000 çулхи чук уйăхĕнче чăвашсем пĕрремĕш хут Кĕрсăри кĕрекине пуçтарăнчĕç. Пуçтаракансĕ [illegible] чăваш культура центрĕ (директорĕ А. Еграшкин). Аякран килнĕ хăнасем те пурччĕ: Патăрьелĕнчи 7-мĕш техника училищин делегацийĕ. Уяв илемĕ вара "Палнай" ансамбль пулчĕ (ертуçи Е. Сымова).

Аслă Нагаткинри В. Тараваt ертсе пыракан ача-пăча ушкăнĕсем çинчен те сăмах хускатмалла. 90-мĕш çулсен пуçлăмăшĕнчех йĕркелесе янă чăваш кружокне Валентина Николаевна. 27-мĕш техника училищинче вăл "Ĕмĕт" ансамбле чăваш хĕрĕсене пуçтарать. Тăван чĕлхепе калаçманскерсене малтан çăмăлах пулмасть. Сăмахран, "шурă-шурă тутăрсем" тесе калама вĕрентме кăна мĕн чухлĕ вăхăт кирлĕ! Хăшĕсем чылай вăхăт иртсен "шуруп" тессĕ. Çак сăмах çаврăнăшне лайăх калама вĕренсен ача чĕлхи уçăлать, юрлама та, сăвă калама та хăнăхать. "Шăпчăк ансамбль каярах йĕркеленет — 1995 çулта. Унта кĕçĕнреххисем пуçтарăннă — 1-5-мĕш классем. Вĕсем Аслă Нагаткинри Пултарулăх çуртĕнче хўтлĕх тупнă. Шăпчăксем

“Чăваш ачи, сассуна пар” фестивалĕ, облаçри конкурссене хутшăнса призсем илнĕ. Ахальтен мар ушкăнсен ертӳçине В. Игнатьева-Таравата “Рассей Федерацийĕн культурăн тава тивĕçлĕ ĕсченĕ” хисеплĕ ят панă.

Ульяновск облаçĕнче çĕре яхăн наци çыннисем пурăнаççĕ. Кашни халăх хăйнеевĕрлĕхне сыхласа хăварассишĕн пурăнать. Тĕрлĕ нацисен обществисем, наципе культура автономисем 20 ытла кунта.

Вĕсен ĕçне пулăшса тăма, аталантарма 1989 çулхи юпа уйăхĕнче область Совечĕн ĕçтăвкомĕ Ульяновскра Туслăх çурчĕ (директорĕ С. А. Орлова) уçма йышану кăларать. 1994 çулта ăна урăхларах ят параççĕ — Наци культурисене çĕнетсе аталантаракан центр. Культура кунĕсем, фестивальсем, наци уявĕсем... Пурте ун урлă иртеççĕ.

Нацисен хушшинчи çыхăнăва аталантаракан центрăн филиалĕсем уçăлаççĕ: 1995 çулта — Тутар культура центрĕ (директорĕ Г. Герасимова); 1999 çулта — Чăваш культура центрĕ (малтанхи директорĕ А. Еграшкин, халĕ И. Гаврилова). 2002 çулта мордвасем те çакăн пек заведени йĕркелеççĕ (А. Чурбанов).

Центрăн пултарулăх коллективне наци культурисен методисчĕсем кĕреççĕ: мордва — С. Будылева, чăваш — Е. Рузанова; художество пултарулăх пайĕн пуçлăхĕ Л. Илларионова, методика кабинечĕн пуçлăхĕ Н. Чекулаева, Ю. Рябчикова.

“Чăваш шăпчăкĕ”, “Чăваш ачи, сассуна пар” фестивальсем, акатуйсем, “Алла-аллăн” çемье уявĕ шăпах çак центр тăрăшнипе иртме пултарнă. Çаплах кунта нимĕçсен, мордвасен, тутарсен, еврейсен, азербайджансен уявĕсем те иртеççĕ.

Пысăк фестивальсем те йĕркелеççĕ кунта ĕçлекенсем.

1994 çул (авăн) — Ульяновскри Атăлçи нимĕç культурин халăхсен хушшинчи 1-мĕш фестивалĕ иртнĕ.

1997 (авăн) — тĕрĕк халăхĕсен 1-мĕш фестивалĕ.

1997 (нарăс) — облаçри тĕрĕк халăхĕсен 1-мĕш фестивалĕ.

2002 (авăн) — тĕрĕк халăхĕсен регионсен хушшинчи фестивалĕ — “Атăлçипе Урал хушшинче”.

2002 (юпа) — финн-угор халăхĕсен регионсен хушшинчи 1-мĕш фестивалĕ.

Çаплах Центр тĕрлĕ выставкăсем, юбилей каçсем ирттерет.

Çакăнтах тĕрлĕ пултарулăх ушкăнĕсем еçлессĕ. Чăвашсен çаксем: "Эревет" (ертуçи Н. Косырев), "Палнай" (В. Сымова), "Илем" вокаллă ушкăн (А. Шламбиров).

Кунта Чĕмпĕр тăрăхĕнчен тухнă паллă культура çыннисене асăнса хăвармалла.

Чăваш халăх артисчĕ А. К. Ургалкин Синкĕл районĕнчи Ялавăр ялĕнче çуралса усне.

М. Г. Еграшкина Чăнлă районенчи Каша ялĕнчен. 1920 çулта çуралнă. Мускаврa ГИТИСРА вĕреннĕ. 20 сул ытла Чăваш патшалăх академи театрĕнче 20 ытла роль калăпланă. Ăна чăваш пукани тенĕ. Ĕс ветеранĕ.

З. М. Афанасьева-Рейтер — Чăвашкасси хĕрĕ. Чăваш патшалăх юрăпа ташă ансамблĕнче юрланă, пултарулла солисткăсенчен пĕри пулнă. 1985 султа Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артистки ятне илнĕ.

Халĕ Çĕнĕ Ульяновскра пурăнать

Çĕнĕ Малăклари районти Культура çурчĕн методисчĕ Н. Н. Бикметова — Рассей Федерацин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.

## Чăваш пичечĕ – ăс-хакăл культурин пĕр пайĕ

### Телевидени

Каларăмар ентĕ, массăллă информаци хатĕрĕсен пĕрремĕш тĕллевĕ – халăх патне юлашки хыпарсене, паянхи çĕнĕлĕхсене илсе çитересси. "Канаш" хасатпа пĕр çултах, темиçе уйăх маларах, Ульяновск телевиденийĕнче "Еткер" ятлă телекăларăм йĕркеленсе кайрĕ.

Ун пĕлтерĕшне Нурлат хулинче пурăнакан (Тутарстан) А. Федорован "Еткер" редакцине янă çырăвĕ уçса парать. "Эпĕ сакăрвунă çула çывхаратăп. Ачасем вырăссем хушшинче пурăннипе тăван чĕлхене вĕренеймерĕç. Хама вара ватлăх кунсенче чăвашла телепередача курма тӳр килнĕшĕн телейлĕ тесе шутлатăп, питĕ-питĕ савăнтăм чăваш сăмахĕ эфирта янăранăшăн. Пĕрремĕш хут илтсен савнăс куççулĕ тухрĕ. Пехил сире", — çакăн пек çырса янă вал (кун пирки 1994 çулхи 26-мĕш номерте вулама пулать). /37/

"Еткере" пусарса ярас тесе А. Цыганов. Н. Романов

А. Богатов нумай тăрăшнă. Пĕрремĕш передачăсене ертсе пыма вара Шупашкартан Юхма Мишши килсе çӳренĕ. Вĕсем Р. Шепельковӑпа пĕрле ĕсленĕ. Çаплах Р. Сарпи, С. Асамат, В. Синичкин хутшăннă вĕсене йĕркелеме.

Юпа уйăхĕнче вара пĕрремĕш хут эфира Чăваш патшалăх университечĕн историпе филологи факультечĕн студенчĕ Олег Мустаев (Елчĕк районĕнчи Çĕнĕ Эйпеç ялĕнче çуралса ӳснескер) тухать. Ăна вăл паян кунччenех ертсе пырать. Маларах икĕ эрнере пĕрре тухатчĕ ку телекăларăм. Халĕ эрнере пĕрре 40-45 минут курма пултараççĕ ăна чăвашсем. Чĕмпĕр тăрăхĕнчи чăвашсем патне кăна мар, Чăваш Ен, Тутарстан (8 район), Самар, Пенза облаçĕсен хăш-пĕр кĕтесне те çитет "Еткер". Ытти регионти чăвашсем те ăна интересленсе кураççĕ.

Халĕ О. Н. Мустаев — Самрăксен Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ премийĕн лауреачĕ.

Тĕрлĕ хыпарсем пĕлме пултараççĕ "Еткерте" чăвашсем, унта творчество çыннисем, пуçлăхсем тухса калаçаççĕ. Саламлă çырусем те йышăнаççĕ унта, чăвашсем чи паллă юрăсисене курса савăнма пулать.

**"Шевле" литература пĕрлешĕвĕ**

1920 султа Чĕмпĕр кĕпĕрнин халăх вĕрентĕвĕн пайĕн чăваш секцине ертсе пыракан Алексей Милли пирĕн тăрăхри чăваш çыравçисене пĕрле пуçтарать. "Чăвашла çыракансен ушкăнĕ" йĕркелет. Çак ушкăн 1920-21 çулсенче Чĕмпĕрте "Атăл юрри" журналăн икĕ номерне кăларать, ялсем тăрăх сӳресе халăх сăмахлăхне пуçтарать.

Çак "Чăвашла çыракансен ушкăнĕ" тата "Канаш" союз никĕсĕ çинче каярах Писательсен союзĕ йĕркеленсе каять.



*Штатра тăман корреспондентсен тĕл пулăвĕ. 1993 çул.*

1997 çулта Чĕмпĕр Енри чăваш çыравçисем "Канаш" хаçат пулăшнипе каллех пĕр чăмăра пĕрлешрĕç, "Шевле" литпĕрлешӳ



*Сулахайран сылтăмалла:* *П.Ишутов, Н.Ларионов, А.Ашкеров.*

туса хучĕç. Ана Писательсен союзĕн членĕ Н. Ларионов ертсе пырать. "Шевле" литпĕрлешӳ "Чăвашла çыракансен ушкăнĕн" ĕçне малалла тăсать. Сак кĕске хушăрах литпĕрлешӳ куса курăнмалла ĕссемпе палăрчĕ. "Канаш" хасатпа тачă çыхăнса ĕçлесе "Атăл юрри" журналăн 3-мĕш номерне кăларса тăма май пулчĕ. Çаплах 2000 çулта облаçри чăваш çыравçисен "Шевле сути" альманахне пичетлесе кун çути кăтартнă. Халĕ журналăн 4-мĕш номерĕ, альманахăн 2-мĕш номерĕ пичете тухма хатĕр. Ĕçĕ укçа-тенкĕ суккинче кăна. "Шевле" литпĕрлешу йĕркеленсе кайнăранпа унăн членĕсем — Н. Ларионов, В Деменкова, В. Тарават, А. Ырьят, А. Богатов, А. Юман — хăйсен илемлĕ сăмах кĕнекисене кăларма пултарчĕç. Çаплах ытти авторсене те пулăшнă. Тутарстанра пурăнакан Н. Дворовăн Н Матросовăн кĕнекисене йĕркелесе, редакцилесе кун çути кăтартнă. Халĕ "Канаш" хаçат редакцинче темиçе алçыру выртать, çитес вăхăтра вĕсене пичетлесе кăларас пулать.



*"Шевле" литпĕрлешӳ членĕсем Унтăрти вăтам шкулта*

"Шевле" литпĕрлешӳ членĕсен хайлавĕсем Шупашкарта тухса тăракан хаçат-журналта та тăтăшах пичетленеççĕ.

Литпĕрлешӳ членĕсен йышĕ 30 çынна яхăн, вĕсем вăхăтран вăхăта Ульяновскри 17-мĕш библиотекăна пухăнса ларусем ирттереççĕ: пĕр-пĕрин хайлавĕсене тишкереççĕ, канашлаççĕ, çĕннине шыраççĕ. Вырăнти вырăс çыравçисене те чĕнеççĕ унта. Нумаях пулмасть Раççейри паллă поэтпа, пародистпа Г. Медведовскийпа тĕл пулнă.

"Шевле" литпĕрлешӳ çаплах халăх сăмахлăхне

пустарать, вёсенчен пӗр-пӗр кӗнеке хатӗрлеме шутлать. Ҫаплах "Канаш" хаҫатра литература конкурсӗ йӗркеленӗ. Унта виҫӗ пай — "Проза", "Поэзи", "Критика тата публицистика".

Ситменлӗхсем, йывӑрлӑхсем чылаях-ха "Шевле" литпӗрлешӗвӗн. Чи пӗрремӗш — ҫамрӑксем ҫак ӗҫе хастарах хутшӑнманни. Унсӑрӑн Чӗмпӗр ҫыравҫисен пуласлӑхӗ ҫук. Ҫамрӑксемпе ӗҫлесси тӗп вырӑнта пулмалла. Хатӗрлесе хунӑ журнала, альманаха укҫасӑр ниепле те кун ҫути кӑтартма май ҫук. Ҫыравҫӑн вара пултарулӑха ӳстерес тесен пичетленес пулать. Ҫаплах хайлавсене вырӑсла куҫарса тӗнче литературине кӗме тӑрӑшмалла. Унта та Чӗмпӗр чӑвашӗсен йӗрӗ пултӑр.

**Чӗмпӗр Енри чӑваш ҫыравҫисем**

Алексей Антипович Ашкеров.

1936 ҫулхи чӳк уйӑхӗн 10-мӗшӗнче Тутарстанри Пӑва районне кӗрекен Элшел ялӗнче ҫуралнӑ, ҫакӑнтах вӑтам пӗлӳ илнӗ. Пӑвари техника училищине пӗтернӗ. Виҫӗ ҫул Ҫурҫӗр Казахстанра пурӑннӑ.

1963 ҫултанпа Ульяновскра. 35 ҫул ытла йывӑр станоксем тӑвакан заводра слесарь-механикра мӗн пенсие кайиччен ӗҫленӗ.

Малтанхи сӑвви 1952 ҫулта Хусанти "Хӗрлӗ Ялав" хаҫатра пичетленнӗ. Каярах сӑввисемпе юптарӑвӗсем Сӗпрел тата Пӑва район хаҫачӗсенче кун ҫути курнӑ.

А. Ашкеров таран шухӑшлӑ юптарусем ҫырать, ҫакӑ унӑн — тӗп жанрӗ. Лирикӑлла сӑвӑсем хайлать. Вӑл "Шевле" литпӗрлешӳ членӗ.

**Александр Михайлович Мишаади (Богатов).**

1935 сулхи январӗн 15-мӗшӗнче Ульяновск облаҫӗнчи Чӑнлӑ районӗнчи Кунтикав ялӗнче ҫуралнӑ. 1950 ҫулта ҫичӗ ҫуллӑ шкул пӗтерсен тухсан Ульяновскри чӑваш педучилищинчен 1954 ҫулта вӗренсе тухать. 1954-1957 сулсенче ҫар хӗсметӗнче тӑрать. Таврӑнсан (1957-1960) Ульяновскри пединститутра вӗренет. Сакӑр ҫул хушши Теччӗри вӑтам шкулта ӗҫлет, пӗр ҫул Унтӑрти шкул директорӗ пулнӑ. 1969-1971 ҫулсенче КПСС Ульяновск райкомӗнче вӑй хурать, унта пай заведующинчен райком секретарӗ таран ӳсет, пӗр хушӑ райӗҫтӑвком председателӗ ҫумми те пулать. 1983-

1985 çулсенче КПСС обкомĕн инструкторне илессĕ, кайран "Ульяновская правда" хаçатра редактор сумминче ĕçлет. 1986-1990 çулсенче КПСС обкомĕнчи пичет секторĕн заведующийĕнче тăрăшать. Шăпах çавăн чух вăл обласри чăвашсен "Канаш" хаçатне йĕркелесе ярас тĕлĕшпе сине тăрса ĕçленĕ те.

1990-1991 çулсенче А. М. Богатов КПСС Ульяновск райкомĕн иккĕмĕш секретарĕ пулать. 1992-1994 çулсенче "Канаш" хаçатра ĕçлет, пер хушă пичет управленийĕн пуçлăхĕн çумĕ те пулать, кайран каллех хасата таврăнать.

"Важное звено перестройки" (1988), "Воспитанники Яковлевской школы", (1997), "Возрождение" (1998). "Это начиналось так" (1999) "Партократы", "Восхождение" кĕнекесен авторĕ. А. Богатов вырăсла сăвăсем çырать.

"Шевле" литпĕрлешу членĕ.

**Валентина Васильевна Деменкова.**

1924 çулхи раштав уйăхĕн 8-мĕшĕнче Чăваш Республикинчи Комсомольски районне кĕрекен Хирти Сĕнтĕр ялĕнче çуралнă. Ялти шкул хыççăн Патăрьелĕнчи педучилищĕрен вĕренсе тухнă. Кун хыççăн 35 сул хушши ачасене вĕрентнĕ. "Халăха вĕрентес ĕç отличникĕ" ята тивĕçнĕ. Вăрçă çулĕсенче Комсомольски районĕнчи Виçпӳртри вăтам шкулта, кайран мĕн пенсие тухиччен ех сав районти Пĕркесри сакăр çуллă вĕренмелли шкулта вăй хунă.

1979 çулта Ульяновск облаçĕнчи Ульяновск районне кĕрекен Аслă Çăлкуç ялне куçса килнĕ.

Пиллĕкмĕш класра вĕреннĕ чухнех сăвăсем çырна "Ялав" журналта тăтăшах пичетленнĕ. Прозăпа та ăнăçлă ĕçлет.

А. Талвир ячĕллĕ литература премин лауреачĕ (1999).

Унăн "Кĕтнĕ шусăм" кĕнеке тухнă (1999).

Раççей Писательсен союзĕн членĕ.

"Шевле" литпĕрлешу члене.

**Лаврентий Иванович Данилов.**

1959 çулта нарăсăн 17-мĕшĕнче Чăваш Республикине кĕрекен Тăвай районĕнчи Сăхăтпуç ялĕнче йышлă çемьере çуралнă. 1975 çулта вăтам шкул хыççăн Канаш хулинчи ГПТУ-2 училищинче вĕреннĕ. 1977-1979 сулсенче салтак

хĕсметĕнче тăнă, чаçри "На боевом посту" стена хаçатне йĕркелесе пынă.

Сăвăсемпе шӳтлĕ калавсем шкулта çырма тытăннă. "Ял ĕçченĕ", "Çĕнĕ çул", "Пионер сасси" хаçатсенче пичетленнĕ.

1980 султанпа Ульяновскри Засвияжски милици уйрăмĕнче ĕçлет, прапорщик. Нумай çул хушши "Колючка", "На боевом посту" стена хаçачĕсенче фотокорреспондент ĕçĕсене туса пынă.

Ăна "Милици отличникĕ", "Класлă специалист", "Кăлтăксăр ĕçленĕшĕн" 3-мĕш тата 2-мĕш степеньлĕ медальсемпе, "МВД-200 çулта" паллăпа наградăланă. "Охрана" символикиллĕ сехете Шалти ĕçсен министерствинчен тивĕç пулнă.

Л. Даниловăн 1997 çулта милици ĕçĕ çинчен "Чтобы помнили" кĕнеки тухнă. Унăн хайлавĕсене "Шевле çути" кĕнекепе "Атăл юрри" журналта, "Канаш", "Хыпар", "Ялав", "Капкăн", "Правопорядок" редакцийĕсенче пичетленĕ. Чи пĕлтĕрĕшлисем: "Тарăн Çырма Пусĕ", "Самана", поэмапайăтсем. Çырнисене вырăсла та куçарать.

Л. Данилов — "Шевле" литпĕрлешĕвĕн яваплă секретарĕ.

**Николай Константинович Кадебин.**

1944 çулхи кăрлачăн (январь) 1-мĕшĕнче Ульяновск облаçенчи Чанла районне кĕрекен Кивĕ Улхаш ялĕнче çуралнă.

1960 çулта ялти вăтам шкултан вĕренсе тухсан Шупашкарти И. Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх институчĕн художествăпа графика факультетне кайса кĕнĕ. Ăна 1972 çулта пĕтерсе тухнă. Кун хыççăн Кивĕ Улхашри вăтам шкулта ачасене вĕрентнĕ. 1975-1978 çулсенче Пухтелĕнчи вăтам шкул директорĕ пулнă. 1982-1990 çулсенче — Кивĕ Улхашри вăтам шкул директорĕ. Халĕ çак шкултах сăнарлă искусствăпа черчени тата тăван чĕлхепе литература предмечĕсене илсе пырать.

Чăнлă районĕнчи таврапĕлӳçĕсенчен пĕри. Унăн тăван тавралăхпа паллă ентешĕсем çинчен çырнă тĕпчев ĕçĕсем "Танкист", "Çилçунат" журналсенче, "Ульяновская правда", "Канаш" тата Чăнлă хыпарĕсем" хаçатсенче чылай пичетленнĕ. Н. К. Кадебин пуçарнипе 1978 çулта Кивĕ Ул-

хашри вăтам шкулта тавра пĕлӳ музейĕ уçална. Нумай çул хушши ăнăçлă ĕçленĕшĕн Чăваш Патшалăх Канашĕн Хисеп грамотине тивĕçнĕ. "Чăваш халăх ăсчахĕ", "Раççей Федерацийĕн тава тивĕçлĕ учителĕ" хисеплĕ ятсем парса чысланă.

Вăл "Хисеплĕ таврапĕлуçĕ" ята та тивĕснĕ. "Шевле" литпĕрлешу членĕ.

**Елена Николаевна Кузьмина.**

1956 çулхи ноябрĕн 4-мĕшĕнче Тутарстан Республикинчи Пăва районĕнчи Элшел ялĕнче суралнă. 1974 султа вăтам шкултан вĕренсе тухнă. И. Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн историпе филологи факультетне вĕренсе пĕтерне.

Шкулта вĕреннĕ чухнех калавсем сырнă. "Пионер сасси" хаçат редакцийĕнче "Çамрăк журналист" конкурс çĕнтерӳçи пулнă. Калавĕсем "Канаш", "Чăнлă хыпарĕсем" хаçатсенче, Шупашкарти тĕрлĕ хаçат-журналта пичетленнĕ. 1979 çултанпа "Чăнлă хыпарĕсем" район хаçатĕнче вăйхурать.

"Шевле" литпĕрлешӳ членĕ.

Ытларах проза жанрĕпе çырать.

**Анна Степановна Никонорова.**

Тутарстанри Пăва районне кĕрекен Тенеяр ялĕнче 1952 çулхи çу уйăхĕн 27-мĕшĕнче çуралнă 1969 султа Элшелĕнчи вăтам шкултан вĕренсе тухнă. Каярах суту-илу техникумне пĕтернĕ.

Чи малтанхи калавĕ Пăва район хаçатĕнче 1967 султа кун курнă. Каярахпа "Аван-и", "Самана" хасатсенче пичетленнĕ. Унăн хайлавĕсем "Канаш" хаçатра тататах пичетленсе тăраççĕ. Вăл — темиçе юрă авторĕ, сăмахне те кĕввине те хăех çырнă. Анна Никонорова прозăра та çитĕнусем тунă, "Канаш" хаçат конкурсĕн лауреачĕ.

1981 çултанпа Ульяновск районĕнчи Вышка ялĕнче пурăнать.

"Шевле" литпĕрлешу членĕ.

**Валериан Федорович Ромашкин.**

1950 çулхи чӳк уйăхĕн 19-мĕшĕнче Ульяновск облаçĕнчи Чăнлă районĕнчи Анат Тимĕрсен ялĕнче суралнă

Вăтам шкул пĕтерсен Çинкĕлте педучилищĕре вĕренет. 1970 çулта учительте ĕçлеме пуçлать. Пĕр хушă — Вăта тата Анат Тимĕрçен ялĕсенчи колхозра ("Память Куйбышева") комсомол организаци секретарĕнче ĕçлет.

1979 çулта Ульяновскри И. Н. Ульянов ячĕллĕ патшалăх пединститутĕнчен вĕренсе тухать, аслă пĕлӳ илнĕ хыççăн тĕрлĕ шкулта учительте, кайран директорта вăй хурать. Кунтан ăна КПСС райкомне ĕçлеме илеççĕ. Унта инструктор, пай заведующийĕ пулать. 1985 çулта Чăнлă район хаçачĕн редакторне куçараççĕ.

1989 çулта облаçра тăван чĕлхепе "Канаш" хаçат тухма пуçласан унăн тĕп редакторĕ пулать. В. Ф. Ромашкин — Раççей Журналисчĕсен союзĕн членĕ, Чăваш халăх академикĕ, Чăваш наци культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ. "Чуваши Симбирского Поволжья" кĕнеке авторĕсенчен пĕри.

"Тăван ялăм, савнă ялăм" поэми — унăн творчествинче тĕп вырăнта.

**Мария Алексеевна Селендеева.**

1948 çулхи кăрлачăн 12-мĕшĕнче Ульяновск облаçне кĕрекен Чăнлă районĕнчи Чăвашкасси ялĕнче çуралнă.

1966 çулта кӳршĕри Кивĕ Улхашри вăтам шкултан вĕренсе тухнă. Пĕр хушă лавккаçăра ĕçленĕ. Куçăн мар вĕренсе Ульяновскри И. Н. Ульянов ячĕллĕ пединститут пĕтерчĕ. 1969-1971 çулсенче Çĕнĕ Улхашри ватам шкулта кĕçĕн классенчи ачасене вĕрентнĕ. 1971 çултанпа — Чавашкассинчи пуçламăш шкул учительници.

М. Селендеева хăйĕн саввисенче тĕнче илемне, кун пуçламăшне, юратупа ĕмĕт, туслăх енĕсене ăнăçлă сăнласа кăтартма пĕлет.

Унăн саввисем "Канаш", "Чăнлă хыпарĕсем" хаçатсенче пичетленнĕ. "Шевле" литпĕрлешӳ членĕ.

**Михаил Андреевич Сугалов (Серте Мишши).**

Тутарстан Республикине кĕрекен Теччĕ районĕнчи Кăнна Кушки ялĕнче 1947 çулхи утă уйăхĕн 12-мĕшĕнче çуралнă. Ульяновскри педагогика университетĕнчен вĕренсе тухнă. Тĕрлĕ çулсенче учительте, "Авангард" (Теччĕ районĕ), "Сувар" (Хусан хули), "Канаш" (Ульяновск) хаçатсенче журналистра ĕçлет.

Серте Мишшин сăввисенче тавракурăмпа сынсен шăпи, юрату кĕвви, тăнăçлăхпа туслăх кĕввисем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Рассей Писательсен союзĕн членĕ. "Хирти тăман" (1995), "Йĕплĕ пуç кăшăле" (1999) кĕнекесен авторĕ.

**Петр Деомидович Соловьев.**

1945 çулхи пуш уйăхĕн 1-мĕшĕнче Мускав облаçĕнчи Рошаль хулинче çуралнă. Ачалăхĕ Чăваш Енри Патреккел ялĕнче иртнĕ. Вăтам пĕлӳ илнĕ.

1964-1967 çулсенче çарта хĕсметре тăнă. Унтан таврăнсан Элекçей Тимешри кирпĕч заводĕнче ĕçленĕ.

1974-1977 çулсенче Гомель патшалăх университетĕнче вĕреннĕ, физкультура учителĕ пулса тăнă.

1986 çултанпа Ульяновск облаçĕнчи Скугареевкăра 23-мĕш училищĕре физкультура вĕрентет.

Çăмăл атлетикăпа ăмăртса ветерансем хушшинче вунă хутчен Раççей чемпионĕ пулнă. Хăй кĕвĕленĕ юрăсем ну май. Сăввисенче паттăрлăх, шанас, юрату, илем кĕвĕленеççĕ.

"Шевле" литпĕрлешӳ членĕ.

**Валентина Николаевна Игнатьева (Валентина Тарават).**

1946 çулхи çурлан 19-мĕшĕнче Тутарстан Республикине кĕрекен Çĕпрел районĕнчи Турхан Упи ялĕнче учитель кил-йышĕнче çуралнă. Пăвари медицина училищине пĕтерсе тухнă. Ульяновскри И. Н. Ульянов ячĕллĕ пединститутра вĕреннĕ. 1978 çултанпа Чăнлă районĕнчи Аслă Нагаткин ялĕнче 27-мĕш СПТУра ĕçлет. Икĕ фольклор ушкăнне ертсе пырать. Раççей Федерацийĕнчи Писательсен союзĕн членĕ, Чăваш Республикинчи Композиторсен ассоциацийĕн членĕ, Раççей культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ. Ульяновскри чăвашсен наципе культура автономин Чăнлă районĕнчи филиалĕн пуçлăхĕ.

Кĕнекисем: "Ĕçчен мăнук" (1992), "Уяв парни" (1993), "Хура халха" (1994), "Кавир тĕртетĕп чечекрен" (1996), "Запишите в первый класс (1994), "С днем рождения" (1994), "Мне с надеждой повезло" (1997), "Эхо" (1999). 40 юрă авторĕ.

В. Тараватăн юррисемпе сăввисенче тăван тавралăхăн

илемĕ, ачалăх тĕнчи сассисем, телей те туслăх, тăнăçлăх кĕввисем янăраççĕ.

"Шевле" литпĕрлĕшӳ членĕ.

**Анатолий Сафронович Чебанов.**

1937 çулта Тутарстан Республикинчи Çĕпрел районне кĕрекен Чăнлă Шăхаль ялĕнче çуралнă. Хурăнвар-Шăхалĕнче вăтам шкултан вĕренсе тухнă хыççăн Пăвари техника училищинче ял хуçалăх механикне вĕреннĕ. Куçăн мар йĕркепе Курганри ял хуçалăх институтĕнче зооинженера вĕреннĕ. Мĕн тивĕçлĕ канăва кайиччен хуçалăхсенче тĕп зоотехникра ĕçленĕ. А. Чебанов — Раççей Федерацийĕн Писательсен союзĕн членĕ. Вăл çырнă пьесăсем тăрăх Чăваш академи драма театрĕ паян кунччен спектакльсем лартать. Мари Эл çĕршывĕнче вĕсене вырăсла та кăтартнă. Унăн сăввисемпе композиторсем 200 ытла юрă çырнă. Вăл сакăр кĕнеке авторĕ. Чăваш Республикин культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.

**Анатолий Григорьевич Дмитриев-Ырьят.**

1949 çулхи çĕртме уйăхĕн 9-мĕшĕнче Тутарстан Республикине кĕрекен Пăва районĕнчи Раккасси ялĕнче çуралнă.

1966 çулта Элшелĕнчи вăтам шкултан вĕренсе тухнă. 1968-1970 çулсенче хĕсметре тăнă. 1970-1975 çулсенче Хирти Кушкăри тулли мар вăтам шкулта учитель пулнă.

1975-1977 çулсенче Шупашкарти партишкулĕнче вĕреннĕ. 1977-1982 çулсенче Раккасинчи шкулта вĕрентнĕ. 1982-1990 çулсенче Ульяновскри тĕрлĕ организацисенче вăй хунă. 1990 çултанпа "Канаш" хаçатра ĕçлет.

1996 çулта Чăваш патшалăх университетĕнчен вĕренсе тухнă. Журналист. 1991 çултанпа РФ Журналистсен союзĕн членĕ. 1993 çултанпа РФ Писательсен союзĕн членĕ. "Хăмăшлăха путнă кĕмĕл уйăх" кĕнеке авторĕ. А. Ырьятăн сăввисем тăрăх С. Толстов композитор юрăсем хывнă.

"Шевле" литпĕрлешӳ членĕ.

**Анатолий Федорович Ермилов-Юман.**

Ульяновск облаçĕнчи Чăнлă районĕнчи Чăвашкассинче учитель кил-йышĕнче çуралнă. Ялти пуçламăш шкултан вĕренсе тухсан Кивĕ Улхаша çичĕ çуллă шкулта пĕлĕвне

ӳстернĕ, 1952 çулта Вăта Тимĕрçенти вăтам шкула пĕтерсе тухнă, "Пĕрлешӳллĕ ĕç" хаçат редакцине ĕçлеме килнĕ. Çавăнтанпа 1990 çулччен — 38 çул хушши — Чăнлă район хаçатĕнче ĕçленĕ, 1963 çултанпа хаçат редакторĕн çумĕ пулнă. 1990 çулта "Канаш" хаçат редакторĕн çумĕ пулать, унта 1994 çулччен, тивĕçлĕ канăва тухиччен, вăй хурать.

РФ Писательсен союзĕн тата Журналистсен союзĕн членĕ, облаçри журналистсен Мария Ульянова ячелле премии лауреачĕ, Раççей культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ. Йышлă сăвăсемпе поэмăсен, çав шутра "Пурнăс аваре" сăвăлла роман авторĕ. Паллăрах кĕнекисем: "Телей сăпки", "Чĕмпĕр чулĕ калаçать", "Çунатсем", "Кăвак йĕр", "Чĕре сĕввисем", "Суйласа илнисем", "И. Я. Яковлев ячĕллĕ...", "А. Юман Ульяновск облаçĕнче чăвашлăх юхăмне пуçарса яраканĕсенчен пĕри, Чăнлă районĕн Хисеплĕ гражданинĕ.

"Шевле" литпĕрлешӳ членĕ.

**Анатолий Геннадьевич Головин (Анатолий Май).**

1939 çулта Ульяновск облаçĕнчи Чăнлă районĕнчи Каша ялĕнче çуралнă.

Ульяновск пединститутне пĕтернĕ. 1962 çултанпа шкулта ĕçленĕ — вĕрентуçĕ, директор, директор çумĕ.

Поэт. Прозаик. Таврапĕлӳçĕ.

Икĕ кĕнеке валли алçыру хатĕрлесе хунăччĕ. Кăларса ĕлкĕреймерĕ — 2001 çулта вăхатсăр çĕре кĕнĕ.

**Виталий Семенович Чекушкин (Виталий Юмарт).**

1938 çулта Чăваш Республикинчи Патăрьел районĕнчи Чăваш Сăкăт ялĕнче çуралнă. Шупашкарта пединститутран вĕренсе тухсан 1960 çулта Ульяновск облаçне направленипе килет. Унтанпа Чăнлă районĕнчи Кивĕ Улхаш ялĕнче пурăнать.

Пултарулăхĕ тĕрлĕ енлĕ унăн. Сăввисем кĕнекене те кĕнĕ, Пушкин сăввисене чăвашла куçарать, шкул валли учебниксем хатĕрлет, паллă çыравçăсен ĕçĕсене хаклать, тишкерет, критикăлла статьясем çырать. Сăпăлах çыравçăсен кун-çулне йĕрлет, наука статьисем пичетлет.

Халăха вĕрентес ĕç отличникĕ.

Раççей Федерацийĕн тава тивĕçлĕ учителĕ.

Раççей Писательсен союзĕн членĕ.

**Петр Ильич Ишутов.**

1931 çулхи авăн уйăхĕн 5-мĕшĕнче Ульяновск облаçĕнчи Çинкĕл районĕнчи Анатьялта çуралнă.

Çирĕм пилĕк çул ытла çархĕсметĕнче пулнă. Подполковник. Çирĕм çул ытла Ульяновск хулинче инженерта вăй хунă.

Вырăсла çырать. Поэт. Прозаик. 1989 çулта Атăлçисар округĕн "За Родину" хаçатĕнче пĕррремĕш калавĕ пичетленнĕ. 1999 çулта "Канаш" хаçатра ун сăввисен ярăмĕ пĕрремĕш хут кун çути курнă. Чĕмпĕр тăрăхĕнчи чăваш поэчĕсен сăввисене вырăсла куçарать.

"Шевле" литпĕрлешӳ членĕ.

**Ӳкерӳçĕсем**

**Ирина Александрова Щеголькова.**

1960 çулта Чăнлă районĕнчи Каша ялĕнче çуралнă.

Ульяновскри 1-мĕш педучилищĕре вĕреннĕ. Ун хыççăн Шупашкарти патшалăх désинститутĕн художествăпа графика факультетне пĕтернĕ.

Тĕрлĕ выставкăна хутшăннă.

1986 çултанпа — Чăнлă поселокĕнчи унер шкулĕн директорĕ.

**Федор Васильевич Искендеров.**

1949 çулта Çĕпрел районĕнчи Аслă Аксу (Тутарстан, Çĕпрел районĕ) çуралнă. Тĕрлĕ выставкăна хутшăннă. "Чăваш тĕнчи" альбом авторĕ.

**Петр Павлович Ургалкин.**

1920 çулхи çу уйăхĕн 15-мĕшĕнче Ульяновск облаçĕнчи Çинкĕл районĕнчи Ялавăр ялĕнче çуралнă.

1937-40 çулсенче — Ульяновскри И. Я. Яковлев ячĕллĕ педучилище студенчĕ. 1940 çулта финн вăрçине хутшăнать. 1941-43 çулсенче вăрçăра летчик пулса çапăçать.

1946-66 çулсенче Самар облаçĕнчи Безенчук районĕн сутĕс пайĕн инспекторĕ, заведующийĕ.

1966-77 çулсенче — Тольяттири педучилище преподавателĕ.

Мускаври педагогика институчĕн художествăпа графика факультетĕнчен куçăн мар вĕренсе тухнă.

Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕн кавалерĕ.

Чăваш халăх ăсчахĕ.

Чăваш наци культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.

Нумай выставкăна хутшăннă.

Çĕнĕ Ульяновскра пурăнать.

**Анатолий Алексеевич Еграшкин.**

1953 çулта Чăнлă районĕнчи Каша ялĕнче çуралса уснĕ.

Шупашкарти techинститутра художествăлла графика факультетне пĕтерне.

Пĕтĕм Раççейри "Школа, учитель и искусство" конкурсăн дипломанчĕ.

Тăван ялĕнче проект хатĕрлесе чиркӳ тăвас ĕçе ертсе пынă.

Тĕрлĕ выставка хатĕрленĕ.

**Александр Петрович Власов.**

1937 çулта Чăнлă районĕнчи Кунтикав ялĕнче çуралнă.

1958 çулта Мускаври халăх пултарулăх университетĕнчен вĕренсе тухнă.

1971 çулта Шупашкарти патшалăх пединститутне пĕтернĕ.

Н. В. Овчинников профессор мастерскойĕнче вĕреннĕ. Нумай выставкăна хутшăннă. Ун картинисем ют çĕршывсенче те упранаççĕ.

Петр Семенович Картюков.

1925 çулхи çĕртме уйăхĕн 10-мĕшĕнче Чăнлă районĕнчи Кивĕ Улхашра çурална. Хай тĕллен вĕреннĕ ӳкерӳсĕ. 1984-2000 çулсенче пурĕ 94 пысак картина ӳкернĕ Мускавра, Владимир-Суздальте, Шупашкарта, Ульяновскра тата ытти çĕрте выставкăсем йĕркеленĕ. Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ. Вилнĕ.

**Николай Федоров.**

Чăваш Республикинче Йĕпреç районĕнче çуралса ӳснĕ.

Шупашкарти художество училищинче пĕлу илнĕ.

Самарта техникумра вĕреннĕ чухне паллă ӳкерӳсе мастерскойĕнче ĕçленĕ.

Ульяновскра тата Димитровградра выставкăсене хутшăннă.

**Галина Георгиевна Елисеева.**

Тутарстан Республикинчи Пăва районне кĕрекен Чăваш Киштек ялĕнче ҫуралнă. 1982 ҫулта Шупашкарти педагогика институчен художествăпа графика факультетне куҫăмсăр майпа пĕтернĕ. Студент чухнех керамикăпа кăсăкланнă. Диплом ĕҫĕ валли те вăл шахмат хăмипе кӳлеписене тăмран ăсталанă.

Галина Георгиевна Сĕнĕ хулари ачасен пултарулăх центрĕнче керамика кружокне илсе пырать. Тăмран Дымка, Гжель теттисене ăсталама вĕрентет. Юлашки ҫулсенче чăваш тумлă хĕрарăмпа арҫын кӳлеписене ăсталать. Унсăр пуҫне йывăҫран тунă япаласене Шестово мелĕпе илемлетет.

Ульяновскра иртекен куравсене хутшăнать.

Ĕҫри ҫитĕнусемшĕн ăна нумай хутчен дипломпа, Хисеп грамотипе наградăланă.

**Чăваш чиркĕвĕ**

10 ҫул ĕнтĕ Ульяновскра, Яковлев шкулĕн территоринче, чăваш чиркĕвĕ ĕҫлет. Ҫĕнĕрен чĕртсе таратма ҫăмăл пулман ăна.

Акă мĕн аса илет ун пирки Петр Сидоров (1997, юпа уйăхĕн 11-мĕшĕ, 41№): "Чиркĕве ҫӳреме эпĕ пĕрре те пăрахман. И. Я. Яковлев шкулне те чĕртсе ярас шухăш ҫуралчĕ. 1988 ҫулта ҫак ыйтупа СССР Верховнăй Советне ҫыру ятăм. Унти ҫынсем ку ҫырăва вырăнти влаҫа тавăрса панă. Нимĕн усси те пулмарĕ. 1989 ҫулта раштавăн 24-мĕшĕнче православи обществи йĕркелесе ятăмăр. Ку ĕҫре М. Крлыковпа А. Пешне пысăк тăрăшулăх кăтартрĕҫ. Чăваш шкулĕнчи чиркĕве уҫас пирки СССР Президентне М. Горбачева ҫыру ҫыртăм, вырăнти влаҫ чăрмантарнине пĕлтертĕм. Ку текст каярах Францире тухакан "Русская мысль" журналта та пичетленчĕ. Радиопа шавах "Голос Америки" итлеттĕмччĕ. Тĕн пирки те сăмах пыратчĕ унта. Чăваш чиркӳне уҫма чăрмантарни ҫинчен Вашингтона ҫырса пĕлтертĕм. Ман ҫырăва радио редакцинчен Нью-Йорка ярса панă. Виҫĕ эрнерен Илларион епископран хурав илтĕм. Унта вăл хăй телефонне те ҫырнăччĕ. Шутласа тăмасăрах сыхăну уйрăмне кайрăм, 60 тенкĕ тӳлесе 10 минутлăх калаҫу заказ патăм. Телефонпа Илларион епископа пĕтĕм ларутăрăва каласа патăм, пулăшу ыйтрăм. Вăл Швецирен

чăвашла Евангели кĕнекисене ярса пама сăмах пачĕ. Каярах вĕсене Шупашкара ячĕç. Эпир Евангелие унта каиса илтĕмĕр. Нью-Йоркпа телефонпа тепре сыхāнасшăнччĕ — памарĕç. Çырусем те кайми пулчĕç. Шăмăрша кайса яма тӳрĕ килетчĕ. Сапах та тăрăшни сая каймарĕ. Тура пулăшнипе чăваш чиркуне усрăмăр. 1993 çулхи чӳк уйăхĕн 1-мĕшĕнче пĕрремĕш кĕлĕ иртрĕ. Эпĕ мĕнле савăннине сăмахпа каласа пама çук". /38/



А.Дмитриев тата
Йгнатий игумен

Чиркеве священник пулма Илия аттене (Илья Николаевич Григорьев) чĕнсе илессĕ. Вăл ун чухне Ленинградри тĕн академинче пĕрремĕш курсра вĕреннĕ (маларах çак хуларах тен семинарине пĕтернĕ). Академири вĕренĕве вара священникан экстерн майепе тăсма тӳрĕ килет.

1997 çулта Илия атте тĕн академинчен ăнаçлă вĕренсе тухать (пирĕн облаçра ун пекки халиччен пĕр сын ççчĕ — Прокл епископ).

"Канашра" (1997, 33№) пичетленне интервьюра Илия атте акă мĕн каласа парать: "Служба кашни шăматкунпа вырсарникун, кашни Тура праçникенче иртет. Кĕлĕсене чăвашла та, вырăсла та вулатпăр. Кашни килмессерен çĕне çынсене куратăп. Пирĕн пата таçтан та килессĕ сав шутран кӳршĕ республикăсенчен, облаçсенчен те. Тĕрлĕ наци çыннисем пур, мĕншĕн тесен Тура çынсене чĕлхесем сине пайламасть. Ман пата учительсем кĕлтума çурессĕ. хăйсем вĕреннине вара шкулта ачасене парассĕ. Ку лайăх пулăм

Ачасенче ырлăх вăрлăхĕ акмасан пирĕн общество усалланса каять. Пĕр-пĕрне усал тунипе вара малалла каяймăн [...] Чĕмпĕр çĕрĕ çинче чăваш чиркĕвĕ, чăваш хасачĕ пурришĕн савăнатăп. Вĕсем нихăçан та ан хупанччăр тесе кĕлтăватăп [...] Унта ĕçлекенсене, вулакансене ырлăх-сывлăх сунатăп, пиллетĕп". /39/

Каярах Илия аттене сĕнĕ сан параççĕ — иероманах

Тĕн йĕркисемпе килĕшсе ун ятне те улăштараççĕ. Унăн чиркÿри хальхи ячĕ — Игнатий. Санĕ — игумен.

**Медицина**

Сывлăха сыхлас ĕçре паян Ульяновск облаçĕнче çакăн пек лару-тăру. Чирсен кăтартăвĕсемпе эпир Раççейри вăтам цифрăран иртсе кайнă. Сăлтавĕ — пурнăçăн социаллă шайĕ пĕчĕк пулнинче. Кăштах цифрăсем. Юлашки вунă çулта ача çураласси 1,6 хут чакнă (Раççейре 1,3), ачасен шучĕ — тăватă процент. Пурнăç тăршшĕ 69 çултан 65 çула ансаларнă. Уйрăмах арçынсем сахал пурăнаççĕ — 59 çул (малтан — 63). Ача пăрахассин шучĕ ÿссе пырать. 19 çула çитмен вунă йывăр хĕрарăмран çиччĕшĕ çак çул çине тăрать. Сăлтавне маларах асăнтăмăр ĕнтĕ.

14 çула çитмен ачасен хушшинче чирлесси 22,4 процент ÿснĕ, 15-17 çулхисен хушшинче — 84. Кадрсен ыйтăвĕ те çивĕч тăрать. Халиччен Ульяновск облаçĕнче врачсем хатĕрлемен. 15 çул каялла патшалăх университечĕ уçăлчĕ кунта, медицина факультечĕ те пур. 10 çул каялла пĕрремĕш врачсем тухрĕç унтан, анчах вĕсем пульницасенче çав-çавах çитмеççĕ.

Акă "Канашăн" 2000 çулхи 36-мĕш номерĕнче мĕн вулатпăр: "Участок врачĕн ĕçне çăмăл теме çук [...] Е. П. Лобанчикова ку ĕçре 1993 çултанпа [...] Чăваш патшалăх университечĕн медицина факультетне пĕтернĕ хыççăн шăпа ăна Ульяновск тăрăхне илсе çитерет". Малалла Елена Петровна хăйĕн ĕçĕ çинчен çапла каласа парать: "Чăваш Республикинче врачсем нумай, ĕç тупма йывăртарах. Çавăнпа Ульяновска килсе лекрĕм. Кунта вара ĕç-пуç пач урăхла: врачсем çитмеççĕ. Участокра 1200-1500 çын пулмалла. Манăн вара — 6000 çын. Паллах, ĕлкĕрме питĕ йывăр. Кашни кун 5 сехет поликлиникăра чирлисене йышăнатăн, вăтамран 30-35 çын кĕрсе тухать. Ун хыççăн хулана тухса каятăн, 12 çын патне çитмелле (ку план) [...] Çитменнине, шыçă чирĕпе тата туберкулезпа аптракансен йышĕ ÿссе пырать. Паллах, тием пысăк, 3 çыншăн ĕçлетĕп [...] Пулăшу кирлĕ —васкатăн, эсĕ каймасан — кам?" /40/

Тата çакна хушма пулать. Халĕ 1-мĕш хула поликлиникинче 18 участок. Унта 7 врач çÿрет. Иккĕшĕ — пенсионер тата инвалид — пĕрер участок çеç илнĕ. Ытти пиллĕкĕшĕн 16 участока çитсе ĕлкĕрмелле куллен! Вăт çакăн пек лару-тăру.

Ку жулара-ха, область центрĕнче. Ялсене вара врачсем пачах каясшăн мар. Унта яланах акушер-гинекологсем, терапевтсем, хирургсем çитмеççĕ. Çавăнпа та Ульяновск патшалăх университетĕнче ял медицини факультетне уçма палăртнă. Унта кĕрекенсене тата вĕренекенсене çăмăллăхсем пама йышăннă.

Чăвашсене илсен — паллă врачсем пур облаçра. Чи малтанах унта Е. Фурашова ятне асăнмалла. Вăл Раççей Федерацийĕн тава тивĕçлĕ тухтăрĕ, Ульяновск облаçĕнче неврологи уйрăмне уçаканĕ. Çак уйрăма паян та (82 çулта!) ертсе пырать. Пурĕ медицинăра 59 çул вăй хунă. Ун ятне Ульяновск облаçĕн Хисеплĕ Ылттăн Кĕнекине çырса хунă (чăвашсенчен пĕррремĕш).

Çаплах аслă категориллĕ Н. Юдин хирург çинчен те пĕлессĕ вулакансен. Вăл Ульяновскри чукун çул пульницин хирурги уйрăмĕн пуçлăхĕ. 30 çула яхăн ĕнтĕ вăл сывлăх хуралĕнче.

Н. Погодина — аслă категориллĕ врач, гематолог, облаçри пĕрремĕш пульницăри гематологи уйрăмĕн пуçлăхĕ. 26 çул вăй хурать унта. Çакна та калаçа хăвармалла: пурĕ облаçра 5 гематолог кăна, вĕсенчен пĕри — Димитровградра.

А. Епрашкин Володарский ячĕллĕ машзаводăн санчаçĕнче 20 çул ытла хирургра ĕçлет.

Н. Рогов — чăн тухтăр, [illegible]. Ульяновскри 2-мĕш пульницăра вăй хурать. Медицинăра — чĕрĕк ĕмĕр ытла. Çаплах вăл "Канаш" хаçатăн штатра тăман корреспонденчĕ.

## Спорт

Спорт çинчен те "Канаш" тăтăшах çырса тăрать. Мухтама тивĕçлĕ ентешсем сахал мар пирĕн. Кĕскен те пулин асăнса тухăпăр чапа тухнă чăваш спортсменĕсене.

Н. Дмитриев, Унтăрти лицей вĕрентӳçи, спорт ветеранĕ. Вăл 200 тата 400 метра чупассипе ветерансен хушшинче темиçе хут та СНГ, Раççей чемпионĕ пулнă. Çак ретрех Скугареевка ялĕнче пурăнакан П. Соловьев тăрать.

Н. Карпов тренер çинчен пĕтĕм тĕнчипе пĕлеççĕ. Вăл чупакансене хатĕрлет. Ун воспитанникĕсем чи пысăк турнирсенче çĕнтерме пултарнă. Вĕсенчен пĕри — Кивĕ Улхашра çуралса ӳснĕ Н. Керимов. Вăл 1992 çулта Раççей

сборнăйне лекет, тĕнче класлă спорт маçтăрĕ пулса тăрать. Пĕтĕм тĕнчери икĕ марафонта çĕнтерет. Йывăр аварие лекнĕ хыççăн (ăна тренировка вăхăтĕнче автомашина çапса хăварать) тепĕр хут пысăк спорта таврăнса çакăн пек ситĕнÿсем туни — хăех паттăрлăх.

Н. Тимряков та çак тренер патĕнче вăрăм дистанцисене чупать, пысăк çитĕнÿсемтăвать, ултă çул СССР сборнăйĕн чысне хÿтĕлет. РСФСР халăхĕсен спартакиадин чемпионĕ (çамрăксен хушшинче, 1971). Пĕтĕм Союзри студентсен вăййисен чемпионĕ (1973). Раççей чемпионĕ, çичĕ хутчен призер (1974-1978). Варшава Договорĕн туслă çарĕсен чемпионĕ (1978). 16 хутчен область чемпионĕ.

С. Казаков ячĕ те тĕнчипех паллă. Ашшĕ-амăшĕ чăваш, Ульяновскра çуралнă. Халĕ Димитровградра пурăнать. 27 çулта. Тава тивĕçлĕ спорт маçтăрĕ. 48 килограмлă виçери боксер. Икĕ хутчен Европа чемпионĕ (1998, 2002). Пĕтĕм тĕнчери Ырă кăмăллăх вăййисен бронза призерĕ (1998). Пĕтĕм тĕнчери çар çыннисен вăййисен чемпионĕ (1999), ултă хутчен Раççей чемпионĕ (1996, 1998, 1999, 2001, 2002, 2003). Раççей Кубокĕн хуçи (2000). Боксла 16 çул вылять. Пурĕ 300 ытла вăйă иртнерĕ. 250 ытла хут çĕнтернĕ. Тĕнче чемпионатне тата Сиднейри Олимпиадăна хутшăннă.

А. Михайлов — кире пуканĕ йăтакан. Тĕнче шайĕнчи спорт маçтарĕ. 1994 çулта Мускаври иртнĕ Пĕтĕм тĕнчери ĕç çыннисен турнирĕн чемпионĕ. 80 килограмлă спортсмен икĕ хутчен Раççей чемпионĕ тата виçĕ хут Чăваш Ен чемпионĕ пулнă. Вунă çул ытла ĕнтĕ Ульяновск ял хусалăх академийĕнче тренерта ĕçлет.

А. Салюков — кикбоксинг енĕпе Раççей сборнăйĕн аслă тренерĕ. Ульяновскра пурăнать. 18 çулта спорт маçтăрĕн шайне çитет. СНГ Универсиадин çĕнтерÿçи. 11 спорт маçтăрĕ хатĕрленĕ. 2001 çулта Грецире иртнĕ тĕнче чемпионатĕнче ун вĕренекенĕсем малти вырăнсене сĕнсе илнĕ.

Димитровградра пурăнакан Г. Улюкин 1960-мĕш çулсен пуçламăшĕнче Златоуст хулинче пурăннă, шахмат кружокĕ ертсе пынă. Çавăнта пĕчĕк Толя Карпов çÿренĕ, каярахпа тĕнче чемпионĕ пулса тăнăскер.

“Ун чухне вăл тăххăртаччĕ. Пĕрремĕш хут ман ума

пĕчĕк те имшер, шуранка сăнлă ача тухса тăчĕ [ ] Тольăпа эпир темиçе парти вылярăмăр. Çакна турех ăнланса илтĕм: арçын ача шахмат вăййинче чăннипех те ăнкарать. Вара эпĕ ăна командăна илме шутларăм. Ашшĕпе амăшĕ чирлекелесе тăракан ывăлне ярасшăнах та марччĕ, анчах та эпĕ вĕсене пурте йĕркеллех пулать тесе лăплантартăм. Тепĕр икĕ уйăхран, 1961 çулхи январь уйăхĕнче, эпир облаçри амартăва тухса кайрăмăр. Толя финалта çĕнтерÿçĕ ятне çĕнсе илчĕ, хăйĕнчен темиçе çул аслисене те маххă памарĕ.

Килне таврăнсан Толя Карпов амăшне манпа ăмăртусене çÿреме кăмăл çуккине каласа панă. Сăлтавĕ... Тренер ăна тăраниччен çиме, ытларах уçă сывлăшра пулма, вăхăтра çывăрма выртма хистет иккен. Кун хыççăн Карповсем ывăлне пĕр кулянмасăр манпа ăмăртусене яратчĕç, — аса илет Геннадий Петрович пулас тĕнче чемпионĕпе аппаланна тапхăра ("Канаш", 2002, 15№). /41/

1977 çулта Мускавра пулса иртнĕ Европа чемпионатĕнче тренерĕпе вĕренекене тел пулассĕ. А. Карпов тренерне палласа илет, автограф парать.

Г. Улюкина 2000 çулта облаçри ача-пăча тренерĕсен хушшинче (шахмат енĕпе) "Чи лайăххи" ята панă.

Н. Кужаков.

1965 çулта Чăнлă районĕнчи Анат Тимĕрсен ялĕнче çуралнă.

Кикбоксер. Икĕ хутчен Раççей чемпионĕ (1990, 1991), СССР чемпионĕ (1990), икĕ хутчен Еврази чемпионĕ (1992, 1993). Спорт маçтăрĕ.

Облаçри кикбоксинг федераци президенчĕ.

Сакăр хут патшалăх наградине илме тивĕçлĕ пулнă, Афганистан вăрçи витĕр тухнă.

В. Кузьмин.

Димитровградра çуралнă. Пăр синче мечĕкпе хоккейла выляса 1989 çулта спорт маçтарĕ пулса тăнă. Раççей чемпионачĕн призерĕ.

А. Пртюков.

1976 çулта Чердаклă районĕнчи Колхознăй поселокĕнче çуралнă.

пăча пултарулăх центрĕн тренерĕ С. М. Краснов нумай вăй хучĕ. Вăл çак ăмăртăвăн пуçаруçи пулчĕ.

Ку ĕç вара çапла пуçланнă. 2000 çулхи çу уйăхĕнче С. Краснов пуçарăвне ырласа Ульяновск облаçĕнчи кик-боксинг федерацийĕн президенчĕ Н. Кужаков чăваш кĕрешĕвĕн секцине уçма пулăшать. Кĕрешӳçĕсем Ульяновскри Гончаров урамĕнчи 28-мĕш сурта пухăнса тренировкăсем иртеме тытăнаççĕ. Ку ĕç
С. Краснов тӳлевсĕрех хăй çине илет.

Çак çулах (çурлан 25-мĕшĕнче) Засвияжски районти 2-мĕш ача-пăча пултарулăх центрĕнче чăваш кĕрешĕвĕн секцийĕ уçăлать (55-мĕш шкул никĕсĕ çинче). Тренер-педагог — С. М. Краснов. Çакна палăртмалла: 55-мĕш шкул (директорĕ В. А. Мозжухина) Атăлçи халăхĕсен культурине аталантарас тĕлĕшпе ĕçлет.

2000 çултах "Тайфун" ятлă ача-пăча спорт клубĕ (обществăлла организаци) ĕçлеме пуслать. Ăна сулерех асăннă тренер-педагог ертсе пырать.

## III СЫПĂК. "КАНАШ" ХАÇАТ АВТОРĚСЕН ĂСТАЛĂХĚ

**Жанрсем**

Илемлĕ литература хайлавĕсен тĕрлĕ тĕсĕсем авалтанах палăрнă пулсан журналистикăри жанрсен ĕмĕрĕ вăрăмах мар-ха. 200-300 çул каялла хаçатсем тин тухма пуçласан пĕтĕм материалсене пĕр евĕрлĕрех сырса кăтартнă. Малалла вара фактсене çырса кăтартни çеç вулакана тивĕçтерейместь, тишкерсе çырни кирлĕ пулать.

Пичет вайĕ питĕ пĕлтерĕшлĕ, ун урлă уйрăм çын пĕтĕм тĕнчепе çыхăнса тăрать. Хальхи вăхăтра пирĕн хаçатсенче материалсем тĕрлĕ жанрпа пичетленеççĕ. Мускав университечĕн журналистика факультетĕнчи тĕпчевçĕсем палăртнă тăрăх, публицистика жанрĕсене виçĕ ушкăна пайлама пулать:

1. Пĕлтерӳ жанрĕсем;
2. Тишкерӳ жанрĕсем;
3. Илемлĕ публицистика жанрĕсем.

Расçейре XVIII ĕмĕрччен нимле хаçат та пулман. Пĕрремĕш Петĕр патша пуçарнипе 1702 çулта "Ведомости" кăларма тытăнассĕ. Жанрсем, паллах, пурте пĕр харăс пулса тăман, сыпăкăн-сыпăкăн аталаннă. Чи малтан кĕскен те ансат çырнă заметка çуралнă. Материалсем ятсăрах пичетленнĕ. Хаçат ĕçĕ вăй илсе пынă май çĕнĕ хыпар — корреспонденци çуралнă. Пысăк ыйтусене сӳтсе явма, татса пама вара статья кирлĕ пулнă. Малалла очеркпа тĕрленчĕк жанрĕсем палăрассĕ, вĕсем хыççăн репортаж сарăлать. Отчет, интервью, рецензи, фельетон жанрĕсем пысăк вырăн йышăнаççĕ.

Чăваш пичетĕнче жанрсем вырăс журналистикин традицийĕсен никĕсĕ çинче аталаннă. Чăваш журналистикине пуçласа янă "Хыпар" хаçатăн (1906-1907 ç.ç.) пĕтĕм номерĕсем нумай жанрсемпе палăрса тăраççĕ. Чăвашсен кĕске, ансат, кăткăс жанрĕсем пурте пĕр вăхăтра çуралса аталаннă.

Пĕлтерӳ жанрĕсем

Вĕсем пурĕ тăваттă: заметка, отчет, интервью, репортаж. Ку жанрсен пĕлтерĕшĕ пысăк.

1. Заметка. Калăпăшĕ пĕчĕк, пĕлтерĕшĕпе пысăк. Кашни

номертех йышлă пичетленет. Хăçан, ăçта, мĕн — çак висĕ ыйтăва хуравлать заметка. Çĕнĕ фактсене кăна хыпарлать.

Критикăлла заметкăра автор çитменлĕхсене уçса кăтартать, айăплине палăртать. Çакăн пек заметкăсем ĕçри, пурнăçри йĕркесĕрлĕхсене пĕтерме пулăшаççĕ.

Заметка тĕсĕсем тĕрлĕ пулаççĕ: чĕнсе каланине хурав пани (заметка-отклик), хăвăн шухăшна кĕскен пĕлтерни (заметка-мнение), хирĕçлесе калани (заметка-реплика) сĕнÿллĕ тата ыйтуллă заметкăсем тата ытти те.

II. Отчет. Вĕсем пухусемпе конференцисем мĕнле иртнине каласа параççĕ, тĕрлĕ ларусемпе, тĕлпулусемпе, демонстрацисемпе паллаштараççĕ. Отчетăн тĕп тĕллевĕ — çак пулăм çинчен ăнланмалла каласа парасси, вĕсен обществăлла-политикăлла пĕлтерĕшне палăртасси.

Çак жанрăн тĕсĕсем виçĕ тĕрлĕ:

1. Пĕлтерÿллĕ турĕ отчет;

2. Пĕр темăпа çырнă тишкерÿллĕ отчет;

3. Пысăк ыйту хускатакан отчет.

III. Интервью. Журналист пĕр-пĕр палла сынпа каласни

Интервью тĕсĕсем.

1. Интервью — монолог. Каласа панине çырса илни. Çакăн пек материал хăйĕн формипе тепĕр чухне корреспонденци е статья патнех çывхарать.

2. Интервью-диалог. Йĕркипе, черетпе парса пына ыйтусене черетпе хуравлани.

3. Интервью-терленчек. Калаçу содержанийĕнe перле тĕлпулу мĕнлерех иртнине, каласа паракан хăйне тытнине палăртаççĕ. Шалти туйăмсене уçса пани те пулать.

4. Коллективлă, массăллă е ушкăнпа ирттернĕ интервью. Вĕсене тĕрлĕ пресс-конференцисем хыççăн çыраççĕ.

IV. Репортаж. Ун никĕсĕнче — факт, пурнăçри паллă событи, обществăлла пĕлтерĕшлĕ пулăм, аталану, çĕнĕлĕх. Репортажра оперативлăх пысăк вырăн йышăнать, вăл пурнăçăн пĕр вăхăтне кăтартма, хак пама тивĕç.

Репортаж тĕсĕсем

1. Событиллĕ, пулăмлă репортаж. Обществăлла пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç, событи çинчен тÿрех, оперативлă çырнă репортаж. Сăмахран, çуракине тухни çинчен.

2. Пĕлтерекен репортаж. Калăпăр, музейран, пĕр-пĕр лабораторирен. Оперативлăх пулмасан та пултарать.

3. Пысӑк ыйту хускатакан репортаж. Обществӑри ҫивӗч ыйтусене хускатать, татса пама тӑрӑшать.

Тишкерӳ жанрӗсем

Вӗсем содержани енчен анлӑрах, тӗплӗнрех, тишкерӳллӗ. Пулӑмсемпе фактсене пур енчен те тимлӗн пӑхса тухни кирлӗ. Ыйтусене татса памалли майсене кӑтартаҫҫӗ.

Тишкерӳ жанрӗсен ушкӑнне ҫаксем кӗреҫҫӗ: корреспонденци, статья, рецензи, обозрени, хаҫат-журнала пӑхса тухни (пичет обзорӗ), ҫыру.

I. Корреспонденци — публицистикӑри тӗп жанрсенчен пӗри. Ҫӗнӗ пулӑмсене, малти опыта анлӑн сарма, малалла кайма чӑрмантаракан ҫитменлӗхсене уҫҫӑн палӑртать, питлет. Темиҫе факта пӗлтерет, вӗсене тишкерет, пӗтӗмлетет. Корреспонденци тӗсӗсем.

1. Пӗлтерӳллӗ корреспонденци. Заметкӑна ҫывӑх, анчах нумай фактпа, анлӑхпа уйрӑлса тӑрать. Корреспондецире темиҫе событи пулма пултарать.

2. Тишкерӳллӗ корреспонденци. Пурнӑҫа тимлӗн тишкерет, пӗтӗмлетет, ҫивӗч ыйтусем ҫӗклет. Ҫитменлӗхсем сиксе тухнин сӑлтавӗсене кӑтартать. Рейд материалӗсем ҫак жанрпа пичетленеҫҫӗ.

3. Пысӑк ыйту хускатакан корреспонденци. Кунта ҫав тери ҫивӗч ыйтусем ҫӗкленине палӑртмалла. Ҫывӑх вӑхӑтра татса памалли проблемӑсем лартать автор, тишкерет, пӗтӗмлету тӑвать.

II. Статья. Журналистикӑри тӗп жанр. Ҫивӗч ыйтусем кӑларса тӑрататать, фактсемпе пулӑмсене тӗплӗнрех тишкерет. Статьяра пӗр-пӗр пулӑма ытти фактсемпе ҫыхӑнтараҫҫӗ, статистикӑпа усӑ кураҫҫӗ.

Статья тӗсӗсем.

1. Умстатья. Хаҫат номерӗ унпа уҫӑлать. Редакци ятӗнчен панӑ е автор ҫырнӑ умстатья пулма пултарать. Хаҫатӑн ҫул-йӗрне палӑртать, вулакана тӗллевсемпе паллаштарать.

2. Теорилле статья. Пӗр-пӗр теорие анлӑн сарма пулӑшать.

3. Пысӑк ыйту хускатакан статья. Общество аталанӑвӗ ҫинчен пӗлтерет.

4. Паянхи кун ыйтакан темăпа çырнă статья. Темисем: промышленноçа, ял хуçалăхне аталантарасси, çамрăксене тĕрĕс воспитани парасси, мораль. Малти опыта сарма пулать ку жанрпа.

III. Рецензи. Вăл хайлав содержанийĕ çинчен кĕскен каласа парать, тишкерет, хак парать, ун пĕлтерĕшне палăртать, çитменлĕхсене критиклет.

IV. Обозрени — хăвăрт чупакан вăхăтăн, паянхи пурнăçа тĕрĕс ăнланма пулăшакан жанр. Тĕрлĕ темăпа çырнă обозренисем пулаççĕ.

Обозренисене виçĕ ушкăна пайлама пулать:

1. Пĕлтерӳллĕ;
2. Тишкерӳллĕ;
3. Илемлĕ публицистикăлла.

Çырусене пăхса тухни те обозрени пулать.

Хаçат-журнала пăхса тухни. Тĕллевĕ — редакци коллективне пулăшасси, хаçатăн шайне сĕклесси, журналистсен ăсталăхне ӳстересси.

Пĕтĕмĕшле обзорта хаçата тапхарпа пăхса тухаççĕ (çулталăк, çур çул, квартал, уйăх).

Тематикăлла обзорта уйрăм ыйтăва, темăна мĕнле çутатса пынине тишкереççĕ.

Çыру жанрĕнче халех тумалли ыйтусене кăларса тăратаççĕ. Автор хăйĕн хуйхи-суйхине пĕлтерет. Корреспонденци жанрне сывăх.

Илемлĕ публицистика жанресем

Кунта очеркпа тĕрленчĕк тата фельетонпа памфлет кĕреççĕ. Çак жанрсенче художествăлла тата публицистикăлла çырса кăтартасси пĕр-пĕринпе пĕрлешеççĕ. Очеркла тата сатирăлла жанрсем çынсен шухăш-кăмăлне, шалти туйăмĕсене, чун-чĕрине лайăхрах уçса пама май параççĕ. Фактсем иккĕмĕш вырăна куçаççĕ. Чи мала автор фактсем çине мĕнле куçпа пăхни, пулăмсене мĕнлерех хак пани тухса тăраççĕ. Кунта фактсене пĕтĕмлетсе, сăнарласа кăтартаççĕ.

Очерк тĕсĕсем:

1. Портретлă очерк. Çын шухăш-кăмăлне, характерне кăтартса парать.

2. Событиллĕ очерк. Пĕр-пĕр обществăлла пĕлтерĕшлĕ событие хутшăннă чĕрĕ çынсем синчен çырнă очерк.

3. Çулçӳрев очеркĕ. Çул çинче тĕл пулнă çынсем, каласа панине пулăмсене çырса кăтартни. Пулăмсен анлăшне кăтартмалла. Социаллă, наукăлла ыйтусене уçса памалла.

4. Пысăк ыйту хускатакан очерк. Воспитани пĕлтерĕшĕ пысăк. Çакăнта критика та пулма пултарать.

Фельетонпа памфлет.

Сатира жанрĕсенчен анлăрах сарăлни — фельетон. Пурнăçри ситменлĕхсене, общество йĕркине пăсаканссене тăрă шыв çине кăларать вăл. Çак жанр çиллес, хаяр пулмалла. Сăнлăхне ӳстерсен те пулăмсемпе фактсене пысăклатса кăтартмалла мар. Пулни-иртни çинчен тивĕçлĕ документсене тĕплĕн пăхса тухмалла. Фельетон икĕ тĕрлĕ пулать: адресли, адрессĕрри. Адресли чăн-чăн документсем çирĕплетнипе палăрать. Адрессĕр фельетона пĕрлештернĕ пулăмсемпе, пĕтĕмлетнĕ сăнарпа тăваççĕ.

Памфлет – çивĕч сюжетлă сатира жанрĕсен тепĕр паллă тĕсĕ. Вăл киревсĕррине, сиенлине, хăрушшине сунтарсах ярать, тăшмана вĕлересле питлет.

## "Канаш" хаçатри материалсен чĕлхипе стилĕ

"Публицистика вăл общество пурнăçне, политикăна пур енлĕн, фактсемпе чăн пулса иртнĕ пулăмсем çине таянса, çав вăхăтрах наукăпа илемлĕ литературăн элеменчĕсемпе туллин усă курса çутатакан литературăн хăйне евĕр уйрăм тĕсĕ. Пурнăç ытла та хăвăрт аталаннăран ăна вăл вăхăтра тата хăвăрт, тĕрлĕ енчен хак пама тăрăшать. Çакна тума журналистикăн витĕмлĕ мелĕсем пур". /42/

Çапла хак парать публицистикăна Чăваш патшалăх университетĕнчи журналистика факультечĕн деканĕ А. Данилов доцент. Тĕрĕсех. Мелсем те чылай. Хăш вăхăтра мĕнлипе усă курасси вара журналистăн ăсталăхĕнчен, тавçăрулăхĕнчен килет. Çакна çеç манса каймалла мар вăл: шухăшсене наукăран илнĕ логика принципĕсемпе усă курса ĕнентерме пултармалла.

Хаçатри материалсене мĕнле чĕлхепе тата стильпе çырни — пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çакăнтан журналист вулакансен чунне витерессе е витереймессе килет. Журналистăн пĕр вăхăтрах педагог та, психолог та, социолог та... пулмалла. Пирĕн тĕп тĕллев — хамăр шухăша çынсем патне

тĕрĕс çитересси. Калаçу чĕлхинче те, çыру чĕлхинче те литература нормисене çирĕп тытса пымалла — ку пуплев тĕрĕслĕхĕ. Çаплах çырăвăн тасалăхĕ, логикалăхĕ, вырăнлăхĕ, пуянлăхĕ, сăнарлăхĕ пулмалла. Чĕлхе çынсене пĕр-пĕринпе хутшăнма, пĕр-пĕрин шухăшне ăнланма май паракан общество пурнăçне çăмăллатакан мел. Сăмахсемпе тĕрĕс усă курас тесен чи малтанах вĕсен чăн пĕлтерĕшĕсене лайăх пĕлмелле. Лексика, грамматика нормисене çирĕп пăхăнмалла. Çырăва хăш чухне пуплев тасалăхне пăсакан сăмахсене — варваризмсем — пĕр салтавсăрах кĕртсе яраççĕ. Хăш чухне логикалăх та çук. Сакă анлăрах тата ансăртарах пĕлтерĕшлĕ сăмахсемпе предложенире усă курма, сăмахсемпе сăлтавлăх енчен çыхăнтарма, хирĕçле пĕлтерĕшлĕ сăмахсемпе вырăнлă усă курма пĕлменнинчен, ăнлава ытлашши сарса янинчен килет.

Пуплев вырăнлăхĕ çыру чĕлхишĕн пысăк пелтерĕшлĕ. Кашни чĕлхере функциллĕ стиль текен ăнлав пур. Чăваш чĕлхинче илемлĕ литература, публицистика, официаллă ĕç, наукам стилĕсем аталаннă.

Хальхи литература чĕлхинче калаçу чĕлхипе кĕнеке стилĕ пуррине палăртаççĕ. Кĕнеке стилĕ хăй сакăн пек функциллĕ стильсене уйрăлать: наука, официаллă ĕç, публицистика, илемлĕ.

Хаçатра публицистика стилĕпе усă кураççĕ. Публицистика тĕллевĕ — хыпарласси тата халăха пĕр-пĕр шухăш витĕмĕ курессе. Ку стилĕн тĕп уйрăмлăхĕсенчен пĕри — обществăпа политика терминĕсемпе, лозунгла-плакатла сăмах майлашăвĕсемпе усă курни. Чĕмпĕр тăрахĕнчи анатри чăвашсем пурăнаççĕ. Çавăнпа та хаçат чĕлхинче анатри диалект палăрать. Мĕн каласан та хаçата вырăнти халăх валли кăларатпăр-çке. Литература норминчен çеç тухса каймалла мар.

Шупашкарта тухса тăракан хаçатсемпе танлаштарсан пирĕн хаçатра çак сăмахсем тĕл пулаççĕ: сĕре, пултăк, хĕсмет...

Пĕрремĕшĕ — наречи, "питĕ, "ытла", "çав тери" сăмахсен синонимĕ. Пултăк вăра "пултарулăх" сăмаха пĕлтерет. Виççĕмĕшĕпе "служба" сăмаха палăртатпăр Сăмахран, çар хĕсмечĕ. Ку сăмах архаизма тухма пуçланăччĕ ĕнтĕ, анчах А. Юман ăна пирĕн хаçат страницисенче çĕнĕ пурнăç пачĕ. Çаплах юлашки çулсенче

вĕрентӳçĕ, ертӳсĕ, кăларăм, ӳт-пуç йышши сăмахсем анлăн сарăлчĕç. Вĕсен вырăсла куçарăвĕсем çапла: учитель, руководитель, выпуск (е издани), организм. Çак сăмахсене чăвашла çырса хамăр чĕлхене хуллен вырăс сăмахĕсенчен тасатса пыратпăр. (Ăс'ахсем шутласа пĕлнĕ тăрăх, вĕсен шучĕ халĕ пирĕн чĕлхере 20 процента яхăн.)

“Канаш” хаçатăн тĕп жанрĕ — статья. Çаплах тĕрлĕ отчетсем, репортажсем чылай. Вĕсен тĕп уйрăмлăхĕ — вырăс чĕлхинчен çыру урлă кĕнĕ сăмахсемпе нумай уса курни. Тĕслĕхрен, 2001 çулхи çĕртме уйăхĕн 1-мĕшĕнче тухнă номерти “Медицинăра ӳсĕмсем кирлĕ” отчета илетпĕр. Вăл облаçри врачсен наукăпа практика конференцийĕпе паллаштарать. Пурĕ кунта 287 сăмах, вĕсенчен 67-шĕ вырăс чĕлхинчен кĕнисем (23,3 процент).

“Ӳнерĕн асамлă тĕнчинче” информацире пурĕ 74 сăмах, вĕсенчен 18-шĕ вырăссен (24,3 процент). “Манăн кукаçи” заметкăра вара (авторĕ М. Настина) 290 сăмахран 18-шĕ çеç вырăссен (6,2 процент). Çапла вара, пĕтĕмлетӳ тума пулать: официаллă мероприятисене çутатса панă материалсенче ыттисенчен вырăс сăмахĕсем тăватă хут нумайрах. “Пирĕн таврари кайăк-кĕшĕк” заметкăра (Н. Милюшкина) 153 сăмах, вĕсенчен виççĕшĕ çеç (викторина, конкурс, стена) вырăс чĕлхинчен кĕнĕ (1,9Є процент). Кунта акă мĕн курма пулать. Çут çанталăк çинчен эпир хамăр чĕлхепе тап-таса сырса кăтартма пултаратпăр. Наука, вĕрентӳ терминĕсем вара чăвашла йăлтах çук-ха. Савăнпа та вырăссеннипе усă курма тӳрĕ килет. Сăвăсенче те вырăс сăмахĕсем сахал, çук тесен те юрать. 2003 çулхи нарăс уйăхĕн 6-мĕшĕнче тухнă хаçатри “Шкула аркатма парас марччĕ” статьяна пăхса тухар-ха (авторĕ Н. Васильева).

Кунта калаçу Чăнлă районĕнчи Каша ялĕнче И. Я. Яковлев пуçарнипе уçăлнă шкул çуртне ишес шухăш йĕри-тавра пырать.

Автор хăй калас шухăш патне вулакана майĕпен, фактсене пĕр-пĕринпе çыхăнтарса илсе пырать. Малтан шкул историне кĕскен каланă. Кашара шкул 1895 çулта уçăлнă, вăл йывăç çуртра вырнаçнă. 1913 çулта И. Я. Яковлев пуçарнипе шкула хĕрлĕ кирпĕчрен купалаççĕ. Статья тытăмне автор малалла çапла тăсать: çак шкулăн пĕлтерĕшĕ пирки сăмах хускатать, фактсем илсе кăтартать. Ку шкул-

тан Ехрем Иванĕпе Владимир Сатай сыравçăсем. А. Д Уфимкин профессор, М. Г. Еграшкина артистка, сутă-илу министрĕ П. И. Овчинников тата ыттисем вĕренсе тухнине палăртать.

Акă конфликт аталанма пуçлать: 1971 çулта паллă вырăна тустарма тытăннă. "Хуçасем" тăрăшнипе виçĕ класлă шкул пулса юлчĕ. 1978 çулта веçех хупса хучĕç. Ачасемпе вĕрентекенсене Тутар Каши шкулне куçарчĕç. Ялăн пĕр вĕçĕнчен тепĕр вĕçне çитме пилĕк çухрăм. Асфальт сук. Ялăн тепĕр вĕçĕнче вырнаçнă ача садне, шкула çӳрекен ачасен нуши никама та шухăшлаттармасть", — çавăн пек йĕркесем пур унта./43/

Хăйĕн шухăшĕсене çирĕплетме автор кунта В. И. Ленин 1912 çулта каланă сăмахсене илсе кăтартать: "Уйрăм нацийĕн пур çыннине те тăван чĕлхене вĕренме условисем туса памалла". /44/ Вăйлă аргумент! Вулакана ĕнентерет, хăйĕн шухăшне курăмлăрах тăвать.

Акă конфликт хĕрсе çитет: "Паянхи кун ял хушшинче çӳрекен сас-хура чуна пăшăрхантарать. И. Я. Яковлев никĕсленĕ шкула çĕмĕрсе кирпĕчĕсене ял хуçалăх стройкине яма шутланă иккен. Ăста тĕрĕслĕх? Чăваш ялне, чăваш наци культурине тĕп тăвас шухăшсемпе пурăнакан çын анчах çапла тума пултарĕ. Каша шкулĕнче вĕреннĕ, аслă пĕлӳ илсе пĕтĕм тĕнчипех чапа тухнă, пысăк вырăнта ĕçлекен ентешĕмĕрсем Хамăртан култарни мар-ши ку?" /45/

Çапла вара, конфликта татса пама автор ентешĕсене чĕнсе калать, пулăшу ыйтать. Ял интеллигенцине, ветерансене вĕрентӳçĕсене хăйсен гражданла позицине кăтартма тархаслать. Юлашкинчен вăл çапла калать: "Чăваш халăхĕ Вĕрентекенĕмĕрĕн 155 çулхи юбилейне паллă тума хатĕрленет. Эпир, кашасем, мĕнле парнепе кĕтсе илĕпĕр-ши çак аслă уява?" /46/

Çак риторикăлла ыйтупа автор вулакан чун-чĕрине витересшĕн тăрăшать. Ку япала ун ăнăслă пулса тухать.

Апла пулсан статьяна çыраканĕ хăй калас шухăш патне вулакана илсе çитерме пултарчĕ, конфликт тĕшшине тупрĕ (вырăнти пуçлăхсем малашнехи синчен шутламанни, паянхи пĕчĕк усăллă ĕçе пула ыранхи пысăк тĕллеве курманни). Çакăнтах вăл конфликта мĕнле татса памаллине кăтартать — ял халăхĕн хăйĕн татăклă самахне харăссăн

каламалла, хӑйне пусмӑрлама ирӗк памалла мар.

"Шухӑшласа пӑхӑр-ха!" — текен риторикӑлла чӗнӳ те пур кунта

Статьяна пичете каяс умӗн редакцире тӳрлетсе йӗркеленӗ-ха. Ҫапах та вырӑс сӑмахӗсем сахал ку текстра: 395 сӑмахран 24 (6 процент). Ҫакӑ пӗтӗмлетӳ тума хистет: Н. Васильева ялта пурӑннине кура хӑйӗн тексчӗсенче вырӑс сӑмахӗсемпе сахал усӑ курать, чӑвашла ҫырма тӑрӑшать. Хулара пурӑнакансен ҫырӑвӗсенче вара вырӑс чӗлхин витӗмӗ пысӑкрах.

Юлашкинчен ҫакна палӑртмалла. "Канаш" хаҫат хӑш чухне анатри чӑвашсен чӗлхине ҫывӑхрах пулин те чӗлхе нормине йӗркеллӗ тытса пырать, пӑсмасть. Самана таппине туйса ҫӗнӗ сӑмахсемпе те усӑ курать, киввисене те ҫӗнӗ тӗс парать, публицистика стильне аталантарать.

## ПĔТĔМЛЕТÿ

Çапла вара, çÿлерех çырнисене пĕтĕмлетсе çакăн пек шухăш патне пырса тухатпăр: "Канаш" хаçат — Чĕмпĕр Ен чăвашĕсен пурнăçĕнче паян пысăк вырăн йышăнать. Вырăнти чăвашсен литературине, чĕлхине, культурине аталантарнă çĕрте вăл пысăк витĕм курет. Литература нормисене пăхăнса пичетленнĕ май чăваш литература чĕлхине аталантаракан тĕп хатĕр пулса тăчĕ. Çапла вăл Чĕмпĕр хутлăхĕнчи чăвашсен ăс-тăнне йĕркелесе тăрать.

"Канаш" йывăрпа çуралнă. Вăл тухасса влаçрисем шансах кайман. Çапах та чăваш хастарĕсем самана ăшăннипе усă курса хаçатăн пĕрремĕш номерне обществăлла майпа (чăвашла каласан — нимене пухăнса) кăларма пултарнă. Пĕрремĕш номертенех хасатăн чи çивĕч теми палăрать: вуншар çул тивĕçлĕ вырăнта пулман, сахал мар мăшкăл тÿснĕ чăваш чĕлхине шкулта вĕрентме тытăнмалла, хамăрăн тымарсем патне таврăнмалла. Кун пирки кашни номерте çырнă, мĕншĕн тесен халăхра наци ăнланăвне вăратса аталантармалла пулнă. Сав вăхăтрах "Канаш" Чĕмпĕр тăрăхĕнчи чăвашсен пурнăçĕн летописĕ пулса тăчĕ. Унта чăвашсем ирттернĕ е хастар хутшăннă кашни мероприяти çырăнса пынă.

"Канаш" вырăнта пурăнакан чăвашсене пĕр çĕре пуçтарма пултарчĕ. Ун йĕри-тавра интеллигенци явăçрĕ, тĕрлĕ ялтан хыпарсем килме тытăнчĕç. Часах пултарулла çынсем палăрчĕç: журналистсем, çыравçăсем, поэтсем, ÿкерÿçĕсем, юрăçсем... Вĕсем çинчен хаçат страницисенче тĕплĕн çырса кăтартнă. Апла пулсан хаçат хăйĕн тĕп ĕçне пурнăçларĕ: чăваш халăхĕ ыттисенчен нимĕнпе те кая мар, тăван чĕлхене çине тăрса вĕренмелле, культурăмăра аталантармалла тесе ĕнентерчĕ.

1997 çулта вырăнти чăваш сыравçисем "Шевле" литпĕрлешу йĕркелесе яни, 1920-21 çулсенче тухса тăна "Атăл юрри" журнала тепĕр хут кăларма тытăнни, "Шевле çути" альманах кун çути курни, темиçе автор хăйĕн кĕнекисене пичетлеме пултарни шăпах çак шухăша çирĕплетет. Урăхла каласан хаçат чăвашсен сутлăх йыхравçи пулса тăчĕ.

Çирĕм çул каялла сеç Чĕмпĕрте лару-тăру пачах урăхлаччĕ. Икĕ чăваш трамвай çинче тĕл пулсан чĕлхисене

хуҫкаласа вырӑсла калаҫатчӗҫ е тӑван чӗлхепе хӑлхаран хӑлхана пӑшӑлтататчӗҫ. Хула шкулӗсенче тӑван чӗлхе вӗрентесси, Ульяновскра акатуйсем ирттересси ҫинчен ӗмӗтленме те пултарайман. Халӗ ку пурнӑҫ чӑнлӑхӗ.

Ку чухне халӑх кӗнеке-журналтан писрӗ — те хакӗсем ҫыртаҫҫӗ, те пурнӑҫ пӗлтерӗшӗ улшӑнса пырать... Ҫавӑнпа та чылай чухне хаҫат ҫемьере пӗртен-пӗр вуламалли япала пулса тӑрать. Ҫакна шута илсе "Канашра" пурнӑҫӑн тӗрлӗ енне ҫырса кӑтартма тӑрӑшатпӑр. Мӗнле кӑна рубрика ҫук кунта: ача пӑча, ҫамрӑксем, салтака каякансем, ал ӑстисем, вӗрентӳсӗсем, ашшӗ-амӑшӗ, тӗне ӗненекенсем, пахчасӑсем, тутлӑ апат пӗҫерме юратакансем, таврапӗлӳсӗсем валли... Пысӑк ҫемьене пирӗн хаҫат ҫитсен унта кашни хаи валли усаллa тата вулама интереслӗ материал туптар тетпӗр. Вулакансен шухӑшне чи мала хуратпӑр. Мӗншӗн тесен халӗ ыйтусен самани, кашни ҫак пурнӑҫра хӑй вырӑнне тупасшӑн. Пирӗн пӗрремӗш тивӗҫ — вӗсене пулӑшасси. Ҫакӑ шӑпах ҫӳлерех каланипе килӗшсе тӑрать.

Редакцие сулсерен пин ытла ҫыру килет. Ҫакӑ хаҫатпа вулакан хушшинчи тачӑ ҫыхӑнӑва кӑтартса парать. Тӗрлӗ конкурссем, викторинӑсем, лотерея выйӑисем ӑна ҫирӗплетес тесе йӗркелетпӗр.

Ульяновск облаҫӗнче паян 122 хаҫат, 16 журнал тухать. Вӗсенчен виҫҫӗшӗ наци чӗлхипе: "Канаш", "Ӗмӗт" (тутарсен), "Ялгат" (мордвасен). Тӑтӑшах мар пулин те нимӗҫле те пичетленет — "Рундшау" (редакторӗ Е. Миллер). Вӗсен теллевӗсем пӗр еверех — хайсен халахӗсен культурине ҫӳллӗрех шая ҫӗклесси.

Ҫавӑнпа пӗрлех "Канаш" экономикӑпа производство ыйтӑвӗсене те айккине хӑвармасть. Промышленность комплексне 400 ытла пысӑк предприяти кӗрет, вӗсенче 160 пин ытла вӑй хурать. 1985 ҫултанпа "Авиастарта" сарлака фюзеляжлӑ тата ытла та йывӑр транспорт тата пассажир самолечӗсем тума тытӑннӑ. Тӗнчере ун евӗрлисем ҫук. Область суту-илу 69 сӗршывпа тӑвать. Чӗмпӗрте тӗнчери чи пысӑк авиакомпанисенчен пӗри — "Волга-Днепр" вырнаснӑ. Атӑл урлӑ хывакан ҫӗнӗ кӗперӗн вунӑ сыпӑкне вырнаҫтарнӑ, тата 14 юлнӑ.

Ҫаксем пирки "Канаш" хӑйӗн вулаканӗсене хыпарласах тӑрать.

Сапах та чи анлӑ тема — чӑваш юхӑмӗнчи ӗҫсем. И.

Я. Яковлев ячĕллĕ общество, чăвашсен обществалла канашĕ. Ульяновск облаçĕнчи чăвашсен наципе культура автономийĕ ирттерекен мероприятисем — тĕп выранта. Вĕсен конференцийĕсем, съезчĕсем пирки теплĕн сырса кăтартнă.

Чăваш гаррапелуĕсисем те хăй ен пирвешнеле йеркелене. Весем "Ульяновская-Симбирская энциклопеди" [illegible]

1997 султа тĕп вĕрентӳ управленийĕнче наци шкулĕсемпе ĕçлекен тĕп специалист Ф. Т. Улендеева пусанче. Ун хысçăн чăваш чĕлхине вĕрентекен шкулсен йышĕ чылай усрĕ. Халĕ предмет выранне хурса вĕрентекеннисем — 44 (1952 ача), чĕлхене, культурăна, историе тĕрлĕ майпа вĕрентекеннисем — 122 (3971 ача).

Саплах Ульяновск педагогика университетĕнчи филологи факультетĕнче чăваш ушкăнĕ пур. Унта сулсерен 1[illegible] студент вĕренме кĕрет. Савăн пекех Ульяновскри 1 меш тата Синкеля педучилищисенче чăваш ушкăнĕсем пур. И. Я. Яковлев шкулĕн комплексĕнче те шăнкăрав сасси янăраса кайрĕ. Унта Чăваш патшалăх университечĕ хăйĕн представительствине усрĕ. Паян унта 138 студент пĕлу илет.

Тĕр[illegible]ĕ уявсем, мероприятисем ирттерме Чăваш культура центрĕ пулăшать (вăл Нацисен культурисене сĕнетсе аталантаракан центрăн тытăмне кĕрет). Акатуй, Кĕрсари, улах, Сăварни — хула чăвашĕсем те халь çакăн пек уявсем ирттереççĕ. Ака вăл кивĕ йăласен çамрăкла[illegible]ĕ.

1999 çулта выранти телевиденире [illegible] тухма тытăнни те чăвашсемшĕн пысăк сагнас пулчĕ. Эрнере пĕрре 45 минут савантарать вăл халаха. Чăвашсен астăнне йĕркелеме вăл та пысăк витĕм курет.

И. Я. Яковлев шкулĕн комплексĕнчи чиркĕве те тепĕр хут чĕртнĕ. Халĕ унта чăвашла кĕлĕсем пулассĕ.

Икĕ çул каялла Чĕмпĕр сĕрĕ çинче чăваш наци кĕрешĕвĕ аталанма пуçларĕ. Кĕске вăхăт хушшинчех чĕмпĕрсем пысăк турнирсенче призла вырăнсем йышăнма пултарчĕç.

Эппин, Чĕмпĕр хутлахĕнче чăвашлăх чĕрелсе ларать. Çапла пĕтĕмлету тума сулерех асанпа фактсем [illegible]

Чăваш тĕнчи асла. Чĕмпĕр Ен [illegible] ун пĕр пайĕ. Çавăнпа чăвашлăх аталанни пĕтем чăваш тĕнчине [illegible]. Çак ĕçре вара "Канаш" хасат сынсемпе илаçа, сынсене пе[illegible]

пĕринпе çыхăнтарса тăрать, федераци политикине тытса пырать. Наци хутшăнăвĕсен çĕнетӳ тапхăрĕнче ку ĕçĕн пĕлтерĕшĕ ытла та пысăк, çав вăхăтрах — яваплăхĕ те.

Çапла вара, Чĕмпĕр Ен чăвашĕсен "Канаш" хаçачĕн ролĕ питĕ пысăк. Вăл тухма пуçланăранпа облаçра чăваш чĕлхине шкулта вĕренесси чылай лайăхланчĕ, культура шайĕ ӳсрĕ, çынсенче наци ăнланăвĕ çуралса аталанчĕ. Ку вара малалла шанчăкпа пурăнма май парать. Апла пулсан "Канаш" информаци уйĕнче хăйĕн тĕрĕс вырăнне тупрĕ тесе калама пултаратпăр.

Юлашкинчен çакна каламалла. Çак ĕçе çырнă вăхăтра "Канаш" хаçатăн кашни çулхи подшивкине пăхса тухма тӳрĕ килчĕ. Мĕн çинчен кăна çырман-ши унта, мĕнле кăна тема хускатман-ши? Тĕпчемелли питĕ нумай. Çулерех çырса кăтартнисем — пĕчĕк пай кăна, пĕрремĕш утăм. Кашни темăна малалла тăсса кайса тĕпчеме пулать: анлăшĕпе те, тарăнăшĕпе те. Эпĕ диплом ĕçĕнче ун пек тĕллев лартман, çак калапăшлă ĕçре пурин çинчен те çырса пĕтерес çук. Сапах кам та пулин çак темăпа малалла тĕплĕнрех ĕçлессе шанатăп. Манăн пысăк мар та çиелерехрен çырнă материал вара весене кăштах та пулин пулăшма пултарсан савăннă пулăттăм.

## Асăрхаттарусем

/1/ Петрова М. Чăваш пичечĕ // Хусан. Тутар АССР писателĕсен литература сборникĕ. — Хусан. 1967. — 274 с.

/2/ Никольский Н. В. Хыпар — 1906-1907 çулсенче эрнере пĕрре тухса тăнă чăваш хасачĕ // Хыпар. — 1996 27-29 №№.
2 с.

/3/ Апан-и, вулакан // Канаш. — 1989. Раштав, 30

/4/. Алексеев А. Наци культурине аталантармалла Канаш. — 1989. Раштав, 30.

/5/. Волков Г. Ывăлăм ман — чăваш // Канаш. — 1990 Кăрлач, 13.

/6/ Калистратов А. Чун хурланать, чун савăнать // Канаш. — 1991. Ака, 27.

/7/ Саландаев И. Чăвашсем, чăмăртанăр // "Канаш — 1991. Ака, 27.

/8/ Кирюшкин И. И. Я. Яковлев шкулне усасах пулать // Канаш. — 1990. Нарăс, 10.

/9/ Юхма Мишши. "Канаш" халăхшăн канаш пултăрччĕ // Канаш. — 1990. Нарăс, 3.

/10/ Пряников В. Халахран канаш ыйтас // "Канаш". — 1990. Нарăс, 17.

/11/ Юнгеров Н. Авалхи йăла-йĕркене упрасчĕ // "Канаш". — 1990. Нарăс, 27.

/12/ Тăван чĕлхе — чăваш чĕлхи. Чăваш чĕлхи синчен калана ытарлă самахсем, цитатăсем, сăвăсем. — Кукес. — 2000. 14 с.

/13/ Савăнтах. 17 с.

/14/ Пряников В. Мускав чăвашĕсем патĕнче // Канаш. — 1990. Пуш, 10.

/15/ Николаев А. Космонавт саламĕ // Канаш. — 1990. Пуш, 17.

/16/ Сементер Ю. Чун-чĕрери хĕлхемçĕм // Канаш — 1990. Пуш, 24.

/17/ Бабаев Е. Манар мар тăван чĕлхене // Канаш. — 1990. Пуш, 31.

/18/ Волков Г. Тăван сăмах сиплĕхĕ // Канаш — 1990. Ака, 28.

/19/ Данилов М. Тăван сăмахшăн, тăван культурăшăн // Çавăнтах.

/20/ Вирьялова О. Хамăр хаçат куçа уçрĕ // Çавăнтах.

/21/ Юман А. Сăвă çырас тесен мĕн пĕлмелле // Канаш. — 1990. Çу, 19.

/22/ Тăван чĕлхе — чăваш чĕлхи: Чăваш чĕлхи çинчен каланă ытарлă сăмахсем, цитатăсем, сăвăсем. — Кÿкеç. — 2000. 19 с.

/23/ Çавăнтах. 21 с.

/24/ Паймуратов Н. Ăстăн пуçламăшĕнче — тăван чĕлхе // Канаш. — 1990. Çĕртме, 9.

/25/ Елагин В. Чăваш педучилищи уçăлайĕ-ши? // Канаш. — 1990. Çĕртме, 16.

/26/ Юхма Мишши. Эсĕ те чăвашах, аякри тăванăм // Канаш. — 1990. Утă, 21, 28.

/27/ Елагин В. Сохраним ли себя как нацию? // Канаш. — 1990. Раштав, 8.

/28/ Ромашкин В. Роль областного чувашского общества в сохранении и развитии национальной культуры // Чуваши Симбирского Поволжья. — Ульяновск: Симбирская книга, 1998. С.152-153.

/29/ Центр документации новейшей истории Ульяновской области. Архивная справка № 41. 2003. Апрель, 23.

/30/ Юман А. И. Я. Яковлев ячĕллĕ... — Ульяновск: Симбирская книга, 1998. 30 с.

/31/ Книга приказов № 1 по редакции газеты "Канаш" 05-01. 1 с.

/32/ Свидетельство о регистрации средства массовой информации. 1994, апрель, 27.

/33/ Капитонов Я. Мальелсем малалла пăхассĕ // Канаш. — 1989. Раштав, 30.

/34/ Юман А. Çĕршыва тăрантараканcенчен пĕри // Канаш. — 1994. Çĕртме, 11.

/35/ Ларионов Н. Çăкăр çитернĕшĕн — ял халăхне тав // Канаш. — 2002. Çурла, 8.

/36/ Ларионов Н. Эревет — вунă çулта // Канаш. — 1996. Раштав, 7.

/37/ Степанова А. Еткер — пилĕк çулта // Канаш. — 1994. Çĕртме, 25.

/38/ Ларионов Н. Чи пысăк ĕмĕт — чăваш шкулне уçасси // Канаш. — 1997. Юпа, 11.

/39/ Ларионов Н. Илия атте — тĕн академийĕн выпускникĕ // Канаш. — 1997. Çурла, 16.

/40/ Ларионов Н. Тав сăмахĕ — чи пахи // Канаш — 2000. Авăн, 8.

/41/ Артемина А. Шахмат “королĕн” тренерĕ // Канаш. — 2002. Ака, 11.

/42/ Данилов А. П. Публицистикăпа илемлĕ литература ыйтăвĕсем Шупашкар: Чăваш ун-ĕн изд-ви, 2002. 23 с.

/43/ Васильева Н. Шкула аркатма парас марччĕ Канаш. — 2003. Нарăс, 6.

/44/ Çавăнтах.

/45/ Çавантах.

/46/ Çавăнтах.

# УСĂ КУРНĂ ЛИТЕРАТУРА

1. "Закон РФ о средствах массовой информации". // Пресса Чувашии. Чебоксары, 1995.

2. Кодекс профессиональной этики российского журналиста // Пресса Чувашии. Чебоксары, 1995.

3. Актуальные проблемы журналистики. Сборник научных трудов // Под редакцией Куракова Л. П., Данилова А. П. Чебоксары. 1995. — 212 с.

4. Богданов Н. Г., Вяземский Б. А. Справочник журналиста. Л.: Лениздат., 1971. — 687 с.

5. Былинский К. И., Розенталь Д. Э. Литературное редактирование. М.: Искусство, 1961. — 355 с.

6. Горохов В. М. Слагаемое мастерства. М.: Мысль. 1982. — 160 с.

7. Гуревич С. М. Планирование работы в редакции. М., 1979. — 31 с.

8. Данилов А. П., Алексеев В. Н. Жанры советской журналистики // Чуваш. ун-т. Чебоксары. 1988. — 80 с.

9. Данилов А. П. Чăваш публицистики // Вĕренӳ пособийĕ. Шупашкар: Чăваш ун-ĕн изд-и. 1991. — 80 с.

10. Данилов А. П. Публицистикăпа илемлĕ литература ыйтăвĕсем. Шупашкар: Чăваш ун-ĕн изд-ви, 2002. — 484 с.

11. Журналистика и информация. С. Пб.: Изд-во С.-Пб ун-та 1994. 178 с.

12. Иванов В. П. Чувашская диаспора: расселение и численность. Этнографический справочник. — Чебоксары, 1999. — 316 с.

13. Иванов В. П.Формирование чувашской диаспоры. Чебоксары, 1988. — 11 с.

14. Колосов Г. В. Публицистика как творческий процесс. М.: Изд-во Московского ун-та, 1977. 87 с.

15. Ныркова Л. М. Как делается газета? М.: изд-во "Гендальф", 1979. — 31 с.

16. Памятная книга редактора. М.: Книга, 1988. — 415 с.

17. Петров К. К. Чăваш журналистикин жанрĕсем. Шупашкар: Чăваш ун-чĕ, 1990. — 69 с.

18. Проблемы национального в развитии чувашско-

го народа. Сборник статей. — Чебоксары, 1999. — 304

19. Подготовка и оформление рефератов, курсовых и дипломных работ. Составители Данилов А. П. Кириллова А. А. Чебоксары: Чуваш ун-т, 2002. 32 с.

20. Прохоров Е. П. Введение в теорию журналистики. М.: Мысль, 1993. — 139 с.

21. Рабочая книга редактора районной газеты. М.: Молодая гвардия, 1986. — 679 с.

22. Ромашкин В. Ф. и другие. Чуваши Симбирского Поволжья. — Ульяновск, 1998. — 168 с.

23. Столов Н. Н. Периодическая печать Ульяновской губернии 1837-1927 г.г. Библиографический справочник. — Ульяновск, 1928. — 27 с.

24. Слово о науке. — Составитель Лихтенштейн Е. С.
М.: Знание, 1976. — 304 с.

25. Таван чӗлхе — чаваш чӗлхи: Чаваш чӗлхе ҫинчен калана ытарла самахсем, цитатасем, ҫавасем. — Кукес — 2000. — 85 с.

26. Тенюшев И. Я. Чăвашсен маттанкă публицисчӗсем. Шупашкар. Чав. кен. изд-ви. 1987. 62 с.

27. Тенюшев И. Я. И. Я. Яковлев — публицист. Чебоксары: Чув. кн. изд-во, 1990. — 144 с.

28. Устав редакции областной газеты "Книга". Ульяновск. 1989. Декабрь, 28.

29. Ульяновская-Симбирская Энциклопедия. Т. 1. Ульяновск. 2000. — 397 с.

30. Хусан. Тутар АССР писателӗсен чаваш ҫ[illegible] сборникӗ. Хусан, 1967. — 303 с.

31. Чăваш литератури: поэтикăпа стиль ыйтăвӗсем: Статьясен сборникӗ. Редакторӗ В. Г. Родионов. Шупашкар, 1989. — 153 с.

32. Чаваш литературине диплом ӗҫӗ ҫырасси. Васильев А. П. пухна. Шупашкар. Чав. ун-ӗн изд-ви. 1995. — 25 с.

33. Чувашское население России. Том 2. Автор-составитель Алексеев П. М. М. ЦИМО. 2001. — 528 с.

34. Шульгина Н. Пусть всегда будет книга. Очерки. Саратов. Приволжское книжное издательство. 1988. 144 с.

35. Этнопедагогический манифест И. Я. Яковлева. Сборник статей. Редактор Кириллов И. П. Чебоксары, 2001. — 59 с.

36. Юман А. И. Я. Яковлев ячĕллĕ. Ульяновск: Симбирская книга, 1998. — 127 с.

## Хушма пай

***Авторăн тĕрлĕ çулсенче “Канашра” пичетленнĕ хăш-пĕр материалĕсем***

Эссе

**Çын мĕншĕн хăй çине алă хурать**

Эпир çуттĕнчене хăнана çеç килетпĕр. Вăтамран 70-80 с, нумай пурăнсан, 90-100 çул пулатпăр кунта. Унтан ӳт-пӳç ватăлать — вилĕм килет. Çак хăрушă япаларан никам та хăтăлса юлайман-ха халиччен. Кам çуралнă — пурте вилеççĕ. Ĕмĕр-ĕмĕрĕпе пурăнаймастăн. Сакна шута илсен эпир пурнăçа хакламалла пек, кашни кун сута курнишĕн, хĕвел тухнишĕн савăнмалла пек, вилĕмрен хăрамалла пек.

Çав вăхăтрах хăйсене хăйсем вĕлерсе суттĕнчерен уйрăлакансем пур. Çĕр чăмăрĕ çинче кашни кун 1200 сын малалла пурăнас е пурăнас мар ыйтăва хăй татса парать. Çулталăкра ку цифра 438 пине çитет. Ку — чылай Шупашкар. Çӳç-пуç вирелле тăрать... Рассейре ку цифра — 54 пин.

Пĕррехинче эпĕ радиопа çакăн пек хыпар илтнĕччĕ. Рассейре 10 пин сын пусне 45-ĕшĕ хăйне хăй вĕлерет. Англире вара 9 çын çеç. Мĕне пĕлтерет-ши ку? Манăн хурав çук. Паллах, пирĕн çĕршывра пурнăç шайĕ начар теме пулать. Анчах тĕпчевçĕсем çакна палартаççĕ: вăйлă аталаннă хăш-пĕр çĕр-шывсенче ятăх аталанмисенчен çак меслетпе нумайрах вилеççĕ. Сăлтавне хăш енчен пырса ăнлантармаллине те пĕлмеççĕ. Çитменнине, ку пулăм тĕнчере сарăлса пырать.

Пирĕнçĕршывра социализм тапхăрĕнче ку темăна хускатма юраман. Калаçманнипе, çырманнипе хăйсем çине алă хуракансем çук тенĕ пулĕ. Ун пек пулсан лайăхчĕ те... Ку яхăнта çеç суицида (хăйне хăй вĕлерни) наука вырăнне хурса тĕпчеме, тишкерме пуçланă. Халĕ Мускавра тата хăш-пĕр пысăк хуласенче хăйсем çине алă хума шутланă çынсене пулăшма ятарлă центрсем туса хунă. Пирĕн облаçра çук-ха ун пекки. Пĕтĕмĕшле каласан, çак хăрушлăха хирĕç тăракан пĕр пĕтĕм служба çук. Шанăç телефонĕ, пульницасем, чиркӳсем пур, анчах вĕсем пурте уйăммăн, хăйсем тĕллĕн ĕçлеççĕ.

Камсем-ха вӗсем хӑйсене хӑйсем вӗлерекенсем? Ытларах чухне психологи енчен сып-сывӑ ҫынсем. Анчах тӗрлӗ майпа йывӑр лару-тӑрӑва кӗрсе ӳкнӗскерсем: чӗртме май ҫук чир, сывӑх ҫынна ҫухатни, панкрута тухни, ӑнман юрату... Пӗтӗм вӑя хурса тапаҫланмалла чухне, пурнӑҫа лайӑхлатас тесе тӑрӑшмалла чухне вӗсем аллине вӗрен, ҫӗҫӗ, лезви, пӑшал, наркӑмӑш тытаҫҫӗ, машина е пуйӑс урапи айне ыткӑнаҫҫӗ. Чӑнах та, ку ҫынсем хушшинче ӑс-тӑн енчен сыв маррисем те пур — 12-15 процент. Тата 25-30 проценчӗ — ӗҫкӗпе е наркотикпа иртӗхекенсем. Шкул ҫулӗнчи ҫамрӑксене вара уйрӑм ушкӑна кӗртмелле. Вӗсем ӑс-тӑн енчен чиперех пулин те питӗ час суранланаҫҫӗ, хуҫӑлаҫҫӗ: пӗр усал сӑмах та, начар паллӑ та ҫитет.

Хӑйсем ҫине алӑ хуракансем хушшинче паллӑ ҫынсем те нумай: Дж. Лондон, А. Толстой, А. Радищев, Э. Хемингуэй, В. Маяковский, А. Фадеев, С. Есенин, М. Цветаева, С. Цвейг, В. Гаршин ҫыравҫӑсем, Е. Дунаевский композитор... Чӑваш сӑвӑ хывӑмне йӗркелекен Сеспӗл Мишши те ҫав ушкӑнрах. Паллах, ҫут тӗнчерен уйрӑлса кайма вӗсене тӗрлӗ сӑлтавсем хистенӗ. Ҫапах та пӗтӗмӗшле сапла калама пулать: кашнин шухӑшӗнче пурнӑҫ пӗлтерӗшӗ ҫухалнӑ, пурнӑҫ йӳнелнӗ. Умра ӗмӗт алӑкӗ хупӑнать — чышса уҫма вӑй ҫитмест. Шел пулин те, сын суттӗнчере веҫех хӑй шутласа хунӑ пек тӑваймасть.

Кӑштах ӑнланмалла пултӑр тесен Марина Цветаева кун кӗнекинчи йӗркесене аса илер. Акӑ поэтесса мӗн ҫырса хӑварнӑ: "Эсир леш тӗнчене — Таваӑру тӗнчине! Унта тӳресене те (судьясене) суд тӑвӗҫ. Ку вӑл мана тӳрре кӑларнӑ кун пулӗ. Эп ун чухне хавхаланса савӑнӑп. Мӗншӗн тесен унта кӗпе тӑрӑх суд тумӗҫ. Кунта кашнин кӗпи маннинчен авантарах, ҫавӑнпа пурнӑҫра мана курайманҫҫӗ. Тӗрӗссипе вара, ҫак пурнӑҫах мана кӗпе ҫинчен шутлама чӑрмантарчӗ".

Хӑш чухне: "Хӑйсем ҫине алӑ хуракансем пархатарлӑ ӗҫ тӑваҫҫӗ. Хӑйсен пурнӑҫне — хӑйсем хуҫа", — тенине илтме пулать. Анчах кун пек ытти ҫынсене хӑтарса вилнисене ҫеҫ (сӑмахран, А. Матросов) калама пулать пулӗ. Мӗнле те пулсан йывӑрлӑха чӑтаймасӑр хӑйӗн пурнӑҫне татакана, сывӑх ҫыннисене шар кӑтартакана, йӗртекене

çапла калама пулать-ши? Уйрăмах [illegible] танас пурнăçра. Тепĕр енчен шутласан, çыннăн пурнăçĕ хăйĕн сес [illegible] вĕт, унăн пĕр пайĕ — общество шучĕ [illegible]. Общество [illegible] çыхăнна: мĕскер-тĕр унран илет, мĕскер-тĕр ана парать. Çын вара сакна хăйен шухăшĕпе пĕр самантра та [illegible] [illegible]. Шел пулин те, ана çак [illegible] [illegible] тума [illegible] та [illegible]раймасть. Пĕрре тытса чарăн тепрехинче [illegible] [illegible]. Хăй тума [illegible] [illegible] — [illegible]. Çырлаха çитейместĕп. Çынна çын пер [illegible] [illegible] та сыхлаймасть. Кунта хăй сине ала хума шутлани çынна астумалла: пурнăç яланах улшăнать, ıатаргахсем йыăрлăхсем хыссăн сута кунсем килессех. Пĕр вăхăт [illegible] çыртса чăтмалла [illegible]. Паллах, ним тумасăр [illegible] мар сисĕне тухма тăрăшас [illegible] [illegible] [illegible]. Уйрăмах ку самрăксене [illegible] сулхисене [illegible] [illegible] [illegible] сăмахсем: кашни — хăйĕн телейĕн хуçи. Мĕн [illegible] [illegible] та, ху сине алă хуни [illegible] ас-пуçа кĕрсе [illegible] [illegible]м мар. Ахальтен мар ку çынсене чирку [illegible] [illegible] шутлать, кĕл тумасть. [illegible] [illegible] хăвна кӳрентерсен, сиктерсен тӳрех мĕн те пулин [illegible] равлама ан васка, ăшăнта 10 таран вастамасăр [illegible]. Паллах, ун пек туна хыссăн силĕ кăштах сӳрелет, [illegible] тан шутланине каламăн. М[illegible] шутпа, сак месле [illegible] [illegible] сине ала хума шутланисен те уса курма пулать. Хăй [illegible] [illegible] сак [illegible] тума [illegible] [illegible] синен, [illegible]анрах япала синчен шутлăр [illegible] çынна [illegible] [illegible] [illegible]. Паллах, [illegible] манăн шухăш [illegible] [illegible] [illegible] те [illegible] [illegible] [illegible]. Шухăшламасăр туса хуна япаласем, сĕр синче хуйха-суйх сахалтарах пулĕччĕр тетĕп.

Кун пирки сакăн пек сăмах-юмах сурет. Пĕрре [illegible]ме шутланăскер, кĕпер хĕррине пырса тăна [illegible] сикм[illegible] хатĕрленет. Çав вăхăтра унта сын иртсе пырать. Пешĕнчен мĕн [illegible]аватăн тесе ыйтать. Хуйха укнĕскер палламан сынна хăйĕн нушине каласа парать. Иртсе пыраканни йывăрлăх кĕрсе укнĕ çынна ним каласа та [illegible] [illegible] пулашаймасть. Хайхисем иккĕшĕ те пĕрле [illegible] [illegible] те иккĕшĕ те... шыва сикессĕ.

Акă вăл сăмах вăйĕ. Вăхатра [illegible] [illegible] [illegible] ĕлкĕрнĕ пулсан, йăпатнă пулсан иккĕшĕ те сыва юлатчĕç пулĕ. Халĕ вара — пĕр хараç икĕ вилĕм.

Мĕнле пĕтĕмлетӳ тума пулать? Çак хăналăх пурнăçра пĕр-пĕрне хисеплеменни, çиллентерни, тĕп тума тăрăшни вырăнсăр. Йывăрлăхсем капла та çителĕклĕ. Çутă хĕвел пăхакан тĕнчере май пур таран савăнар, малашнехи ăрусемшĕн ырă ĕçсем тăвар, хамăр хыççăн ырă ят хăварар. Пире усалпа ан асăнччăр. УНТА — ĕлкĕретпĕр. Васкама кирлĕ мар.

"Канаш", №25, 2000 ç., çĕртме, 23.

**Пăлхар Авраамĕ — чăвашсен пĕрремĕш çветтуй çынни**

Атăлçи Пăлхар чăвашсен тĕп хулинче — Пăлхарта çветтуй Авраам чиркĕвĕ пуррине илтнĕччĕ-ха, анчах ку храмра пулса курманччĕ. Çак тĕллевпе Чĕмпĕр чăваш чиркĕвĕнчи ревизи комиссийĕн председателĕпе П. М. Сидоровпа çула тухрăмăр.

Çанталăк тĕксĕмрех, хĕвел вăхăт-вăхăт çеç пăхса илет. Атăл çинче вăйлă çил, шыв тĕксĕм, хумханать. Метр ытла кăпăклă хумсем метеор сăмси çине шаплатса çапăнаççĕ те шыв пĕрчисем пулса ун тăрринчен те çӳллĕрех вĕçсе хăпараççĕ. Хĕвел пăхнă вăхăтра метеор йĕри-тавра, кăвак ăйăр çинчи илемлĕ пĕкĕ пек, асамат кĕперĕ курăнса илет. Хăш чух хумсем татах та вăйланаççĕ, хирĕç килсе çапса метеор хăвăртлăхне пĕр самантрах сисĕнмелле чакарса хураççĕ...

Пăлхар çĕрĕ çине пуссанах чиркӳ еннелле çул тытрăмăр. Храм хула хĕрринчи масар çумĕнче ларать. Ку масара 1952 çулта Атăл çинче ГЭС тунă хыççăн уçнă, мĕншĕн тесен киввине шыв илнĕ.

Кĕскен чиркӳ историйĕ çакăн пек. Пăлхартан инçе мар вырнаçнă Порфировка ятлă ялта иртнĕ ĕмĕрте чиркӳ пулман. Турра ĕненекенсем Сергей атте патне пĕчĕкçĕ çурта кĕл тума çӳренĕ. Сергей атте ялта чиркӳ тăвас тесе ĕмĕрех укçа пуçтарнă. Хăй вилес умĕн укçине кĕрӳшне панă, ял халăхĕ валли лайăх чиркӳ хăпартса лартма хушнă. 1893 çулта çак укçапа храм туса хураççĕ, Сергей ятне параççĕ. Анчах 30-мĕш çулсенче ăна большевиксем хупаççĕ, тырă хумалли кĕлет тăваççĕ. Килти турăшне вара ĕненекенсем килĕсене усрама илсе каяççĕ. 1988 çул тĕлне Порфировкăра пĕр ватă çын çеç юлать. Чиркӳ çуртне Пăлхар хулине куçарма шутлаççĕ.

Шăп çак вăхăталла ку тăрăха Владимир атте (Головин Владимир Валентинович) килет. Сăмах май каласан, вăл пирĕн облаçра çуралса ÿснĕ. Унăн ашшĕ — Валентин атте — Карлински чиркÿ настоятелĕ. Владимир атте каланă тăрăх, вĕсен йăхĕнче амăшĕ енчен виççĕмĕш сыпăкра чăваш пулнă.

— Самана çемçелнĕ пулин те вырăнти чиновниксем чиркĕве усма хирĕç пулчĕç. Мускавран ирĕк илнĕчче енте, çапах та кунти пуçлăхсем пирĕн умра кирпĕчрен тунă хÿме пек тăчĕç. Вĕсен умĕнче, чĕркуçленсе пуççапнă пекех, йăлăнма тÿрĕ килчĕ. Çапах тĕллеве пурнăçларăмăр, — тет Владимир атте.

Çĕнĕ вырăна куçарнă чиркĕве Пăлхар Авраамĕ ятне пама шутлаççĕ. Кам-ха вăл Авраам?

Историре çакă паллă. Вăл пăлхар-чăваш йăхĕнчен, çак тăрăхри пĕр хулара пурăннă. Кунти халăха X ĕмĕртен пуçласа ирĕксĕр ислам тĕнне йышăнтарнă. XII ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче çуралнă Авраама та çаплах тунă. Вăл суту-илупе аппаланнă, темиçе чĕлхе пĕлнĕ, таçта та çитнĕ, нумай çынпа паллашнă. Владимир хулинчен килнĕ кнăçсенчен Христос тĕнĕ çинчен пĕлет, ăна кăмăллать. Пĕррехинче Владимир хулинче пулнă вăхăтра Христос тĕнне илет. Пăлхара килсен урăх тĕн йышăннине пытармасть, çĕнĕ тĕне çынсем хушшинче сарма тăрăшать. Ку вăхăтра АтăлсиПăлхарта тĕнчипе паллă Ака пасар иртнĕ. Унта халăх питĕ нумай пуçтаранна, таçтан та килнĕ: Скандинавирен, Тибетрен, Китайран... Авраам шăвăх Атăл хĕрринчи пĕр çăл çумне тăрса халăха Христос тĕнне кусма ÿкĕтленĕ, кĕлĕсем вуланă. Ислам тĕнĕпе пурăнакан пăлхар-чăвашсем ăна хирĕçленĕ, хăйсен тĕнне вĕрланă. Юлашкинчен çапăçу пуçланса каять. Пĕрисем каланă тăрăх, Авраама çакăнтах вĕлереççĕ. Теприсем каланă тăрăх, тĕрмене илсе каяççĕ, çавăнта вĕлереççĕ. (1236 çулта Пату хан çарĕсем Атăлçи Пăлхара çĕмĕрсе тăксан документсем çунса каяççĕ, çавăнпа икĕ тĕрлĕ сăмах çÿрет — хăшĕ тĕрĕссине калама йывăр.)

Çак ĕç 1229 çулта пулса иртет. Тепĕр çулхи пуш уйăхĕн 9-мĕшĕнче Авраамăн çĕрмен ÿтне Юрий Всеволодович князь тăрăшнипе Атăл тăрăх Владимир хулине илсе каяççĕ. Успени хĕрарăмсен мăнастирне вырнаçтараççĕ. Çанталăк ăшă пулин те ÿт çул çинче пăсăлмасть

Çӗрмен ут патне чирлӗ çынсем сывалма çӳреççӗ. Çапла вара, Атӑлçи тӑрӑхӗнчи Христос тӗнне саракан пӗрремӗш çын — Авраам çветтуй пулса тӑрать.

1896 çулта Турра ӗненекенсем ыйтнипе Авраам ӳчӗн пайне (пӗр аллин чавсаран аяларах шӑммисене) Пӑлхара илсе килеççӗ. Успени чиркӗвне хураççӗ. 1938 çулта чиркусене тустарнӑ вӑхӑтра ку шӑмӑсене çынсем пӗрерӗн-пӗрерӗн килӗсене илсе каяççӗ.

Çӗнӗ чиркӳ уçнӑ хыççӑн пӳрнен пӗр пайӗ çеç тупӑнать. Ыттисем хыпарсӑр-йӗрсӗр çухалаççӗ. Халӗ пӳрне шӑмми Пӑлхар Авраамӗн чиркӗвӗнче сыхланать. Чӑвашсенчен тухнӑ пӗрремӗш çветтуй çынна асӑнса Атӑл хӗрринчи çӑл çумне (Авраам çакӑнта кӗлӗ вуланӑ) часавай туса лартаççӗ. Çынсем ку çӑл патне чир-чӗртен сывалма çӳреççӗ. Анчах Брежнев çӗршыв пуçлӑхӗ пулнӑ çулсенче ӑна тустараççӗ. Юлашки вӑхӑтра халӑх тӑрӑшнипе çӑла тепӗр хут çӗнетеççӗ, кирпӗчрен часавай туса лартаççӗ. Кунта хальхи вахӑтра питӗ тирпейлӗ: асфальт сарнӑ, шӑкилкке (решетке) пулнӗ. Çакӑнтах чусран шыва кӗмелли хӳшӗ туса хунӑ.

Кашни çул Мункун иртсен таваттамӗш вырсарникун (çак кун Авраам аллине Владимиртан илсе килнӗ) Пӑлхар тӑрӑх турӑшсемпе, хӗрессемпе çӳреççӗ, чи малта пӳрне шӑммине йатса пыраççӗ. Унта нумай çын хутшӑнать, аякран килекенсем те сахал мар пулаççӗ.

— Тура пулашнипе хаçан та пулин Авраам утне чылайӑшӗпех Пӑлхара илсе килме шутлатпӑр, — тет Владимир атте, — кун пек шанчӑк пур.

"Канаш", 15 №, 1997 ç., ака, 5.

**Европӑра Сергейпа танлашакан çук**

Димитровградра пурӑнакан чӑваш каччи Сергей Казаков нумаях пулмасть боксла выляссипе иккӗмӗш хут Европа чемпионӗ пулса тӑнине пӗлтернӗччӗ ӗнтӗ эпир.

Чемпионпа Ульяновскра ашшӗ-амӑшӗ килӗнче тӗл пултӑмӑр, вӑл ашшӗн 50 çулхи юбилейне килнӗччӗ. Çапла ушкӑнпах калаçса лартӑмӑр.

Сергей юлашки турнир çинчен каласа пама тытӑнчӗ. Вӑл пӗрре те рингрипек мар (унта яланах шухӑшлӑ, пичӗ çинче кулӑ палли сисӗнмест), пулни-иртни пирки хаваслансах каласа парать, кулать.

— Пермьри турнирта маншăн чи йыварри сурма финал пулчĕ. Словаки боксерĕпе Рудольф Дидипе эпĕ икĕ хутчентĕлпулнăччĕ. Иккĕшĕнче те çĕнтернĕччĕ. Хальхинче вăл питĕ хытă тăчĕ, парăнтарасах терĕ пулмалла. Анчах виççĕмĕш раундра вăйсăрланчĕ, хăйне парăнтарма тытăнтăм. Финалта Молдавирен килнĕ Вячеслав Гожан та нумай хирĕç тăраймарĕ. Çамрăк-ха вăл, 19 çулта сес. Маларах эпĕ азербайджанецпа белоруса çĕнтертĕм. Димитровградран юлташсем, пĕлĕшсем пынăччĕ чемпионата, рингра чухне вĕсен пулăшса кăшкăрнă сассисене илтсе тăтăм. Савăнпа та выляса ярсан намăс пулатчĕ. Эпĕ ун пирки шутламан та. Чемпионат питĕ лайăх, кăмăллă иртрĕ. Культура программи интереслĕччĕ: балета, фольклор фестивальне илсе çурерĕç. Ĕлĕкхи Европа чемпионĕсемпе тĕл пулма та кăмăллăччĕ. Шупашкартан килнĕ В. Соколов тата В. Лаптев чăвашсем пырса хĕрÿллĕн саламлани чуна тиврĕ. Ентешсем пулнипе пулĕ ĕнтĕ... Çаплах спорт министрĕ В. Фетисов пырса алă тытрĕ. Малтан паллаймарăм — яланах телевизорпа хоккей площадкинче курма хăнăхнă та, — аса илет вăл.

Димитровградри бокс шкулĕ — Рассейри чи лайăххисенчен пĕри (халь куратпăр ĕнтĕ, Европăра та). Унта тĕрлĕ хуларан килнĕ спортсменсем пур. Сергей валли ятарласа Шупашкартан А. Афанасьева ченсе илнĕ (лайăх хатĕрленме вăйлă боксерпа сапăсса писĕхмелле). Ку япала усса кайнă. Кăçалхи Раççей чемпионатĕнче Сергейпа Александр финалта иккĕшĕ тупăшнă. Ун пирки А. Гришин çурма шÿтлесе çапла каланă: "Икĕ чăваш пĕтĕм Раççее хĕнесе пĕтерчĕç!" Сергей вара унпа кăна чарăнмарĕ, пĕтĕм Европăна та "хĕнерĕ". Чăваш ачисем рингра хире-хирĕç çапăçаççĕ пулсан кулленхи пурнăçра — юлташсем.

— Саша питĕ хавасла ача. Юрлама юратать, чăваш юррисене шăрантарать кăна! Унран чăвашла та чылай вĕрентĕм. Вырăс юррисене кĕвĕ майăн чăвашла куçарса пырса юрлать. Рингра та ун пуласлăхĕ пур, пултаруллă, — тет Сергей юлташĕ пирки.

Сергейăн хваттер пур ĕнтĕ, Саша общежитире пурăнать-ха. Анчах çулталăкăн çуррине вĕсем ют хуласенче, çĕршывсенче ирттереççĕ: хатĕрленеççĕ, ăмăртаççĕ.

Калаҫӑва Сергейӑн амӑшӗ Раиса Ивановна хутшӑнать.

— Сергей пӗчӗкӗллех йӑрӑччӗ. Общежитире пурӑннӑ чух хӑйӗнчен аслӑ ачасемпе боксла вылятчӗ, стенана чӑмӑрӗпе тӑрӑнтара-тӑрӑнтара айкашатчӗ. Ҫапӑҫма вара юратмастчӗ, хӗр пек сӑпайлӑччӗ. Кӑшт ӳссен ӑна автозавод керменӗнчи ташӑ кружокне патӑмӑр, чылай ҫӳрерӗ [?]нта. Сав вӑхӑтрах “Автомобилистра” боксна аппаланма тытӑнчӗ. Каярах иккӗшӗнчен пӗрне суйласа илмелле пулчӗ. Ывӑлӑм бокс еннелле туртӑнчӗ, — тет вӑл.

— Малтанах бокс секцине арҫын ачасем ушкӑнпа пырса кӗреҫҫӗ — пурин те вӑйлӑ пулас килет-ҫке. Темиҫе заняти хыҫҫӑнах рет чылай сайралать. Юлашкинчен 20 ҫынран пӗри ҫеҫ тӑрса юлать. Эп ҫавсен шутне кӗтӗм, — калаҫӑва малалла тӑсать Сергей.

Улми йывӑҫҫинчен аякка ӳкмест теҫҫӗ халӑхра, Сергей пултарулӑхӗ те ашшӗ-амӑшӗнчен ӗнтӗ.

Ашшӗ Николай Иванович Ульяновска 1969 ҫулта Ҫӗпрел районӗнчи Ҫӗнӗ Йӗлмелӗнчен килнӗ. 2-мӗш ГПТУран вӗренсе тухнӑ хыҫҫӑн 33 ҫула яхӑн ӗнтӗ столярта ӗҫлет (ун ашшӗ те ялта чаплӑ столяратчӗ). Ҫав шутран 23 ҫул ытла — “Стройдеталь” организацире. Тепӗр тӑхӑр ҫулне автозаводра вӑй хунӑ.

Амӑшӗ Раиса Ивановна (хӗр чухнехи хушамачӗ — Астукова) Чӑнлӑ районӗнчи Анат Тимӗрҫен ялӗнче ҫуралса ӳснӗ, 1973 ҫулта ҫемйипе пӗрле Ульяновска куҫса килнӗ. Атӑ-пушмак фабрикинче 10 ҫул станочникра ӗҫленӗ.

Паллашнӑ пирки Николай Иванович каласа парать:

— 1974 ҫулта юлташсемпе Ульяновскран Тимӗрҫене кайрӑмӑр. Унта “Бега” текен уяв пулатчӗ. Ҫавӑнта пӗрпӗрне куртӑмӑр та ӗнтӗ, часах пӗрлешсе ҫемье саварттӑмӑр.

Сергейӑн Ирина ятлӑ йӑмӑкӗ кондитер фабрикинчи шоколад цехӗнче ӗҫлет. Техникум пӗтернӗ.

Палӑртмалла: ҫемьере пӗр-пӗрне хисепе хурасси — чи малти вырӑнта. Килӗштереҫҫӗ. Халӗ Сергей уйрӑм пурӑннипе час-часах тунсӑхлани те пулать. Сергейпа Ирина ашшӗпе амӑшне юбилей ячӗпе Атӑл тӑрӑх теплоходпа кайма турист путевки парнеленӗ.

Сергейпа вара спорт ҫинчен калаҫатпӑр.

— Тӗрӗссипех калатӑп: малтан ҫакӑн пек ҫитӗнӳсем

пирки ĕмĕтленмен эпĕ. Пысăк рингри ăмăртусенче пĕр-пĕр медаль илсен питĕ лайăх пулĕччĕ тесе шутлаттăм. Çапăçкаласа пăхрăм та — çĕнтерме те пулать иккен. Ыттисем те ман евĕрлех çынсем иккен. Вара тĕллеве те улăштартăм — çĕнтермелле! Çапла ку шая çитрĕм, анчах тÿпенех хăпартăм теме пултараймастăп-ха. Халь кăштах канмалла. Унтан тĕнче чемпионачĕ çинчен шутлама тытăнмалла, вăл тепĕр çул Таиландра иртет. Пĕлетĕп, йывăр килет. Ку çĕршывра çăмăл виçеллĕ боксерсем ялан-ах вăйлă пулнă. Килте кам çĕнтерме ан шутлатăр? Çапах та тĕллевĕм улшăнмасть. 2004 çулта вара Афины хулинче (Греци) черетлĕ Олимпиада иртет. Çаксем манăн чи çывăх та чи пысăк тĕллевсем, — тет вăл.

Мĕнех, çул вĕçне утакан çеç тухать теççĕ.

Утăмусем çирĕп те сулмаклă пулччăр, Сергей, чăваш халăхĕн ят-сумне ÿстер. Кăнтăр-хĕвелтухăç Азире те, Вăтаçĕр тинĕс хĕрринче те пĕлччĕр: тĕнчере ĕçчен те пултаруллă чăваш халăхĕ пур.

"Канаш", 34№. 2002 с., сурла, 22.

### Чăваш чĕлхи амаçури ачи ан пултăр

Мĕн ĕмĕртен тĕрлĕ халăхсем кÿршĕллĕ пурăннă. Вĕсен чĕлхисем, паллах, пĕр-пĕрне витĕм кÿрсе тăраççĕ. Анчах пĕр-пĕр самантран пуçласа пĕри теприне çĕнтерме тытăнать, сарăлас вăйĕ ÿсет. Чылай чухне пысăкрах, йышлă халăх чĕлхи, пĕчĕкреххине хĕсĕрлет. Лешĕн пĕлтерĕшĕ вара самаях чакать. Çавăнпа та хăйне çухатас мар тесе çак халăхăн тăрăшас пулать. Унсăрăн ку чĕлхе истори авăрне чăмать, пуçĕпех çухалать.

Акă мĕн çырать чăваш чĕлхин паллă тĕпчевçи Михаил Федотов профессор ун пирки: "Чĕлхе çемçе кăна япала, анчах та чул касать, тимĕр шăтарать, ăс парать, сав вăхăтрах ăсран кăларса ухмаха хăварать, йăнăш çулпа чуптарать. Пĕр чăваш кăна тĕл пулмасть ку çул çинче. Аслă чĕлхе орбитинче çаврăнакан вак чĕлхесем вырăс чĕлхине пуç таяççĕ, унăн йĕрĕпе пыраççĕ".

Шăпана пула чăвашсем вырăссем хушшинче, тĕрĕсрех каласан — ункинче, пурăнаççĕ. Чи ваттисенчен хăш-пĕрне шутламасан кашни чăваш вырăсла пĕлет. Ку лайăх ĕнтĕ. Ун урлă вырăс тата ытти халăхсен культурипе паллашатпăр, тавракурăма саратпăр. Анчах çак япалан

тӳнтер енĕ те пур. М. Федотов калашле, "унăн йĕрĕпе пырса" хамăр йĕре, сăн-сăпата çухатма та пулать.

Хальхи вăхăтра чăваш чĕлхин чи пысăк инкекĕ вăл — çĕмрен хăвăртлăхĕпе вырăс чĕлхи еннелле çывхарса пыни. Юлашки 70-80 çул хушшинче кăна епле пысăк утăм турăмăр! Вырăс чĕлхи пире пысăк витĕм кӳрсе, хĕсĕрлесе, пусмăрласа тăрать. Чи тĕлĕнмелли кунта çакă: хамăр ăна сиссĕ-туйсах та каймастпăр. Çурма чăвашла, çурма вырăсла калаçатпăр та, çыратпăр та. Çакăн пирки асăрхаттарсан вара: "А вырăссем çапла калаççĕ вĕт, вĕсен чĕлхи сакăн пек", — тесе тӳрре тухма тăрăшатпăр. Тĕлĕнсе кайăн... Мĕншĕн çак пачах та урăхла чĕлхесене танлаштармалла? Вĕсене ниепле те танлаштарма юрамасть, ку пысăк йăнăш пулать. Пирĕн чĕлхесем тĕрлĕ кăк чĕлхесенчен пулса кайнă, халĕ те тĕрлĕ ушкăна кĕреççĕ. Кашни чĕлхен тытăмĕ уйрăм, хăйнеевĕрлĕ. Вырăс чĕлхи синтетика майĕпе йĕркеленет (сăмахран, вĕсем пĕр-пĕр чĕрчун ашне "гусятина" е "баранина" теççĕ). Пирĕн чĕлхе вара аналитикăллă (çак ăнлавсенех эпир "хур ашĕ" е "така ашĕ" тетпĕр). Пирĕн чĕлхере чи малта сăмах кӳлепи мар, сăмахсен йĕрки, хыççăмахсемпе анлăн усă курни.

Çавăнпа та вырăс чĕлхинче хӳтлĕх тупма тăрăшни тĕрĕсех мар. Кунта çапла каламалла: ăнланмасăр вырăс чĕлхи хыççăн каятпăр, асăрхаттарсан вара çакăнтах хӳтлĕх шыратпăр. Йывăрлăх е инкек-синкек сиксе тухсан хӳтлĕх шырама юта каятпăр-и вара? Е атте-анне, е çывăх тăвансем патнелле туртăнатпăр вĕт.

Сапла вара вырăс чĕлхинчен тӳреммĕн куçарса калаçни е çырни кулăшла (тепĕр енчен, чĕрене ыраттаракан япала епле кулăшла пултăр-ха ĕнтĕ?), ăнланмалла мар пулса тухать, сĕткенлĕ чĕлхемĕре типĕтет, чăлах тăвать. Малалла çак çулпах, çак хăвăртлăхпах кайсан пирĕн чĕлхе вырăс чĕлхин дубликачĕ, е амаçури ывăлĕ, пулса юлĕ, вырăсла шухăшласа чăвашла сăмахсемпе çырма тытăнăпăр. Пирĕн тăван чĕлхе вара чăваш чĕлхи ячĕллĕ чĕлхе çес пулĕ. Амаçури ачине, паллă ĕнтĕ, ытла юратсах каймаççĕ. Вăл ытлашши турат пекех. Йывăç лайăх ӳстĕр, пахча çимĕç патăр тесен вара ытлашши туратсене касса пăрахаççĕ. Акă ăçта пырса тухма пултаратпăр эпир! Чăваш чĕлхи амаçури ывăлĕ е ытлашши турат ан пултăр тесен ун пĕлтерĕшне ӳстермелле, ăна хисеплемелле, унпа анлăн

усă курмалла. Вырăссен умĕнче чăваш чĕлхи шайне ӳстерес тĕллев тăмасть. Вĕсене ку ĕç кирлех мар. Ку пире чăвашсене, кирлĕ.

Халĕ çак ыйтăва хускатса А. Милли Чĕмпĕрте тухнă "Атăл юрри" журналта (1-мĕш номер, 1920 çул) çапларах çырать: "Çырулăхпа халăх чĕлхи пĕр тан, пĕр-пĕрне ыталаса пыччăр. Чĕлхе тасалăхĕшĕн тăрăшмалла. Çырнă сăмахсем пĕр-пĕринпе килешсе пĕр чрамри шарса пек пыччăр. Малашне те халичченхи пек хăвăртлăхпа пырсан чăваш çырулăхĕ майĕпен сисмелле мар пĕтсе пынине пĕлтерĕ. Çĕнĕ сăмахсем хутшăнни палăрмасть, ун вырăнне ют чĕлхен сăмахĕсем кунсерен тула пуçларĕç. Вăл чăваш чĕлхин тымарне хăртса пыни, унăн пур хăватне те сук тени пулать. Тулашĕ — куçа улталаканни. Ăшне пăхсан унта чăваш çырулăхĕн тымарне çисе хăртакан хуртсем йăшăлтатни курăнать. Чăвашла таса çырманни, çĕнĕ сăмахсемпе пуйтарма тăрăшманни — чăваш пурнăçне кăтартса парас тĕлĕшпе араслангарманни. Хатĕр культурăна йышăннипе культурăллă пулас çук. Çакă тĕнчери халăхсен историне, сутсанталăк йĕркине хирĕç пырать. Çапла калани чăвашсем ним тума та пултараймаççĕ, вĕсем пĕтмелли халăх тени пулать. Çак шухăшпа ним тума пултарайман, çын янтипе пурăнма юратакан, упăтеленекен чаваш анчах килĕшме пултарать. Ĕçлесшĕн çунакан, хастар та харсăр чăваш ниепле те сав кахалсен шухăшне килĕшме пултараймасть. Чăвашăн культуралла малашлăхĕ çавăн пек пултаруллă шухăшласа ĕçлекен чăвашсен аллинче...

Çапла, ку паян сиксе тухнă ыйту мар. Чĕлхепе выляс туртăм маларах та пулнă. Ун пирки 18 ĕмĕрте пурăннă Франци çыравçи, философĕ Вольтер çапла çырать: "Вактĕвек чапшăн çунни мĕнпур чĕлхере сăмахпа вылясси патне илсе пырать, ку вăл — суя çивĕчлĕхĕн чи начар енĕ".

Нимĕç çыравçи тата шухăшлавçи Гете вара: "Шел пулин те, эпир çакна манса каятпăр: час-часах тăван чĕлхепе те ют чĕлхепе çырнă пек çыратпăр", — тет.

Çак шухăша малалла тăсса тĕслĕхсем пăхса тухар Мĕнле шухăшлатпăр-ха эпир, мĕнле çыратпăр?

Юлашки вăхăтра литературăра "качча тухнă" тени сарăлса пырать. Поэтсем сăвă-поэма, сыравсăсем калав-повесть, драматургсем пьеса çырнă чухне унпа час-час

усă курассĕ. Сăвви-калавĕ хаçат-журналта пичетленет, пьесине артистсем сцена çинче лартса параççĕ. Каять вара пĕр-пĕр йăнăш сăмах е сăмах çаврăнăшĕ тĕнче тăрăх! Сăрт çинчен кусса анакан юр купи евĕрех. Чăн пĕлтерĕшĕ пирки никам та шутласа пăхмасть: пĕри калать — тепĕрне юрать. Ĕлĕк чăвашсем "качча тухнă" тесе каланă-ши? Çук. Ĕненместĕр пулсан халăх сăмахлăхĕнче шыраса пăхăр. Юмахсем, халапсем, легендăсем, ваттисен сăмахĕсем, тупмалли юмахсем, такмаксем, халăх юррисем — чăваш халăхĕн ылтăн çупçи. Çакăнта эсир "качча тухнă" тенине тупаймăр. Апла пулсан пирĕн несĕлсем ун пек каласман. Çакăн пек калама (каллех вырăс чĕлхи хыççăн кайса) 20 ĕмĕрте çеç пусланă. 1930-мĕш çулсенче (литературăра ăна соцреализм тапхăрĕ теççĕ) пирĕн çыравçăсем вырăсла хайлавсене чылай куçарма пусланă. Çав вăхăтра кĕртсе янă та ĕнтĕ ăна литература чĕлхине.

Акă Хумма Çеменĕ М. Горькин "Амăшĕ" романне куçарать (1932 çул). "Старшая сестра — несчастная... Вышла замуж за человека, много старше ее... — пырать текст тарах. Чăваш сыравçи ăна çапларах куçарать: Аслă аппа — телейсĕрскер... Хăйĕнчен нумай çул аслă сынна качча тухрĕ".

Мĕн калама пулать кунта? Хумма Çеменĕ хăй сисмесĕрех ют сулпа кайнă, вырăсла шухăшлама тытăннă, чăваш чĕлхин стильне, хăйнеевĕрлĕхне шута илмен. Вырăспа чăваш чĕлхисене танлаштарма тытăннă. Ун пек тума юраманни пирки çырнăччĕ ĕнтĕ маларах. Паллах, ятлă çыравçă хыççăн ыттисем çапла çырма, калаçма тытăннă. Кунта, Вольтер калашле, "вак-тĕвек чапшăн çунни" курăнать. Куçаруçă ĕçĕн тĕп палли — вуланă чухне пĕр чĕлхерен тепĕрне куçарни паллă ан пултăр, ăна никам та ан систĕр. Ун чухне çеç куçаруçа ăста теме пулать.

Чăваш ялĕсенче "качча тухнă" тесе калаçмаççĕ пулин те ку сăмах çаврăнăшĕ литература тексчĕсене вараласа çӳрет. Вăл хула чăвашĕсен чĕлхине кĕрсе вырнаçрĕ. Çапла, халь чăваш чĕлхине икĕ пая пайлама пулать: хула чĕлхи тата ял чĕлхи. Кунта кăсăк япала пулса тухать. Ял чăвашĕ, таса чĕлхепе калаçса ӳснĕскер, хулана килсе тĕпленет те хăйĕн чĕлхине пăсса ярать. Çак пăсăк чĕлхепе хаçат-журналта çырса, кĕнеке кăларса ял чĕлхине (таса чăваш чĕлхине) пăсма пулăшать. Мĕн каласан та, ял чăвашĕсем "качча тухнă" темеççĕ. Чăваш ĕлĕкрен "качча кайнă", "кач-

ча пынă", "качча килнĕ" тет. Çавăнпа та чăвашлах çырмалла литература чĕлхинче. Эпĕ çыравçăсене çапла каласшăн: ним шухăшламасăр çырса хамăр мăн асаттесен чĕлхине тустарма ан пулăшăр. Сирĕн сăмахăрăн вăй-хăвачĕ пысăк. Чăн чăвашла çырăр, чăн чăвашла шухăшлăр. Сĕткенлĕ чĕлхемĕре, ун пылак техĕмне сыхласа хăварасси — çыравçăсен, хаçатçăсен пĕрремĕш ĕçĕ.

Тĕрĕс мар куçарнипе çыхăнтарса тепĕр сăмах илер-ха — "çине". Ку хыççăмах выранлă усă курма пĕлменнипе пирĕн чĕлхемĕрте çумкурăках тухрĕ ĕнтĕ. Мĕнле кăна кукăртса-авкаласа калаçмастпăр халĕ: "пенси çине тухнă", "ыйту çине хуравла", "ун çине авланнă", "сăмах çине кĕвĕ хывнă", "ман çине çилленнĕ", "пирĕн çине тапăннă", "купăс çинче вылять", "алă çине сехет çых", "хĕр çине куç хывнă", "йĕлтĕр çинче ярăн", кимĕ çинче яран" "сан çине шанатăп", "стена çине çак", "шыв çинче ирĕлтер", "калав çинчен сӳтсе яв", "хаçат çине çыр".

Чăннипех те чăлах чĕлхе! Акă ăçта илсе тухать вырăсларан тӳреммĕн, пуç йĕри-тавра шухăшласа пăхмасăр куçарни. Çак сăмах çаврăнăшĕсемпе каласура, çӳллĕ трибуна çинче, радио-телевидени кăларăмĕсенче, çырура, уйрăмах хаçат-журналта ним вăтанмасăр усă куратпăр. Йăнăша асăрхаттарсан вара каллех вырăс чĕлхи патнех хӳтлĕх шырама васкатпăр: "вырасла çапла вет.. "На" предлог "сине" кусать". Сук сав, ун пек кусмасть. Маларах каларăмăр вĕт: пирĕн чĕлхен тытăмĕ расна.

"Çине" хыççамаха выраисăр сĕтерсе-çĕтсе пĕтерне пирки юптарса Çĕнĕ Шупашкарта пурăнакан А Ыхра поэт питĕ вирлĕ сăвă çырнă:

Купăс çинче вылятăп ачаран,
Юрăç çине, тен, çавăнпах авлантăм.
Ун амăшĕ редактор пулнăран
Эп ун çине ытла та хытă шантăм.

Ырмастăп-ха: ман пурнăç малалла.
Сăрнай çинче те выльăп пĕр романлăх.
Те вырăсла çырап, те чăвашла —
Мĕн чул ăнланмăн, çавăн чухлĕ лайăх.

Çакăн пек тӳрккес калаçни хамăр чĕлхене хакламаннинчен, унăн саккунĕсене, правилисене пĕлменнинчен тата кăштах вырăс пек курăнма, мăнкăмăлланма, суя чап илме тăрăшнинчен килет пулĕ...

Нумаях пулмасть "Канаш" хаҫат редакцинче паллă чăваш ҫыравҫи Ева Лисина пулса кайрĕ. Вăл хальхи вăхăтра тĕп кĕпскиссне чăвашла куҫарас ĕҫс кӳлĕнпĕ. Яваплăхĕ питĕ пысăк кунта. Ҫавăнпа та нумай пĕлмелле. Ĕҫ вăхăтĕнче вăй хурсах шухăшлама тӳрĕ килет. Хăй ĕҫĕ пирки Ева Николаевна аса кĕрсе юлмалла каларĕ: "Предложение вуласа тухатăп та ун пĕлтерĕшне ăнланма тарашатăп. Унтан кĕнекене хупатăп та хама ыйту паратăп: ҫак шухăша ман асанне мĕнле каланă пулĕччĕ-ши?"

Акă ăҫта пĕр чĕлхерен тепĕрне тĕрĕс те тикĕс куҫарнин сăлтавĕ! Акă вăл ĕҫе тăвам тесе туни, чăваш чунне пытăр тени. Кашни ҫыравҫă, хаҫатҫă, куҫаруҫă ҫакăн пек шухăшласан, ҫакăн пек яваплăх туйсан пирĕн чĕлхемĕр, сурхи шыв хĕвел питĕнче ялтăраса, шăнкăртатса юхнă евĕр, таса та ҫĕпĕҫҫĕн илтĕнĕ.

Маларах асăннă тĕслĕхсене чăвашсем ҫапларах савăрттарса калаҫҫĕ: пенсие тухнă, ыйтăва хуравла, ăна качча илнĕ, сăмахĕпе кĕвĕ хывнă, мана ҫилленнĕ, пире тапăннă, купăс калать, алла сехет ҫых, хĕре куҫ хывнă, йĕлтĕрпе ярăн, кимĕпе ярăн, сана шанатăп, стена ҫумне ҫак, шывра ирĕлтер, калава сӳтсе яв, хаҫата ҫыр.

Чăваш чĕлхинче кĕске уҫă сасăсемпе пĕтекен (ă, ĕ) сăмахсене ҫырнă чухне те пăтрашу ҫителĕклĕ. Пĕр сăмаха сӧҫ илсе кăтартатăп: каччă. Хĕрпе каччă пĕрлешнĕ чух, туй синчен сăмях пынă чух "качча кайнă" тессĕ ("тухнă" тесе тĕрĕс мар ҫырнă пирки калаҫрăмăр ĕнтĕ). Пĕрне-пĕри юратнă чухне, туйăмсене палăртнă чухне вара "каччăна юратать" тесе ҫыраҫҫĕ. Пĕр сăмаха пĕр падеж-ра (пару падежĕ) тĕрлĕрен ҫырма юрать-и вара?

Е кунта анекдотри пек пулса тухать-и? "Хĕрарăм" сăмаха упăшкипе пĕрле пурăнсан пĕрле ҫырмалла, уйрăлнă пулсан — уйрăм, упăшки пыркаласа ҫӳресен — дефиспа...

Кĕске уҫă сасăсемпе пĕтекен сăмахсене правило кĕске ҫырма ыйтать: качча кайнă, вăрҫа кĕнĕ, уҫланка кĕрсе кайнă (каччăна, вăрҫăна, уҫланкăна мар).

Ҫак правилăна пăсма нумайăшĕ именсе тăмаҫҫĕ. Тĕслĕхрен, Шупашкарта тухнă "Телеюрă-16" видеокассетăна курнă чух сăнама пулать ҫакна. Фойере артистсемпе калаҫакан хĕр, пуҫĕ тăррине хура куҫлăх лартса янăскер (керменре хура куҫлăх мĕншĕн кирлине

ăнлансах каяймарăм), темиçе хут "телеюрăна килнĕ" терĕ (тĕрĕссипе, "телеюрра" темелле). Апла кулленхи калаçу чĕлхинчи йăнăшсем литература чĕлхине кĕрсе норма пулса вырнаçаççĕ пулĕ ĕнтĕ. Ăнлантаракан, вĕрентекен, хирĕçлекен çук — тем тума та юрать. Вĕренсе çитеймен çынсене çул уçă. Малашне халăха чăвашла каласма çаксем вĕрентеççĕ пулĕ...

Шупашкарти театрсенче те спектакль вахатенче чĕлхе нормине хирĕçлекен, хăлхана ыраттаракан предложенисем илтĕнеççĕ. Акă хам илтнĕ тĕслĕхсем: "эп унта каймасть", "сан патне пырать", "качча тухать". Те автор йăнăшĕ ку, те артистсем сапла хускалаççĕ — ăна калаймастăп.

Малалла тĕрлĕ хаçат-журналта час-час тĕл пулакан йăнăшсене пăхса тухăпăр

Хальхи саманара нумай предприяти, организаци, хуçалăх акционерсен аллине куçрĕ. Эпир вĕсене "акционерлă общество" теме пуçларăмăр. Çак çулпах кайсан Шупашкарти Студентсен хулине "Студентлă хула" теме тытăнмалла. Вырăсла "Студенческий городок" савăн пек тума улталаса, илĕртсе тăрать-çке! Анчах кашниннче —лă аффикспа усă курма май килмест. Тĕрĕссипе, "акционерсен обществи" темелле. Унăн ячĕ пулсан вара ăна çак икĕ сăмах варрине лартмалла. Сăмахран, "акционерсен "Туслăх" обществи".

Тĕрлĕ çĕрте "пăшалтан пенĕ" тесе çырнине вулама пулать халь. Каллех вырăссем хыççăн хăвалаттараççĕ — "выстрелил из ружья". Ман пĕлес килет, ялти чăвашсенчен хăшĕ "пăшалтан" перет-ши? Чăваш "пăшал пенĕ" е "пăшалпа пенĕ" тет. Темиçе тесетке каялла тухнă словарьсенче "пăшалтан" тесе çырман. Юлашки кăларăмсенче вара вырăс чĕлхин витĕмĕ палăрать. "пăшал (тан) пер" тесе хăварнă. Словарь тăвакансем хулара пурăнаççĕ вĕт, çак сăлтава пула вара хула чăвашĕсен чĕлхи литература чĕлхине кĕрсе пуç пулса тăрать. Пирĕн асаттесем "пăшалтан" пемен, халăх сăмахлăхĕнче ун пекки çук. Пĕр сăлтавсăрах хамăр чĕлхене мĕн тума пăсас, авкалас?

Ыйтуллă предложенисем пирки. Пирĕн чĕлхере ыйтăва пĕлтерес тесен ыйту сăмахĕсемпе (ăçта, кам, мĕншĕн...) тата ыйту татăкĕсемпе ( и, -ши, -шим, -им

тата ыттисем те) усӑ кураҫҫӗ. Ҫаксем пӗрремӗш вырӑнта. Чӑнах та, хӑш чухне ҫирӗплетӳ татӑкӗсемпе те усӑ куркалаҫҫӗ. Сӑмахран, "пирӗн пӳрт илемлӗ вӗт?", "тӗрӗс вӗт?". Кунта ҫирӗплетӳ ыйтӑва ҫӗнтерет, ҫавӑнпа та кусене ыйтуллӑ предложенисем теме те йывӑртарах. Чӑннипех ыйтас тесен "пирӗн пӳрт илемлӗ-и?", "тӗрӗс-и?" темелле. Юрӗ, ун ҫинче ытла чарӑнса тӑмасан та юрать.

Вырӑс чӗлхинче пӗрремӗш вырӑнта — сасӑ сӗмӗ (интонаци). Унпа вӗсем питӗ вылятса калаҫаҫҫӗ, хӑйсен туйӑмне палӑртаҫҫӗ. Сакӑн хыҫҫӑн кайса эпир те ҫапларах сырма пусларӑмӑр: "усси пур е ҫук"? Чӑвашла ҫырас пулсан "усси пур-и е ҫук-и?" темелле. Ыйту татӑкне тӗрлӗ ҫӗре лартни те тӗрӗс мар. Пирӗн чӗлхери ыйту татӑкӗ яланах сказуемӑй хыҫҫӑн тӑмалла, урӑхла ҫырни правилӑна пӑсни пулать.

Кӗскелсе пулнӑ хутлӑ сӑмахсене те ӑнланмасӑр ҫырни пур. "Ҫӑрасси уҫҫи", "кӑҫалхи ҫул", "улмуҫҫи йывӑҫҫи"... — ҫаксем пурте тӗрӗс мар. Ун пеккисене тавтологи, е плеоназм, теҫҫӗ. Кунта иккӗмӗш сӑмахӗсем ытлашши, мӗншӗн тесен вӗсене пӗрре калана ӗнтӗ: "ҫӑра уҫҫи", "ку ҫул", "улма йывӑҫҫи". Ҫак сӑмах ҫаврӑнӑшӗсем калаҫу витӗмӗпе кӗскелнӗ те пӗрлешсе кайнӑ. Чӗлхере яланах кӗскелес туртӑм пур, ӑна перекетлӗх саккунӗ теҫҫӗ. Тӗслӗхрен, "анлӑланать", "йышлӑланать" глаголсене "йышланать", "анланать" теме май пур. Хӑш чухне сыракансем ҫакна пӗлмеҫҫӗ пулмалла: сӑмахсене юри тӑсса яраҫҫӗ. Акӑ "хура" сӑмаха илер. Ҫак сӑмаха пусса, палӑртса калана чухне палӑрту аффиксӗпе (-и) усӑ кураҫҫӗ. Вӑл сӑмах вӗҫӗнчи уҫӑ сасӑ вырӑнне кӗрсе ларать те "хури" сӑмах пулса тӑрать. Акӑлчан чӗлхинчи thĕ артикль ӗҫне тӑвать вӑл, пӗр-пӗр япала ҫинчен калаҫу пынине пӗлтерет. Урӑх кунта нимӗн те ытлашшине калаймастӑн. Хӑшӗсем вара тупаҫҫӗ, сӑмаха малалла тӑсса -й интерфонема хушаҫҫӗ те 3 сапат аффиксӗ (-ӗ) лартаҫҫӗ — хурийӗ. Ӑнланмалларах пулчӗ тетӗр-и? Пачах урӑхла — килӗшӳсӗр, килпетсӗр пулса тухрӗ.

Сын ӑҫтанне каланӑ чухне ял е хула ятне пысӑк саспаллирен пуслаcard ҫырни те йӑнӑш. Сӑмахран, эпӗ Ҫӗнӗ Йӗлмелӗнче ҫуралнӑ. Мана вара "Ҫӗнӗ Йӗлмелсем" е "Йӗлмелсем" темелле-и? Кунта калаҫу ял ҫинчен мар, сын синчен пырать. Апла пулсан "ҫӗнйӗлмелсем" е "йӗлмелсем"

темелле. Пичетре вара мĕнле ка́на çырмаççĕ: Чĕмпĕрсем, Патăрьелсем, Елчĕксем... Ку тĕрĕс мар.

Чылай чухне сăмахăн чăн пĕлтерĕшне ăнланмасăр усă кураççĕ. Вара кулăшларах илтĕнет предложени, шухăшĕ улшăнать. "Ӳкерӳçĕ" сăмаха "ӳнерçĕпе" арпаштараççĕ. Пĕрремĕшĕ художника пĕлтерет, иккĕмĕшĕ вара "искусствовед" сăмаха. "Мăнкăмăлланатăп" тата "мăнаçланатăп" сăмахсене те вырăнĕсемпе ылмаштараççĕ. Пĕрремĕшĕ çын кăмăл-туйăмĕн аванах мар енне кăтартать, иккĕмĕшĕпе вара ырă туйăма палăртна чухне ытларах усă кураççĕ. Професси — специальность. Пĕрремĕшĕ пĕтĕмĕшле ĕçпалана ăнлантарать, тепри çак талккăша кĕрекен ятарлă ĕç тунине пĕлтерет. Сăмахран, вĕрентӳçĕ (учитель) — професси, математик (шкулта математика вĕрентекен) — специальность.

Тата тепĕр нумай тĕл пулакан тĕслĕх. Эпир вырăсла "работает врачом" тенине ним шутламасăр (вырăссем евĕрлĕ) "врач пулса ĕçлет" тетпĕр.

Кун пирки пĕр автор: "Пулса ĕçлет" тени çын çак ĕçе тăвать, анчах та хăй вырăнĕнчех мар, кăмăлĕ тулсах кайман пек пулса тухать", — тесе çырнăччĕ. Кунпа килĕшмелле. Ял çынни чăнах та "пулса ĕçлет" тесе калаçмасть. "Врачра ĕçлет", "конюхра ĕçлет", "учительте ĕçлет" тет.

Мăшăрлă сăмахсене - сем аффикс хушса нумайлă хисепре лартни те вырăнлах мар. Вĕсем каппа та пĕтĕмлетӳ пĕлтерĕшлĕ, пĕрлештерекен япала ячĕсем. Каппа та нумайлăха пĕлтереççĕ. Сăмахран, "сĕтел-пукан" тесен калаçу мĕн йĕри-тавра пыни паллă. "Сĕтел-пукансем тени нимĕн те улăштармасть, палăртсарах каламасть. Ял йыш, хаçат-журнал, ача-пăча, кӳршĕ-аршă — кунта нумайлă хисеп аффиксне хушмасан та мĕн пирки сăмах пынине пĕлетпĕр.

Варваризмсем вара — чăваш чĕлхин чи усал тăшманĕсем! Чăвашла кĕскен те уççăн калас вырăнне вырăсла-чăвашла хутăш туса мĕнле кăна каламастпăр: повышат ту, предупреждат ту, расписаться ту, обедат ту, печатат ту, отправлят ту... Вĕçĕ-хĕрри сук. Чăвашла вара ку япаласене ансат калама пулать: ӳстер, асăрхаттар, ала пус, апатлан, пичетле, яр.

Пĕтĕмлетсе калас пулсан тăван чĕлхемерĕн пахалăхĕ

чакса пырать. Апла мар теме илтмен, курман çын çеç пултарĕ. Чăваш чĕлхине пăсаканĕсем вара хамăрах — чăвашсем. Вырăс чĕлхи хыççăн йĕрлесе кайса хамăр йĕре çухататпăр, хамăр ларакан турата майĕпен касса пыратпăр. Темиçе çĕр çултан мĕн пулĕ?

Хамăрăн чĕлхе сумне, тасалăхне тавăрас тесен мĕн тумалла-ха?

Словарьте сăмах нумай пирĕн, унăн пĕчĕк пайĕпе çеç усă куратпăр-ха. Нумайăшĕ тивĕççĕр манăçа тухнă. Савсене çырулăха кĕртмелле. Çĕнни — манăçа тухнă кивви. Ырă тĕслĕхсем пур пирĕн. Сăмахран, 20-30 çул каялла "ӳнер" сăмаха кам пĕлнĕ? Пĕри, çăмăл алăлли, çырулăха кĕртнĕ те янă. Унпа халĕ анлăн усă кураççĕ. Шупашкарта троллейбус чарăнăвĕ те пур — "Ӳнер музейĕ". Кунта пĕр йывăрлăх сиксе тухма пултарать. Аслă ăрури çынсем çĕнĕ сăмахсене кăмăлласах йышăнасшăн мар. Анчах çамрăк çынна пĕрех: "ӳнер" сăмах 50 çул каялла чăваш лексикинче пулнă-и, пулман-и? Вĕсен чĕлхине çирĕп кĕрсе юлать вăл, малалла ытти ăрусенне.

Морфологи мелĕпе те мĕн чухлĕ çĕнĕ сăмах тума пулать. Мĕн чухлĕ аффикс чăваш чĕлхинче! Кунта каллех хирĕçлекенсем тупăнĕç, çапах та шырамалла, тупмалла, лексикăна пуянлатмалла. Тĕслĕхрен, "парус" сăмаха "çилкĕç" тенинче мĕн начарри пур? Чĕлхе саккунĕсене пăсни çук кунта. Апла пулсан пирĕн лексикăна кĕме тивĕçлĕ вăл.

Орфографи правилисене те, Конституцие улăштарнă евĕр, вайпах улăштарса тăни лайăх енне илсе пымасть. Ку пулăм халăхра арпашу-пăтрашу çуратать, тăван чĕлхерен çамрăксене пистерет. Пире супинкке вăрçисем кирлĕ мар. Чĕлхе халăха пĕрлештерсе тăмалла, сапаласа ямалла мар.

Тепĕр япала та пур, вăл кашнинех пырса лекет. Вольтер: "Ют чĕлхене темиçе çул хушшинче вĕренме пулать, тăван чĕлхене вара ĕмĕр тăршшĕпех вĕренмелле", — тенĕ. Урăхла каласан, кашни çын (уйрăмах çыракансене пырса тивет ку) чĕлхе правилисене алла илмелле, ăсталăхне туптамалла, самана таппине туйса тăмалла.

Çаксене пурнăçа кĕртсе пымасан чăваш чĕлхине çывăх вăхăтра Хĕрлĕ кĕнекене кĕртме пулать. Вара: "Сывă пултăр вырăс чĕлхи — чăваш чĕлхине пуянлатаканни!" — темелли çеç юлать. Шӳт мар ку, Çурçĕрте пурăнакан халăхсен чĕлхисем пĕтсе пыни çакна уççăн кăтартса парать. Пĕр

манси поэчĕ (вырăсла сыраканскер) чăваш сыравçине сапла каланă: “Эсир телейлĕ, тăван чĕлхĕрпе сăвă çырма пултаратăр”.

Çапла, хальлĕхе пултаратпăр-ха...

Юлашкинчен çакна калас. Кунта ĕç пуç çапла пулса тухнишĕн вырăс чĕлхи те, чăваш чĕлхи те айăплă мар. Чи айăплисем — эпир, çынсем. Хамăр ирĕк памасан пирĕн чĕлхемĕре никам та тустараймасть. Тулса илеймест. Хамăр айванлăха пула хăртатпăр ăна. Кашни халах хаиен тăван чĕлхине хисеплемелле, куç шăрçине сыхлана пек сыхламалла. Унсăрăн чĕлхе çухалма пултарать, ун хыççăн — халăхĕ те...

Хамăра çутта кăлараканăмăр И. Я. Яковлев сăмахĕсене аса илер-ха. “Эсир хăвăр халăхăрăн чĕлхине тирĕс тамасан халăх кăмăлне пĕтĕмпех хăвăр аллăрта тытса тăрăр”, — тенĕ вăл.

Апла пулсан ют чĕлхесем хыççăн кайса чăваш халăхне тирĕс тăрар мар, халăхăмăра пĕтерес çул çинчен пăрăнар.

Чăваш ĕмĕр-ĕмĕрĕпех чăваш пултăр.

“Канаш”, 19 №, 2000 с., çу, 7.

## Сăмах ирĕклĕхĕн хуралĕнче

— Журналистсем — сăмах ирĕклĕхне халăх патне çитерекенсем, вĕсене “хуçма” питĕ иывар. Политиксене “хуçма” чылай сăмăлтарах. Ирĕклĕх сукки хака ларать. ирĕклĕхсĕр çын хăйне тивĕçлипе хаклаймасть. Журналистсем цензурăна хирĕç кĕрешеççĕ, çаванна эпĕ вĕсен умĕнче пуçа таятăп, — терĕ Чăваш Республикин Президенчĕ Н. Федоров Шупашкар çывăхĕнчи “Волжанка” канупа туризм комплексĕнче иртнĕ Журналистсен союзĕн 15-мĕш съездĕнче.

Чăваш журналисчĕсен съездне тĕрлĕ регионсенчен килнĕ хăнасем хутшăнчĕç: Марий Эл, Мордва, Тутартстан, Пушкăртстан, Чĕмпĕр...

Н. Федоров вара шухăшне тăсса çапла каларĕ:

— Демократиллĕ çĕршывра пурăнатпăр пулин те хальлĕхе пирĕн цензура пур-ха. Çакă пăшăрхантарать. Кивĕ йĕркене таврăнас хăрушлăх палăрма тытăнчĕ. Конституцие улăштармасăрах патшалăх тытăмне улăштарма пикенеççĕ. Çакна хирĕç çирĕп тăмалла, кун валли вара чăн-чăн профессионалсем кирлĕ. Хальлĕхе вара журнали-

стсен ӗҫӗн шайӗ чакрӗ тесен те юрать. Принципсӑр хаҫатсем йышланчӗҫ. Ҫынсен 53 проценчӗ хаҫатсен ӗҫӗпе кӑмӑлсӑр. 16 проценчӗ вара вӗсене шанмасть. Радиопа кӑмӑлсӑррисем — 55 процент, телевиденипе — 5. Тӗрӗссине ҫырасси — гражданла тивӗҫ.

Ҫак шухӑша Раҫҫей Журналистсен союзӗн ертӳҫи И. Яковенко тӑсрӗ:

— Пирӗн 150 ҫинлӗ йыш сапаланса каймарӗ, ҫака пирӗн вӑя кӑтартать. Ҫапах та ҫӑмӑл мар журналистсене. Хӗсӗрлени уссе пырать, массӑллӑ информаци хатӗрӗсене патшалӑх "ҫӑварлӑхласшӑн" хӑтланать. "Медиа-моста" хӗстерни — ӑна кӑтартуллӑн пӗтерес тени. Калашников автомачӗн "цензури" вара пӗлтӗр профессионаллӑ тивӗҫӗсене тунӑ вӑхӑтра 18 журналистӑн пурнӑҫне татрӗ. Пире чиновниксем йӑпӑлтатма вӗрентессӗ. Мӗнле пулсан та пирӗн парӑнмалла мар. Тӗрӗссине сырса халӑх патне ҫитермелле, улталама, "пылчӑкпа варалама" е заказпа илемлетсе ҫырма кирлӗ мар. Сапла тусан ҫеҫ пире ҫынсем шанма пуҫлаҫҫӗ.

Чӑваш Республикин Журналистсен союзӗн ертӳҫи В. Комиссаров хальхи лару-тӑру ҫинче чарӑнса тӑчӗ. Ӑна хаҫатпа вулакан хушшинчи ҫыхӑну вӑйсӑрланни пӑшӑрхантарать. Пресса патшалӑхпа халӑх хушшинчи чӗрӗ нерв пулмалла. Обществӑри сийсен хирӗҫтӑрӑвӗ — йӗркеллӗ пулӑм. Критикӑна тивӗҫлипе йышӑнмалла, кирлӗ пӗтӗмлетӳсем тума тӑрӑшмалла. Журналистсем маччаран илнӗ фактсемпе уса курмалла мар, ун пек хӑтланни сиен курет.

Ытти ҫивӗч ыйтусем те хускатрӗҫ тухса калаҫакансем. Тӗрлӗ шайри пуслӑхсем журналистсене вырӑна хурсах каймаҫҫӗ, вӗсен ыйтӑвӗсене хуравсӑр хӑвараҫҫӗ. Ку вара халӑхпа калаҫа пӗлменни, унпа пӗр чӗлхе тупайманнине пӗлтерет. Ун пек пуҫлӑхсем пирки Н. Федоров Президент ҫапла каларӗ: "Халӑхпа калаҫа пӗлни — пуҫлӑх пуканне йышӑннӑ чухне ҫине тӑрса ыйтмалли виҫе. Ҫакӑ пулмасан — ӗҫрен кӑлармалла. Эпӗ халӑхпа калаҫа пӗлмесен — мана та кӑларӑр. Ют вырӑнта ларни усӑсӑр". Реклама ӗҫӗ ҫинепусӑм тумалла. Ку укҫа ӗҫлесе илмелли лайӑх меслет.

"Калем фронтӗнче" нумай ҫул чыслӑ ӗҫленӗшӗн темиҫе ҫынна хисеплӗ ятсем, грамотӑсем пачӗҫ. Н. Федоров вара И. Яковенко аллинчен "Раҫҫей сӑмахлӑхӗшӗн ҫунакана" медаль илме тивӗслӗ пулчӗ. Ӑна вырӑс поэчӗн А. Пушкинӑн 200 ҫулхи юбилейӗ ячӗпе кӑларнӑ.

— Чăваш Енре влаçпа пресса хушшинчи çыхăну чиперех. Çакăн пек Президентпа, Н. Федоровпа, ĕçлетĕр те — сире ăмсанма пулать, — терĕ Мускавран килнĕ хăна Чăваш Республикин Президенчĕн кăкăрĕ çине медаль çакса ярса. Шупашкар хули.

"Канаш", 8 №, 2001 ç., нарăс, 23.

**Ăслă шкулсенче камсем вĕренеççĕ**
**(пурнăç чăнлăхĕ)**

Чăнах та, камсем? Мĕн каласан та, пурте пултаруллисем тата ăслисем мар. Çапла пĕтĕмлетӳ тума курни-илтни хистет.

Нумаях пулмасть хам лайăх паллакан хĕрарăмпа (ăна Инна тейĕпĕр) курса калаçма тиврĕ. Вăл ывăлне çар училищине вĕренме кĕртме хăтланса пăхнă. Ачи вĕренме кĕреймен, анчах амăшĕ паянхи пурнăçăн йӳçĕ чăнлăхне тутанмаллипех тутаннă. Çакна вăл мана пăшăрханса каласа пачĕ

Ĕç çапла пулса тухнă. Инна ывăлĕ экзаменсене ăнăслă панă. Ун хыççăн — конкурс. Маларах кайса çакна каламалла: ăс-тăн конкурсĕ мар, укçа енчĕкĕсен конкурсĕ. Хайхи ку хĕрарăм вĕренме илекен комиссийĕн членĕпе полковникпа курса калаçать. Ачин курсант пулма шанăçĕ пурри-çуккине пĕлме тăрăшать.

Полковник Иннăна услови лартать: икĕ талăк хушшинче 30 пин тенкĕ тупса килмелле. Ахаль çыннăн çакăн чухлĕ укçа пĕр харăс ăçтан тупмалла? Иннăн та савах. Хĕрарăм полковника ăнлантарма пикенет: "Ман ача ют чĕлхе пĕлет, компьютерпа ĕçлет, лайăх ӳкерет, ташлать, кĕнеке нумай вулать. Тем пекех çар çынни пуласшăн. Нивушлĕ сире пултаруллă йĕкĕтсем кирлĕ мар-и?"

Пĕлетĕр-и ăна полковник мĕнле хуравланине?

— Пултаруллă ачасем пулмаççĕ, укса сахал пулать: тет вăл.

Çав вăхăтрах çак училищĕне пĕр майор ачи вĕренме кĕрет. Физкультурăпа экзамен вăл çапла парать. 3 сухрăма чупнă чух вăл, мăнтăрскер, пăркаланайманскер, чи кая юлать. Ăна машинăпа хăвса çитеççĕ те малалла лартса каяççĕ, финиша çитеспе антарса хăвараççĕ. Лешĕ вара ыттисемпе пĕрлех чупса çитет. 100 метра çак мемме вырăнне урăххи чупать, лайăх кăтарту тăвать. Турник синче йăтăннă чух ку ача патне курсанта тăратассĕ. Майор ачи турник синче

çакăнса тăрать (ăстан йăтăнайтăр ĕнтĕ вăл?) — курсант "пĕрре", "иккĕ", "виççĕ..." тесе шутласа тăрать. Миçене çитиччен сакăнса тăраять — çавăн чухлĕ "йăтăннă" пулать.

Ытти турниксем патĕнче шутласа тăракансем — офицерсем. Паллах, майор ачине курсант патне яраççĕ. Кĕскен каласан, ĕç малтан туса хунă сценарий тăрăх пырать. Çапла вара çак мемме курсант пулса тăрать. Çак меслетпех 4-5 çултан офицер пулса тăрĕ (сценарий пур вĕт!). Анчах мĕн усă парĕ-ши вăл çĕршыва, пире мĕнле сыхлĕ-ши? Укçатенкĕ вылявĕ ăшне путнă, ултава хăнăхнă ачаран лайăх офицер пуласса эпĕ шансах каймастăп. Харам пыр йăлине хăнăхсан пăрахма йывăр.

Инна ывăлĕ тепĕр çул çак училищĕнех вĕренме кĕме ĕмĕтленет. Кăсал вара ун вырăнĕнче "майор ачи" вĕренет...

"Канаш", 38№, 2001 ç., авăн, 21.

### Патуел — вырăсланакан чăваш ялĕ

Патуел чăваш ялĕ, анчах кунта чăвашла калаçнине илтме сăмăл мар. Ку ял сыннисем "вырăсланаççĕ". Вăтам шкулта та ачасем пĕр-пĕринпе вырăсла калаçаççĕ. Чăвашла уроксем те, факультативсем те çук.

— Шкулта 229 ача вĕренет. Çурри ытла Патуелĕнчен. Унсăр пуçне Молвинăран — 72, Мочилки ятлă çар сыннисен поселокĕнчен 23 ачана кашни кун автобус турттарать. Чăвашла вĕрентмешкĕн специалист çук. Ачасен ашшĕамăшĕсем те ку ĕçе ырласах каймаççĕ. Мĕншĕн тесен хăйсем те тăван чĕлхене япăх пĕлеççĕ. Ман шутпа, ку ĕçе пĕр ăру маларах тытăннă пулсан... Халĕ чăваш чĕлхи никама та интересленмест. Ял та тĕрлĕ наци çыннисемпе ӳссе пырать. Ачасем пĕчĕкренех вырăсла калаçма хăнăхаççĕ, — каласа парать шкул директорĕ Нина Николаевна Чернова.

Юрĕ тейĕпĕр. Анчах кунта ăнланмалла марри те чылай. Нивушлĕ ялти чăвашсем пурте пĕр саслă пулса тăван чĕлхене вĕрентес ĕçе хирĕç тăраççĕ-ши? Специалист тупма та питех йывăр-ши? Ку шкул пуçлăхĕсем хăйсем ытлашши тиев лавне туртас килменни çеç мар-и? РОНО умне ку ыйтăва çирĕп лартсан ĕç вырăнтан тапранмалла пек туйăнать.

Ачасем чăвашла пĕлмеççĕ тени те шута илмелли сăлтавах мар пулĕ. Вĕсем акăлчанла та пĕлмеççĕ вĕт — пĕрремĕш класран тытăнсах факультативсем пур. Апла пул-

сан ĕç пирĕн кăмăл-туйăмран, ĕмĕтсенчен, тĕллевсенчен çеç килет.

Патуел шкулĕнче ачасене чăвашла вĕрентме тĕллев лартасси паянхи кунччен те паллă мар.

Тереньга районĕ.
"Канаш", 8 №, 1997 с., нарăс 22.

**Ку ялăн яче çухална.**
**Халĕ чĕлхи пĕтсе пырать**

Ирçе Шмалак ялĕ Пенза облаçĕн чиккинче вырнаснă. 170 килĕре 450 çын пурăнать. 60 проценчĕ ирçе, ытти чăваш.

Яла çырма икĕ пая уйăрать. Кунта Илим шывĕ пуçланать, пĕрремĕш çăл çакăнтан тухать. 46 çул каялла çырман икĕ енĕпе икĕ ял пулнă: Ирсе Шмалак тата Чулла Çăл (Каменный Ключ). Анчах çӳлти пуçлăхсен йышăнăвĕпе 1951 çулта чăваш ялĕ ятне çухатнă, вăл тепĕр ял территорийĕ пулса тăнă.

Халĕ ял "Молвинский" ял хуçалăх производство кооперативне кĕрет. Кунта пурăнакансем каланă тăрăх, сур ял хутăш çемьесем: чăваш каччисем ирçе хĕрĕсене качча илеççĕ, ирçе каччисем те парăма юлмаççĕ.

Шкулта вырăсла çеç вĕренеççĕ, урамра та вырăсла калаçаççĕ. Ашшĕ-амăшĕсем те килти ачисене тăван чĕлхепе калаçтармаççĕ. Ачасем тăван чĕлхене ашшĕ-амăшĕсем хăйсем хушшинче (иккĕшĕ те пĕр наци çынни пулсан) калаçнă чухне çеç илтме пултараççĕ.

— Вĕсем чăвашла ăнланаççĕ, — теççĕ ашшĕ-амăшĕсем ачисем çинчен.

Тавлашмастăп, ĕненетĕп. Ăнланаççĕ пулĕ. Анчах та ку ачасем кайран хăйсен ачисене чăвашла вĕрентейĕç-ши? Темĕн, иккĕленмелле. Çын хăй пĕлмен япалана ыттисене вĕрентеймĕ.

Ялти Культура çуртĕнче художество пултарулăх ушкăнĕ пур, унта тулли мар вăтам шкулти учительсем хутшăнаççĕ. Чăвашла юрлакансем Н. Ф. Волковпа В. Г. Васильева çеç. Темиçе çул каялла "Канаш" хаçата 13 çын çырăнса илнĕ. Халĕ пирĕн хаçата кам вуласа тăнине никам та калаймарĕ. И. А. Тихонов çеç Шупашкарта тухакан пĕр журнал илсе тăрать. Ялти библиотекăра кăштах чăвашла кĕнекесем пур. Çакăнпа чăваш культурине аталантарас ĕç пĕтрĕ те.

Ирҫе Шмалакра пулнӑ хыҫҫӑн ҫакӑн пек пӗтӗмлетӳ тума пулать: тепӗр 40-50 ҫултан кунта чӑвашла калаҫакан ҫынюлмасса та пултарать. Сӑлтавӗ — халӗ ачасене тӑван чӗлхене вӗрентменни. Ҫапла куҫ умӗнче пӗлсе тӑрсах чылай чӑваш ялӗ ҫухалӗ-ши? Ялтан тухса кайнӑ чух ҫак ыйту пуса пӑраларӗ, мана канӑҫ памарӗ. Пуҫа тӗксӗм шухӑшсем карса илчӗс. Мӗскер-тӗр хаклӑ япала ҫухатнӑ пек туйрӑм.

Павловка районӗ.

"Канаш", 12 №, 1997 ҫ., пуш, 22.

### "Вирялсем" такмака мӗнле выляҫҫӗ-ши?"

Юлашки вӑхӑтра чӑваш эстради ҫинчен илтсенех чӗрене йӗппе чикнӗ пек туйӑнать. Ҫавӑнпа та Н. Смирнован "Каллех чӑваш эстрада пирки" статйине ("Хыпар" хаҫат, 2001 ҫул, 195№) вуласан хам шухӑша пӗлтермесӗр тӑма вӑй ҫитерейменрӗм.

Чӑнах та, мӗн чухлӗ ҫӳп-ҫап, пылчӑк илсе кӗреҫҫӗ чӑваш чӗлхине, тӑван культурӑна ҫак виҫӗ куна килнӗ "ҫӑлтӑрсем". Сӑмахӗсене мӗнле чӗлхепе ҫырни — паллӑ мар. Ятарлӑ тӑлмач кирлӗ — чӑвашларан чӑвашла куҫарма. Кӗвви шӑй-шай, сасси хӑй-хай. Упӑте пек, питне-куҫне пӗркелет, йӑлтти-ялтти сиккелет, унӑн-кунӑн хӑлаҫланать ку "сӑлтӑр". Ҫак самантрах пукан ҫинчен тӑрса тухса каяс килет. Ун вырӑнне вара эпир алӑ ҫупатпӑр. Ҫакӑ артиста вырӑнсӑр мухтанни пулать ҫке. Кайран, паллах, вӑл ҫакӑншӑн ӑнкару шайӗпе пире ачапа танлаштарать.

Кунта эпӗ те, Н. Смирнова пекех, пӗтӗм артистсене пӗр калӑпа лартасшӑн мар. Янӑравлӑ та илемлӗ, уҫӑ та ҫепӗҫ сасӑллисем пур пирӗн. Вӗсем — пирӗн мӑнаслӑхӑмӑр: хӑйсене те, итлекен-куракана та хисеплеҫҫӗ. Ҫавӑнпа ӑсталӑхӗ те ҫӳллӗ шайра.

Пӗррехинче эпӗ "Хыпарта" чӑваш эстради пирки сӑмах хускатнӑччӗ. Сӑввисене диалект сӑмахӗсемпе, вырӑсла шухӑшласа чӑваш сӑмахӗсемпе ҫыраҫҫӗ. Вӗсене тӗрӗслекен те, йӗркене кӗртекен те ҫук. Акӑ чи юлашкинчен илтнӗ "шедевр". Пӗр ҫамрӑк радиопа ҫапла юрларӗ: "Сан ҫинчен тунсӑхлатӑп". Ҫапла ӑҫти чӑвашсем калаҫҫӗ-ши, ӑҫтан тупнӑ ку сӑмахсене? Чӑвашлах каламалла пулсан — "саншӑн тунсӑхлатӑп" темелле-ха. Кунта вара вырӑсларан "скучаю по тебе" тенине ҫавӑн пек тӳррӗн куҫарнӑ-и ӗнтӗ?.. Калама та пӗлес ҫук. Халӗ ҫакна пӗтӗм чӑваш халӑхӗ итлет.

Ачасем, çамрăксем вара çак сăмахсене, çыракан тата юрлакан çынсене тĕслĕх вырăнне хума пултарассĕ. Вĕсемшĕн çак сăмах çаврăнăшĕ норма пулса юлма пултарать. Çакă хăрушă. Çакăн пек "шедеврсене" вĕçĕ-хĕррисĕр тăсма пулать. Ку ăшлăхĕ (содержанийĕ) пулчĕ-ха.

Кăштах форми çинчен каласăпăр. Каллех юлашки тĕслĕхсем. Шупашкарти пасарта аудиокассета сутакан киоск умĕнче тăратăп, футляр çийĕсене вулатăп. "Эстради юррисем пуххи" (Чăваш ташши, 7-мĕш альбом), "Чун чĕререн" (Катя Петрова), "Сан çуралнă кун ятпа" (И. Шинжаев), "Мĕншĕн ши" (И. Шинжаев)... Пĕрремĕш тĕслĕхĕнче "юррисем" вырăнне "юррисен" кирлĕ, иккĕмĕшĕнче — дефис çук, виççĕмĕшĕнче — "Сан çуралнă куну ячĕпе" темелле (ку та тĕрĕсех мар-ха, чăвашла çуралнă кун мар, менелник теççĕ), тăваттăмĕшĕнче — каллех дефис çук. Этюк Витти кассети çинче вара "Вирял, мал ень, тури, анатри чăваш такмакĕсене вылять" тенĕ. Чăн-чăн ребус, пуçватмăш! Вирьялпа (çапла çырмалла-ха ăна, çемçелĕх паллипе) тури чăвашсем пĕр мар ши вара? Пĕр мар пулсан вирьялсем ăçта пурăнаççĕ, турисем ăçта пурăнаççĕ? "Ен" сăмах хыççăн çемçелĕх палли лартмалла мар. Ситменнине тата такмакĕсене каламасть — "вылять". Вырăссем чăнах та "играет на гармошке" теççĕ. Анчах чăвашсем (чăннисем, кассета çине çыракансем мар) "купăс калать" теççĕ. Такмака та [illegible]

Куна çыраканĕ шкулта чăваш чĕлхипе "2" паллăсăр пуçне ним те илсе курман пулĕ. Çапах та темиçе пин тиражпа тухакан япала çине "хăйĕн чĕлхипе" (ку чăваш чĕлхинчен темиçе çухрăмра тăрать, юнашар та мар) çырма хăю çитерет.

Сăмахăма Н. Смирнова шухăшĕпех вĕçлесшĕн. Сак мăшкăла чарасчĕ. Кунта власть хăйĕн сăмахне çирĕппен каламалла. Чăваш Республикин культурăпа национальноçсен ĕçĕсен министерстви ку япалана хăй çине илмелле. Сăмах куписенчен юрă туса çынсен хăлхисене юхтарас марччĕ, сцена çинчен енне-енне çуп-çап сапалас марччĕ. Кашни сăвă ăста çынсен алли витĕр тухсан, кассета çине çырнисене чĕлхене лайăх пĕлекен сын тĕрĕслесе кăларсан малашне пире чăваш эстради савăнтарĕ сес. Çакăн пек пăшăрханса, тарăхса çырма та сăлтав юлмĕ.

"Канаш", №48, 2001 с., чук. 30

**Чăвашсен “Кĕмĕл çĕрĕ” пур**

Хамăрăн историе тĕпчесси малалла пырать. Çулсерен çĕнĕ фактсем тупăнаççĕ, çак ыйтупа кăсăкланакан çынсен йышĕ ÿсет. Паллă ĕнтĕ, пирĕн несĕлсем Атăл тăрăхĕнче вăтам ĕмĕрсенчен пуçласах пурăннă. Кунта вĕсем илемлĕ хуласем туса лартнă, çĕр çинче ĕçленĕ, пуянланса пынă. Анчах ку тăшмансен кăмăлне кайман. Малтан тутар-монголсем, каярах вырăс князĕсен çарĕсем Пăлхар çĕршывне çаратнă, аркатнă, çунтарнă. Халĕ хăш-пĕр хулан йĕрĕ те юлман, ăçтарах пулни çеç паллă.

Чăвашсемшĕн хаклă, паллă вырăнсене çитсе куракансем çулсерен ÿсcе пыраççĕ. Çурла уйăхĕн 6-мĕшĕнче Шупашкар хулинчен çак тĕллевпе экпедици çула тухнă. Çулçÿреве чăвашсен культурăпа обществăлла центрĕ йĕркеленĕ. Чи пирвай автобус Пăлхар патшалăхĕ вăхăтĕнчи хулана — Çĕрпĕве — чарăннă. Хальхи хула айккинче чăваш художникĕ тата скульпторĕ А. Розов тунă палăк пур. Хăнасем çакăнта çитсе курнă, хула кун-çулĕпе паллашнă. Комсомольски районĕнчи Виçпÿрт ялĕ те — паллă вырăн. Кунта иртнĕ ĕмĕрте чăвашсен пĕрремĕш хĕрарăм поэчĕ Эмине çуралнă. Сак ялти чăвашсем халь те тĕне кĕмен, несĕлсен авалхи йăлисене тытса пыраççĕ. Çулçÿревçĕсем поэт çуралнă çурт вырăнĕнче пулнă, çăлкуç патне çитнĕ. Эмине çамрăклах вилнĕ, ăна вăрманти уçланкăра пытарнă. Тепĕр чарăну Елчĕк районĕнчи Таяпа хулинче. Вăл 10-14-мĕш ĕмĕрсенче пулнă. Хÿмисем халь те упранса юлнă, хула хапхи ăçта пулни те паллă. Патăрьел районĕнчи Тикеш хули 10-12 ĕмĕрсенче ларнă. Кунта кĕлĕ вырăнĕ те паллă. Археологсем ут çарне хирĕç кĕрешмелли шĕвĕр вĕçлĕ тимĕр хатĕрсем, сухал турамалли турасем тупнă. Ку крепоçа виçĕ хутлă хÿме, виçĕ канав сыхланă. Шăмăршă районĕнчи Шалти Тăрăнта чăвашсен хĕрарăм пророкĕ Епрахи 16-мĕш ĕмĕрте пурăннă. Унăн вил тăпри те çакăнта. Автобус Карапай Шăмăршă ялне те чарăнса илнĕ.

Кас еннелле çулçÿревçĕсем Ульяновск хулине çитрĕç. Пирĕн хаçат редакцинче ăшă тĕлпулу иртрĕ. Нумайăшĕ пĕрпĕрне пирвайхи хут курчĕç. Çулçÿревçĕсем хушшинче паллă сынсем: писательсем, композиторсем, артистсем, журналистсем, историксем. Вĕсем хушшинче пысăк хăна — тĕрĕк тĕнчинчи паллă обществăлла деятель, Азербайджанри халăхсен демократи партийĕн ертÿçи Рафик Турабхоноглы Сабах.

Пирĕн хулара çĕр каçнă хыççăн хăнасем ирех Чĕмпĕр чăваш шкулĕн комплексне çитсе курчĕç, И. Я. Яковлев музейĕпе паллашрĕç, чиркĕве кĕрсе çурта çутрĕç.

Малалла çулçӳревçĕсем çумне манăн та, хасат корреспонденчĕн, хутшăнма тӳрĕ килчĕ.

Маршрутăн çитес пункчĕ — Пăлхар хули. Кунта музейра экскурси иртрĕ. Çаплах хула ишĕлчĕкĕсене курса сурерĕмĕр. Палла ĕнте, вăл Атăлçи Пăлхар патшалăхĕн тĕп хули пулнă. Ăна Пату хан 1236 çулта сĕмĕрсе тăкнă.

Кĕçех Пӳлере те çитрĕмĕр. Вăл 12-13-мĕш ĕмĕрсенче Европăра чи пысăк тата илемлĕ хуласенчен пĕри шутланнă. вăл икĕ хутчен Атăлçи Пăлхар патшалăхĕн тĕп хули пулнă. Унта 15 пусă вырăнĕ паллă. Çакăнти музее кĕтĕмĕр, заведующийĕ Л. Н. Сальникова хулан кун-сулĕпе тĕплĕн паллаштарчĕ. Авалхи хулан ишĕлчĕкĕсене курса сурерĕмĕр. Хăшĕсем сувенир вырăнне сакăр ĕмĕр каялла хĕртсе тунă чӳлмек катăкĕсене илчĕç. Хулана сыхлакан валсем халĕ те чиперех. Пӳлере те 1236 çулхине çунтарнă. Ылтăнпик сакăнта пуçне хунă. Çăмăл пулман тутар-монголсен сарне ку хулана илме. Пирĕннесĕлсем 45 кун хушши вĕсене хирĕс сапăснă. анчах вăйсем пĕр пек пулман çав. Сыхланакансем 25 пин çын пулнă, тапăнакансем — 250 пине яхăн.

Маршрут çулĕ малалла Атăл тăрăх сурсĕрелле тăсăлчĕ. Алексеевски ялĕнчен тухсан Кама юхан шывĕ урлă паромпа каçрăмăр. Тутарстан Республикин тĕп хулине çул тытрăмăр.

Хусанта Писательсен çуртне кĕтĕмĕр. Унта пире ытарласа Тутарстан Республикин Писателĕсен союзĕн председателĕ Р. Мухамедиев, тутарсен паллă çыравçисем Амирхан Еники, Кави Латыпов, И. Юзеев, Мингалиев, М. Маликова, журналистсем, обществăлла деятельсем кĕтсе илчĕç. Кӳршĕри туссем савăнăçлă хыпар пĕлтерчĕç. Делегаци ертуçине, Чăваш халăх писательне Юхма Мишшине, "Тутарстан Республикин тава тивĕçлĕ культура ĕсченĕ" ятăн дипломне пачĕç. Çакăнтах ĕçлĕ калаçу иртрĕ. Чăвашла тата тутарла хаçатсем Раççей патшалăх шайĕнче кăларма тытăнас шухăш пур. Çак ĕçре вырăс мар халăхсем хастартарах ĕçлемелле, пĕр-пĕрне пулăшса пымалла. Юлашкинчен М. Ильичева-Шуракăш композитор тата юрăçă аккордеонпа каласа чăваш юррисене шăрантарчĕ. Наци библиотекине те кĕрсетухрăмăр. Тутарстан Республикинчи чăвашсем валли 1 миллион тенкĕлĕх чăвашла кĕнекесем парса хăвартăмăр.

Чăваш Республикин тĕп хулине Марий Эл Республикинчи Волжск хули урлă таврăнтăмăр, Çĕнĕ Шупашкар витĕр тухрăмăр. Виçĕ кун хушшинче автобус спидометрĕ синче 900 çухрăма яхăн çаврăнса тухрĕ.

— Çакăн пек çулçӳреве пĕрремĕш хут ирттертĕмĕр, маршрута "Кĕмĕл çĕрĕ" тесе ят патăмăр, — тет ЧОКЦ председателĕ, çулçӳреве йĕркелекенĕ Юхма Мишши. — Вырăссен "Ылтăн çĕрĕ" пур, авалхи чăваш чи паха металĕ вара кĕмĕл пулнă. Хамăр шухăшпа малашне çулçӳреве Чăваш Республикин тата Раççей патшалăхĕн турист маршручĕсенекĕртесшĕн. Кăçал Сăвар хули айккине юлчĕха, малашне унта та, Хусан хĕрринчи авалхи чăваш хулинче те чарăнмасăр иртсе каймăпăр. Çак пысăк ĕç спонсорсемсĕр пулмастчĕ ĕнтĕ. Шупашкарти "Нектар" предприяти ертӳçи Н. А. Столяров çул синчи тăкаксене хай çине илчĕ, унсăрăн çула тухаймастăмăрччĕ. Автобусне вара пĕр автотранспорт предприятийĕн ертӳçи Я. П. Литкин уйăрса пачĕ. Малашне те вĕсем хамăр культурăшăн сăваплă ĕç тăвасса шанатпăр. Эпир пуçарнă турист маршручĕпе вара çултан-сул нумайрах чăваш çӳреме пуçлĕ тетпĕр.

"Канаш", 1996 ç., чӳк уйăхĕ, 16.

**Чăнлăх патне — чăтăмлăх урлă...**

Юрие сын вĕлернĕ тесе айăпласçĕ.

Вăл виçĕ уйăх тĕрмере ларать, виçĕ суд урла тухать. Икĕ çул федераллă розыскран тарса çӳрет.

Тăватă çул çурăран чăнлăх çиеле тухать, вăл хăй çине йăвантаракан айăпа сирсе ярать.

Пурнăç матрос тельняшки пекех: хура йĕр хыççăн шурри пырать, шурри хыççăн — хури... Уйрăмлăхĕ йĕрсен сарлакăшĕнче çеç, хăш чухне хура йĕр ытла та сарлакаланса каять. Унтан тапаланса тухма мĕн чухлĕ вăй, чăтăмлăх кирлĕ...

Чăвашкасси каччи Юрий Тимофеев та çакăн пек тарăн "шурлăха" кĕрсе ӳкессе шутламан — пурнăç кустăрми чиперех куçса пынă. Çара кайса килсен Алапукăри (Тутарстан Республики) милици шкулне вĕренме кĕнĕ, 1987 çулта ăна ăнăçлă пĕтерсе тухнă. Ишеевкăри милици уйрăмне угрозыска ĕçе вырнаçнă. Çемье сăлтавĕсене пула (мăшăрĕ медицина институтĕнче вĕреннĕ пирки) икĕ çула Самар

хулине куçса кайма тӳр килнĕ. Юрий унта та милицирех ĕçленĕ.

1991 çулта Тимофеевсем хамăр облаçа таврăнассĕ. Ульяновск районĕнчи Çĕнĕ Вĕрен ялĕнче пурăнма пуçлаççĕ. Çемье пуçлăхĕ каллех Ишеевкăри милици уйрăмне вырнаçать.

Ю. Тимофеевшăн пурнăçа пуçхĕрлĕ савăрса хуракан кун 1991 çулхи çĕртме уйăхĕн 28-мĕшĕ. Çак кун вăл районти пĕр яла кайса килме задани илет. Унта пĕр хулиган хĕрарăма пусмарлама тытăннă иккен. Юрий участок милиционерĕпе А. Мигуновпа çула тухать.

Яла çитсен заявлени паракан хĕрарăм килне пырса кĕреççĕ. Пӳртре хĕрарăм патне киле кĕнĕ Л. (сакăр хут судпа айăпланнăскер) тата К. (пилĕк хут тĕрмере пулнăскер) эрех ĕçсе лараççĕ. Кил хуçи хĕрарăмĕ çĕрле иккĕмĕш хутри балконран çарамас тухса тарнăранпа таврăнман-ха. Унăн ачисем те хăранипе килне кĕреймеççĕ. Милиционерсем Л. гражданина килне кайса çывăрма хушаççĕ. Анчах ӳсĕрсем чăркăшланма пуçлаççĕ, эрехе ĕçсе ямасăр ниста та каймастпăр теççĕ, намăс сăмахсемпе вăрçăнаççĕ. Юрий Л. хушаматлине аллинчен тытса çавăтса тухма пикенет. Лешĕ турткаланма тытăнать, хирĕç тăрать. Сапла кĕрмĕшсе иккĕшĕ те урайне йăванса каяççĕ. Сав вăхăтра Юрий патне К. чупса пырать, хыçалтан тытса пăвма пуслать. саннине сурса ярать. Кĕрешӳре иккĕр милиционер те хутшăнать. Вăл пулăшнипе Л. хушаматлине урама илсе тухаççĕ. машина ăшне кĕртсе лартаççĕ. К. вара хысалтан тухса Юрие намăс сăмахсемпе кӳрентерме пуслать, сапса яма хăтланать. Тимофеев ăна та машина ăшне ларма хушать анчах лешĕ тĕрткелешме пăхать. Юрийĕн вара ăна лăплантарма милиционерсен ятарлă резинапатакĕпе усă курма тивет. Ăна вăл хырăмĕнчен çапать. Кунта саккуна хирĕçлени çук, мĕншĕн тесен милиционерсен задани вăхăтĕнче çак патакпа усă курма право пур. Сынна пуçран е ĕнсерен çеç çапма юрамасть.

Шăв-шава пула кунта ял çыннисем те пуçтаранаççĕ, милиционерсемпе ӳсĕрсем кĕрмĕшнине кураççĕ (кайран вĕсенчен пĕри Юрий К. гражданина патакпа ĕнсерен сапнă тесе ĕнентерме пăхать — акă Тимофеева айăпланин пуçламăшĕ).

Çапла Л. тата К. гражданинсене Ишеевкăри милици

уйрамне илсе каяççĕ. Судья вĕсене иккĕшне те хăйсене хулиганла тыткаланăшăн çичшер талăка арестлет.

Тăвата талăкран (утă уйăхĕн 2-мĕшĕнче) К. камерăра вилсе каять. Следстви вăраха тăсăлать. Унта Тимофеев аслă лейтенанта "К. гражданина ĕнсерен патакпа çапса амантнă, лешĕ сав сăлтавпа вилнĕ" тесе айăплама пăхаççĕ. 1992 çулхи çурла уйăхĕн 24-мĕшĕнче Ульяновск хулинчи Ленин районĕн сучĕ Ю. Тимофеева айапсăр тесе йышăнать, ирĕке кăларать.

Сывлăш саварса яма пулать пек. Пурнăçри хура йĕр петрĕ. Анчах çук... Ку пуçламăш кăна иккен-ха. Терт-нуша — малта...

Ульяновск область прокурорĕн кассацийĕ тăрăх область уголовнăй коллегийĕ суд йышăнăвне пăрахăçлать, çĕнĕ следстви тума йышăнать. Ю. Тимофеева СИЗОна (тĕрмене) лартаççĕ.

1993 çул. Нарăсăн 24-мĕшĕ. Каллех Ленин районĕн сучĕ. Хальхинче Ю. Тимофеева виçĕ статьяпа айăпласа 5 çула тĕрмене хупма йышăнаççĕ. Çийĕнчен вилекенĕн семйине 5 пин укса тӳлемелле. Анчах та пĕрăнланмалла мар япала пулать. Сакăн пек пысăк наказани панă çынна суд залĕнчен вăхатлăха кăларса яраççĕ. Ку судья хăйĕн решенийĕшĕн иккĕленнине пĕлтерет...

— Хам айăплă маррине питĕ лайăх пĕлеттĕм. Анчах мĕнле кăтартса памалла? Мĕнле йывăр пулсан та чăнлăх шырама пуçларăм. Висĕ уйăх камерăра ларса нумай шутлама тӳрĕ килчĕ. Мĕн пулать те мĕн килет — тĕрĕсмарлăхпа кĕрешме тытăнтăм, — аса илет Юрий Афанасьевич.

Вал пĕр чарăнми тĕрлĕ инстанци алăкĕсене уçа-уçа кĕрет. Раççей Федерацин Верховнăй Сучĕн председателĕн çумĕ патнех çитет — усăсăр. Республика судпа медицина экспертизин центрĕн Шупашкарти филиалне пырса кĕрет, документĕсене кăтартать. Ултă специалистран тăракан альтернативлă комитет вĕсене тĕплĕн тĕрĕслет те çапла йышăнать: К. ĕнси çинчи кăвакарнă вырăн виличчен темиçе сехет малтан çеç пулма пултарнă, вилĕмĕн сăлтавĕ те вăл мар — гомфраги панкреатичĕ. Урăхларах каласан, темиçе улшăну пулнă. Камерăра вара тăкăскă сывлăш, 30 градуса яхăн ăшă...

Тĕрĕслĕх шыранă вăхăтра Юрие федераллă розыска параççĕ, икĕ çул çурă шыраççĕ. Çавăнпа унăн тарса çӳремелле пулнă.

— Ун чухне эпĕ ăста çӳрени, пурăнни вăрттăнлăх пулса юлтăр. Халĕ вăл кирлех мар. Темле те пулнă: укçа çук, выçă та çӳреттĕм... Кашни чăштăртатнă сасăран шикленеттĕм: акă мана тытма килчĕç! Ун пек пурнăç — пурнăç мар. Çапах та айăпсăр тĕрмене кĕрсе ларас килместчĕ, — каласа парать Ю. Тимофеев.

Çĕнĕ экспертиза кăтартăвĕсене тĕпе хурса Рассей Федерацин Верховнăй Сучĕн уголовнаи ĕçсемпе ĕçлекен суд коллегийĕ Ленин районĕн сучĕн решенине пăрахăçлать. Ку ĕçе, çĕнĕрен тĕпчев туса, урăх суд составĕпе пăхса тухма хушать.

1995 çулхи раштавăн 25-мĕшĕнче ĕçе Ленин район судĕнче тепĕр хут пăхсатухаççĕ. Хальхи приговор: "Тимофеева айăпсăр тесе йышăнмалла..."

Ку статьяна çырас умĕн Тимофеевăн ĕçне пуçламăшĕнчен тытăнса вĕçне çитичченех вуласа тухма тӳрĕ килчĕ. Унта çакна асăрхарăм: тĕрмене хупмалла гунă судра "ăпăр-тапăрпа" вакланса тăман. Ку суд ĕçĕ мана пысăк блок сенчен васкаса çурт купаланине аса илтерчĕ. Лап-лап! хурса пынă та — хатĕр те. Шалта, хушшинче мĕн юлать — никам пуçне те ыраттармасть. Çын шăпи нимĕн те мар.

Юлашки суд вара хăйĕн ĕнентерекен шухăшĕсене, доказательствисене хуллен, пĕрчĕн-пĕрчĕн ăнлантарса панă. Юрий çине ӳкнĕ айăпсене профессионал аллипе сирсе янă. Ку суд витĕр куранакан, печекçĕ кĕленче татакĕсенчен çурт купаланине аса илтерчĕ. Веçех куç умĕнче, витер куранать, нимĕн те тиркешейместĕн. Акă вăл çын хăйĕн ĕçне тивĕçлипе таса чунпа туни.

Эпĕ никам майлă пулса та çырмастăп. Айăплă сынна наказани памаллах, анчах çын шăпине сапла татса пама хăтланни чуна çӳçентерет. Мĕншĕн тесен ыран Юрий вырăнĕнче пиртен кашни пулма пултарать.

— Паллах, ку ĕçре тасамарлăх нумай. Хăшĕсем хăйсен мундир чысне сыхлас тесе çынна шурлăха путарасшăн пулчĕç. "Телефон прави" те пирĕн пурнăçра пĕтмен-ха. Çакна хам çинче туйрăм. Çапах та чăнлăх çиеле тухрĕ. Хам та алă усса лармарăм, мĕн вĕçне çитиччен кĕрешрĕм. Йывăрлăхсене сăмахпа каласа пама та çук. Чун кутнĕ вăхăтра чиркĕве кĕрсе тухаттăмччĕ. Турăран пулăшу ыйтаттăмччĕ. Ун хыççăн чун кăштах канатчĕ, — йывăрпа аса илет иртнĕ тапхăра Юрий Афанасьевич.

Икĕ çул çурă ĕçлемесĕр çӳренĕшĕн Ю. Тимофеев гражданла иск пуçарать, ăна выляса илет. Кăçал çав укçана ăна аллине параççĕ. Каялла хăйĕн ĕçне йышăнмалла тăваççĕ. Чăнах та, вăл унта нумай ĕçлемест, Ульяновскри Чукун çул районĕнчи милици уйрăмне куçать.

Пурнăçри хура йĕр хыçалта, сĕм пĕлĕтсем сирĕлнĕ. Халĕ Юрийĕн веçех йĕркеллĕ: юратнă ĕçĕ, килĕшӳллĕ çемье, никамран тармалла та мар... Иртнине аса илес те килмест.

Сын ĕмĕтне пурăнать. Халĕ Тимофеев капитан Шупашкарти МВД юридици институтĕнче 3-мĕш курсра вĕренет.

"Тĕрĕсмарлăх университетне" пĕтернĕ ĕнтĕ вăл.

"Канаш", 43 №, 1998 ç., юпа, 24.

## Наци пуласлăхĕ — вĕренӳре

Тăван халăхăмăра сутта кăларакан И. Я. Яковлев Чĕмпĕр чăваш шкулне уçни кăçал 130 çул çитрĕ. Ку вĕренӳ çурчĕ пирĕн халăхшăн пысăк пĕлтерĕшлĕ пулни каламасăрах паллă. Кĕскен каласан, кунта чăваш халăх культури тĕвĕленсе аталаннă, пĕрремĕш утăмсем тунă.

Юбилее халалласа шкул комплексĕнче анлă семинар иртрĕ. Унта Чăваш Республикинчен килнĕ пысăк делегаци (26 çын) хутшăнчĕ. Вĕсем хушшинче паллă ăсчахсемпе тĕпчевçĕсем, профессорсем, журналистсем.

Чĕмпĕр чăваш шкулĕн пĕр корпусĕнче хăнасене культура училищинче вĕренекен чăваш хĕрĕсем сăкăр-тăварпа кĕтсе илчĕç, тутла сăрапа сăйларĕç.

Уява Ульяновск облаçĕнчи Саккунсем кăларакан Пуху пуçлăхĕн çумĕ Т. В. Сергеева уçрĕ, кĕскен шкул историйĕпе паллаштарчĕ, лару тĕллевĕ çинчен каларĕ.

Ун хыççăн пухăннисене Саккунсем кăларакан Пуху пуçлăхĕ С. Н. Рябухин саламларĕ, область администраци пуслăхĕн Ю. Ф. Горячевăн çырăвне вуласа пачĕ.

Просветителе тав туса унăн мемориал кабинетне чĕрĕ чечексем хучĕç. Ку яваплă ĕçе Чăваш патшалăх университет çумĕнчи И. Я. Яковлев институчĕн директорне Н. Г. Краснов профессора, Ульяновскри педагогика ĕçĕн ветеранĕсене В. В. Афанасьева тата В. М. Репина, педуниверситетри чăваш уйрăмĕнче вĕренекен А. Юркинана хушрĕç.

Халăх умне Шупашкар делегацийĕн пуçлăхĕ Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председателĕ, Чăваш патшалăх университечĕн ректорĕ Л. П. Кураков тухать. Лев Пантелей-

монович Чăваш Республикин Президенчĕ тата Патшалăх Канашĕ ячĕсемпе саламлă сăмах каларĕ. Малалла вăл И. Я. Яковлев Халалĕнчи тĕп шухăша залра ларакансем патне çитерчĕ: халăхăн пуласлăхĕ — вĕренӳре. Тĕрĕссипе, просветителĕн пĕтĕм пурнăçĕ çак ĕçпе çыхăннă. Халĕ эпир ăна малалла тăсмалла. Тăван халăха тата кӳршĕ халăхсене хисеплемелле, юратмалла, тачă çыхăнса ĕçлемелле. Кашни чăваш тăван чĕлхене лайăх пĕлмелле, хальчченхи пуянлăха çине таянса çӳлелле çĕкленмелле.

Докладчик малалла сăмахне çапла тăсрĕ:

— Иван Яковлевич питĕ ăслă та пултаруллă çын пулнă. Шалти вăй-хăватне ырă ĕçсем тума сес янă. Сынсене юратнă, тăшмана та тус тума, çавăрма пĕлнĕ. Халăх нушине чĕри витĕр кăларнă, кашни çитменлĕхшĕн пăшăрханнă, пурнăçа лайăхлатассишĕн ырми-канми тăрăшнă. Унăн Халалĕнчи шухăшсене халĕ эпир пурнăçа кĕртме тăрăшатпăр. Сăмахран, ачасем пĕчĕккĕллех ĕçе хăнăхса усчĕр тесе нумай шкулсене çĕр лаптăкĕ уйăрса патăмăр. Сак çĕр синче халĕ вĕсем хăйсем валли укçа-тенкĕ туса илессĕ, шкула апат-çимĕçпе тивĕçтерессĕ, шкул зданийĕсене юсассĕ. Хăшĕсем трактор туянма та пултарчĕç çак укçапа. Пирĕн университет та çак сулăмпах ĕçлет. Ялсенчи шкулсенче аслă шкула кĕмешкĕн хатĕрлекен центрсем усрăмăр, ял ачисене çăмăллăхсем паратпăр. Хамăр Республикăра темиçе филиал усрăмăр. Шутласа пăхăр-ха, Патăрьелĕнче сес 700 студент вĕренет. Вĕсем çаканта е çывăхри ялсенче пурăнассĕ. Акă мĕн енĕпе лайăх ку! Халĕ Ульяновска та çитрĕмĕр, вĕрентӳпе консультаци пунктне усрăмăр.

Çакна та палăртма кăмăллă: Чăваш патшалăх университечĕн сумĕ Раççейре ӳссе кайрĕ. Халĕ вăл вунă чи лайăх аслă шкул шкул шутне кĕрет. Ахальтен марĕнтĕ Лев Пантелеймонович çывăх вăхăтра Швецие семинара тухса каять. Унта кайма вара пурĕ те виçĕ ректора сеç суйласа илнĕ. Ку та малтанхи шухăша çирĕплетет.

Юлашкинчен Л. П. Кураков çапла каларĕ:

— Чăваш халăхне пĕлӳ парас ĕçре чылай мала кайрăмăр, анчах тумалли татах та нумайрах. Хам енчен çакна калама пултаратăп: ку ĕçре пысăк ситĕнӳсем патне çитес тесе вăя шеллемесĕр ĕçлĕп, вăй-хал çитнĕ таран тăрăшăп!

Тăхтав вăхăтĕнче семинара хутшăнакансем И. Я.

Яковлевпа алла-аллăн ĕçленĕ И. Н. Ульяновăн палăкĕ умне чĕрĕ чечексем кайса хучĕç.

Ларăвăн иккĕмĕш пайне просветителĕн пурнăçне тĕпчекен чи паллă ăсчах Н. Г. Краснов уçрĕ. Унăн доклачĕн теми "И. Я. Яковлев тата революцичченхи Раççейри икĕ чĕлхеллĕ пуçламăш шкул дидактики". Николай Герасимович пухăннисемшĕн нумай çĕнĕ япала каларĕ, уйрăмах ку учительсене усаллă пуле.

Чĕмпĕр чăваш шкулĕнчен 1951 çулта вĕренсе тухнă В. В. Афанасьев çак стенасем çумĕнче пĕлӳ пухнă вăхăта аса илчĕ. 1956 çулта область ĕçтăвкомĕн йышăнăвĕпе чăвашсен пĕлӳпе культура центрне хупса хуни çинчен пăшăрханса каласрĕ.

А. А. Пономарева И. Я. Яковлев музейĕ çамрăксене воспитани панă ĕçри пĕлтерĕшĕ пирки калаçрĕ. Музей экспоначĕсене куçса çӳрекен выставка туса ялсене илсе тухнине те илтме кăмăллă пулчĕ. Çак выставкăна курас текенсем кирек хăш вăхăтра та музей заведующине заявка пама пултараççĕ.

Чăваш Енрен килнĕ И. В. Мукина аслă преподаватель сăмахĕ Чĕмпĕр чăваш шкулĕн пĕрремĕш учителĕсем пирки пулчĕ. Пĕрремĕш официаллă учитель тесе эпир Калашникова калама пултаратпăр. Ун хыçĕнче Соколов, Панаев, Суров, Богоявленский, Архангельский, Филимонов хушамачĕсем тăрассĕ.

Чăваш патшалăх университет çумĕнчи филологи институчĕн ректорĕ В. И. Сергеев профессор И. Я. Яковлев шкулĕнче хĕрсемпе хĕрарăмсене вĕрентни çинче чарăнса тăчĕ. Çак ĕçре просветителĕн мăшăрĕн Е. А. Бобровникован тӳпи пысăк пулнине палăртрĕ. Вăл ертсе пынипе хĕрсем алă ĕçне хăнăхса пынă, хăйсем ăсталанă япалисемпе Чулхулари ярмăрккара 1-мĕш вырăн йышăннă, дипломсем илнĕ.

Докладсем вĕçленнĕ хыççăн нумайăшĕшĕн хумханулла самант çитрĕ. Университетри журналистика факультечĕн деканĕ А. П. Данилов Ульяновскри вĕрентӳпе консультаци пунктне кăçал пĕрремĕш курса вĕренме илнĕ çамрăксен списокне вуласа пачĕ. Конкурспа иртнисен шучĕ 24 çын (51 абитуриентран). Тата 7 çынна ăсчахсен канашĕ залрах вĕренме илчĕ. Кунтаçакăн пек принципсене мала хучĕç: нумай ачаллă çемьерен пулни, инçетри районсенче пурăнни, тăлăх ӳсни. Л. П. Кураков абитуриентсене списока кĕртиччен кашнинпе

калаçу ирттерчĕ. Ытла палханнипе тата савăннипе куссульне шăлса илекенсем те пулчĕç. Кашни студента ректор кĕнекесен пуххи парнелерĕ. Çакна та палăртмалла: вĕсене пĕр çул вĕрентесси университета 700 пин тенке ларать.

Чĕмпĕр чăваш шкул комплексĕ патшалăх историпе мемориал заповедникне кĕрет. Ăна тивĕçлĕ шайра тытса тăрасси, чăвашьенсемпе çыхăнса ĕçлесси унăн директорĕнчен А. Н. Зубовран нумай килет. Унăн ĕçне хаклаһа Чăваш Ен хăнисем Александр Николаевича "Чăваш Республикин культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ" ятне пачĕç. Чăваш Патшалăх Канашĕн президиумĕ наци культурине чĕртсе малалла аталантарас, халăх йăли-йĕркине пропагандăлас тĕлĕшпе нумай çул хушши ĕçленĕшĕн çак çынсене Хисеп грамотисемпе наградăларĕ: "Канаш" хаçатăн тĕп редакторне В. Ф. Ромашкина, хаçат сотрудникĕсене А. Г. Дмитриева, Н. А. Казакова. Кивĕ Улхашри вăтам шкул учительне Н. К. Кадебина тата А. М. Богатов журналиста.

Савăнăçлă хыпарсем кунпа çеç пĕтмерĕç-ха. Л. П. Кураков вĕрентўпе консультаци пунктне нумаи кĕнеке тата 25 пин доллар тăракан компьютер парнелерĕ. Çитес вăхăтра Шупашкартан килсе çӳрекен преподавательсем валли икĕ хваттер юсаса пама шантарчĕ.

Семинар чăннипех пысăк уява саврăнчĕ. Ăна иеркелекенсем алă ăстисене чĕнме те манман. Мĕн кăна илсе килмен вĕсем! Пăхсан — тĕлĕнетĕн: нивушлĕ сакна çын аллипе тунă? Кунта уйрăмах Н. Тимряков, Л. Нюркина, М. Вальщиков, Г. Елисеева ĕçĕсене палăртмалла.

Шупашкарти экономикăпа менеджмент институчĕн ректорĕ Н. Т. Савруков вара учительсем тата семинара хутшăнакансем валли уйрăм парнесем хатĕрлесе хунă. Алăкран кĕрекенсене хăй аллипе парнесем тыттарчĕ.

Ульяновскри наципе культура автономи пуçлăхĕ П. Я. Уфимкин семинара йĕркелекенсене тата хутшăнакансене тав турĕ, малашне те пĕрле çыхăнса ĕçлесе чăваш культурине аталантармалли пирки каларĕ. Юлашкинчен Л. П. Кураков Мускавра пурăнакан И. Я. Яковлевăн тата И. Н. Ульяновăн мăнукĕсем патне Чĕмпĕр шкулĕ чĕрĕлнĕ пирки савăнтармашкăн телеграмма яма ирĕк ыйтрĕ. Залра ку сăмахсене илтсен тăваллăн алă çупни илтĕнсе кайрĕ. Пысăк хăнана тав туса Ульяновск чăвашĕсен наципе культура автономи президиумĕн членĕ

Н. И. Тимряков хӑй аллипе йывӑҫран касса ӑсталанӑ ваза парнелерӗ.

Уява "Эревет" чӑваш халӑх ансамблӗн (ертӳҫи Н. Ф. Косырев) концерчӗ илемлетрӗ.

"Канаш", 48 №, 1998 ҫ., чӳк, 21.

**Мӑнтарӑн чӑваш чӗлхи**

Вулакана тӳрех ӑнлантармалла: кунта эпӗ чӑваш чӗлхине чухӑн та мӗскӗн тесе каласшӑн мар. "Мӑнтарӑн" сӑмахпа усӑ курса пачах урӑххине палӑртасшӑн: тӑван чӗлхене мӗнле нуша кӑтартмаҫҫӗ, чӑвашла ҫыратпӑр тесе мӗнле кӑна асаплантармаҫҫӗ, мӗнле кӑна хуҫмаҫҫӗ. Чӑваш чӗлхи вара чӑтать. Вӑл сывӑ-ха! Хӑҫанччен-ши?

Пирӗн чӗлхе ҫӗр ҫинчи чи авалхисенчен пӗри. Хӑшӗсем вӑл 5 пин ҫулта теҫҫӗ. Тӗрӗс-и ку, тӗрӗс мар-и — пурпӗрех юлашки вӑхӑтра тӗрлӗ ҫӗршыв ученӑйӗсем чӑваш чӗлхипе кӑсӑкланасси ӳссе пырать. Авалхи ҫырусен тупсӑмне те чӑваш чӗлхи урлӑ ҫеҫ ӑнлантарма май пур самантсем нумайланаҫҫӗ.

Ҫиелтен пӑхсан тӑван чӗлхешӗн пӑшӑрханмалли ҫук пек туйӑнать. Эпир 2 миллионлӑ халӑх, Раҫҫейре ҫын шучӗпе 4-мӗш вырӑнта тӑратпӑр (вырӑссем, тутарсем, украинецсем хыҫҫӑн), тӗнчере — 225-мӗш вырӑнта (пурӗ 4 пин халӑх теҫҫӗ тӗпчевҫӗсем). Чӑваш чӗлхи Чӑваш Республикинче патшалӑх чӗлхи шутланать (вырӑс чӗлхипе пӗр тан). Ялта та, хулара та ачасене тӑван чӗлхене вӗрентеҫҫӗ: е урок местечӗпе, е — факультатив, е — кружок. Ҫулсерен савӑнаҫлӑ хыпарсем ҫыратпӑр: ҫак районта чӑваш класӗ уҫӑлнӑ, ҫак обласра ҫавӑн чухлӗ шкулта чӑвашла вӗрентеҫҫӗ. Тӗрлӗ фестивальсем, уявсем ирттереҫҫӗ. Ку лайӑх тейӗпӗр. Тӗрӗссипе вара, тивӗҫлӗ вырӑнта-ши чӑваш чӗлхи, чаплахши ун пуласлӑхӗ, халӗ ҫителӗклӗ шайра-ши? Тӑван чӗлхене мӗнле юрататӑп пулин те — тӳрех ҫапла тесе калаймастӑп. Пурнӑҫ ҫапларах хистет. Пысӑк масштабпа илсен, ҫитменлӗхсем, шӑйрӑксем питӗ нумай-ха. Тӑван чӗлхен тымарне кӑкланӑ хыҫҫӑн ҫӗнӗ хунавсем ӳстерме питӗ хӗн.

Ман шутпа, пирӗн чӗлхе вилсе пыракан чӗлхе паллисене кӑтартать. Тӗлӗнме ан васкӑр. Чӗлхе мӗншӗн пӗтет? Пӗрпӗр халӑх пӗтӗмӗшле пурнӑҫа кӗрсе каяс тесе урӑх чӗлхепе калаҫма тытӑнать. Пирӗн тӗслӗхре ку — вырӑс чӗлхи. Ҫапла мар-и-ха? Ялта ҫуралса ӳснӗ икӗ чӑваш та хулара тӗл пул-

сан вырăсла калаçма пикенеççĕ вĕт. Чăвашла калаçнă чух та çуррине вырăсла калатпăр. Ку вара урăх чĕлхе çине куçма тăрăшнине пĕлтермест ши? Хамăр чĕлхене саплах кураймастпăр-ши? Çак çулпах кайсан ăста пырса тухăпăр? Вилсе пыракан чĕлхесем çинчен калани пур: юлашки тапхăрсенче ку чĕлхепе пĕр-пĕр çулхисен ушкăнĕ çеç калаçать, уйрăмах аслă ăрурисем. Ку чĕлхепе кĕçĕн çулхисем килте калаçма пултараççĕ, шкулта вĕрентмесен вара ана пуçенех çухатма пулать. Кунта кĕçĕн классенче факультативсем е кружоксем ирттерни пĕтĕмĕшле ĕçе хăтарса хăвараймасть. Пĕтĕмлетӳ: шкулта ачасене чылай программăпа вĕрентмелле, 1-мĕш класран тытăнса 11-мĕш таран.

Империсем тунă вăхăтра вак халăхсен чĕлхисене пĕтерме тăрăшнă. Халĕ те çавах. Эпир чăвашла калаçни Мускаври пысăк пуçлăхсене питех кирлĕ те мар. Халăх çук — хуйхă çук. Çавăнпа та хамăрăнах шухăшлас пулать малашлăх пирки. Пĕр-пĕр чĕлхе патшалăх чĕлхи пулсан сес сыхланса юлма пултарать — ку аксиома. Апла пулсан вăл хут çинче çеç патшалăх чĕлхи ан пултăр. Саккунсем ĕçлеччĕр. Хальлĕхе вара вĕсем çителĕклĕ ĕçлеççĕ тесе калама çук. Документсем чăвашла çук, делопроизводствăра чăваш чĕлхипе усă курмастпăр. Эп пĕлнĕ тăрăх, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ларăвĕсем йăлтах вырăсла иртеççĕ. Пĕррехинче Шупашкарта "Етĕрне" ентешлĕх каçĕнче пулма тӳр килчĕ. Йĕркелени, ирттерни питĕ килĕшрĕ, анчах торжествалла пайĕнче пĕри те чăваш самахĕ каламарĕ. Калăн, вырăссем пуçтарăннă. Нумаях пулмасть мана Ульяновск облаçĕнчи чăвашсен автономи пуçлăхĕ П. Я. Уфимкин çапла каларĕ: "Иртнĕ эрнере Чăнлă районĕнчи пĕр чăваш ялĕнче шкулта пултăм. Линейка ирттерчĕç. Чăвашла калаçакан никам та пулмарĕ, юлашкинчен эпĕ çеç тăван чĕлхепе калаçрăм". Çакна илтсен нумаях пулмасть Ульяновскра иртнĕ "Чăваш ачи, сассуна пар" фестивале килнĕ ачасем сцена çинчен аннă хыççăн хăйсем хушшинче вырăсла калаçнинчен тĕлĕнме те кирлĕ мар. Тăван чĕлхене сума суни сисĕнмест вĕсемçине пăхса тăрсан.

Орфографи пирки. Уçăмлă правило пирĕн нихçан та пулман — юлашки çулсенче уйрăмах пăтрашса кайрĕ вăл. Пĕр-пĕр сăмаха мĕнле тĕрĕс çырмаллине никам та пĕлмест. Пĕр чĕлхеçĕсем пĕр тĕрлĕ, теприсем урăхла çырма сĕнеççĕ. Икĕ енĕ те хăй тĕрĕс тесе шутлать.

Хаҫатсăсен, вĕрентӳҫĕсен, шкул ачисен мĕн тумалла ку лару-тăрура? Юлашки 30 ҫул хушшинче пирĕн тулли орфографи словарĕ тухман. Тиркес енĕпе эпир ăста-ха, анчах ĕҫ тума вăхăт ҫитсен чарăнса тăратпăр. Сăмах майлашăвĕсене уйрăм ҫырас тĕлĕшпе вара абсурд сахал мар пулса тухать. Сăмахран, "пуҫхĕрлĕ" (вниз головой) сăмаха та хăшĕ-пĕрисем уйрăм ҫырма хушаççĕ. Манăн ăс куна ăнланма ҫитеймест. Мĕнле пĕлтерет-ши вăл уйăрнă хыççăн? Ман шутпа, правилăна енчен-енне сĕтĕркелесе, хуҫса, авкаласа пĕтерме кирлĕ мар.

Ку лару-тăрура чĕлхеҫĕсем, ученăйсем хăйсен татăклă сăмахне калама тивĕслĕ. Вĕҫĕмсĕр тавлашма кирлĕ мар, орфографире калаҫса татăлма пулать вĕт. Правилăна картне лартмалла та ҫынсене пĕр пек ҫырма вĕрентмелле. Чĕлхе сынсене ирĕксĕрлесе ан тăтăр, пулăшса пытăр.

Чĕлхе тасалăхĕ пирки. Чи вараланканнисем кунта — варваризмсем. Урăхла каласан, пуплеве кирлĕ мар ҫĕртенех кĕрте-кĕрте яракан ют сăмахĕсем е сăмах майлашăвĕсем. Калаҫу витĕмĕпе вара хăшĕ-пĕри ҫыру чĕлхине те кĕрсе каять. Хăш чухне телевидени ҫинче калаҫакансене те хăлхана ватка чикмесĕр итлеме май ҫук. Шантаратпăр вырăнне — "обещат тăватпăр", ҫунтаратпăр вырăнне — "сжигат тăватпăр". Ĕҫе эпир кая юлмастпăр — "опоздат тăватпăр", панулми мар — "яблоки ҫиетпĕр". Вĕҫĕ-хĕррисĕр тасса кайма пулать ку тĕслĕхсене. Ҫак пулăм — варваризм — юлашки вăхăтра ял ҫыннисен хушшинче те сарăлса пырать. Чи пăшăрхантараканни ҫакă: тăван чĕлхе тасалăхĕшĕн интеллигенци те тăрăшми пулчĕ. Аслă шкулта ĕҫлекенсем, хаҫатҫăсем, учительсем чăвашла-вырăсла хутăш калаҫма вĕренсе ҫитрĕҫ. Ыттисем вĕсенчен тĕслĕх илеççĕ. Тăван чĕлхен общество пурнăҫĕнчи пĕлтерĕшне ӳстерес тесен пирĕн асăннă чиртен хăтăлма тăрăшмалла. Кунта ак мĕнле пĕтĕмлетӳ тума пулать. Ҫĕнни ҫуралма кивви вилни кирлĕ. "Шантаратпăр", "апат ҫиетпĕр" сăмахсем вилмен вĕт-ха. Мĕншĕн вĕсене калаҫуран кăларса пăрахмалла? "Панулми" сăмах та словарьте хăй вырăнĕнчех.

Вырăсла шухăшласа чăваш сăмахĕсемпе ҫырни те анлăн сарăлса пырать. Уйрăмах хулара пурăнакан чăвашсем хушшинче. Сăмахран, "волнуюсь" сăмаха "хумханатăп" тесе куҫаратпăр. Чăваш ăнланăвĕнче — тинĕс хумханать, ыраш хумханать. Чунри туйăма палăртма "пăлханатăп",

“пăшăрханатăп”, “кулянатăп” сăмахсем пур-çке. Мĕншĕн вĕсемпе усă курмастпăр? Мĕншĕн тесен шухăшлас, шырас килмест. Янтипе усă куратпăр, пĕлтерĕшне лайăх чухламасăрах. “Вăл калать — эп те калатăп” принципа тĕпе хуратпăр. Тепĕр тĕслĕхе те асăнса хăварас килет. “Красота пленит глаза” предложение эпир ним шутламасăр “илем куçа тыткăна илет” тесе куçаратпăр. Вырăнлă-и ку, чăвашла-и? Ман шутпа, çук. П. Хусанкай кун пек чухне “куçа илертет”. “куç тулли” сăмах майлашăвĕсемпе усă курма сĕнет. Çыпăçуллăрах, илемлĕрех мар-и çавăн пек? Мĕн каласан та, “тыткăн” сăмах савăк туйăма палăртмашкăн вырăнлах мар. Пирĕн шухăшлав процесĕ вырăссенни пек мар-ске. Мĕншĕн вĕсем шухăшланă пек чăвашла сăмахсемпе çырмалла? Кунта мĕн теме пулать? Пĕри ПĔЛМЕСĔР йăнăш çырать, тепри ШУХĂШЛАМАСĂР сырса илет. Тата темисе тĕслĕх. Юлашки вăхăтра хĕрсем “КАЧЧА ТУХМА” тытăнчĕç. Ĕлĕк вара “КАЧЧА КАЙНĂ”. Кунта каллех тӳррĕн, сăмах пĕлтерĕшне пăсса куçарнă. Вырăсла — “выходит”, апла пулсан чăвашла “тухать”. Тĕрĕс-и ку? Яла кайса тĕрĕслĕр. Ялта чи таса чăваш чĕлхи упранса юлнă. уйрăмах сулланнă хĕрарăмсен хушшинче. Халĕ опыт тăвăр. Çак хĕрарăмсемпе туй темипе калаçма пикенĕр. Шантарсах калама пулать: нихăшĕ те качча тухать темĕ. Чăвашсем “качча кайнă”, “качча килнĕ”, “качча пынă” теççĕ.

“Что с тобою происходит?” текен предложение те эпир “санпа мĕн пулса иртет?” тесе кусарма тытăнтамар. Мĕнле çăмăл! Кашни сăмахне тӳррĕн чăвашла кусар та — пулчĕ те. Анчах чăваш çапла калать-и? Аса илер-ха: “сана мĕн пулчĕ” темест-и вăл? “Сан çине шанатăп” тетпĕр тата “на тебя надеюсь” предложение куçарса. Чăваш ун пек каламасть, “сана шанатăп” тет. Каллех тарăн шухăшламасăр çырса илни ку. Çакăн пек тĕслĕхсемпе тарăн çырмана тултарма пулать. Буквализмран хăтăлмалли пирки П. Хусанкай, Илпек Микулайĕ мĕн чухлĕ çырнă!

Чĕлхе шухăшлавпа çыхăннă, çавăнпа та куçарнă чухне пуплеве тӳрлетсе пырать. Тĕслĕхрен, вырăсла “мичман Павлов” пулсан чăвашла “Павлов мичман” пулать. Хăш-пĕр чухне эпир вырăсла вариантпах усă куратпăр.

Кăштах эстрада пирки. Юрă текстсĕсене диалект (вырăнти калаçу) сăмахĕсем çырма тытăнчĕç. Çаплипех сцена çинчен юрлаççĕ. Ку юрă пĕр-икĕ ял е район

çыннисем валли мар вĕт-ха. Ăна пĕтĕм чăваш тĕнчи итлет. Литература чĕлхи диалектсене шута илет, анчах нихăшĕнпе те пĕр килмест. Çавăнпа та литература чĕлхипе çырмалла.

Аудиокассетăсем çине çырнисенчен вара кулăш кăшăлĕ çыхма пулать. Анчах ку кулăш чĕрене ыраттарать.

Акă тĕслĕхсем, эпĕ вĕсене ятарласа шыраса larман. Кассетăсене каларса хутам та — вулатăп: "Атвар, хĕрсем, вылямa", "Кала, мĕншĕн кттерен", "Тухсам савни, тухсамчче", "Сансăр тет кичем", "Асаилю", "Урхамахсем тарас тăпăртатса", "Çиль утти" тата ыттисем те. В. Кузнецова кассети çине вара "лауреачĕ" сăмах вырăнне "лаурячĕ" тенĕ. Мĕншĕн çакăн пек кулма ирĕк памалла тăван чĕлхерен, мĕншĕн çакна тĕрĕслекен çук? Мĕншĕн ыйтмаççĕ мĕнле çырмаллине кассета кăларакансем? Шупашкарти лавккасенче, урамсенче те чăвашла тĕрĕс мар сырни мĕн чухлĕ! Саккунсем кăларнипе çеç çырлахмалла мар, ăна пурнăса мĕнле кĕртнине те тĕрĕслесе тăмалла. Унсăрăн чĕлхе анархийĕ пулать.

"Иностранные слова не вмещает голова" тесе юрларĕ пĕррехинче "Играй, гармонь" телекăларăмра пĕр арçын. Чăнах та, ют чĕлхесенчи сăмахсем пирĕн еннелле ту çинчен пылчăк купи аннă евĕр килеççĕ. "Пейджер", "дилер", "киллер", "секвестр"... Кунта та ылтăн варрине тупма пулать. Çак сăмаха хамăр чĕлхери сăмахпа палăртма çук пулсан çеç уса курмалла. Самах ăсталла сĕтĕрет, çавăнталла сулăнмалла мар. Чăваш чĕлхи пуян вĕт-ха. Словаре тытса уçар-ха, ухтарар кашни сентрине. Хамăра кирлине тупма пулатех. Ӳркенмелле çеç мар. Чĕлхе лаççине куллен пуянлатмалла, тăван чĕлхен пĕтĕм хăвачĕпе усă курма тăрăшмалла.

Ют чĕлхесенчи сăмахсемпе нумай усă курни — экстенсивлă аталану. Чĕлхе пахалăхне ӳстермесĕр калăпăшне (сăмахсен шутне) хăпартса пыни ку. Пуласлăх валли мул хывмасăр хатĕррипе усă курни патне илсе çитермĕ. Паян рационаллă курăнать пуль-ха ку çул, пурнăç çине ăс-тăнпа пăхнă пек туйăнать пуль. Анчах малашлăхĕ тĕксĕм унăн. Ют лексикăпа сахалтарах усă курмалла, вырăнлă консерватизм та кирлĕ хăш чухне.

Чĕлхене тивĕçлĕ шая çĕклекен çул — пуризм. Вăл интенсивлă çул. Чăнах та, унпа кайма йывăртарах —

шухăшламалла, хамăр чĕлхери аффиксемпе усă курса ҫĕнĕ сăмахсем тумалла, вĕсене лексикăна кĕртес тесе вăй хумалла. Ăна хирĕҫлекенсем сахал мар, мĕншĕн тесен паян ку ҫул рационаллă мар. Анчах прогресси, аталану йĕркипе илсен — ку тăван чĕлхене хамăрăн сăмахсемпе пуянлатать. Вăхăт иртнĕҫемĕн лексикăра хамăр сăмахсем кĕрсе ҫирĕпленеҫҫĕ. Ҫак ҫул — пулас ăрусем валли мул хывни.

Халĕ шутлар: хăшĕнпе каймалла пирĕн? Паян чăваш чĕлхинчи сăмахсен 20 проценчĕ — ют чĕлхерен йышăннисем. Ҫавсене ӳстерсе пырса тăван чĕлхене сăнсăрлатар-и е чăваш ятне-сумне ҫĕклер-и? Манса каяр мар: чĕлхе пĕтсен халăх пĕтет. Ҫыннисем пур — халăхĕ ҫук.

Чĕлхе ыйтăвĕсене малалла темĕн чухлĕ тăсса кайма пулать. Хальлĕхе ҫитĕ-ха. Ҫак статья кама та пулин хамăр чĕлхе пуласлăхĕ ҫинчен шухăшлаттарчĕ пулсан — эпĕ тĕллеве пурнăҫларăм. Вулакансем ҫак темăна малалла тăсасса шанатăп. Калаҫмалли питĕ нумай.

Ҫак статья пуҫламăшĕнче эпĕ чăваш чĕлхин пуласлăхĕ пирки кăштах иккĕленнишĕн мана вăрҫма хатĕррисене ҫапла хуравлатăп. Характерпа эпĕ — оптимист. Пессимист нихҫан та пулман, ун пек ҫынсене килĕштерсех те каймастăп. Ҫапах та пурнăҫ ҫине реализмла (чăнлăха туйса, шута илсе) пăхма тăрăшатăп. Ялан кĕрен е ялан хура куҫлăхпа пăхни сиенлĕ. Чăнлăх вара ҫапла: хамăр шутламасан — пирĕн ҫинчен никам та шутламасть. Чăваш чĕлхине ЧĂВАШСЕМ ҫĕклемелле. Унсăрăн ăна латин чĕлхин шăпи кĕтме пултарать.

Латин чĕлхин шăпине пурте пĕлеҫҫĕ. Унпа мĕн пысăкăш Рим империйĕ калаҫнă! Халĕ ăҫта вăл? Вилнĕ. Медицинăра ҫеҫ усă кураҫҫĕ унпа.

Чăваш чĕлхине ҫак шăпа ан кĕттĕрччĕ...

"Канаш", 7 №, 2001 ҫ., нарăс, 16.

Ку статья 2001 ҫулта Атăлҫи Федераллă округĕнче этнокультурăпа конфесси ыйтăвĕсене килĕшӳллĕн аталантарнине ҫутатса паракан чи лайăх публикацисен конкурсĕнче иккĕмĕш вырăн йышăннă. Конкурс Чулхулара иртнĕ.

## ТУПМАЛЛИ

Кӳртӗм....................................................3
I сыпӑк. "Канаш" хаҫатӑн малтанхи утӑмӗсем....................................................9
1.1. Хаҫат пуҫланса кайни....................9
1.2. Паянхи сӑн-сӑпачӗ....................35
II сыпӑк. "Канаш" хаҫат – Чӗмпӗр Ен чӑвашӗсен пурнӑҫӗн тӗкӗрӗ....................45
2.1. Экономикӑпа производство....................45
2.2. "Канаш" хаҫатӑн наци ӑнланӑвне аталантарас ӗҫри вырӑнӗ....................49
2.3. Чӑваш пичечӗ – ӑс-хакӑл культурин пӗр пайӗ....................75
III сыпӑк. "Канаш" хаҫат авторӗсен ӑсталӑхӗ....................96
3.1. Жанрсем....................96
3.2. "Канаш" хаҫатри материалсен чӗлхипе стилӗ....................100
Пӗтӗмлетӳ....................105
Асӑрхаттарусем....................109
Ӳсӑ курнӑ литература....................112
Хушма пай....................115

---

Николай Николаевич Ларионов

*Чӗмпӗр тӑрӑхӗнчи*
*"Канаш" хаҫатӑн малтанхи*
*тата хальхи утӑмӗсем*

Редакторӗ А.Н.Данилов
Наборлаканӗ: *А.А.Романов*
Дизайн-верстка: *И.Ю.Петрова*
*Ӳкерчӗксем: В.Воеводин, В.Дедушкин,*
*Н.Казаков, Н.Ларионов*

Подписано в печать 3.06.03
Формат 60x84/16. Бумага офсетная.
Печать офсетная. Гарнитура Times New Roman Cyr.
Усл. печ л.10,2. Уч.-изд. л. 12,68.
Тираж 300 экз. Заказ № 11.

15.00

Подготовлено к печати и издано в учебно-издательском центре факультета журналистики Чувашского государственного университета имени И.Н.Ульянова